К 83.39(=Чув)6-8
Л 25
1-42,668

Николай Ларионов

# ЧУН ХУШНИПЕ ПУРĂНСАН

Чĕмпĕр Ен çыравçисен пултарулăхĕ

Национальная библиотека ЧР
4-042668

Обязат

**Николай Ларионов**

# ЧУН ХУШНИПЕ ПУРĂНСАН

Чĕмпĕр Ен çыравçисен пултарулăхĕ

Шупашкар
«Çĕнĕ Вăхăт»
2009

ББК 33.3 (2 Рос-Чув)
УДК 809.1
Л 25

**Л 25** **Ларионов Н.Н.**
Чун хушнипе пурӑнсан. Чӗмпӗр Ен ҫыравҫисен пултарулӑхӗ. – Шупашкар: "Ҫӗнӗ Вӑхӑт", 2009. — 140 с., илл.

Кӗнекере пӗрремӗш хут Чӗмпӗр Енри хальхи чӑваш ҫыравҫисен пултарулӑхне пӗтӗмӗшле тишкерсе ҫырса кӑтартма тӑрӑшнӑ. Ҫавӑнпа пӗрлех ку тӑрӑхра ҫӗнӗ саманари чӑвашлӑх юхӑмӗ ҫӗкленни, «Канаш» хаҫат уҫӑлни, «Атӑл юрри» журналӑн кун-ҫулӗ, «Шевле» литпӗрлешӳ ӗҫӗ ҫинчен сӑмах хускатнӑ. Кунта авторӑн 1998—2009 ҫулсенче ҫырнӑ критикӑлла статйисем, рецензийӗсем, тишкерӗвӗсем те кӗнӗ.

В книге впервые в новой истории предпринята попытка провести общий анализ творчества ульяновских чувашских писателей конца 20-го и начала 21-го веков. Также здесь показаны этапы возрождения и развития чувашского национального движения: основание газеты «Канаш», история журнала «Песня Волги», деятельность литобъединения «Зарница». Сюда же включены критические статьи, рецензии, обзоры и анализы, написанные автором в 1998-2009 годах.

ПРОВЕРЕНО
20 10 21 МАР 2017
И-42668
НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

© Ларионов Н.Н., 2009
© Эскиз обложки – Еграшкина Н.Н., 2009
© Составление – Редакция газеты "Канаш" (Ефимова В.А.), 2009

Чӗмпӗр Енре чӑвашла
“Канаш” хаҫат
тухма тытӑннӑранпа
20 ҫул
ҫитнине халалласа



# ЧĔМПĔР ЕН ÇЫРАВÇИСЕМ ТАТА ВĔСЕН ПУЛТАРУЛĂХĔ

## (20-мĕш ĕмĕр вĕçĕ – 21-мĕш ĕмĕр пуçламăшĕ)

Чĕмпĕр... Çак сăмаха илтсен мĕнле чăвашăн чĕри кăлтлатмĕ. Ара, вăл чăвашсемшĕн сăваплă вырăн-çке. Чĕмпĕр хули — çĕнĕ çырулăхăмăрăн сăпки, тăван литературăн шурăмпуçĕ. Шăпах çакăнта ĕнтĕ Кăнна Кушки каччи – Иван Яковлевич Яковлев — чăваш алфавитне йĕркелет, букварь кăларать, чапа тухнă Чăваш шкулне уçать. 54 çул халăхăмăра çутта кăларас ĕçре ырми-канми вăй хурать, мĕн чухлĕ çынна çак çул çине тăрататъ! Чĕмпĕр чăваш шкулне «пирвайхи чăваш университечĕ» теме те пулать. Çак «университетра» профессиллĕ чăваш музыкипе сăнарлă искусстви пуçланнă, чăваш литератури амаланнă, куçару ăсталăхĕ аталаннă.

Мĕн чухлĕ паллă çын тухман-ши кунтан! Литературăна илес пулсан чи малтан çаксене асăнмалла: К.Иванов (вилĕмсĕр «Нарспи» поэмăна вăл шăпах Чĕмпĕрте вĕреннĕ чух çырнă), И.Иванов, Тайăр Тимкки, М.Акимов, Г.Кореньков, Н.Кириллов–Патман, Д.Эльмен, Г.Тал-Мăрса, Ф.Павлов, И.Максимов–Кошкинский, М.Трубина, Ваçça Аниççи, Н.Шупуççынни, Г.Комиссаров–Вантер, Митта Ваçлейĕ, Г.Тимофеев, С.Лашман, Мĕтри Юман... Мĕнле ятсем! Иван Юркин та нумай çул хушши Чĕмпĕртех ĕçлесе пурăннă. Ухсай Яккăвĕ те пĕр вăхăт чăваш техникумĕнче вĕрентнĕ. «Халăхăн ылтăн кĕнеки» поэмине тата «Ĕмĕт» ятлă эпикăллă хайлавне вăл шăпах Чĕмпĕрте çырнă.

Чĕмпĕрте чăвашла кĕнекесем кăларнă. Пĕр вăхăт «Çĕнĕ пурнăç» хаçат тата «Атăл юрри» журнал пичетленсе тăнă. 1920 çулхи çу уйăхĕн 31-мĕшĕнче А.Милли Чĕмпĕрте «Чăвашла çыракансен ушкăнĕ» йĕркелесе ярать. Каярах çак «Ушкăн» тата «Канаш» союзĕ никĕсĕ çинче Чăваш писателĕсен союзĕ йĕркеленет.

Чăваш автономи облаçĕ, каярах республики йĕркеленсен мĕнпур талантлă çынсем Шупашкаралла куçма тăрăшаççĕ. 1956 çулта И.Я.Яковлев шкулне хупса хурсан вара Чĕмпĕр Енре тăван сăмах вăй-хăвачĕ чаксах ларать. Пичетлеме май çуккине кура талантлă çынсем те çырма пăрахаççĕ. «Сунтăх валли» кашни çын ĕçлеймест. Çавăнпа та ку вăхăтри чăваш çыравçисене пĕр алăри пӳрнесемпе шутлама пулать: А.Юман, А.Чебанов, В.Чекушкин...

Ĕç тĕпрен 1989 çулхи декабрĕн 30-мĕшĕнче улшăнчĕ. Çак кун Чĕмпĕрте чăвашла «Канаш» хаçат (тĕп редакторĕ В.Ф.Ромашкин) тухма тытăнчĕ. Туннель вĕçĕнче çутă курăнса кайнипех танлаштарма пулать çак пулăма. Кĕске вăхăтрах хаçат йĕритавра пултаруллă çынсем пуçтарăнчĕç, пĕр интерес никĕсĕ çинче – тăван литературăна юратни, чăвашла çырас килни – чăмăртанчĕç. Çапла чылай автор çын çине тухма пултарчĕ: аслăраххисем тепĕр хут «чĕрĕлчĕç», çамрăккисем пĕрремĕш хунавсем ячĕç.

Пурăна-киле хăш-пĕри чăваш çыравçисен кружокне йĕркелесен лайăх пулĕччĕ тесе калама пуçларĕ. 1997 çулхи утă уйăхĕнче вара илемлĕ литература жанрĕсемпе çыракансем «Канаш» хаçат редакцийĕ пуçарăвĕпе пĕрремĕш хут пĕрле пуçтарăнчĕç. Çапла «Шевле» литпĕрлешӳ йĕркеленчĕ. Темиçе лару хыççăн унăн членĕсем тĕллев лартрĕç: Чĕмпĕр хутлăхĕнчи чăваш çыравçисен хайлавĕсене пухса уйрăм кĕнеке пичетлесе кăларас. Ку ĕçе «Канаш» редакцийĕ хăй çине илчĕ: материалсене пĕр çĕре пуçтарчĕ, тивĕçлисене суйласа илчĕ, компьютерпа набор, верстка турĕ, редакцилерĕ. «Симбирская книга» издательствăра вара «Шевле çути» кĕнеке область администрацийĕ укçа-тенкĕпе пулăшнипе 2000 çулта кун çути курчĕ. Сăмах май, тепĕр альманах валли материалсем пуçтарнă.

Халĕ вара Чĕмпĕр Енри паллă çыравçăсемпе, тухăçлă ĕçлекен тата халăхра питех палăрман çыравçăсемпе паллашăпăр.

**Ермилов Анатолий Федорович (Анатолий Юман)** Ульяновск облаçĕнчи Чăнлă районне кĕрекен Чăвашкасси ялĕнче 1932 çулхи октябрĕн 28-мĕшĕнче çуралнă. 1952 çулта Вăта Тимĕрçенти вăтам шкула пĕтерсе тухнă хыççăн ăна район хаçатне – «Пĕрлешӳллĕ ĕç» — ĕçлеме чĕнсе илеççĕ. Вăл унта 1990 çулччен – 38 çул хушши – вăй хунă. 1963 çултанпа — редактор çумĕ. 1990 çулта вăл «Канаш» хаçат редакцине куçать, каллех – редактор çумĕ. 1994 çулта тивĕçлĕ канăва каять.

А.Юман РФ Писателĕсен тата Журналисчĕсен союзĕсен членĕ, Чĕмпĕр тăрăхĕнчи журналистсен М.Ульянова ячĕллĕ преми лауреачĕ, Раççей культура тава тивĕçлĕ ĕçченĕ. Чăнлă районĕн Хисеплĕ гражданĕ. А.Юман Чĕмпĕр хутлăхĕнче чăвашлăх юхăмне тепĕр хут пуçарса яракансенчен пĕри.

Маларах каланăччĕ ĕнтĕ, Чĕмпĕр чăваш шкулне 1956 çулта хупса лартнă хыççăн пирĕн тăрăхри писательсен ĕçĕ-хĕлĕ сӳнме пуçланă. Çапах та темиçен нимле чăрмава пăхмасăр тăрăшсах ĕçленĕ. Вĕсенчен пĕри – А.Юман. Вăл çырма пĕрре те чарăнман, çине тăрсах тар тăкнă. Çавна пула 51 çула çитсен вăл Писательсен союзне кĕме пултарнă. Ку вăхăтра пирĕн облаçра ун пеккисем пулман. Ыттисене ку союза 1990-мĕш çулсем иртсен çеç илнĕ. Апла пулсан вăл – пĕрремĕш чĕкеç.

А.Юманăн чи пысăк та пĕлтерĕшлĕ ĕçĕ – «Телей» трилоги. Ун пайĕсем çапла ятлă – «Телей сăпки», «Телей пахчи», «Телей хуçи». Хăшĕсем ăна эпикăллă поэма теççĕ. Сăвăлла роман теме те пулать. Пурĕ унта 6066 йĕрке.

Трилогире чăваш пурнăçĕнчи çур ĕмĕр ытла чи паллă тапхăрсем йĕрленеççĕ. Автор пулни-иртнине анлăн илсе кăтартнă. Ĕçсем ĕмĕр пуçламăшĕнче пуçланаççĕ те пирĕн кунсене çитичченех аталанса пыраççĕ.

1972 çулхи раштав уйăхĕнче тухнă «Коммунизм ялавĕ» хаçатăн 303-304-мĕш номерĕсенче Юхма Мишши («Шанчăк упракансем телейлĕ» статья) А.Юманăн çак поэми пирки çапла çырать: «Унта пĕр чăваш йăхĕнчи виçĕ лам пурнăçĕ йĕркеленет. Ăна вуланă май эпир этем ĕмĕчĕн вилĕмсĕрлĕхне ытарлăн кăтартнине, чăнлăх усала çĕннине куратпăр. Чăнлăх шыраса патша саманин мĕнпур тискерлĕхне ăнланса илнĕ хыççăн, алă-ура çинчи сăнчăр йывăрăшне, инçе Çĕпĕр каттăркине курнă, улпут мăшкăлĕ пулнă арăмне çухатнă хыççăн çеç Куçма хăйĕн ĕмĕчĕ кăлăхах пулнине ăнланса илет... Ан тив, Куçма хăй çав ырлăха çĕнсе илнине кураймасть пултăр, ун вырăнне ашшĕн ĕçне ывăлĕ, Эпти, малалла тăсĕ. Этемшĕн ача-пăча йăх-шыва упракан çеç мар, вăл унăн кĕрешĕвне, ĕçне малалла тăсаканĕ, ĕмĕтне çитерекенĕ».

1974 çулта Шупашкарта тухнă «Чувашский язык, литература и фольклор» кĕнекере А.В.Васильев («1972 çулхи чăваш поэзийĕ» статья, 281-мĕш стр.) çапла çырать: «А.Юманăн «Телей сăпки» лиро-эпикăллă поэма, сюжечĕ унăн динамикăллă... Юратушăн, телейшĕн кĕрешмелле тет вăл. Çав вăхăтрах телее пĕччен-иккĕн çĕнсе илме çук, ăна тума пĕтĕм пурнăç тытăмне

уläштармалла. Çакăн пек шухăш патне килсе тухать те ĕнтĕ герой. Çапла вара поэмăра ытти проблемăсемпе пĕрлех социаллă проблема тухса тăрать». Çав вăхăтрах статья авторĕ поэмăри çитменлĕхсене те асăнать. (Мĕнле авторăн çук ĕнтĕ вĕсем?) Çакна та палăртмалла: А.Юман — Петĕр Хусанкай критикин вĕтĕ али витĕр тухнă. Урăхла каласан — Хусанкай шкулне иртнĕ.

Чăваш халăх поэчĕ «Ăсталăхпа чăнлăх» кĕнекере (Шупашкар, 1964) А.Юмана çамрăк сăвăçсен шутĕнче асăнса хăварать. «Асăнма тивĕçлĕ ятсем»,– тет вĕсене П.Хусанкай. Çитменлĕхсене асăрхаттарнă май çапла пĕтĕмлетӳ тăвать: «Ахаль çав çамрăк автор пултармалласкер, унăн чĕлхи те чылай таса...»

Каярах та чăваш поэчĕсем А.Юман пултарулăхне çӳллĕ шая хурса хакланă. Акă цитатăсем: «... Халăх хушшинче пурăнса вăл формипе те, содержанипе те Константин Иванов гражданлăхне малалла тăсать» (Ухсай Яккăвĕ), «Вăл тăван сăмахпа пĕлсе усă курать, вăхăт таппине çивĕч туять» (Стихван Шавлы), «Юман тăван ен çинчен, унти ентешĕсем çинчен çырать, вĕсен çитĕнĕвĕсемшĕн савăнать» (Георгий Ефимов).

А.Юманăн çакăн пек паллăрах кĕнекесем тухнă: «Телей сăпки» (1972), «Тăван чĕлхе çинчен» (1972), «1918 çул. Утă уйăхĕ» (1973), «Чĕмпĕр чулĕ калаçать» (1975), «Çулпуç сăпки» (1982), «Ăшхыптармăшсем» (1986), «Çунатсем» (1988), «Чĕре çĕввисем» (1992), «Кăвак йĕр» (1992), «Суйласа илнисем» (1994), «И.Я.Яковлев ячĕллĕ...»(1998), «Сонетсем» (виçĕ кĕнеке –2003, 2005, 2007). Çаплах вырăслисем те 10 кĕнеке пур: «Рукопожатие» (1991), «Синий след» (1992). «Марине» (2008), «Стихи разных лет» (2008). Пурĕ унăн 35 кĕнеке.

Тĕпрен илсен, поэт пултарулăхне çителĕклĕ тĕпчемен-ха. Вун-вун çул литературăра тар тăкса вăл самаях паллă йĕр хăварчĕ. Нумай çамрăка литература сукмакĕ çине тăма пулăшрĕ, вĕсен вĕрентекенĕ пулчĕ. Хăш-пĕр сăввине композиторсем юрра хывнă, вĕсене халăхра юрлаççĕ. Сăмахран, «Мăшăрăм» (кĕввине Станислав Толстов çырнă).

«Канаш» хаçатăн яваплă секретарĕ Валентина Ефимова 2004 çулта Чăваш патшалăх университетĕнчен вĕренсе тухнă чухне А.Юманăн кун-çулне, пултарулăхне тĕпчесе диплом ĕçĕ çырнă. Ăна кĕнеке туса пичетлесе кăларсан вулакан ку автор çинчен нумай çĕннине пĕлме пултарĕ.

А.Юман Аслă Нагаткинта пурăнать.

**Чебанов Анатолий Сафронович** 1937 çулхи февралĕн 3-мĕшĕнче Тутарстанри Çĕпрел районне кĕрекен Чăнлă Шăхаль ялĕнче çуралнă. Вăтам пĕлӳ Хурăнвар-Шăхалĕнче илнĕ. Пăвари техника училищинче ял хуçалăх механикне вĕреннĕ. Курганти ял хуçалăх институтĕнче кĕретсĕр йĕркепе (заочно) зооинженера вĕренсе тухнă. Салтакран таврăнсан мĕн тивĕçлĕ канăва тухиччен тĕп зоотехникра ĕçленĕ.

А.Чебанов – драматург, РФ Писателĕсен союзĕн членĕ. Ун пьесисемпе Чăваш академи драма театрĕ паян кунччenех спектакльсем лартать. Мари Элта та ун пьесисене хăйсен чĕлхипе куçарса спектакль кăтартнă. А.Чебанов – нумай кĕнеке авторĕ. Ăна «Чăваш Республикин культура тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» ят панă. Авторăн чи паллă ĕçĕ – «Праски инке хĕр парать» ятлă икĕ пайлă, пилĕк картинăллă мыскара. Вăл асăннă театр сцени çинче 17 çул пычĕ. Кашни спектакльте – аншлаг. Ку камите Мускав, Ленинград (Санкт-Петербург), Ярославль, Куйбышев (Самар), Хусан, Чĕмпĕр, Çтерлĕ, Анат Кама хулисенче пурăнакансем те ăшшăн йышăннă. Юратать ăна халăх. Çак пьесăпа Чăваш Енĕн тĕп театрĕ «Ял ĕçченĕн сăнарĕ драматургире тата театр сцени çинче» ятпа ирттернĕ Пĕтĕм Раççейри фестивале те ăнăçлă хутшăннă, унта лауреат ятне илме тивĕç пулнă.

Халĕ К.В.Иванов ячĕллĕ театр сцени çинче тепĕр камит пырать – «Праски кинеми мăнукне авлантарать». Темиçе çул ĕнтĕ кашни представление лăк тулли халăх пуçтарăнать. Сăлтавĕ – чăнлăхра. Автор хайлавсен сюжечĕсене пурнăçран илнĕ. Пăтăрмахлă тата кулăшла ĕçсем ытларах чух этем чысĕпе ун ырă ячĕ тавра пулса иртеççĕ. Пьесăсенчи юрă сăмахĕсене те автор хăйех çырнă.

А.Чебанов пурĕ çитмĕле яхăн пьеса калăпланă. Çаплах вăл сăвă та çырать. Чăнлă тăрăхĕн юрăçи теме пулать ăна. Пурĕ унăн 600 ытла сăвă. Вĕсенче çутçанталăк, юрату лирики шыв юххи пек шăнкăртатни лайăх сисĕнсе тăрать, çавăнпа тĕрлĕ композиторсем – Ю.Кудаков, Ф.Лукин, С.Толстов тата ыттисем унăн 200 ытла сăввине кĕвве хывнă. Акă мĕн çырать автор сăввисем пирки В.Туркай поэт: «Вăл чунĕпе те, юнĕпе те лирик. Унăн сăввисем ытларахăшĕ пьесăсенчи юрăсем пулса янăраççĕ. Çак сăвăсенчи ырă туйăм вулакансене — куракансене, çурхи ăшă çил пек, ачашшăн çупăрлать, шур пĕркенчĕк айĕнчи улмуççи пек, чун-чĕрене тыткăна илсе тарăн шухăша ярать. Вĕсенче ял пурнăçĕ-хĕлĕ çĕр айĕнчен юхса тухакан çăлкуç пек тапса тăрать. Сăввисем пиçсе çитнĕ çĕр çырли пек сĕтеклĕ, пахчара юрлакан сар кайăк сасси пек янравлă, çӳллĕ валак пуçĕнчен юхакан тăрă шыв пек – таса та çутă».

Авторăн поэзийĕнче ял çыннин кулянăвĕ, пăлхавлă шухăшкăмăлĕ, таса юратăвĕ, шанăçĕ сăнланнă. Вăрçăпа тăнăçлăх темине те хускатать вăл.

Юптарусем те пур авторăн – вăл шӳтлесе-тăрăхласа, йĕплесе илме те ăста. Çапла майпа вăл пурнăçри çитменлĕхсене, кăлтăксене питлет.

Тĕрлĕ жанрпа, стильпе çырма пултарни А.Чебанов çӳллĕ шайри çыравçă пулнине пĕлтерет. Татах та хушма пулать: вăл ял çыравçи. Ĕмĕрне ялта пурăнаканскер унти пурнăçа, йăла-йĕркене витĕр пĕлет, вулакан-куракан патне хăйĕн шухăшĕсене çитерме пултарать. Çавăнпа ăнăçлă пулса тухаççĕ те унăн хайлавĕсем.

Юлашки вăхăтра ку автор Совет Союзĕн Геройĕ П.Юхвитов çинчен роман çырса кĕнеке кăларчĕ.

Халĕ вара А.Чебанов чăваш халăхне çутта кăларакан И.Я.Яковлев пурнăçне тĕпчесе ун çинчен пьесăсем çырать. Ун пеккисем 9 кĕнеке ĕнтĕ.

А.Чебанов Аслă Нагаткинта пурăнать.

**Игнатьева (Тарават) Валентина Николаевна** 1946 çулхи августăн 19-мĕшĕнче Тутарстанри Çĕпрел районне кĕрекен Турхан Упи ялĕнче çуралнă. Пăвари медицина училищинчен вĕренсе тухнă. Ульяновскри пединститутра вĕреннĕ. 1978 çултанпа Аслă Нагаткин ялĕнче пурăнать. РФ Писателĕсен союзĕн членĕ, Чăваш Республикин Композиторсен ассоциацийĕн членĕ, Раççей культура тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, Чăнлă районĕн Хисеплĕ гражданинĕ,Ульяновск облаçĕн Хисеплĕ гражданинĕ.

Пичетленнĕ кĕнекисем: «Ĕçчен мăнук» (Шупашкар, 1992), «Уяв парни» (Шупашкар, 1993), «Хура хăлха» (Шупашкар, 1994), «Кавир тĕртетĕп чечекрен» (Шупашкар, 1996), «Запишите в первый класс» (Саратов, 1994), «С днем рождения» (Ульяновск, 1994), «Мне с надеждой повезло» (Ульяновск, 1997), «Эхо» (Ульяновск, 1999), «Кил ăшши» (2006) тата ыттисем. Автор вырăсла та, чăвашла та çырать. Пурĕ унăн 18 кĕнеке.

В.Тарават – поэт, прозаик, куçаруçă. Критиксен шучĕпе, вăл Атăл тăрăхĕнчи ача-пăча çыравçисен хушшинче чи лайăххисенчен пĕри. Ун хайлавĕсенче ачасен психологине тĕплĕн пĕлни тата ытарлăн каласа шӳтлени палăрать, тăван тавралăха, çынсене юратни сисĕнет. Çакна уйрăмах палăртмалла. Автор поэтика ăсталăхĕн шалти саккунне лайăх туять, сахал сăмахпах питĕ анлă шухăша пĕлтерет, ăна витĕмлĕ уçса парать. Çакă тата сăвă хитрен

янӑрани ҫамрӑк вулакана ҫутҫанталӑка, тӑван чӗлхене, литературӑна юратма вӗрентеҫҫӗ. Ҫакӑнта ӗнтӗ В.Таракат поэзийӗн воспитани пӗлтерӗшӗ.

Автор куҫарнӑ сӑвӑсем шухӑша тӗрӗс уҫса панипе, сӑвва оригиналпа пӗр пек тума тӑрӑшнипе уйрӑлса тӑраҫҫӗ.

Литературӑна В.Таракат вырӑсла ҫырса пырса кӗнӗ, тӗрлӗ журналсенче пичетленнӗ. 1990-мӗш ҫулсенче чӑваш юхӑмӗ, культури тепӗр хут аталанма тытӑнсан вӑл тӑван чӗлхепе хайлама пуҫлать. Пурӗ вара литературӑри стажӗ – 30 ҫул ытла. Хайлавӗсене вӗрентӳ программине те кӗртнӗ.

Акӑ мӗн калать В.Таракат творчестви пирки Сергей Осипов, Раҫҫейри Профессионаллӑ литераторсен союзӗн членӗ: «Валентина Таракат сӑввисем ҫирӗп, профессионаллӑ. Вӗсем автор ача-пӑча тӗнчине, шкула кайманнисен психологине питӗ лайӑх пӗлнине ҫирӗплетеҫҫӗ. Шантарсах калама пулать: вӑл ача-пӑча ҫыравҫи пулни палӑрса ҫитрӗ. Ача темине ял теми урлӑ курать».

В.Игнатьева-Таракат – 40 юрӑ композиторӗ, вӗсенчен 15-ӗшне Чӑваш Республикин радиофондне кӗртнӗ. Ҫаплах вӑл ачасен ансамблӗсен — «Ӗмӗт», «Шӑпчӑк»— илемлӗх ертӳҫи.

**Чекушкин Виталий Семенович** 1938 ҫулхи февралӗн 6-мӗшӗнче Чӑваш Енри Патӑрьел районне кӗрекен Чӑваш Сӑкӑт ялӗнче ҫуралнӑ. Тури Туҫара вӑтам шкул пӗтернӗ хыҫҫӑн Шупашкарти пединститутра вӗреннӗ, диплом илсен, 1960 ҫулта, Ульяновск облаҫне направленипе килнӗ. Кивӗ Улхаш ялӗнчи вӑтам шкулта вӗрентсе тивӗҫлӗ канӑва кайнӑ. Халӗ те унта пурӑнать. Халӑх ҫутӗҫӗн отличникӗ, Раҫҫей Федерацин тава тивӗҫлӗ вӗрентӳҫи, Раҫҫей Писателӗсен союзӗн членӗ.

В.С.Чекушкинӑн псевдонимӗ – Виталий Юмарт. Вӑл поэт, критик, литературовед.

Сӑввисем «Ҫул курӑкӗ» ятлӑ сборникра (Шупашкар, 1993) пичетленнӗ. Автор сӑвӑсемпе поэма пуххине «Татӑлми ӗмӗт» тесе ят панӑ. Унта сакӑрвунна яхӑн сӑвӑ тата поэма. Питӗ тарӑн шухӑшлӑ вӗсем, философиллӗ. Тепӗр сборникра та пичетленнӗ автор – «Ҫеҫпӗл ҫеҫкисем» кӗнекере. Юптарусем, пародисем пур, вӗсем «Капкӑн» журналта кун ҫути курнӑ. А.С.Пушкина чӑвашла куҫарнӑ. Швеци поэчӗсене те куҫарнӑ.

Ҫапах та Виталий Юмарта вулакансем критикпа литературовед пек ытларах пӗлеҫҫӗ.

Анлă тавракурăмлăх, нумай пĕлни, хăнăхнă калăпран тухса шухăшлама пултарни, япала çине хăйне евĕрлĕ пăхни автора хайлавсене çĕнĕлле хаклама май парать.

Тĕплĕн çырнă статьясем чылай унăн: К.Иванов, Çеçпĕл Мишши, Ф.Павлов, П.Хусанкай, Ухсай Яккăвĕ çинчен. Ак тата наука статйисен ячĕсем: «Каллех литература нацилĕхĕ пирки», «Мĕн вăл соцреализм», «Виççĕмĕш шухăш». Юлашки – Б.Чиндыков çыравçă çинчен. Çак статьяна Шупашкарта «çухатнă», хăш-пĕр пайĕсене учебника кĕртнĕ.

В.Юмарт çыравçăсен пултарулăхне вăхăтра асăрхаса вĕсене пичетре ырăпа хакланă. Ку шутра А.Хусанкай, Г.Айхи, Л.Мартынова. Учебниксем хатĕрленĕ вăхăтра çĕнĕ авторсене кĕртесшĕн тăрăшнă. Ваçлей Игнатьев, Хĕветĕр Акивер, Борис Чиндыков, Виталий Енĕш тата ыттисен творчествине йĕрленĕ, çак авторсене пĕрремĕш хут учебника кĕртнĕ.

Каларăмăр ĕнтĕ, автор пулăмсене çĕнĕлле курма пĕлет. Çĕнĕлĕх самани çитсен М.Сироткинпа Г.Хлебников çырнă учебника çĕнетмелле пулнă, литературăна урăхла хаклама вăхăт çитнĕ. Çак ĕçе Г.Хлебников хăй соавтор пулса В.Чекушкина явăçтарнă. В.Чекушкин унта кашни çыравçă пирки энциклопедиллĕ статьясем çырнă, кĕскен кашни çыравçăн творчествине, унăн уйрăмлăхне палăртнă. «Çĕнĕ вăхăтри поэзи» пайне 26 автора кĕртнĕ, кашни валли уйрăм хаклав сăмахĕ тупнă. Çапла çĕнĕ авторсене çул уçса панă. Г.Айхи те пĕрремĕш хут программăна кĕриччен çак хрестомати урлă вĕренекенсем патне çитнĕ. Çаплах Митта Ваçлейĕн, Ухсай Яккăвĕн, Александр Алкан, Стихван Шавлын, А.Воробьевăн литература портречĕсене тата «Ĕлĕкхи ял пурнăçне сăнлакан проза», «Хальхи пурнăç ыйтăвĕсем», «Поэзи ӳсĕмĕ» обзор статйисем çырнă (юлашки статьяна çырма Г.Хлебников хутшăннă).

В.Юмарт П.Хусанкайăн «Тилли юррисем» пирки чи малтан «Тăван Атăл», «Ялав» журналсенче çырса кăтартнă. Çаплах çак авторăн «Кăвак тынас, е Майра инке» поэмине «Ларис Иваннă, е Вырăнлă выговор» ятпа пĕрремĕш хут «Коммунизм çути» хаçатра пичетленĕ. В.Чекушкин Г.Айхи пултарулăхне нумай тĕпченĕ. «Ӳсĕм» статьяшăн ăна лауреат ятне панă.

П.Хусанкайăн «Юлашки пăлхар» поэмине архиврa шыраса тупса пичете кăлараканĕ те – В.Чекушкин.

Çак çулсенче Петĕр Хусанкайăн «Çырнисен пуххи» 6 томпа тухрĕ. Пĕрремĕш пайне В.Чекушкин хатĕрленĕ: пухнă, умсăмахне çырнă, комментари панă.

**Дмитриев (Ырьят) Анатолий Григорьевич** 1949 çулхи июнĕн 9-мĕшĕнче Тутарстан Республикине кĕрекен Пăва районĕнчи Раккасси ялĕнче çуралнă. 1966 çулта Элшелĕнчи вăтам шкултан вĕренсе тухнă. Çартан килнĕ хыççăн 1970-1975 çулсенче Хирти Кушкăри тулли мар вăтам шкулта учительте ĕçленĕ. Шупашкарта парти шкулне пĕтернĕ. 1977-1982 çулсенче Раккассинчи тулли мар вăтам шкулта вĕрентнĕ. 1982 çултанпа Ульяновскра пурăнать. 1990 çултанпа «Канаш» хаçатра вăй хурать: яваплă секретарь, редактор çумĕ. Халĕ — çырусен пайĕн пуçлăхĕ. 1996 çулта Чăваш патшалăх университечĕн журналистика факультетне пĕтернĕ. Раççей Журналисчĕсен тата Писателĕсен союзĕсен членĕ.

А.Ырьят — çĕнĕ ăрури çыравçă, ун ăсталăхне çĕнĕ самана туптанă. Чи малтан ун ячĕ «Канаш» хаçатра сăвăсем пичетленсен сарăлчĕ. Вăл поэт пулса палăрчĕ. Поэзийĕнче юрату сăввисенчен пуçласа тарăн шухăшлă, философиллĕ пĕтĕмлетӳсемпе çырнă лирика тĕслĕхĕсем сахал мар. Сатирăпа кулăш стилĕпе çырнă хайлавсем те, ача-пăча валли çырнисем те пур. А.Дмитриев-Ырьят композиторсемпе те туслă. Ульяновскра ĕçлесе пурăнакан С.Толстов композитор поэтăн чылай сăввине юрра хывнă. «Саламлатăп» юрри вара вырăнти ансамбльсен репертуарне çирĕппĕн кĕрсе вырнаçрĕ.

Автор сăвăсенче хăйĕн шухăшĕсене палăртма формипе те, содержанипе те çĕнĕ çулсем шырать. Çакна çирĕплетме «Пурнăç» сăввине илсе пăхар-ха:

*Пурнăç вăл —*
*Шурă, хура йĕрсем,*
*Масарти хĕрессем,*
*Сывлăшри шăтăксем...*
*Пурнăç вăл –*
*Уçлăхри пулăмсем,*
*Чĕрери туйăмсем,*
*Шухăшсем, шухăшсем.*

Кунта автор шухăшлавĕн хăйевĕрлĕхĕ палăрать. Поэт вулакана чыс чи хаклă тупра тесе ĕнентерет, хăй те çакна шанать. «Вилĕмрен хăрамастăп» сăвăра çакăн пек йĕркесем пур:

*Чыс-тăванлăх управĕ*
*Хамăртан çеç килет.*
*Тинĕсре ун утравĕ,*
*Сисмесен – шыв илет.*

Паллах, кунта кашни сăввине тишкерме май çук. Пĕтĕмĕшле çапла калама пулать: хайлавĕсем этем шăпипе çыхăннă. Çамрăклăх, юрату, курайманлăх — çак тематикăпа ытларах шăрçаланаççĕ вĕсем. Юлашки вăхăтра автор сăввисене Шупашкар композиторĕсем те тимлĕх уйăрма пуçларĕç: Е.Федоров, Н.Карлин.

А.Ырьят поэзийĕ пирки çакна та каламалла. Вăл сăвăсене хăнăхнă калăпа «хăвса» кĕртме тăрăшмасть, йĕркесене пĕр виçере тытса пымасть. Уншăн чи пахи — содержанийĕ, шухăшĕ, тĕшши (хăй вăхăтĕнче çапларах мелпе Çеçпĕл те çырса пăхнă). Çавăнпа та сăвăсенче «силлабика» е «тоника» шырама кирлĕ мар. Автор – ирĕклĕ ӳкерӳçĕ. Сăмах ӳкерӳçи. Вăл калăпран тухса ӳкме хăрамасть, çĕнĕ çул шырать. Çакă ун шухăшлавĕ анлине пĕлтерет.

Пурăна-киле А.Ырьят прозăра та вăйне виçсе пăхрĕ. Пĕрремĕш хайлавĕ – «Этем шăпи» повесть — «Канаш» хаçатра 1993 çулта тухрĕ. Ун хыççăн автор çĕнĕ повеçсем калăплама тытăнчĕ: «Хаярлăх вăрлăхĕ» (1994), «Шурăмпуç кайăкĕ» (1995), «Хаяр тавăру» (1996), «Пуш хирти кĕл чечексем» (1-мĕш пайĕ – 1997, 2-мĕш – 1998), «Хăмăшлăха путнă кĕмĕл уйăх» (1999), «Юрататăп. Эппин – пурăнатăп-ха» (2001). Мĕнпур хайлавĕсене вулакансем ăшшăн йышăнчĕç. Сăлтавĕ – автор пурнăçра пулса иртнĕ (Тăхăрьял таврашĕнче) событисене чĕнтĕрлесе çыхма, кăсăклантарса çырма, ĕнентерӳллĕ сюжетсем тума пĕлнинче. Кун пирки автор çапла калать: «Пурнăç куççульсĕр, савăнăççăр пулма пултараймасть. Лару-тăрăва ытлашши илемлетнине йышăнмаççĕ çынсем». Реализм нумайрах хайлавĕсенче, çапах романтизм та пур, унсăр мар. Автор вулакан валли шанчăк хăварать, геройсене йывăр лару-тăруран чыслăн тухма май парать.

Çыравçă хăй калас тенине кĕскен калама юратать, сапаланса каймасть. Хайлавсенчи персонажсене темиçе сăмахпах витĕмлĕн ăнлантарать. Сăмахран, «Хаярлăх вăрлăхĕнче» вăл Марье сăнарне çапла уçать: «Марье аппара ашшĕ юнĕ юхать теççĕ... Кăра çилĕллĕ, каппай, çăткăн чунлă хĕрарăм вăл, пуринчен ытла арçынсене, хăйĕнчен кĕçĕнреххисене пăхăнма юратмасть». Ку повеçре тĕрлĕ проблема хускатнă, вĕсенчен тĕпри – ашшĕ-амăшĕпе ачисем хушшинчи хутшăну. Повесть трагедилле вĕçленет, темиçе виле пулать. Сăлтавĕ — çын чунĕсене хаярлăх вăрлăхĕ акнинче.

Юлашкинчен çапла каланă пулăттăм: А.Ырьят – Чĕмпĕр хутлăхĕнче проза жанрĕпе ĕçлекен чи тухăçлă çыравçăсенчен пĕри.

2001 çулта унăн «Хăмăшлăха путнă кĕмĕл уйăх» ятлă кĕнеке пичетленсе тухрĕ.

**Ашкеров Алексей Антипович** - Тăхăрьял чăвашĕ, Тутарстанри Пăва районне кĕрекен Элшел ялĕнче 1936 çулхи ноябрь уйăхĕн 10-мĕшĕнче çуралнă. Ялти вăтам шкула пĕтернĕ. Пăвари техника училищинчен вĕренсе тухнă хыççăн виçĕ çул Çурçĕр Казахстанра ĕçленĕ. 1963 çултанпа Ульяновск хулинче пурăнать. Йывăр станоксем тăвакан заводра слесарь-механикра ĕçленĕ. Унăн кунти ĕç стажĕ – 35 çул ытла.

Малтанхи сăвви 1952 çулта Хусанта тухса тăракан «Хĕрлĕ ялав» хаçатра кун çути курнă. Каярах унăн хайлавĕсем Пăва тата Çĕпрел районĕсен хаçачĕсенче пичетленнĕ. Кокчетав облаçĕнче ĕçленĕ вăхăтра Красноармейски районĕн «Красная звезда» хаçатĕнче «Люблю» ятлă вырăсла сăвви тухнă. Ку 1962 çулта пулнă.

Çапла, А.Ашкеров хăйĕн сассине поэзи уй-хирĕнче çамрăклах панă. Акă çирĕплетӳ. 1989 çулхи «Ялав» журналта Михаил Сениэль (чăн хушамачĕ Егоров) çыравçă «Эп - çеçпĕлçĕ!» статья пичетлесе кăларнă. Унта вăл хăйĕн творчество çулĕн пуçламăшĕ çинчен аса илет, «Хĕрлĕ ялав» хаçатпа çыхăну тытнине каласа парать. Хаçатра ĕçлекен В.Моисеев 1957 çулта М.Егоров патне акă мĕн çырать: «Пуçласа сăвă çыракансем хушшинче сăвă техникине ăнланса илсе пĕр хăйсене кăна тивĕçлĕ сăвăсем çырассишĕн тăрăшакан çамрăксем те нумай. Вĕсем – В.Тютин, А.Тимофеев, М.Артюшин, М.Егоров, А.Ашкеров тата ыттисем те».

Анчах тĕрлĕ сăлтавсене пула пултаруллă çамрăк çак çулпа малалла утман, вуçех çырма пăрахнă.

1989 çулта Чĕмпĕрте чăваш хаçачĕ – «Канаш» — тухма пуçласан вăл тепăр хут çырас ĕçе пикенет. Çак саманта вăл çапла аса илет: «Хама тепре çуралнă пекех туйрăм, пуçра çĕнĕ сăвăсем çуралчĕç (унччен 25 çул çырманччĕ). Çырас ĕмĕт çирĕпленчĕ».

Халĕ Алексей Ашкеров ячĕ Чĕмпĕр хутлăхĕнче анлă сарăлчĕ. Унăн пултарулăхĕ юптарусем çырассинче палăрчĕ. Ытларах та калама пулать: вăл Чĕмпĕр чăвашĕсем хушшинчи чи ăста юптаруçă. Çутçанталăк панă çивĕч ăс ăна пурнăçри çитменлĕхсене ытарлăн ӳкерсе, шахвăртса калама май парать. Тĕслĕхшĕн пĕр юптарăвне пăхса тухар-ха. Вăл «Сыхланмалла» ятлă.

*— Эс мĕн тăван? —*
*Твсе ыйтать Мулкач ват Кашкăртан.*

*— Кăнтăрлахи апат тăватăп.*
*— Илтменччĕ-çке эс курăк çинине.*
*— Эп пурнăçри юратăва*
*Пач улăштартăм иртнĕ ирхине.*
*Лар ман çума, пĕрле апатланар!*
*Ĕненчĕ янавар,*
*Вăл пычĕ çывăхах,*
*Анчах...*
*Ăна вара çак самантран*
*Никам курман.*

*Юптарури мораль çапла:*
*Çав Кашкăртан сыхланмалла.*

Кĕске хайлавра — мĕнле çивĕч ыйтăва уçса панă! Кунта, М.Горький калашле, чăннипех те сăмахсене хĕсĕк, шухăшсем ирĕкре. Вĕрентӳллĕ хайлав.

Çав вăхăтрах Алексей Антипович лирикăна кăмăллать — çутçанталăк тата юрату лирикине. «Ăçта-ши» сăвăран темиçе йĕрке илсе пăхар-ха:

*Ăçта-ши йăлтăр çăлтăрлă*
*Кĕрхи ĕлккен каçсем*
*Тата чĕре çунтармăшĕ —*
*Савнийĕн куçĕсем?*

*Çавсем йăлт тыткăнланăччĕ*
*Ман шухă чĕрене.*
*Вĕсен хĕлхемĕ çутнăччĕ*
*Телейлĕх хунарне.*

Автор кунта сайра тĕл пулакан сăвă виçипе — дактильпе усă курать. Çаплах вăл нумай сăввинче виçĕ сыпăклă виçесемпе усă курать: дактиль, амфибрахи, анапест. Çак тĕслĕхсем А.Ашкеров пиçсе çитнĕ поэт пулнине çирĕплетеççĕ, сăвă теорине, техникине алла илнине пĕлтереççĕ.

А.Ашкеровăн пурĕ 200 сăвă. Автор Ульяновскра пурăнать.

**Сугалов Михаил Андреевич (Серте Мишши)** Тутарстан Республикине кĕрекен Теччĕ районĕнчи Кăнна Кушки ялĕнче

1947 çулхи июлĕн 12-мĕшĕнче çуралнă. Ульяновскри педуниверситетран вĕренсе тухнă. Тĕрлĕ çулсенче шкулта, «Авангард» (Теччĕ районĕ), «Сувар» (Хусан), «Канаш» (Ульяновск) хаçат редакцийĕсенче вăй хунă. Раççей Писателĕсен союзĕн членĕ.

«Хирти тăман» (1995), «Йĕплĕ пуç кăшăлĕ» (1999) тата ытти кĕнекесен авторĕ.

Серте Мишши – поэт. Юлашки çулсенче уйрăмах тухăçлă ĕçлеме тытăнчĕ. Паллă критик В.С.Чекушкин автор творчестви пирки çапла çырать: «Серте çырнисем темипе те, кĕвĕ-çеммипе те нумай енлĕ, вĕсене поэзи вăркăшĕ тĕс панă. Пурнăçа хăй майлă курса хăйне евĕр хаклама пултарнипе пĕрлех вулавçăпа пĕр чĕлхе тупма пĕлни сăвăç пуласлăхĕ пуррине шантарать. Серте сăвăсенче пурнăçри драмăллă пулăмсене ӳкерес туртăм куçкĕрет палăрать. Ача чухне чуна ыраттарнисем: асаплă, анчах чĕрлĕхлĕ шухăш-туйăм; кулленхи шăв-шавăл, пĕлтерĕшлĕ хирĕçĕвĕсем тата вĕсене çĕнтерекен шанчăкпа çирĕплĕх. Çав çирĕплĕх куçа шартмасть, çапах вăл ултавсăр... Анчах ырлăхлă канлĕх те тупма пĕлет вăл — çутçанталăкпа тăван тавралăхра, ял-йышпа тăван-пĕтенре, ултавсăр юратура, ăслă шӳт-пӳтре».

Юлашки сăввисене вуланă хыççăн çапла калама пулать. Поэт — максималист. Пурнăçпа, унри пулăмсемпе килĕшмест. Вуçех чăл-пар салатса тăкма хатĕр. Автор япалана, пулăма е чăлт шурăпа (кун пеккисем сайрарах), е йĕпкĕн хурапа сăрлать. Варри — çук. Çакăнпа вăл кăштах Иван Юркина аса илтерет пек. Автор çынсене хăйсен умĕнчи япаланах урăхла курма пулăшать, çĕнĕлле пăхать. Ку поэт пиççе çитнине пĕлтерет, хăйĕн сăнпичĕ, çул-йĕрĕ пуррине палăртать.

**Деменкова (Зайкова) Валентина Васильевна** 1924 çулхи декабрь уйăхĕн 8-мĕшĕнче Чăваш çĕршывĕнчи Каçал тăрăхĕнче, Хирти Сĕнтĕр ялĕнче, вăтам хресчен çемйинче çуралнă. Ялта шкул пĕтернĕ хыççăн Патăрьелĕнчи педучилищĕрен вĕренсе тухнă. 35 çул учительте ĕçленĕ. Халăха вĕрентес ĕç отличникĕ.

Сăвă çырма пиллĕкмĕш класранах пуçланă. Хайлавĕсем Шупашкарта тухса тăракан «Ялав» журналта, «Тантăш» хаçатра пичетленнĕ.

1979 çулта, мăшăрĕ вилнĕ хыççăн, В.В. Деменкова Ульяновск çывăхĕнчи Аслă Ключище ялне пурăнма куçать. Маларах район хаçачĕпе, каярах «Канаш» хаçатпа çыхăну тытать.

Ч-42668
НАЦИОНАЛЬНАЯ
БИБЛИОТЕКА

Автор маларах сăвă ытларах çырнă пулсан юлашки вăхăтра прозăпа ĕçлеме пуçларĕ. 1999 çулта унăн пĕрремĕш кĕнеки «Кĕтнĕ шуçăм» ятпа тухрĕ. Унта Валентина Васильевнан суйласа илнĕ хайлавĕсем – повесть, поэма, калавсем, сăвăсем – кĕнĕ. Автор тăван сăмаха лайăх туять, литература теорине ăнкарать. Сăввисенче юрату тата гражданла лирика палăрать. Поэтесса «вăхăтпа хăй çинчен» шухăшлать.

Сăвăлла çырнă произведенисенче чи калăпăшли – «Юратнă ĕç» поэма. Чăннипе ăна автобиографилле теме пулать. Автор хайлаври ĕçсем çинчен калуçă чĕлхипе çырать: учитель ĕçне кӳлĕнни, вăрçă çулĕсем, бюрократ пуçлăхсемпе кĕрешни, çемьери кăлтăксем... Çапах та ӳкĕнмест хайлаври герой. Пурнăçне вăл ача-пăчана воспитани панă ĕçре ирттернĕ, обществăшăн тăрăшнă. Ăна вăл çапла пĕтĕмлетет:

*Мамăкла çунат хӳтти туймарăм*
*Кил пурнăçĕнче те ĕçĕмре.*
*Чĕлхепе çынна эп юраймарăм,*
*Тĕрĕслĕхшĕн çунчĕ чун-чĕре.*

Юлашкинчен çапла калать:

*... Хам юратнă ĕçĕме манаймăп,*
*Шел, ăна пуçлаймăп çĕнĕрен.*

Апла пулсан герой нимĕншĕн те ӳкĕнмест, çамрăк ăрăва вĕрентме тӳр килнишĕн мăнаçланать. Ку вăл учитель ĕçне мухтани, унăн сумне çĕклени, çамрăк ăрăва ăна юратма, хисеплеме вĕрентни пулать.

Прозăна илес пулсан чи пысăкки – «Çĕнĕ ашшĕн çĕнĕ ывăлĕ» повесть. Унта та чи малта воспитани ыйтăвĕ тăрать. Аслисем пĕр-пĕринпе килĕштерсе пурăнманни, ĕçкĕпе иртĕхни, ачасене тимлĕх уйăрманни çамрăк ăрăва тĕрĕс çул çине тăма чăрмантарать – акă хайлавăн тĕп шухăшĕ. Çакăнтанах проблема тухать: обществăн культура шайне çĕклес тесен ача-пăчана тĕрĕс воспитани памалла. Ун пек тума хăв сăпайлă та сапăр, ăслă та пĕлӳллĕ çын пулмалла.

В.Деменкова хăйĕн калавĕсенче те çак ыйтăвах хускатать, çынна кăмăл-сипет енчен ырă та таса пулма вĕрентет. Унăн паллă калавĕсем: «Кам айăплă», «Пиçмен дыня», «Çăмламас тус».

Автор 80 çула çитеспе Раççей Писателĕсен союзĕн членĕ пулса тăчĕ, икĕ кĕнеке кăларчĕ: «Кĕтнĕ шуçăм», «Манăçми вăхăтсем».

**Данилов Лаврентий Иванович (Лаврентий Анăç)** 1959 çулхи февралĕн 17-мĕшĕнче çуралнă. Унăн тăван çĕршывĕ – Чăваш Республикинчи Тăвай районне кĕрекен Сăхăтпуç ялĕ. Вăтам шкул хыççăн Канаш хулинчи 2-мĕш ГПТУра слесарь-вагонник специальноçне илнĕ. 1977-1979 çулсенче çар хĕсметĕнче пулнă. 1980 çултанпа Ульяновск хулинче пурăнать. Милицире ĕçлесе тивĕçлĕ канăва кайрĕ, аслă прапорщик.

Сăвăсем, шӳтле калавсем шкулта вĕреннĕ чухнех çырма пуçланă. Вĕсем «Пионер сасси» хаçатра та пичетленнĕ. Халĕ те тĕрлĕ хаçатсемпе çыхăну тытать, «Капкăн» журналта пичетленет.

1997 çулта Л.И. Данилов хăй ĕçлекен уйрăмри çынсем çинчен документлă очерксен пуххине – «Чтобы помнили» кĕнеке кăларчĕ.

Ачалăхне аса илсе çыравçă çапла калать: «Çырас туйăм анне урлă пуçланнă. Вăл пире, вунă ачине, А.Пушкин, М.Лермонтов, Ухсай Яккăвĕ, К.Иванов сăввисене, И.Крылов юптарăвĕсене пăхмасăр каласа паратчĕ. Пире те каçсерен краççын лампи умĕнче «Ĕмĕр сакки сарлака», «Юманлăхра çапла пулнă», «Хура çăкăр» вуласа паратчĕ».

Литература жанрĕсенчен вăл ытларах поэзие кăмăллать. Ку таранччен сăввисен шучĕ çĕртен иртнĕ. Хăш-пĕрне хăех вырăсла куçарнă.

Автор тĕрлĕ стильпе çырать, анчах çутçанталăк, юрату лирики нумайрах. Вăл хăйĕн геройĕсемпе пĕрле çуралнă çĕршывĕнче тăванĕсемпе çумлăн ларать, çӳрет. Çĕр çыннине мухтать те чыслать. Сăввисем тĕрлĕ саспа илтĕнеççĕ: уйра йĕрсе тăракан ача сасси, кӳршĕ ялти чиркĕвĕн чан сасси, çулçă шĕпĕлтетнĕ сасă... Çавăнтах аслашшĕн çăпати чăланта çакăнса тăрать. Ирĕксĕрех вырăс писателĕ Н.А.Некрасов аса килет. Çак çын авторăн чĕринче тарăн йĕр хăварнă пулмалла. Куратăн, хăш чухне Л.И.Данилов сăвă техникине çирĕп пăхăнсах пымасть. Çакăншăн ăна асăрхаттарас та килет, анчах шухăшĕ çак кăлтăксене çĕнтерет темелле, аяла тăвать. Çавнашкал япала вăл – сăвă çырасси. Вулакана шухăшпа тыткăнлама пĕлмелле. Авторăн ку ĕç ăнăçлă пулать. Тĕрлĕ туйăмсен сăпкинче ярăнма пĕлни, шухăшсене тĕрлесе çыхăнтарни, ытарлă калани, поэзи уçлăхне çитме тăрăшни, ăнтăлни сисĕнет сăввисенче.

Нумай çырса кайиччен пĕр сăввине пăхса тухар-ха. Мĕнле тарăн шухăшлать автор!

ТИХА

*Çаран çинче çӳреççӗ тихасем,*
*Выляççӗ çилхипе çил ачисем.*
*Кур, амӑш çиллине ӗмет тихи,*
*Сӗт тутине аван чухлать чӗлхи.*

*Кӗç самантран çӗмрен пек ӗрӗхет,*
*Амӑш çине пырать те перӗнет.*
*Унтан курӑк çием пекки тӑвать,*
*Вара ачашшӑн кӗçенсе ярать.*

*Айван... Пӗлмест мӗн иккенне турта...*
*Ӗмӗрӗ тарлӑ иртӗ, хӗн-хурта.*
*Шӑпа тени ача чух паллӑ мар.*
*Телейпе хуйхӑ çӳрӗç юнашар.*

Техника енчен кӑлтӑксем çук мар ӗнтӗ. Çапах та çак сӑвва эпӗ авторӑн чи ӑнӑçлӑ хайлавӗсем хушшине кӗртесшӗн.

«Тарӑн Çырма Пуçӗ» баллада вара çак вӑхӑта авторӑн чи пысӑк ӗçӗ. Çитменнине, вӑл ӑна хӑйех вырӑсла куçарнӑ.

Баллада хӑйӗн содержанийӗпе М.Федоровӑн «Арçури» произведенийӗпе пӗр евӗрлех. Ял çынни тӗшмӗше ӗненни, усал вӑя шанни сисӗнет кунта. Автор чӑн пулнӑ фактсенчен чӗнтӗрлесе илемлӗ те ӗнентерӳллӗ сюжет çыхнӑ. Тарӑн Çырма Пуçӗ – халӑха хӑратса тӑракан вырӑн. Çынсен инкекӗсен сӑлтавӗ — çавӑнта. Хайлаври геройсем пӗр авӑрта пӑтрашӑнаççӗ, тӗрӗс çул тупма пӗлмесӗр чӗрӗ чунсене «парне» вырӑнне параççӗ. Тӗшмӗшпе анранӑ çынсемшӗн таврари илемлӗх тӗксӗмленнӗ, ырӑ тӗллев çухалнӑ. Çынсем пуç çапса (çӑмӑл майпа) терт-нушаран хӑтӑласшӑн. Вӗсем Тарӑн Çырма Пуçне нимӗнпе те парӑнтарма çук пулӗ теççӗ. Шанчӑк çуккине пула ӑна хирӗç тӑраймаççӗ (тен, ӑс-тӑн шайӗ, пӗлӳ çитмест). Усала хирӗç тухакан паттӑр курӑнмасть, ертсе каякан çук. Кӗлӗ тунин, пуç çапнин – усси çук. Автор çакна систересшӗн. Инкек-синкек сӑлтавӗ вара – çын тискерлӗхӗ. Акӑ ӗç пуçламӑшӗ:

*Ялти пуян Микула*
*Мӑшкӑлланӑ сар хӗре.*
*Чӑн-чӑн тискер кайӑкла –*
*Шеллемен вӑл, чул чӗре.*

Хурлăха тӳсеймесĕр сарă хĕр — Вĕçелӳк — çырма пуçне сиксе вилет. Çакăн хыççăн çырма пуçĕ «чапа тухать»: Тарăн Çырма Пуçĕ пулса тăрать. Ылханлă çĕрте çынсем çухалаççĕ. Халăх унран хăраса пурăнать, унталла выльăхне те ямасть. Паян та халăх ку вырăнтан айккипе иртме тăрăшать.

Л.И.Данилов çивĕч шухăшлă çыравçă, пĕтĕмĕшле илсен шухăшĕсем хăнăхнă калăпа кĕрсе пĕтеймеççĕ. Çакă — лайăх: авторăн хăйĕн стилĕ, çулĕ пуррине пĕлтерет, хăйĕн сăн-сăпатне тупнă çыравçă вара – лайăх çыравçă. Вăл вулакана çĕнĕлле шухăшлаттарма, кулянтарма, пăшăрхантарма, хайлавсенчи геройсен пурнăçĕпе пурăнтарма пĕлет.

«Чтобы помнили» (1997) кĕнеке авторĕ.

**Никонорова Анна Степановна** Тутарстанра, Пăва районĕнчи Таккавар ялĕнче, 1952 çулта май уйăхĕн 27-мĕшĕнче çуралнă, Элшелĕнчи вăтам шкултан вĕренсе тухнă. Суту-илӳ училищине, Хусанти кооператив техникумне пĕтернĕ.

Чи малтанхи калавĕ Пăва район хаçатĕнче 1967 çулта кун курнă. Каярах Чăваш Енре тухса тăракан «Аван-и», «Самана» хаçатсенче пичетленнĕ.

1980 çултанпа Ульяновск районĕнчи Вышкă ялĕнче пурăнать.

А.Никонорова прозăпа та çырать, сăвăсем те хайлать.

Прозине илес пулсан калавсенчи геройсем — паянхи пурнăçри çынсем. Темисем — юрату, чыслăх, çынлăх. Тата тепĕр тарăн та чуна хускатакан ыйту çĕклет вăл: ашшĕ-амăшĕсĕр тăрса юлнă ачасем. Пĕр калавĕн ячĕ – «Усрав ывăл» («чăн пулни» тенĕ ăна автор). Сюжечĕ çапларах. Çамрăк мăшăр ача çуратаймасть. Кунта пурăнма, тухтăрсем патне сипленме çӳреме намăс тесе арăмĕпе упăшки Çĕпĕре тухса каяççĕ. Шура чукун çул çинче ĕçлеме тытăнать. Пĕррехинче вакунра ултă уйăхри ача тупаççĕ. Шура ăна килне илсе каять. Милицире, райĕçтăвкомра пулать: ачан амăшĕ тупăнмасть. Çавăнпа хăй усрама илет. Упăшки ют ача кирлĕ мар тесе уйрăлса каять, тепĕр çемье çавăрать. Шура та качча каять, тата икĕ ача хушăнать çемьере — хальхинче хăйех çуратать. Пĕррехинче усрава илнĕ ачи патне пĕр хĕрарăм пырать, эпĕ санăн аннӳ тет. Вова (усрав ывăлĕ) салтака кайнă кун çак хĕрарăм Шурăна: «Вова ман ача», — тет. Ку тĕрĕсех иккен: каччи ачана йышăнманнипе хĕр пуççăн Вовăна çуратсан пуйăс çине кĕртсе хăварать. (Ултă уйăх çын патĕнче нушаланса пурăннă хыççăн вăл ачаран çапла уйрăлма шутлать.)

Хайхи Шура Вовăна чĕнсе илет те: «Ачам, акă сана çуратнă хĕрарăм, санăн аннӳ. Тав ту ăна хăвна çуратнишĕн», - тет. Лешĕ

çапла хуравлать: «Нина аппа, тав сире ăсатма килнишĕн, Эсир манăн АННЕНЕ тав тăвăр мана ӳстернишĕн».

Чĕрене тивет ку сюжет. А.Никонорова çакăн пек япаласене çын патне çитерме пĕлет, вулакана шухăша ярать. Сăввисем вара çак авторăн лирикăллă пулса тухаççĕ. Мĕнле чăваш илтмен пуль (е концертра, е телевиденипе,е аудиокассета çинче) «Ах, аннеçĕм, анне» юрра С.Кувшинов юрланине. Унăн авторĕ – Анна Никонорова. Сăввине те, кĕввине те вăл хайланă. Чăнах та, аудиокассета çинче урăхла çырнă. Ку çакăн пек хăтланакансен совеçĕ çинче юлтăр.

«Лантăшсем» юррăн историйĕ те çавнашкалах. Ăна халĕ Г.Вакку юрлать. Çак юррăн сăмахĕсемпе кĕввине те А.Никонорова çырнă.

Ку юрăсене тата ыттисене А.Никонорова икĕ йăмăкĕпе пĕрле – Полинăпа тата Верăпа – тахçанах юрлаççĕ ĕнтĕ. Чĕмпĕр тăрăхĕнче чăвашла аудиокассетăсем кăларма хальлĕхе май çук-ха... Шупашкарта вара — пулать. Сăлтавĕ çакăнта çеç. Тавçăруллă çынсем çакăнпа вăр-варрăн усă кураççĕ.

А.Никонорова «Чун туртăмĕ» (2006) кĕнеке авторĕ.

**Ромашкин Валериан Федорович** (хăш чухне вăл **В.Федоров** псевдонимпа усă курать) Ульяновск облаçĕнче, Чăнлă районĕнчи Анат Тимĕрçен ялĕнче, 1950 çулта ноябрĕн 19-мĕшĕнче çуралнă. Ялти шкулта виçĕ çул вĕреннĕ хыççăн вĕсен çемйи çак районти Телешовкăна куçать. Çакăнта вăл сакăр класс пĕтерет, Çинкĕл педучилищинчен вĕренсе тухать. 1970 çулта учитель ĕçне пуçăнать. Пĕр хушă «Память Куйбышева» колхозра комсомол организацийĕн секретарĕнче ĕçлет.

1979 çулта Ульяновскри патшалăх пединститутĕнчен вĕренсе тухать, Кивĕ Улхашра шкул директорĕ пулать. 1982 çулта ăна Чăнлă районĕнчи вĕрентӳ пайĕн методистне лартаççĕ. Каярах КПСС райкомĕнче вăй хума тивет: инструктор, пай заведущийĕ. 1985 çулта ăна Чăнлă район хаçачĕн редакторне куçараççĕ.

В.Ф.Ромашкин Чĕмпĕр чăвашĕсен «Канаш» ятлă хаçатне никĕслекенсенчен пĕри, унăн пĕрремĕш редакторĕ. Раççей Журналисчĕсен союзĕн членĕ, «Чăваш халăх ăсчахĕ» ята тивĕçнĕ, Чăваш наци культурин тава тивĕçлĕ ĕçченĕ. «Канаш» хаçат çумĕнче 1998 çулта çапăнса тухнă «Чуваши Симбирского Поволжья» кĕнекен авторĕсенчен пĕри. Вăл çырнă калавсемпе шӳтсем «Коммунизм çути» (Чăнлă районĕ) хаçатра В.Цветков, В.Сырлан псевдонимсемпе пичетленнĕ.

Пĕррехинче Валериан Федорович çапла каланăччĕ: «Хам мĕн те пулин çырас тесе шутламанччĕ эпĕ. Редактор пулнă май, шавах çын хайлавĕсене тӳрлетнĕ, пичете юрăхлă тунă. Каярах хамăн та çырса пăхас туйăм çуралчĕ».

Маларах юморескăсем çырнă, ун хыççăн – сăвăсем. Авторăн чи пĕлтерĕшлĕ тата калăпăшлă ĕçĕ вăл – «Тăван ялăм, савнă ялăм» хайлав. Унта 200 куплет ытла. «Ял сăнарĕсем» тенĕ ăна автор. Тен, поэма теме те май пур. Мĕнле каласан та хайлавăн пĕлтерĕшĕ пысăк. Çулсем иртнĕçемĕн тата пысăкланĕ. Каярах унпа таврапĕлӳçĕсем Тимĕрçен справочникĕ вырăнне усă курĕç.

В.Ф.Ромашкин хăйĕн сăвăлла хайлавне тĕрлĕ мелпе илемлетнĕ, тĕрлĕ стильпе усă курнă. Пейзаж та, кулăш та, çын психологийĕ те пур кунта. Ку произведени, ман шутпа, Н.Шелепин «Çĕрпӳ пасарĕ» поэмине çывăх — чĕлхипе те, содержанийĕпе те, стилĕпе те. Кăштах танлаштарса пăхар-ха. Пирĕн автор çапла çырать:

*Йăкăртатрĕ пасара*
*Катярисăн арăмĕ.*
*Çула майăн кумине*
*Хăйĕнчен вăл хăвармĕ.*

*Альтук инкен çук чару –*
*Сутмаваскать хăярне.*
*Тепри çавăтнă пăру,*
*Илсе тухать выльăхне.*

*Пасар кунĕ пирĕн ял*
*Такана пек хумханать:*
*Вырăс анать салараи,*
*Мишер васкать катаран...*

*Ирçелсемпе кивьялсем,*
*Улхашсемпе пухтелсем,*
*Капăр тумлă ентешсем –*
*Эпир пурте чăвашсем.*

*Пасар кунĕ килĕрен*
*Кăмакасем хутаççĕ.*
*Пĕрне-пĕри чĕререн*
*Ăш кукăльпе сăйлаççĕ.*

Пĕрремĕш чăваш халăх поэчĕн вара çакăн пек йĕркесем пур:

*Эх! Çĕрпĕвĕн пасарĕ*
*Мĕн-мĕн кăна çук унта!*
*Кам каласа пĕтерес*
*Унта мĕн-мĕн пуррине.*
*Ăçта пăхнă — вăл тĕлте*
*Темĕн те пĕр сутаççĕ,*
*Сутуçисем хăвăртрах*
*Укçа çине путаççĕ...*
*Ирхи куна каçченех*
*Пăтă пекех çын вĕрет.*
*Тĕрлĕ-тĕрлĕ халăхĕ*
*Пĕртăван пекех çӳрет...*

Сăмахĕсем урăхла, анчах куç умне пĕр евĕрлĕ сăнар тухса тăрать.

Çитменнине, сăвă виçи те пĕрех: çичĕ сыпăклă, «Нарспи» виçи. Çакă авалтанах килет – чăваш халăх сăмахлăхĕнче анлă сарăлнă. Апла пулсан танлаштарса пăхнă икĕ хайлавра та ăрусен çыхăнăвне çирĕплетекенни, халăх чĕлхин сĕткенĕ пур. Çав вăхăтрах вĕсене ăнланма та çăмăл.

Шанатăп: «Тăван ялăм, савнă ялăм» хайлав патне таврăнакансем, ăна тĕпчеме хăтланакансем пулĕç. Шырамалли, тĕрĕслемелли, танлаштармалли нумай кунта. Тен, тавлашмалли те тупăнĕ. Апла пулсан автор анлă тема хускатса вулакансене, уйрăмах анаттимĕрçенсене, интереслентерсе янă.

Ку хайлава хаçатра вуланă хыççăн автор патне Анат Тимĕрçен çыннисем пыма тытăннă: «Мана мĕншĕн асăнман, манăн та çаппа-çапла интереслĕ япала пулнăччĕ-çке». Çакăн хыççăн поэма малалла тăсăлмĕ тесе те çирĕплетме çук.

«Чуваши Симбирского Поволжья» (1998) кĕнекен авторĕсенчен пĕри.

**Богатов Александр Михайлович (Александр Мишшаади)** 1935 çулхи январĕн 15-мĕшĕнче Ульяновск облаçĕнчи Чăнлă районĕнчи Кунтикав ялĕнче çуралнă. Чĕмпĕр чăваш шкулĕнче вĕреннĕ. «Канаш» хаçата уçас тĕлĕшпе нумай вăй хунă, редакцире те ĕçленĕ.

Вырăсла çырать: очерксем, сăвăсем, повеçсем. Ун пурĕ 20 кĕнеке ытла тухнă.

**Ишутов Петр Ильич** 1931 çулхи сентябрь уйăхĕн 5-мĕшĕнче Ульяновск облаçĕнчи Çинкĕл районне кĕрекен Анатьялта çуралнă. Çирĕм пилĕк çул ытла çар хĕсметĕнче пулнă.

Вырăсла çырать. Поэт. Прозаик. Чĕмпĕр тăрăхĕнчи чăваш поэчĕсен сăввисене вырăсла куçарать. А.Юман сонечĕсен виçĕ кĕнекине вырăсла куçарнă.

Хăй çырнă кĕнекесем: «Юля», «Тюбай», «Соседушка», «Волна».

Раççей Писателĕсен союзĕн членĕ.

**Казаков (Ильмовский) Николай Александрович** 1959 çулхи июнĕн 19-мĕшĕнче Тутарстанри Çĕпрел районĕнчи Çĕнĕ Йĕлмел ялĕнче çуралнă. 10 çул ытла «Канаш» хаçатра вăй хучĕ. Историпе этнографиллĕ очерксем, пĕчĕк калавсем çырать.

Раççей Писателĕсен тата Журналисчĕсен союзĕсен членĕ.

Ульяновск облаçĕнчи чăваш таврапĕлӳçисен пĕрлĕхĕн ертӳçи.

«Тăван ен — Çĕнĕ Йĕлмел» ятлă историпе этнографиллĕ очерксен кĕнекин авторĕ.

**Еграшкина Нина Никитична (Нина Разумова, Нина Максина, Ксения Кулаева, Ниниле** псевдонимсемпе çӳрет) 1956 çулхи мартăн 7-мĕшĕнче Чăваш Республикинчи Етĕрне районĕнчи Анат Ачак ялĕнче çуралнă. Чăваш патшалăх педуниверситетне пĕтернĕ. Специальноçпа — ӳкерӳçĕ. «Палнай» ушкăн солистки. Калавĕсем «Шевле çути» антологире пичетленнĕ, Чăвашрадиопа янăранă.

1996 çултанпа «Канаш» хаçат редакцийĕнче ĕçлет. Вырăнти çыравçăсен кĕнекисене ӳкерчĕксемпе илемлетет, калавсем çырать. Калавĕсем шӳтлĕ, автор ирони, юмор урлă пурнăçри çитменлĕхсене, çыннăн начар енĕсене питлет. Ваттисен сăмахĕсемпе вырăнлă усă курать.

**Розов Николай Дмитриевич** Тутарстанри Теччĕ районĕнчи Çĕньялта 1953 çулхи августăн 26-мĕшĕнче çуралнă. Ăнă ялĕнче вăтам пĕлӳ илнĕ. Хусанти медицина институтне пĕтернĕ. Шăл тухтăрĕ.

Ытларах тăван ялĕн историне тĕпчет, историпе этнографиллĕ очерксем çырать. Çаплах публицистика жанрĕпе статьясем калăплать, «Канаш» хаçатра нумай пичетленет.«Шевле çути» альманахра кун çути курнă.

Ун кĕнекисем: «Çĕньял – Малое Бисярино», «Ытарайми ялйышăм», «Хĕн-хур айĕнче пичетленнĕ пурнăç кĕнеки», «Нихçан манас çук», «Иккĕмĕш кил».

**Васильева Елена Всеволодовна** Чăваш Республикинчи Канаш районне кĕрекен Янкăлч ялĕнче 1968 çулхи май уйăхĕн 15-мĕшĕнче çуралнă. Чăваш патшалăх университечĕн чăваш филологийĕпе культура факультетĕнчен вĕренсе тухнă.

Хальхи вăхăтра Кăлаткăпуç районĕнчи Бахтеевка шкулĕнче ачасене тăван чĕлхепе литературăна вĕрентет.

Е.Васильева сăвăсем те, калавсем те çырать. Сăмахран, «Чĕре суранĕ» калавра эрех ĕçнин сиенĕ çинчен калаçу пырать. Якур платник ĕçлеме каять. Мунча пĕтернĕ хыççăн вăл çынпа пĕрле эрех ĕçет. Тĕттĕмле килне таврăннă чухне вара тайкаланса пырса ӳкет, пуçне ыраттарать. Йывăр сурана пула вăл вилсех каять. Арăмĕ пĕччен юлать.

Автор кунта çапла каласшăн: эрех нумай ĕçсен инкек сиксе тухма пултарать. Кашни кун ĕçсе иртĕхекенĕн кăна мар, тахçан пĕрре ĕçекенĕн те (калаври герой алкоголик мар-çке).

Пьеса та пур ку авторăн. Вăл «Каçарĕ-ши?» ятлă. Унта 8-мĕш класс ачисем уксах Якур мучи сыхлакан сада кĕрсе панулми вăрлаççĕ. Кайран хăйсен йăнăшне туйса илеççĕ, хуралçă патне каçару ыйтма каясшăн. Анчах та иккĕленеççĕ: лешĕ каçарĕ-ши?

**Кадебин Николай Константинович** 1944 çулхи январĕн 1-мĕшĕнче Ульяновск облаçĕнчи Чăнлă районне кĕрекен Кивĕ Улхаш ялĕнче çуралнă. 1972 çулта Чăваш патшалăх пединститучĕн художествăпа графика факультетĕнчен вĕренсе тухнă. Учительте ĕçлесе (директор та пулнă) тивĕçлĕ канăва кайнă.

Облаçри паллă таврапĕлӳçĕ. Раççей Федерацийĕн тава тивĕçлĕ учителĕ, Чăваш халăх ăсчахĕ. Сăввисенче ял пейзажĕ, кăмăл-сипет ыйтăвĕсем уççăн курăнаççĕ. Кĕске калавсем те хайлать. «Шевле çути» альманахра пичетленнĕ.

«Старые Алгаши», «В бой идут за вас, родные» кĕнекесен авторĕ.

**Кашеев Владимир Яковлевич** та Кивĕ Улхаш ялĕнче 1942 çулта çуралнă. Художник-профессионал. «Канаш» хаçата юморескăсем, калавсем, тĕрленчĕксем çырса тăратчĕ. Хăй сассине, стильне тупнă çыравçăччĕ. Шел пулин те, 1995 çулта вăл çак тĕнчере пурăнмалла е пурăнмалла мар текен ыйтăва хăй ирĕкĕпе татса пачĕ, вăхăтсăр çĕре кĕчĕ.

Автор кулăшпа питлев стилĕпе нумай хайлатчĕ. Ун сисĕмлĕ

чунӗ пурнӑҫри ҫитменлӗхсене курса аманатчӗ. Вӗсене пӗтерес е сахаллатас тесе вара вӑл витӗмлӗ хайлавсем ҫыратчӗ.

**Кузьмина Елена Николаевна** 1956 ҫулхи ноябрӗн 4-мӗшӗнче Тӑхӑрьялта тӑрӑхӗнче — Элшел ялӗнче ҫуралнӑ. Чӑваш патшалӑх университетӗнчен вӗренсе тухнӑ. 1979 ҫултан пуҫласа паянччен «Чӑнлӑ хыпарӗсем» райхаҫатра вӑй хурать. Прозаик. Прозӑлла сӑвӑсем, тӗрленчӗксем, новеллӑсем хайлать. Тӑванлӑх туйӑмӗ, юрату, тӑван чӗлхе — ҫак ыйтусем кулянтараҫҫӗ автора.

**Ледюкова Александра Васильевна** 1956 ҫулхи май уйӑхӗн 9-мӗшӗнче Кивӗ Улхаш ялӗнче (Чӑнлӑ районӗ) ҫуралнӑ. Ял хуҫалӑх институчӗн экономика факультетӗнчен вӗренсе тухнӑ. Аслӑ Нагаткинта бухгалтерта ӗҫлет. Кӗске те кулӑшла калавсем ҫырать. Хӑш чухне Леонтьева хушаматпа пичетленет.

**Рдюкова Елена Семеновна** Кивӗ Улхаш ялӗнче 1974 ҫулхи май уйӑхӗн 10-мӗшӗнче ҫуралнӑ. Чӑваш патшалӑх университечӗн выпускникӗ. 1996 ҫултанпа Ульяновск педагогика университечӗн преподавателӗ. 1997 ҫулта Чӑваш патшалӑх университечӗн аспирантурине вӗренме кӗнӗ. Филологи наукисен кандидачӗ. Малтан вырӑсла ҫырса пӑхнӑ, халӗ – тӑван чӗлхепе.

Е.Рдюкова ачасем валли хайлать.

**Рогачев Яков Капитонович** 1926 ҫулта Чаллӑпуҫ районӗнчи Тилечер ялӗнче (Самар облаҫӗ) ҫуралнӑ. 1953 ҫулта Мелекесс хулине (каярах Димитровград) пурӑнма куҫнӑ. Журналист. Редакторта ӗҫленӗ.

Вырӑсла та, чӑвашла та ҫырнӑ. Раҫҫей Журналисчӗсен тата Писателӗсен союзӗсен членӗ. Сӑввисемпе калавӗсем тата очеркӗсем хаҫат-журналта, кӗнеке пуххисенче пичетленнӗ. «Путь большевика» тата «Гигант в степи» вырӑсла очерксен кӗнекисене кӑларнӑ.

1993 ҫулта Чӑваш кӗнеке издательствинче ача-пӑча валли ҫырнӑ калавӗсене пухса «Кам аслӑрах» ятлӑ кӗнеке пичетленӗ.

Я.Рогачев 1995 ҫулта вилнӗ.

**Селендеева Мария Алексеевна** 1948 ҫулхи январӗн 12-мӗшӗнче Чӑвашкасси ялӗнче (Чӑнлӑ районӗ) ҫуралнӑ. Ульяновскри пединститутран вӗренсе тухнӑ. 1971 ҫултанпа тӑван ялӗнче вӗрентӳҫӗ пулнӑ. «Шуҫӑм» фольклор ушкӑнӗнче юрлать.

М.Селендеева сăвăсем çырать. Философи, юрату, çутçанталăк темисем илĕртеççĕ ăна. Ытарлăн калама пултарать автор хăйĕн шухăшне.

**Алексеева (Селиванова) Елена Геннадиевна** Аксу районĕнчи Беловка ялĕнче (Тутарстан) 1973 çулхи январĕн 28-мĕшĕнче çуралнă. 1995 çулта Чăваш патшалăх университетĕнчен хĕрлĕ дипломпа вĕренсе тухнă. Çав çулах Чĕмпĕре куçать, «Канаш» хаçата ĕçе кĕрет. Пĕр вăхăтрах Ульяновск патшалăх университетĕнче чăваш чĕлхине вĕрентет.

Е.Алексеева – прозаик. Ун калавĕсенче хальхи вăхăтри çынсен шăписене кăтартса панă. Çамрăксем аслă пурнăç çулĕ çине тухнă чухнехи йывăрлăхсем, йăнăшсем çине пусăм тунă. Юрату авăрĕнче пăлханакан вĕри чĕре туйăмĕсем те пур калавсенче: савнăç, хавхалану, куççуль... Автор хĕрарăм чун-чĕрине, кăмăлсипетне уçса парас тĕлĕшпе çитĕнӳсем тунине палăртмасăр хăварма май çук.

«Телей çăлтăрĕ хыççăн» (2006) кĕнеке авторĕ.

**Семеленов Николай Владимирович** Ульяновск облаçĕнчи Чăнлă районе кĕрекен Пухтел ялĕнче 1958 çулхи июлĕн 2-мĕшĕнче çуралнă. Афганистанра интернационаллă тивĕçне пурнăçланă. Çар корреспонденчĕсен шкулне куçăн мар пĕтернĕ. Ульяновск хулинче 1987 çултанпа.

Н.Семеленов шӳтлĕ калавсем, юморескăсем çыратчĕ. Вилнĕ.

**Степанова Альбина Александровна (Альбина Сенкер)** çуралнă çĕрĕ – Чăваш Енри Упамса ялĕ (Патăрьел районĕ). 1964 çулхи февралĕн 25-мĕшĕнче çут тĕнчене килнĕ. Чăваш патшалăх университетĕнчен вĕренсе тухнă. «Шăмăршă хыпарĕ» хаçатра çырусен пайĕн заведущийĕнче вăй хунă. 1992 çултанпа Чĕмпĕрти «Канаш» хаçат журналисчĕ. 1994 çултанпа Раççей Журналисчĕсен союзĕн членĕ.

А.Сенкер калавсем, новеллăсем, тĕрленчĕксем ăсталать. Ун темиçе сăвă та пур. «Ялкăшсам, вучах» (2006) кĕнеке авторĕ.

2007 çулта Мускава ĕçлеме куçса кайрĕ.

**Головин Анатолий Геннадьевич (Анатолий Май)** 1939 çулта Ульяновск облаçĕнче, Чăнлă районĕнчи Каша ялĕнче, çуралнă. Комсомол путевкипе Магнитогорск —Çтерлĕ чукун çул тунă çĕрте вăй хунă. Ульяновскра пединститут пĕтернĕ. Шкул директорĕ, завуч, партком секретарĕ пулнă.

Тутар Кашари вăтам шкулта вĕрентнĕ.

А.Май сăвăсем, юморескăсем çыратчĕ. Тӳрех палăртмалла: вĕсем тарăн шухăшлă. Ытарлăн калама пĕлет автор, шухăшне веçех кăларса хумасть, вулакана шухăшлаттарма пултарать. Хайсен ялĕ çинчен кĕнеке те хатĕрлесе хунăччĕ, анчах кăларса ĕлкĕреймерĕ. 2001 çулта вилнĕ.

**Соловьева Валентина Николаевна** 1937 çулхи июлĕн 27-мĕшĕнче Чăваш Республикинче, Каçал тăрăхĕнчи Аслă Чурачăк ялĕнче, çуралнă. Патăрьелĕнчи, каярах Канашри педучилищĕсенче вĕреннĕ. Учитель пулнă.

1969 çулта Красноярск крайĕнчи Ачинск хулине куçса кайнă, каярах Туркменире пурăннă. 1989 çултанпа Ульяновскра пурăнать.

Авторăн калавĕсем аван пулса тухаççĕ: шухăшĕсем тарăн, ытарлăн калани нумай. Сюжечĕсене хăйĕн пурнăçĕнчен илнисем те пур. Сăвăсем те, калавсем те çырать.

**Соловьев Петр Диомидович** 1945 çулхи мартăн 1-мĕшĕнче Мускав облаçĕнчи Рошаль хулинче çуралнă. Ачалăхĕ Чăваш Енри Елчĕк районĕнчи Петреккел ялĕнче иртнĕ. Гомель хулинче патшалăх университетне пĕтернĕ. 1986 çулта Ульяновск облаçне пурăнма куçать.

Çăмăл атлетикăпа ветерансем хушшинче вунă хутчен Раççей чемпионĕ пулнă.

Тереньга районĕнчи Скугареевка ялĕнче 23-мĕш училищĕре физкультура учителĕнче ĕçлетчĕ.

Сăвăсем çыратчĕ, вĕсене хăйех юрра хыватчĕ, гитарăпа каласа юрлатчĕ. Велосипедпа инçе çулçӳревсене каятчĕ. 2007 çулта вилнĕ.

**Улендеев Борис Александрович** 1948 çулхи ноябрĕн 16-мĕшĕнче Тутар Республикинчи Çĕпрел районне кĕрекен Хулаçырми ялĕнче çуралнă. Ульяновскра ял хуçалăх институтне пĕтернĕ. Инженер-механик. 12 çул совхоз директорĕ пулнă.

Халĕ Ульяновскра пурăнать.Юлашки çулсенче сăвă çырма пуçларĕ.Тăван тавралăх илемĕ, юратупа туслăх çинчен хайлать. Икĕ кĕнеке авторĕ.

**Уткина Мария Николаевна** Самар облаçне кĕрекен Кушкă районĕнчи Келтес ялĕнче 1951 çулхи декабрĕн 21-мĕшĕнче

çуралнă. Самар, Лениногорск хулисенче пурăннă. Штукатур-маляр. Стройкăра пурĕ 23 çул ĕçленĕ.

Чĕмпĕрте 1977 çултанпа пурăнать. «Эревет» халăх ансамблĕн солистки. Автор юлашки вăхăтра çырма пуçларĕ. Сăвăсем, калав пичетлерĕ. Лирика енне сулăнать. «Шевле çути» альманахра сăввисем пичетленнĕ.

**Федорова Елена Николаевна (Елена Мустаева)** 1966 çулхи январĕн 27-мĕшĕнче Вăрнар районĕнчи Кушлавăш ялĕнче (Чăваш Республики) çуралнă. 1989 çулта Чăваш патшалăх университечĕн историпе филологи факультетĕнчи вырăс уйрăмне пĕтернĕ. 1991 çултанпа «Канаш» хаçатра ĕçлет.

Прозăпа çырать. Пичетленнĕ калавĕсем – «Ĕненӳ», «Пуянăн çăкăрĕ йӳçĕ», «Чей мыскари». Пурĕ унăн 20 ытла калав. Геройсем – паянхи çынсем, вĕсен хутшăнăвĕсем.

**Краснов Сергей Михайлович (Шерккей)** 1967 çулхи апрелĕн 6-мĕшĕнче Чăнлă районĕнчи Ирçел (Ульяновск облаçĕ) ялĕнче çуралнă. Пĕр вăхăт милицире ĕçленĕ.

Халĕ ирĕклĕ усламçă, Ульяновскра пурăнать.

Автор сăвăсем çырать. Стильне ăнланма çăмăлах мар. Тен, çакă вăл хăй сукмакне шыранине пĕлтерет, хальлĕхе калама çук-ха. Ман шутпа, çак сăвăсене нумай вулакан тата опытлă критиксен алли витĕр кăлармалла. Тен, вĕсем калĕç автор хăш енне сулăннине. Интереслĕ шухăшсем, поэзи пĕрчисем çук мар ун сăввисенче.

**Еграшкин Анатолий Алексеевич** 1953 çулхи февралĕн 24- мĕшĕнче Чăнлă районĕнчи Каша ялĕнче çуралнă. Чăваш патшалăх институчĕн художествăпа графика факультетне пĕтернĕ. Пĕтĕм Раççейри «Шкул, вĕрентекен тата искусство» конкурсăн дипломанчĕ. Саранскра йывăçа эрешлесе касас енĕпе иртнĕ Раççей конкурсĕн дипломанчĕ. Тĕрлĕ куравсем хатĕрленĕ. Пĕр вăхăт Ульяновскри Чăваш культура центрĕн директорĕ пулнă.

Тăван ялĕ çинчен вырăсла «Кайсарово» ятлă (2002) кĕнеке пичетлесе кăларнă.

**Репин Владимир Матвеевич** 1922 çулхи мартăн 14-мĕшĕнче Чăнлă районĕнчи Каша ялĕнче çуралнă. Аслă вăрçа хутшăннă. Ульяновскри патшалăх techinститутĕнчен вĕренсе тухнă, историк. Парторг, роно

пуçлăхĕ, райком секретарĕ, райĕçтăвком председателĕн çумĕ, шкул директорĕ пулнă. Чĕмпĕр тăрăхĕнчи чăваш наци юхăмне чĕртсе тăратакан хастарсенчен пĕри, Чăваш халăх ăсчахĕ.

«Асаилӳсем, щухăшсем...» (2002) кĕнеке авторĕ.

2003 çулта вилнĕ.

**Шумилова Вера Ивановна** 1963 çулхи февралĕн 28-мĕшĕнче Тутарстанри Теччĕ районе кĕрекен Шанчă ялĕнче çуралнă. Хусанти суту-илӳ техникумне пĕтернĕ.

Сăвăсем, калавсем çырать, «Канаш» хаçатра пичетленет. Сăввисене хăех юрра хывать, вăл хайланă юрăсен аудиодискĕ те тухнă.

**Бикмендеева Мария Михайловна** 1923 çулхи августăн 25- мĕшĕнче Чăнлă районĕнчи Чăвашкасси ялĕнче çуралнă. Чĕмпĕр чăваш шкулне пĕтернĕ. 50 çул ытла шкулта вăй хунă, вĕсенчен 45 çулне – тăван ялĕнчи пуçламăш шкул директорĕнче. Шкулта И.Я.Яковлев музейне йĕркеленĕ, унăн ертӳçи. Халăха вĕрентес ĕçĕн отличникĕ. Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ. Чăнлă районĕн Хисеплĕ гражданинĕ.

«Чăвашкасси» (2004) кĕнеке авторĕ.

**Васильева Нина Федоровна** Чăнлă районĕнчи Каша ялĕнче 1941 çулхи октябрĕн 11- мĕшĕнче çуралнă. Нумай çул хушши ялти почта уйрăмĕн пуçлăхĕ пулнă.

Сăвăсем, калавсем çырать, «Канаш» хаçатра пичетленет. «Шевле» литпĕрлешӳ ĕçне хутшăнать.

**Еремеев Николай Петрович** Чăваш Республикинчи Шăмăршă районне кĕрекен Васан ялĕнче 1957 çулхи январĕн 16-мĕшĕнче çуралнă. Ульяновскри ял хуçалăх институтĕнчи экономика факультетĕнчен вĕренсе тухнă. Тĕп контролер-ревизор, аслă экономист, тĕп аудитор вырăнĕсенче ĕçленĕ.

Сăввисем «Канаш», «Шăмăршă хыпарĕ», «Туслăх» (Тутарстан, Нурлат районĕ) хаçатсенче пичетленнĕ.

«Анатри çăлтăр» (2009) кĕнеке авторĕ.

**Кондрашкин Николай Григорьевич** 1949 çулхи мартăн 28-мĕшĕнче Чăнлă районĕнчи Вăта Тимĕрçен ялĕнче çуралнă. Чăваш патшалăх пединститучĕн художествăпа графика факультетне пĕтернĕ. Те-

миçе палăк тата скульптура портречĕн авторĕ. Сăвăсемпе очерксем вырăсла çырать.

Килĕнче компьютерпа темиçе кĕнеке пичетлесе кăларнă.

**Макарова Роза Владимировна** 1964 çулхи январĕн 23-мĕшĕнче Чăваш Республикинчи Елчĕк районне кĕрекен Яманчўрел ялĕнче çуралнă. Чăваш патшалăх университечĕн историпе филологи факультетне пĕтернĕ. Пĕр вăхăт «Канаш» хаçат редакцийĕнче ĕçленĕ, халĕ Ульяновск облаçĕнчи патшалăх архивĕнче вăй хурать.

Калавĕсем «Канаш» хаçатра, «Шевле çути» альманахра пичетленнĕ.

**Грузин Владимир Владимирович** 1969 çулхи февралĕн 7-мĕшĕнче Чăнлă районĕнчи Каша ялĕнче çуралнă. Ульяновск патшалăх педуниверситетне, Чăваш патшалăх университечĕн чăваш филологийĕпе культура факультетне пĕтернĕ. Филологи наукисен кандидачĕ. Статйисем «Канаш» хаçатра, «Тăван Атăл» журналта пичетленнĕ. Каша шкулĕнче вĕрентет.

Таврапĕлў ыйтăвĕсемпе вырăсла çырнă икĕ кĕнеке авторĕ.

**Аляпкин Михаил Андреевич** 1940 çулхи июлĕн 19-мĕшĕнче Самар облаçĕнчи Похвиçнĕ районне кĕрекен Çĕньялта çуралнă. Энгельсри çар радиотехника училищине пĕтернĕ. 26 çул çар хĕсметĕнче пулнă. Куйбышеври (Самар) патшалăх пединститучĕн историпе филологи факультетĕнчен вĕренсе тухнă. Таврапĕлўçĕ. Историпе этнографи очеркĕсем çырать.

Вырăсла çырнă 6 кĕнеке авторĕ.

**Тимряков Николай Иванович** 1950 çулхи февралĕн 25-мĕшĕнче Тутарстанри Пăва районне кĕрекен Рункă ялĕнче çуралнă. Саратоври çăмăл промышленность техникумне, Ульяновскри патшалăх пединститутне, Ленинградри (Санкт-Петербург) Çар институтне пĕтернĕ. Марафон чупассипе СССР чемпионĕ пулнă. Тĕнче класлă спорт маçтăрĕ. Подполковник. Ульяновскра пурăнать.

Йывăçа эрешлесе касас енĕпе ăста. Ун куравĕсем хамăр çĕршыври тата Чехословакири темиçе хулара иртнĕ.

Калавĕсем «Канаш» хаçатра пичетленнĕ. «Помоги себе стать сильным» (2008) кĕнеке авторĕ.

**Кирпичников Иван Моисеевич** 1932 çулхи сентябрĕн 13-мĕшĕнче Чăнлă районĕнчи Сахалин поселокĕнче çуралнă. Куйбышеври (Самар) индустрипе педагогика техникумне, Ульяновскри политехника институтне пĕтернĕ. Нумай çул заводра конструкторта вăй хунă. Таврапĕлӳçĕ. Вырăсла çырать. Вăта Тимĕрçенте пурăнать.

Чăнлă районĕнчи Вăта Тимĕрçен шкулĕ çинчен «Мы здесь учились» (2009) ятлă кĕнеке пичетлесе кăларнă.

**Щеголькова Ирина Александровна** 1959 çулхи ноябрĕн 17-мĕшĕнче Чăнлă районĕнчи Каша ялĕнче çуралнă. Чăваш патшалăх пединститучĕн художествăпа графика факультетĕнче вĕреннĕ. Тĕрлĕ куравсене хутшăннă. 20 çул ытла Чăнлă поселокĕнчи ӳнер шкулĕн директорĕнче ĕçленĕ, Чăнлăра пурăнать.

Вырăсла сăввисем «Канаш» хаçатра пичетленнĕ.

**Максимов Александр Ананьевич** Чăваш Республикинчи Вăрнар районне кĕрекен Хирпуç ялĕнче 1977 çулхи июнĕн 3-мĕшĕнче çуралнă.1994-1999 çулсенче Ульяновскри çар çыхăну училищинче вĕреннĕ. Çак вăхăтра «Шевле» литпĕрлешӳ ĕçне хутшăннă. Ун сăввисем «Канаш» хаçатра, «Шевле çути» альманахра пичетленнĕ.

Халĕ Сахалинта çар хĕсметĕнче тăрать.

# УЙРĂМ ÇЫРАВÇĂСЕН ХАЙЛАВĔСЕНЕ ТИШКЕРНИ

## Ашмарин — чĕлхеçĕ, тĕпчевçĕ, политик

Кам вăл Ашмарин? Паллă чĕлхеçĕ, тĕпчевçĕ, ученăй. Чăваш тĕнчинче ун ятне пĕлмен çын та çук пулĕ. Вырăс йăхĕнчен тухнă çын (чăнах та, кукамăшĕ чăваш пулнă ун) чăваш халăхĕшĕн чикĕсĕр пысăк ĕç тунă. Николай Ивановичăн 17 томлă «Чăваш сăмахĕсен кĕнеки» çеç мĕне тăрать! Çакна пулах ăна чăваш чĕлхи пĕлĕвĕн никĕслевçи теме пулать. Тепĕр паллă ĕçĕ – «Болгары и чуваши» кĕнеке (1902 çулта тухнă). Унта автор чăваш халăхĕпе чĕлхи пулса кайни çинчен тĕплĕн çырса кăтартнă, çирĕп наука теорийĕ туса хунă. Çак кĕнеке — чăваш халăх шăпине татса паракан ĕç. Пысăк масштабпа илсен — çак ĕç пулман пулсан эпир патшалăх тытăмĕсĕр тăрса юлма, чăваш коммунипех çырлахма пултарнă. Кĕскен каласан, Ашмарин теорийĕ – чăвашсем пăлхарсенчен пулса кайнă пĕртен-пĕр тăхăмĕсем текенни – истори экзаменне ăнăçлăн тытрĕ. Ăна никам та хирĕçлемест. Апла пулсан вăл наука тĕлĕшĕнчен тĕрĕс. «Болгары и чуваши» — пирĕншĕн ылтăн кĕнеке. Унăн историлле пĕлтерĕшĕ çакăнта.

Раççей туса хунăранпа геноцидран хăрушă пулăм вăй илет – этноцид. Урăхла каласан, чылай халăхсене пĕтерни (паллах, вырăс маррисене). Коммунизм тума хăтланнă вăхăтра çеç (70 çул хушшинче) пирĕн çĕршывра 23 халăх чĕлхине тĕп тунă. Вĕсем халĕ çĕр чăмăрĕ çинче çук! Нихçан та пулмĕç! Акă мĕнрен хăтălма пулăшнă пире Ашмарин. Паллах, Мускавра çырмаççĕ те, калаçмаççĕ те ун пирки. Унтисемшĕн вăл пĕлтерĕшлĕ пулăм мар. Палестинăра пĕр араба вĕлернĕ, Турцире автобус аварие лекнĕ, Афганистанра талибсем вунă çынна персе пăрахнă – пурте тĕнчипе «паллă» событисем. Чылай халăх хăй чĕлхипе калаçма чарăнни, пĕтни — çук! Çакна манмалла мар: геноцид инкекне сирсе яма пулать, этноцид инкекне – пулмасть.

Ку енĕпе Ашмарина ăслă политик теме те пулать. Çав вăхăтрах вăл – наука организаторĕ. Мĕншĕн тесен Николай Иванович 17 томлă словаре пĕччен туман, çĕршер çынна явăçтарнă. Вĕсене вăл кайран та манман, ячĕсене асăннă. Апла пулсан ученăй çынсемпе те ĕçleме пултарнă.

Н.И.Ашмаринăн ытти наука ĕçĕсем те пур, анчах асăннă иккĕшĕ те унăн ятне вилĕмсĕрлетме çитеççĕ. Вăл хальхи саманари чи паллă ученăйсемпе пĕр тан тăрать. Ун пекки часах пулмĕ.

## Ашмарин: чăваш халăхĕ пулса кайни çинчен

Николай Иванович Ашмарин (1870-1933) ячĕ чăваш чĕлхине, историне тĕпчекенсен хушшинче чи паллă вырăнта тăрать. Вырăс çынни, Хусан шкулĕн представителĕ, ĕмĕрне пирĕн пурнăçа тĕпчесе ирттернĕ, профессора çитнĕ. 1927 çулта ăна СССР академийĕн член-корреспондентне суйланă. Николай Ивановичăн чи паллă ĕçĕ – 17 томлă «Чăваш сăмахĕсен кĕнеки». Ăна чăваш культурин шедеврĕ тесен те ытлашши пулмасть. Унсăр пуçне ăсчах «Материалы для исследования чувашского языка» ĕç пичетлесе кăларнă. Синтаксис çинчен те çырнă. Ашмарина чăваш чĕлхи пĕлĕвне никĕслекенĕ теме те пулать.

«Болгары и чуваши» кĕнекине вăл Хусанта 1902 çулта пичетленĕ. Унта вăл пăлхарсемпе чăвашсем хушшинчи çыхăнăва пăхса тухать, чăваш халăхĕ ăçтан пулса кайнине тишкерет. Çакăн пек пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕç çырма, паллах, питĕ нумай ятарлă литература вуламалла. Çавăнпа та Ашмарин тӳсĕмлĕхĕпе пултарулăхĕнчен тĕлĕнмелли çеç юлать.

Автор чи малтан çакна асăрхаттарать: пăлхарсем тата вĕсен чĕлхи пулса кайнине халĕ те тĕпрен татса калама çук. Вăл хăйĕн тишкерĕвне лингвистика даннăйĕсем çинче никĕслет. Атăлçи пăлхарсен пурнăçне тĕпченĕ чух несĕлсен историне айккине пăрса хăвараймăн. Чи малтан кунта хунсене асăнмалла. Вĕсемпе пăлхарсен хушшинче çывăх çыхăну.

Китай çыннисем çырса хăварнă тăрăх, хунсем Христос çураличчен 10 ĕмĕр маларах Китайăн çурçĕр енче пурăннă, çеçенхир тăрăх куçса çӳренĕ. Пирĕн эрăччен 3 ĕмĕр маларах ку халăхăн пĕлтерĕшĕ ӳссе каять, пурăнакан çĕрĕ чылай сарăлать. Хунсен вăйне китаецсем çеç мар, кӳршĕллĕ пурăнакан халăхсем те аван пĕлнĕ, туйса тăнă. Çапла 300 çул иртнĕ. Каярах шалти хирĕçӳсене пула вĕсен вăйĕ чакнă.

Пирĕн эра пуçламăшĕнче китаецсем кӳршĕ халăхсемпе пĕрлешсе хунсен кăнтăр пайне туртса илеççĕ. 93-мĕш çулта вара çурçĕр хунсене те парăнтараççĕ. Ку хунсен патшалăхĕ сапаланса кайнине пĕлтерет. Çакăн хыççăн хунсен пĕр пайĕ анăçалла çул тытать. Иккĕмĕш ĕмĕрĕн пуçламăшĕнче вĕсем Европа чиккине çитеççĕ. 374-мĕш çулта Атăл урлă каçаççĕ. Баламир ятлă пуçлăх ертсе пынипе Атăлпа Дон хушшинче пурăнакан алансене парăнтараççĕ.

Каярах çак икĕ халăх пĕрлешсе гот патшалăхĕн пуçлăхне Эрмонариха та алла илет. Ун хыççăн Дунайăн вăта пайне çитеççĕ. Атилла хуçаланнă вăхăтра (433-454) хунсем чапа тухаççĕ. Анчах вăл вилнĕ хыççăн патшалăх пĕчĕк пайсем çине сапаланса каять. Вĕсем Днепрпа Дон хушшинче пурăнма пуçлаççĕ. Атилла ывăлĕ Эрнак иккĕмĕш кнеç (князь) пулса тăрать. Ăна гепидсем парăнтараççĕ, пуçлăхĕ Днестр патнех тарать. Ун вырăнне Курт, е Кубрат, йышăнать.

Пăлхарсем VII ĕмĕрччен Дунайăн сулахай енче пурăннă. 635-мĕш çулта Кубрат ертсе пынипе вĕсем аварсене çĕнтереççĕ.

Çĕнĕ тапхăрти пĕрремĕш кнеç Исперих, е Аспарух, пулать. Вăл ертсе кайнипе пăлхарсем Дунай урлă каçса Мизи славянĕсене çĕнтереççĕ, кайран славянланаççĕ. Паннонире аварсемпе те çапăçма тӳр килет. 9 пин çын франксем патне каять, каярах вĕсене çĕмĕрсе тăкаççĕ (631-632). Пĕр пайĕ Италие тарса каять.

Пăлхарсен иккĕмĕш патшалăхĕ Атăл çинче аталанать. Ун çинчен пĕрремĕш хут 350-мĕш çулта çыраççĕ.

922-мĕш çулта вара Атăл çинчи пăлхарсем патне Багдад халифĕн (патшин) çыннисем килеççĕ. Вĕсен çыруçи Ибн-Фадлан араб чĕлхипе пăлхарсен пурнăçĕ çинчен чылай тĕплĕ çырса кăтартать, вĕсем вăйлă халăх пулнине, хуласенче пурăннине, тĕрлĕ çĕршывсемпе суту-илӳ тунине пĕлтерет. Халиф çыннисем вырăнти халăха ислам тĕнĕпе пурăнма вĕрентсе хăвараççĕ.

Пăлхар çĕрĕ виçĕ пайран тăнă: Берсула, Эсегель, Пăлхар. Пурăнма пĕрле пурăннă, вĕсен çумĕнче буртассем пулнă. Тĕрлĕ вăхăтра Пăлхар çĕршывĕ тĕрлĕ лаптăк йышăннă: Уралтан тытăнса Сăрпа Ока таран, Вяткăпа Камăран тытăнса Дон, Хопер тата Самар юханшывĕсем таран. Шел пулин те, пăлхарсен историйĕ вилтăпри çине лартакан палăксем тата укçа çинче çеç сыхланса юлнă. XII ĕмĕрте Якуб-ибн-Нуман «Пăлхар историйĕ» ĕç çырнă, анчах вăл сыхланса юлман.

Араб çыравçисем Пăлхар çĕрĕ çинче шурлăхсем, вăрман-чăтлăх нумаййине палăртаççĕ, çĕленсен çĕршывĕ теççĕ. Халăхĕ вара çурçĕрти юграсемпе суту-илӳ туса пурăннă, вĕсене тимĕртен тунă япаласем сутнă. Çаплах Персипе, Индипе çыхăну тытнă. Пăлхарсем ун чухнех пăхăр шăратнă, чукун туптанă, бронза тунă. Çĕр айĕнчен металл кăларнă, рудник вырăнĕсем сыхланса юлнă.

Ăс-тăн енчен те аталаннă. Пĕри медицинăпа, тепри историпе, виççĕмĕшĕ астрономипе наука ĕçĕсем çырнă.

Каярах вара Ибн-Фадлан килсе çитнĕ. Алмас (Алмуш) патша делегацие хăй кĕтсе илнĕ, чаплă апата чĕннĕ, хăй аш валеççе

панӑ. Ибн-Фадлан хӗвел анас умӗн хура пӗлӗт евӗр ҫарсем пӗр-пӗринпе хирӗҫ тӑнине палӑртать. Ҫапла — кашни каҫ. Пӗрисем шуйттан майлисем, теприсем хирӗҫҫисем иккен.

Вырӑнти халӑх пӗрле (арҫынсемпе хӗрарӑмсем) шыва кӗни те элче тӗлӗнтернӗ. Ясар ӗҫ тума хӑтланнӑ ҫынна тӳрех касса-вакласа тӑкнӑ, пайӗсене йывӑҫ ҫине ҫакса хунӑ. Вӑрӑсене те ҫаплах айӑпласа асаплантарнӑ. Ҫын вӗлерекене вара сунтӑха лартнӑ та йывӑҫран ҫакса хунӑ, ҫапла майпа вӗлернӗ. Тухатмӑшсене те ҫавнашкал нушалантарса леш тӗнчене ӑсатнӑ.

XII ӗмӗрте Аму-Хамид-Анделуси араб ҫапла ҫырать: «Кашни ҫирӗм ҫулта пӗрре мӗнпур хӗрарӑма шыва пӑрахнӑ. Хӑйӗн вӑйӗпе тапаланса тухакана вут ҫинче ҫунтарнӑ, путакана хӑтарнӑ. Аҫа ҫапнӑ ҫуртран тухса кайнӑ. Чи асли — патша. Вырӑнти пӗчӗк патшасем те пулнӑ. Паллӑ ҫынсене «трунове» тенӗ. Ҫынсем патшана парӑм тӳленӗ: кашни ҫуртран пӗр вӑкӑр тирӗ».

Ибн-Даст лашапа тӳленине те ҫырать. Сӑмахран, авланакан каччӑн ҫапла тумалла пулнӑ. Апат хатӗрлеме ытларах вирпе, лаша ашӗпе, пулӑ ҫӑвӗпе усӑ курнӑ.

X ӗмӗрте Пӑлхар тата Сӑвар хулисенче пурӑнакансем ҫулла хире тухса юртӑсене вырнаҫнӑ, куҫса ҫӳрес йӑлана час пӑрахайман. Ку вӑхӑтрах темиҫе хула пулнӑ ӗнтӗ: Эсбель, Басов, Марха, Арнас, Бряхилов, Керменчук, Тухчин, Ошел.

Мӑсӑльман тӗнне йышӑннӑ Атӑлҫи пӑлхарсен пӗр пайӗ 970-мӗш ҫулта Венгрие куҫса каять, Пешт хулине никӗслет. Вӗсене вырӑнти халӑхсем «пилерсем» тенӗ. Пилерсен йӗрӗ XIV ӗмӗрчченех палӑрать.

Атӑлҫи Пӑлхара ислам тӗнӗ маларах ҫитет, 922 ҫулта Алмас патша ӑна ҫирӗплетме ҫеҫ ыйтать. Пӑлхарсем хӑйсен кӑмӑл-туйӑмӗпе – ҫапӑҫма юратман халӑх пулнӑ. Хӗҫ-пӑшал вара е хӳтӗленме, е суту-илӳ енчен лайӑх вырӑна ларассишӗн ҫеҫ тытнӑ.

Сӑмахран, хӑйсен купсисене ҫаратса вӗлернӗшӗн пӑлхарсем 1088 ҫулта Муром хулине каяҫҫӗ, ӑна ҫӗнсе илеҫҫӗ. Суздальти чиркӳсене тума пӑлхарсем нумайӑн хутшӑннӑ. Андрей Боголюбскийӗн арӑмӗ пӑлхар пулнӑ. 1229 ҫулхи выҫлӑхран хӑтарса пӑлхарсем Юрий кнеҫе тыр-пул парнеленӗ. Лешӗ уншӑн ылтӑн, пир парса тав тунӑ.

1236 ҫулта тутар-монголсем Пӑлхара ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Анчах каярах хулана тепӗр хут ҫӗкленӗ. 1361 ҫулта Булат Тимӗр ӑна тепӗр хут ҫӗнсе илет. Ун хыҫҫӑн Аслӑ Новгородран ушкуйниксем тапӑнса килеҫҫӗ. 1431 ҫулта Федор Пестрый Пӑлхара юлашки хут аркатать.

Пӑлхарсем камсенне хакласа Н.И.Ашмарин Шемс-эд-Дин Димешки сӑмахӗсене илсе кӑтартать. Пӑлхарсем эсир камсем тесе ыйтсан ҫапла каланӑ: «Эпир тӗрӗксемпе славянсем хушшинче ҫуралнӑ халӑх». Чӑнах та, ку халӑхра темиҫе халӑх юнӗ пӗрлешнӗ. Славянсем теме ҫук. Нестор та пӑлхарсене славянсем хушшине кӗртмест. Ун пек тума никӗс ҫук, пӑлхарсен пайӑр ячӗсем, ҫын ячӗсем тата хисеп ячӗсем славянла мар.

1878 ҫулта Куник академик ҫапла ҫырнӑ: «Атӑл ҫине тутарсем пырса кӗриччен пӑлхарсем халӗ чӑвашсем пурӑнакан вырӑнсенче пулнӑ. Ун чухне вӗсене кӗмӗл (нухрат) пӑлхарсем тенӗ. Чӑваш чӗлхи пулӑшнипе ӑсчахсем малашне авалхи тӗрӗк элеменчӗсене ӑнлантарса парӗҫ».

Сайра палӑксен чӗлхи пӑлхарсен пулнӑ. Атӑлҫи пӑлхарсен чӗлхи хальхи чӑваш чӗлхипе пӗрешкел. Дунай пӑлхарсен чӗлхи пирки те ҫавнах калама пулать.

Ҫармӑссем халӗ тутарсене суас теҫҫӗ. Куна ӑнлантарма йывӑр мар. Тутарсем пӑлхарсене парӑнтарнӑ, ҫӗнтерекенсене вырӑнти халӑх ячӗпе чӗннӗ. «Суас» сӑмах тутар чӗлхинче ҫук. Тутарсем пӑлхарсене ҫӗнтернӗ хыҫҫӑн вӗсенчен политика пӗлтерӗшне, кӑштах культурине илсе юлнӑ. Ислам тӗнне йышӑнсан вара хӑйсене пӑлхарсенчен пулса кайнӑ тесе каланӑ. Ҫурма тискер тутарсемпе культурӑллӑ пӑлхарсем пӗр-пӗринпе хуллен ҫывӑхланса пынӑ. Каярах вара пӑлхар тенине тутар тесе куҫарнӑ.

Атӑлӑн сулахай ҫыранӗнче пурӑнакан ҫармӑссене «суасла мары» теҫҫӗ. Суас — тутара пӗлтермест. Ҫармӑссем чӑвашсене тутарсенчен малтан пӗлеҫҫӗ. «Суасла мары» тени «чӑвашланнӑ ҫармӑс» тенине пӗлтерет.

Хунн чӗлхинче чӑваш чӗлхинчи сӑмахсем пур. Апла пулсан ку икӗ халӑх ҫывӑх ҫыхӑнура тӑрать. Сӑмахран, Атилла арӑмӗ Керкка ятлӑ пулнӑ. Ку чӑвашсен Хӗркке ятне ҫывӑх, ҫакӑнтанах «хӗр» сӑмах пулса кайнӑ.

Пӑлхар чӗлхин чи хаклӑ палӑкӗ – вилтӑпри ҫине лартнӑ палӑксенчи ҫырусем. Атӑлҫи Пӑлхарта ку палӑксене (плитасене) Успени соборӗ айне никӗс вырӑнне хураҫҫӗ. 1722 ҫулта Пӗрремӗш Петӗр хушнипе унта мӗн ҫырнине тӗпчеме пуҫлаҫҫӗ.

Тӗпчевҫӗсем хӑш-пӗр ҫырӑва урӑхлатса кӑтартаҫҫӗ, ӑнланманнисене хӑйсен еверлӗ туса ӑнлантараҫҫӗ. Анчах ку ҫырусене чӑваш чӗлхи урлӑ ҫеҫ ӑнлантарма пулать. Клапротпа Березин вара пӑлхар чӗлхинче чӑваш сӑмахӗсем пуррине пӗлмен.

1894 çулта Хусан çывăхĕнче çакăн пек çырусем тата тупаççĕ. Пĕр чулне А.Рекеев йăтса килет. Н.И.Ашмарин унта мĕн çырнине хăй тĕпчет. Пурĕ Атăлпа Кама тăрăхĕнче 93 пăлхар çырăвĕ тупнă. Унта араб алфавичĕпе, анчах хушма саспаллисемсĕр çырнă. Пăлхар чĕлхинчи саспаллисемпе çеç усă курнă. Кĕнеке вĕçĕнче автор чăвашсем хушшинче шуррисем те, хурисем те пуррине палăртать. Апла пулсан халăхра темиçе йăх юнĕ юхать.

Ислам тĕнĕ чăвашсен тĕнне те витĕм кўнĕ. Сăмахран, *халал, Турă Тала, Пихампар, Кепе, киремет, асамçă, масар, пĕсмĕлле, харам, Эсрел, Пирĕшти, саламалик* сăмахсене мăсăльмансенчен илнĕ. Анчах та тутарсенчен мар, мĕншĕн тесен çак сăмахсемпе тутарсем пурăнман вырăнсенче те усă курнă.

Перс тата араб чĕлхисенчен илнĕ сăмахсенче тутар чĕлхинчен уйăрса тăракан паллăсем пур. *Техĕмлĕ* сăмах *тăмнј, харсăр — ăрсіз* пулать. Апла пулсан ку сăмахсене тутарсенчен илмен.

Тĕрĕк пăлхарĕсем кўршĕллĕ финсемпе хутăшса çĕнĕ раса тума тытăнни XX ĕмĕре килет. Вăл этнос енчен хальхи чăвашсене çывăх пулнă. Паллах, кайран кăштах улшăнма пултарнă.

Мăсăльман тĕнĕпе пурăнакан халăхсем пурнăç йĕркине, çырăвне пит улăштарма тăрăшман. Çавăнпа вилтăпри палăкĕсем çинчи çырулăха ăнланма йывăртарах. Сăлтавĕ кунта акă мĕнре: ку чĕлхе -- çак тапхăрти мар. Вăл ятарлă литература чĕлхи, пăлхар чĕлхин авалхи тапхăрне сăнласа парать.

Авалхи чăвашсем арăслана *услан* тенĕ, хальхи сăмаха вара каярах тутарсенчен илнĕ. *Услан* сăмахран *Услон* пулса кайнă ( Тутарстанра Тури Услон районĕ пур). *Услон* — çын ячĕ пулнă. Ирех утравĕсем те *йĕрĕх* сăмахран тухнă.

Н.И.Ашмарин *чăваш* сăмаха çак çулпа илсе килет: *јуас, суас, чуас, чуаш, чываш, чăваш.*

# Çеçпĕл Мишшин пурнăçĕпе пултарулăхĕн паллăрах тапхăрĕсем

Çеçпĕл тесенех пирĕн куç умне инçете тинкерекен, çӳçне вирелле янă çамрăк çыннăн сăнарĕ тухса тăрать. Вăл кăвар чĕреллĕ коммунист, пурнăçа лайăх енне улăштарма тăрăшакан çын пулнине те пĕлетпĕр.

Тата мĕнлерех пулнă-ха Çеçпĕл Мишши? В.Г.Родионов профессор çырнă «Чувашский стих» кĕнекерен (Шупашкар, 1992) интереслĕ фактсем пĕлме пулать. Автора ĕненмелле мар нимĕнле сăлтав та çук, мĕншĕн тесен тĕпчев ĕçне çырма вăл питĕ нумай документпа, ытти литературăпа усă курнă.

Михаил Кузьминăн (Çеçпĕл Мишшин) кĕске пурнăçĕнче темиçе хут пысăк улшăнусем пулнă. Тĕрĕссипе, ăна вăл хăй тунă. Характерĕпе вĕри пулнăран, ултав-суяна чăтма пултарайманран вăл кашни ăнăçсăр ĕç хыççăн тенĕ пекех урăх çул суйласа илнĕ. Ку факта темле хак пама та пулать, анчах Çеçпĕл хăй тĕллĕн шухăшлама пултаракан уйрăм çын, индивидуум пулни куçкĕретех. Паллă ĕнтĕ, историе урăх йĕр çине куçарса яма, халăха хăйсем хыççăн илсе кайма вăй-хăватлă çынсем çеç пултараççĕ. Çеçпĕл Мишши çавсенчен пĕри. Вăл чăваш халăхĕн асĕнче тăван поэзийĕн сывлăмлă таса ирĕ, çурхи илемлĕ чечекĕ пулса сыхланать.

Пулас поэтăн кун-çулĕ питĕ йывăр килнĕ. Пĕчĕк чухнех вăл пурнăç тути-масине ытлашшипех тутанса пăхнă. Ашшĕ-амăшĕ чухăн пурăннă. Ача сывлăхĕ выçăллă-тутăллă пурăннине кура çирĕп пулман. Пĕррехинче мунча кĕнĕ хыççăн вăл çĕрле лаша çитерме кайсан сивĕ сывлăмлă курăк çинче çарран çӳресе шăнса пăсăлать, унăн ури шыçса каять. Шăмă туберкулезĕн пуçламăшĕ çакă пулать. Çак чиртен поэт мĕн виличченех хăтăлаймасть.

Мишша,1899 çулхи чӳк уйăхĕн 16-мĕшĕнче çуралнăскер, 1908-1912 çулсенче Шăхасанти пуçламăш шкулта вĕренет. Унтан Мухтав хучĕ илсе тухать.

Шкул пĕтерес умĕн пĕр çул маларах Мишшасен килĕнче трагеди пулать. Ашшĕ, Кузьма Федоров, хăйпе пĕртăванĕн туйĕнче пиччĕшĕн мăшкăлне тӳсейменнипе çилли тулса çитнĕ самантра ăна пуртăпа касса пăрахать. Уншăн Кузьмана тĕрмене хупаççĕ. Вăл унтан таврăнаймасть. Кил-йыш пысăк йывăрлăха кĕрсе ӳкет. Мишша вара, ашшĕне пуринчен ытла юратнăскер, ниçта кайса кĕреймест. Ашшĕ те ывăлне питĕ кăмăлланă иккен. Каярах Çеçпĕл Мишши ун çинчен А.П. Червякована çапла çырать: «Пĕлместĕп, чĕрĕ-ши вăл, ах, каласа

парăттăмччĕ ăна хам тĕнчере унсăр пуçне никама та юратманни çинчен». Тепĕр çырăвĕнче те вăл çак темăна хускатать: «Пĕлесчĕ Сирĕн эпĕ аттене мĕнле юратнине; пĕлесчĕ ман ăна тĕл пулас шанчăк мĕн тери пысăккине, хăçан та пулин унпа тепре курнăçăпах тесе ĕненсе, чĕрем тăвăллăн вĕресе тапнине; пĕлесчĕ аттепе пĕрле чухнехи, тахçанхи çутă та илемлĕ телейĕме. Эпир унпа пĕрле ĕмĕтленеттĕмĕр, малаллахи пурнăç çинчен хавасланса шухăшлаттăмăр...». Ашшĕнчен уйрăлнă хура кун ача чун-чĕрине амантса хăварать. Ку унăн пурнăçĕнчи пĕрремĕш пысăк хуйхă. Иккĕмĕшĕ – ашшĕ инçетре вилни çинчен хыпар илни.

Михаил кукамăшĕнчен тĕн воспитанийĕ илет, турра чунтан ĕненет. Çынна усал тума тăрăшмасть, пурне те шанать. Çынпа çын тата çынпа çутçанталăк килĕштерсе, çураçса пурăнмалла тесе шутлать. Хăй ырă кăмăллă пулнипе çынсенчен те çавнах кĕтет, хăйне ăнланĕç тет.

Ашшĕсĕр юлнă çемьери чи аслă ача Мишша ыттисене тăрантарас тесе тĕрлĕ ĕçе кӳлĕнет. 1914 çулта вăл Шăхасанти учительсем хатĕрлекен шкулта вĕренет, 1917 çулта ăна пĕтерсен Теччĕ хулине тухса каять. Унта пĕлĕвне малалла тăсас шухăшпа учительсен семинарине вĕренме кĕрет.

Ку тапхăрта Раççейре калама çук пысăк ĕçсем пулса иртеççĕ. Империализм вăрçи чарусăр алхасать, халăх – асапра, çĕршывра – юхăну. Ĕççыннисен тарăхăвĕ ӳссе пырать.

Пурнăçа, халăх шухăш-кăмăлне лайăх чухлакан çамрăк çав вăхăтра сăвă çырма тытăнать. «Часах...» ятлă сăввинче вăл акă мĕн калать:

*Халăх хум пек çĕкленет*
*Тăвăллăн, хаяррăн;*
*Таса мар патша йăхне*
*Час юхтарса ярĕ.*
*Час хĕвелĕмĕр çӳлте*
*Çурхилле вутланĕ,*
*Тырă-пулă уй-хирте*
*Савăнса хумханĕ.*

Ашшĕсĕр пурăннă вăхăтра Мишшашăн тепĕр çупкă пулать. Амăшĕ, тăлăха юлнăскер, шанчăклă та пĕр арçынна çеç парăннă хĕрарăм моральне пăсать, Михаила хăйпе кăмăлсăрланма сăлтав парать.

Амăшĕ çапла хăтланни ăна хуйхă кӳрет, тĕпрен сивĕтет. Вăл 1918 çулта коммунистсен партине кĕрет. «Акă ăçта вăл ирĕклĕ пурнăç! Халĕ эпĕ тинех пурнăç хуçи пултăм!» — тет вăл ун пирки.

*Чĕрере ачашшăн*
*Çунĕ — çулăмланĕ*
*Тантăшлăх, тăванлăх,*
*Юрату кăварĕ, —*

тесе ĕмĕтленет поэт.

Теччĕре пурăннă вăхăтра (1919-1920 çç.) уесри парти комитечĕн инструктор-агитаторĕ, судпа следстви комиссийĕн председателĕ пулать. 1920 çулхи кăрлач уйăхĕнче ăна уесри комсомол организацийĕн ответлă организаторĕ тата председателĕ тăваççĕ. Утă уйăхĕнчен пуçласа авăн уйăхĕн 30-мĕшĕччен – Теччĕ уесĕнчи РОСТА пуçлăхĕ.

Поэт коммунизм вĕрентĕвне чĕрине шалтан-шаларах хывса пынă май ăспа та, чунпа та чухăн халăхпа тачă çыхăнать, ĕççыннисен кĕрешĕвне хастарлăн хутшăнать, пултарнă таран вăй хурать. Литература енĕпе те тĕрĕс çул тупать, чăваш чĕлхи чĕрĕ вăйпа хăватлăн çĕкленессе витĕр курса тăрать. «Атăл хĕрри тăрăх тĕнче кĕсле сассипе янраса тăрĕ — çакă чăваш юрри пулĕ, чăваш сăмахĕ, чăваш чĕлхи пулĕ. Чăваш чĕлхи кăвар пулĕ, хĕрнĕ хурçă пулĕ», — тесе çырать вăл çак вăхăтра.

1920 çулта Шупашкар Чăваш автономийĕн тĕп хули пулса тăрать, вăл пĕтĕм чăвашăн вĕреннĕ çыннисемпе общество деятелĕсене, поэчĕсемпе композиторĕсене, хаçат çыннисемпе художникĕсене хăйĕн кĕрекине пухать. Паллах, чăваш чĕрĕлнĕ чух Çеçпĕл чĕри тăван çĕреллех туртать, çавăнпа вăл Чăваш автономиллĕ Облаçĕн Ревкомне çийĕнчех хăйне Шупашкара чĕнсе илме ыйтса çыру çырать. Унăн йăлăнăвне тивĕçтереççĕ. Çурла уйăхĕн 26-мĕшĕнче Теччĕри РКП (б) организацийĕ панă хутпа кăвар чĕреллĕ Мишша Шупашкара килет. Чăваш автономиллĕ облаçĕн тĕп хулине вăл тăватă кунран çитет, Ревкома кĕрет. Унăн председателĕ Д.Элмен çамрăк çынна авăн уйăхĕн 3-мĕшĕнчен пуçласа Ревтрибунал Председателĕн ĕçĕсене тытăнма сĕнет. Тепĕр кун Çеçпĕл ĕçе пуçăнать.

Паллах, çирĕм пĕрти çамрăкшăн ку ĕç çăмăл мар, анчах унăн найкăшас йăли çук: вăл революци çĕнтерĕвĕсене хӳтĕлес тесе пĕр

тăхтамасăр килĕшет. Тата тăватă кунран Д.Элмен М.Кузьмина çара илес пирки тăхтама ыйтса мобилизаци енĕпе ĕçлекен Тĕп комисси ячĕпе Мускава çыру çырать. Çакна вăл председателĕн ĕçĕнче Çеçпĕл Мишшине никампа та улăштарма çуккипе ăнлантарать.

Кĕçех Çеçпĕле Мускава командировкăна яраççĕ. Унта вăл авăнăн 16-20-мĕшĕсенче пулать. Тата пĕр уйăхран, юпа уйăхĕн 21-мĕшĕнче, ăна тепĕр ĕç — Чăваш облаçĕнчи юстици пайне ертсе пыма хушаççĕ. Вăхăчĕ ытла та йывăр, чăрмавлă. Суд ĕçĕнче ĕçлеме юрăхлă çынсем çитмеççĕ. Вулăсра суд ларăвĕсем ирттерме çурчĕ-йĕрĕ те çук. Çеçпĕл ялсенчен çур çĕр иртсен таврăннă кунсем те сахал мар пулнă. Анчах хастар чун-чĕреллĕ çамрăк ўркенсе тăман, пур çĕре те çитме тăрăшнă. Сăвă çырма та вăхăт тупнă.

1920 çулхи чўк уйăхĕн 7-11-мĕшĕсенче Шупашкарта Чăваш автономиллĕ Облаçĕнчи Советсен 1-мĕш съезчĕ пулса иртет. Çакăнта Çеçпĕл Мишшине область ĕçтăвкомĕн членне суйлаççĕ.

Хастар çамрăка курайманнисем те пулнă, май пур таран ура хума тăрăшнă. Пĕррехинче Çеçпĕл Хусана командировкăна каять (1920 çулхи раштав уйăхĕн 22-мĕшĕнче). Вăл кайсан икĕ кунран юстици çуртне вут хыпать. Айăпĕ Çеçпĕл çине ўкет: вăл çак çурта çунтарма хушса хăварнă имĕш. Çапла вара, Çеçпĕл Мишшине Хусантан килнĕ-килмен арестлеççĕ, хваттерне ухтараççĕ.

Уйăх çурă тĕрмере ларнă хыççăн ăна кăлараççĕ, мĕншĕн тесен айăпне çирĕплетекен фактсем çук. Ирĕке тухнă поэт шухăшне пачах улăштарать. «Чăн пурнăçра кăнттам пулмалла иккен. Пурнăçа мĕнле пур, çавăн пек курмалла. Эпĕ вара...», – тесе çырать вăл.

1921 çулхи ака уйăхĕн 15-мĕшĕнче вара çапларах çырать: «Хупăрласа тăракан коммунист-чиновниксем хăсса ярас пек тăрантарчĕç. Совет Раççейĕнче бюрократи кустăрмине çывăх вăхăтра тапратаймăн. Ыттисене шанакансем, пурне те ĕненекенсем çакăншăн пурнăçпа тўлĕç». Пĕр кун маларах вара А.П.Червякована янă çырăвĕнче вăл: «Çакăнасчĕ...», — тет. Çак çулхи кĕркунне унăн ĕмĕчĕсем пĕтĕмпех татăлаççĕ. «Мĕнпур идеалсем арканчĕç. Коммунизм пуласлăх горизонтĕнчен тарса пытанчĕ. Вуншар çула совет капитализмĕ килчĕ», — тесе çырать вăл ун чух. Тен, çавăнпа та пулĕ çĕнĕ экономика политикине те йышăнмасть.

Çеçпĕл революцие ыттисенчен урăхларах курнă, кашни хăйĕн ырлăх-пурлăхĕнчен пăрăнса общество йĕркелĕхĕ-чыслăхĕ çинчен шутламалла тенĕ. Уншăн вара революци — пусмăрлăх, тĕрĕспе пурăнма хăнăхнă çыншăн ку тўсмелле мар йывăр пулăм .Чăннипе, çакă ăна трагеди патне илсе çитерет, унăн тĕп сăлтавĕ пулать. Чир, ăнман юрату трагеди патне çывхарма çеç пулăшаççĕ.

Анчах ку каярах-ха. Çу уйăхĕнче ура шăмми туберкулезĕнчен сывалма ăна Крыма яраççĕ. Пĕр эрне Чулхулара пулнă хыççăн çу уйăхĕн 18-мĕшĕнче Çеçпĕл С.А.Коричевпа пĕрле Кăнтăр еннелле çула тухать.

Крыма поэт тата икĕ эрнерен çитнĕ. Кунта вăл кăштах хуйхине манать, уншăн творчествăлла ĕç савăнăçпа хавхалану вучахĕ пулса тăрать. Сывалнă вăхăтра вăл чылай сăвă çырма ĕлкĕрет: «Çĕн Кун аки», «Тинĕсе», «Инçе çинçе уйра уяр...», «Катаран каç килсен», «Кивви çитет», «Шăршлă каç йывăрри» тата ытти сем те. Кусем чăннипех те шедеврсем, хăват парса тăракан сăвăсем.

Крымра паллашнă украин çыннипе Ф.Н.Пакрышеньпе Çеçпĕл Мишши Кейĕве (Киев) каять, художество шкулне вĕренме кĕрет. Анчах унта нумай тăраймасть. 1921 çулхи авăнăн 21-мĕшĕнче ăна Хĕрлĕ Çара илеççĕ, Кĕйӳ çар округне кĕрекен 3-мĕш запасри полк командине телефонпа телеграф ĕçне вĕренме яраççĕ.

Ун чухнехи лару-тăрăва çак йĕркесем кăтартса параççĕ (Пакрышень патне янă çыруран): «Хаклă Федя, паян эсĕ куçарнă укçана илтĕм. Паллах, çав 10000 тенкĕпе эсĕ мана пĕр-пĕр кирлĕ ĕç усă куртарасшăн пулнă. Ну, тăванăм, каçар, эпĕ ытлашши выçăхса çитнĕччĕ, çавăнпа та укçана илсенех пасара тухса чупрăм... Тӳрех икĕ кĕренке çăкăр туянтăм та нихçан курман пек çисе ятăм... Кĕнекесемшĕн питĕ тунсăхласа çитрĕм».

Çав вăхăтра шăмă туберкулезĕ татах амаланма пуçланать, утса çӳреме те йывăрланса çитет. Тата ăна çакă тарăхтарса хавшатать: Атăл тăрăхĕнчен тарса пынă выçă çынсем куллен ыйткаласа çӳреççĕ, ушкăнĕ-ушкăнĕпе вилсе выртаççĕ. Тăван Атăл, Чăваш çĕршывĕ самантлăха та поэт асĕнчен тухман. 1922 çулхи нарăсăн 27-мĕшĕнче Çеçпĕле сывлăхĕ начаррине кура Хĕрлĕ çарти службăран хăтараççĕ те, вăл вара Кĕйӳрен (Киевран) Чернигов кĕпернинчи Остер хули çывăхĕнче пурăнакан çывăх тусĕ Ф.Н.Пакрышень патне тухса каять. Кунта вăл уесри çĕрĕç пайĕнчи снабжени подотделĕнче делопроизводительте ĕçлеме тытăнать. Тата 4 кунран ăна урăх вырăнсенчен куçса пыракансемпе ĕçлекен комиссин инструкторĕ тăваççĕ, унтан Бровар станцине Атăл тăрăхĕнчен килнĕ беженецсем валли кану сурчĕ тунă çĕре яраççĕ. Кĕçех вăл икĕ ĕç харăс туса пыма пуçлать, ăна çĕр ĕç пайĕн секретарьне лартаççĕ. Çав вăхăтрах поэт комсомол ĕçне те хутшăнать.

Анчах усал чир поэтăн чĕрине пуснăçемĕн пусать, пусать... Пĕррехинче Çеçпĕл — Федя тусне хăй ирĕкĕпе пурнăçпа уйрăлма шутлани пирки пĕлтерет. Лешĕ ăна ӳкĕтлеме тытăнать, кăштах

кăмăлне çемçетет. Темиçе кунран чăваш поэчĕ Кивĕ Хула ялĕнчи хĕрпе Наталья Рубиспа паллашать, ку тĕлпулу ăна хавхалантарать. Вĕсем иккĕшĕ журнал кăларас шухăшпа «чирлесе» ӳкеççĕ.

Анчах йывăр ĕç — тăтăшах ялсене, вулăссене тухса çӳрени, выçă халăхшăн пăшăрханни – канăçсăр чунлă çыннăн сывлăхне хавшатать. Вăл сулахай ури сурса ыратнипе аран-аран утакан пулать, юлашкинчен ирĕксĕрех тухтăр патне кайма тивет. Унта çакăн пек справка параççĕ:

«Михаил Кузьмин сулахай ура лаппи шăммин туберкулезĕпе аптрать, çавăнпа та ăна сиплеме эрнере пĕр кун ĕçрен хăтарни кирлĕ.

*1922 çулхи майăн 22-мĕшĕ.*
*Врач: М.Пташевский».*

Çак вăхăтра поэт чун ыратăвĕпе, тăвăнчăк шухăшсемпе тулнă сăвăсем çырать: «Выçă псалом», «Юлашки чĕл алра, юлашки чĕл», «Кĕпер хывăр», «Паянтан», «Хĕрлĕ-хĕрлĕ мăкăньсем» тата ыттисем.

... 1922 çулхи июнĕн 15-мĕшĕнче Ф.Пакрышеньрен куç эмелĕ валли 300000 тенкĕ кивçен илсе Çеçпĕл Мишши çарранах ĕçе тухса каять, кăнтăрлахи апата та, каçхи апата та килмест. Юлташĕ ăна е хулана кайнă пуль, е комсомол пухăвне юлчĕ пуль тет. Тепĕр кун кăнтăрла тĕлĕнче вара ун патне усал хыпар илсе çитереççĕ. Çеçпĕл ешерсе ларакан садра çакăнса вилнĕ...

Каларăмăр ĕнтĕ, тӳрĕ кăмăллă поэт коммунизм саманине урăхларах курма шутланă, çынсене шаннă. Усал та кăнттам, кахал та чее çынсем ăна чун хĕлĕхне перĕнмеллех тарăхтарнă.

Мĕнле пулсан та Çеçпĕл Мишши — феномен. Ун пек çынсем кашни çул çуралмаççĕ. Сахал пурăннă пулсан та вăл чăваш поэзийĕнче, пĕтĕм тăван литературăмăрта ĕмĕр сӳнми çутă йĕр хăварнă, талантлă чăваш çыравçисен çĕнĕ ăрăвне тĕрĕс çул кăтартса панă. Илемлĕ литература халăх пурнăçĕпе тачă çыхăнса аталанмаллине, унăн кун-çулне çутатма, чĕрĕ сывлăш вĕрсе кĕртме кирлине пĕтĕм чунĕпе туйнă, çакна ытти чăваш писателĕсем те ăнланччăр тесе çуннă.

Поэт сăвăри содержанипе форма пĕр килмелле тенĕ, унсăрăн лайăх хайлав çырайманнине палăртнă. «Хальхи размерпа, — тенĕ вăл Шăхасанта вĕреннĕ чух, — кичем те вăйсăр сăвăсем çеç çырма пулать. Пирĕн çакăн пек размер тупмалла: вăл шăла хăйраттарма,

куç умĕнче çиçĕм çиçтерме, урасем тăпăртатнă сасă илттерме пултартăр. Чăвашăн хальлĕхе ун пекки çук-ха».

Поэтăн творчество тапхăрĕсене çапла ретлеме пулать: 1) Шăхасанти (1917 çулхи çурла уйăхĕнчен); 2) Теччĕри (1917 çулхи авăн уйăхĕнчен тытăнса 1920 çулхи çурла уйăхĕччен); 3) Шупашкарти (1920 çулхи авăн уйăхĕнчен пуçласа 1921 çулхи çу уйăхĕччен); 4) Крымри (1921 çулхи çĕртме-авăн уйăхĕсем); 5) Киеври (1921 çулхи авăн уйăхĕнчен пуçласа нарăс уйăхĕччен); 6) Остерти (1922 çулхи пуш-çĕртме уйăхĕсем).

Çеçпĕлĕн чи пысăк ĕçĕ çакă: вăл халăх нумай ĕмĕр хушши нуша курнине, чуна ыраттарнине илемлĕ сăмаха шăратса çавăрнă, наци вăйне илемлĕ сăмаха куçарнă. Çакна пула халăх асĕнче юлнă. Поэт пысăк тĕллевлĕ пулнă, инçете пăхнă, паянхипе çырлахса та киленсе çеç пурăнман. Вăл наци пĕрлĕхĕн ялавçи пулнă, халăх пуласлăхĕшĕн çуннă. «Чăваш чĕлхи ячĕпе пĕрле пулар!» – çаксем Çеçпĕл сăмахĕсем.

Хайĕн кĕске пурнăçĕнче мĕн чухлĕ хĕн-асап тӳсмен-ши поэт? «Нуша – манăн пурнăç саккунĕ», — тесе çырать вăл 1921 çулхи ака уйăхĕн 27-мĕшĕнче А.П.Червяковăна. Унăн сăлтавĕ — идеалсемпе чăн пурнăç пĕр килменни. Унăн вилĕмĕ те поэтăн вăйсăрлăхĕ теме çук, юлашки хăрушă утăм – тĕрĕсмарлăха хирĕç тăни, кĕрешĕвĕн юлашки меслечĕ. Кунта чăваш йăлине аса илме пулать (ăна *типшар* теççĕ): тĕрĕсмарлăхшăн кӳреннĕ çын кӳрентерекеннин хапхи çинче çакăнса вилет. Çакăн пек çынсем чăнлăхшăн хайсене вĕлерме те вăй çитернĕ. Çеçпĕлĕн трагедийĕ те, çакăнпа танлаштарсан, шанчăклăн курăнать. Вăл ЧĂНЛĂХ çĕнтерессе шаннă.

Чăваш тĕнĕ, христианство, коммунизм утопийĕ урлă тухса Çеçпĕл Мишши пурнăç урокĕсем илнĕ, çавсемех унăн творчествине те уçăлма, çутăлма пулăшнă. Çавсемех трагеди патнелле те илсе пынă. Каларăмăр ĕнтĕ, трагеди пуласса вăл 1914 çулах туйса илнĕ.

*Ку вăхăт – вилĕм вăхăчĕ,*
*Кам куçĕ куççуль кăлармĕ.*
*Кам чунĕ чул –*
*Кĕпер урлă! –*

тесе çырать вăл вилес умĕн.

Поэт ытла та сахал пурăннă, 23 çултах çĕре кĕнĕ. Çапах та унăн пурнăçĕ чаплă та пуян, ĕçĕсем манăçсăр, вĕсене хакласа пĕтерме

те çук. Вăхăт шунăçемĕн поэт ĕçĕ-хĕлĕнче малтан асăрхаман енсем курăнаççĕ. Мана шавах пĕр ыйту канăç памасть: ватăличчен пурăннă пулсан Çеçпĕл Мишши мĕн чухлĕ çырнă пулĕччĕ-ши, унăн творчество çăлтăрĕ ăçта çуннă пулĕччĕ-ши? Шухăшласа та вĕçне çитме çук...

Çеçпĕл — чăваш поэзийĕн классикĕ. Унăн хăватлă таланчĕ, пуян пĕлĕвĕ, çунатлă шухăшĕсем, кăвар чĕлхи, кăвар чĕри ĕçпе кĕрешӳре тĕрекленсе пынă. Поэт халăхсен туслăхне, кĕрешӳ хăватне, ĕç хавалне мухтанă, яланах çĕнĕ ыйтусем хускатнă, çĕнĕ шухăшсем каласа çĕнĕлле çырнă.

Çеçпĕл Мишшин Турă панă таланчĕ, пысăк пултарулăхĕ поэзире çеç мар, литература теорийĕнче те палăрнă. Çакна «Сăвă çырассипе ударени правилисем» статья (1920) лайăх çирĕплетсе парать. Пысăк ĕмĕтлĕ поэт чăваш кун-çулне çутатмашкăн, çĕнĕ сывлăш вĕрсе кĕртмешкĕн çĕнĕ çул шырамаллине, тĕрĕс çул тупмаллине палăртать, малашне кăвар чĕреллĕ поэтсем килессе шанать.

*PS. Статьяна çырнă чухне Шупашкарта пурăнакан В.Г.Родионов профессор тĕпчевĕсемпе усă курнă.*

# Çеçпĕлĕн «Кĕпер хывăр!» сăввинчи илемлĕх мелĕсем

Çеçпĕл Мишши «Кĕпер хывăр!» сăввине Кейӳре (Киев) 1921 çулхи юпа уйăхĕн 30-мĕшĕнче çырнă («Юлашки чĕл алăра, юлашки чĕл...» сăвăпа пĕр кунта). Малтанхи хут хайлав авторăн 1928 çулхи сăвă кĕнекинче пичетленсе тухнă (24, 25 стр.). Алçырăвĕ упранса юлман.

Произведени тĕсĕ – гражданла лирика. Ку хайлавра поэтăн Тăван çĕршывĕнче выçăпа аптракан халăх çинчен тăвăлса шухăшланипе çуралнă кăмăл-туйăмĕ ӳкерĕнсе юлнă. Автор чĕри ирĕклĕхе туртăннă, ăна пурнăçри танмарлăх тата наци проблемисем питĕ пăшăрхантарнă. Тăван çĕршывăн, халăхăн шăпи, пуласлăх канлĕх памаççĕ автора. Мĕнле йывăр пулсан та малалла, çутă пурнăç еннелле — çапла ăнланмалла тĕп шухăшне. Чăтма йывăр самант ку Çеçпĕл пурнăçĕнче: ют çĕр, тăванĕсем аякра, выçăллă-тутăллă... Çак вăхăтра вăл Атăл тăрăхĕнчен выçлăхран тарса килнĕ çынсемпе ĕçлекен комиссире вăй хурать. Выççисем кашни кунах вилеççĕ. Тарса килнĕ çынсем хушшинче чăвашсене курни ун чĕрине çĕçĕсĕрех касать.

Çеçпĕл çавăнпа Çеçпĕл ĕнтĕ: вăл лару-тăрăва çырса кăтартнипе çырлахмасть, яланах çутă малашлăха çул шырать, хăй хыççăн ыттисене чĕнет. Акă хайлавăн тĕп шухăшĕ:

*Эй!*
*Эсир,*
*Чĕррисем,*
*Вилесем урлă, шăм куписем çинче*
*Хĕвеллĕ ыран енне*
*Кĕпер чĕнтĕрлĕр.*

Çак кĕпере хывнă чухне ӳксен поэт хăйне тăратма ыйтмасть, ун пек аппаланса вăя сая ямалла мар тет. Вăй-халĕ пĕтсен хăйне кĕпер айне ывăтса хăварма ыйтать:

*... Кĕпер айне ывăтăр мана.*
*Ах,*
*Ĕнсене хуçăр.*

Поэт ăнланать: малалла кайма — кĕрешмелле. Кĕрешнĕ чух вара темĕнле йывăрлăх, инкек-синкек те сиксе тухма пултарать. Анчах вăл хăйне пурпĕрех шеллемест, мĕншĕн тесен чунри ĕмĕчĕ, тĕллевĕ

ытла та пысăк – халăх телейĕ («... Малта хĕвел»). Уншăн вара вăл хăйĕн пурнăçне пама хатĕр.

Поэт Н.Н.Рубиса: «Хуть хăçан та пурнăçран хам ирĕкпе кайма вăй тупатăп», — тенĕ пĕр калаçура. Сăвăра вара çакăн пек йĕркесем пур:

*Эпĕ*
*Халран кайса ÿксессĕн,*
*Ман урлă таптаса каçса кайăр,*
*Тимĕр урăрсемпе чĕрем çине*
*Хăюллăн таптăр.*

Кунта лирика геройĕн шухăшĕсем Çеçпĕлĕннипе çывăх пулнине асăрхатпăр. Автора пурнăçран уйрăлса каясси хăратмасть, çак шухăша вăл вулаканран пытармасть.

Çеçпĕл сăвă композицине хăйне евĕрлĕ йĕркелет. Пĕрремĕш сăмахсемпех вăл пире ытарлăх тĕнчине илсе кĕрет (тĕнчи илĕртÿллех пулмасан та):

*Çулсем... Çулсем çинче вилесем,*
*Укăлча панче вил шăмăсем,*
*Ах, йывăр, пăчă...*

Çакна лирика зачинĕ теме пулать, мĕншĕн тесен вăл чункăмăла пăлхатса ярать. Ун хыççăнах автор пире мĕн тумаллине вĕрентет, ĕçе чĕнет, ку лару-тăруран тухмалли çул кăтартать:

*... Хĕвеллĕ ыран енне*
*Кĕпер чĕнтĕрлĕр.*

Ку йĕркесенче автор хальхи ĕç-пуçпа килĕшменни паллă. Çавăнтах шухăшне хăй çине куçарать:

*Эпĕ*
*Халран кайса ÿксессĕн,*
*Ман урлă таптаса каçса*
*Кайăр.*

Унтан самана çинче чарăнса тăрать: «Вăхăт — ачашлăх вăхăт мар». Тепĕр строфара вара пĕтĕмлетÿ тăвать:

*Халсăррисене*
*Кĕпер айне перĕç.*

Ытла та пăшăрханать, хуйхăрать лирика геройĕ, каллех вил шăмсем патне таврăнать — ниçта вырăн тупаймасть хăй валли. Пирĕн ума каллех чуна ыраттаракан ӳкерчĕк тухса тăрать. Кунта та ыттисене кĕпер хывма хистет. Шухăшне вара хăй çинче пĕтерет:

*Ах,*
*нăшкатăп*
*Хал пĕтрĕ, хул халсăр...*
*Эй!*
*Ывăтăр мана...*

Çапла лирика геройĕ хăйĕн кулянăвне, пăшăрханăвне, ăнтăлăвне, шухăшĕсене пĕрлештерсе эмоци ретне йĕркелет. Çакăнта сăввăн композицине курма пулать.

Юлашки йĕркесене вуланă хыççăн лирика геройне çуртапа танлаштарма май пур. Мĕншĕн тесен çурта хăйĕн çутипе малти çула курма пулăшать, тĕрĕс çул суйласа илме май парать. Хăй вара çунса пĕтет. Çурта юлашкине çӳп-çап купи çине ывăтаççĕ. Сăвăри герой та çавăн пек. Вăл çынсене тĕрĕслĕх çине куçа уçса пăхма пулăшать, мĕн тумаллине хушать. Хăйĕн вара çак тан мар кĕрешӳре вăй-халĕ пĕтет. Çавăнпа вăл хăйне ыттисемшĕн чăрмав тесе шутлать, ывăтса хăварма ыйтать. Пурпĕрех вăл ĕçне турĕ. Ĕç-пуç малалла мĕнле каясси халĕ ыттисенчен килет. Вăл эстафетăна малалла пачĕ.

Хайлавăн чĕлхи пуян. Çеçпĕл çĕнĕ эпитетсем шыраса тупать, вĕсемпе вырăнлă усă курать. Ку автор пиççе çитнине, çӳллĕ шая хăпарнине кăтартса парать. Кунта çакна палăртса хăвармалла. Поэт тĕрлĕ тропсемпе усă курать: танлаштарусемпе, метафорăсемпе, перифразсемпе тата ытисемпе. Паллах, ку унăн пысăк талантне кăтартса парать. Сăмахран, «хĕвеллĕ ыран», «кĕпер чĕнтĕрлĕр» «тимĕр урăрсемпе», «кам чунĕ чул» тропсенче мĕн чухлĕ шухăш, сăнар! Витерсе, пусăмлăн каланă. Тепĕр çынна çак шухăша калама темиçе йĕрке кирлĕ пулĕччĕ, Çеçпĕле вара — пĕр-икĕ сăмах çеç. Хайлаври междометисем, риторикăллă кăшкăрусем шухăшсене татах та вăйлатаççĕ. Обращенисен вырăнĕ те çавах. «Малта хĕвел»,- тенĕ автор. Хĕвел — çутă та телейлĕ пурнăç символĕ. Ку илемлĕх мелĕ — символпа усă курни. Нумай пăнчă, тире — çак чарăну паллисемпе те усă курни пур. Вĕсем интонаципе вулама, шухăша лайăхрах ăнланма пулăшаççĕ. Инверси те пур — «ывăтăр мана». Çак сăмах çаврăнăшĕсенче эпĕ аллитераци куратăп: «Эй! Эсир, Чĕррисем», «Кам куçĕ куççуль кăлармĕ», «Хал пĕтрĕ, хул халсăр».

Акă ассонанс: «Ах, йывăр, йывăр, пăчă», «Кĕпер чĕнтĕрлĕр», «Ман урлă таптаса каçса кайăр», «Вăхăт – ачашлăх вăхăт мар», «Уй-хир урлă купан-купан вил шăм».

Малалла ӑнтӑлма, ыранхи ҫинчен шутлама тӑрӑшакан ҫыншӑн ҫул ҫинчи вилесем — чӑрмав. Ҫавӑнпа автор «Кӗпер хывӑр» тет. Ӑна малашлӑха пӑхӑр, кӗрешӗр тесе ӑнланмалла. Ку ытарлӑх мелӗ. Ун пекки тата пур. «Чӗрем ҫине хӑюллӑн таптӑр», «ӗнсене хуҫӑр», «кӗпер айне перӗр», «ӑш юрӑ вӑхӑчӗ кайра» сӑмах ҫаврӑнӑшӗсем те ҫакӑнта кӗреҫҫӗ.

«Ку вӑхӑт – вилӗм вӑхӑчӗ» тени вара гипербола пек янӑрать. Ку пӗтӗм тӗнче вилмелли вӑхӑт мар-ҫке. Ҫапах та Ҫеҫпӗл хӑй йӗри-тавра ҫынсем нумай вилнине кура тӗнче вилнӗ пек кӑтартать. Хайлавра антитеза та пур.

*Малта хӗвел.*
*Ку вӑхӑт – вилӗм вӑхӑчӗ, —*

тет автор.

Кунта икӗ вӑхӑта сӑнласа панӑ, хирӗҫлетӳ тунӑ. Хальхи самана тӗттӗм, малашлӑх ҫутӑ пулӗ тесшӗн пулнӑ Ҫеҫпӗл. Кун пек тӗслӗх те пур:

*Паттӑррисем — ҫав кӗпер урлӑ,*
*Халсӑррисене*
*Кӗпер айне перӗҫ.*

Обществӑри ҫынсене икӗ пая уйӑрнӑ. Вӗсем ӑҫта пулмаллине автор хӑйех палӑртса хурать.

Повторсем те нумай: шухӑшсем те, сӑмахсем те. «Эй, чӗррисем» тесе икӗ хут, «кӗпер чӗнтӗрлӗр» тесе икӗ хут, «ӗнсене хуҫӑр» тесе икӗ хут каланӑ. «Кӗпер айне перӗр» тесе умлӑ-хыҫлӑ виҫӗ хут каланӑ. Ҫул ҫинчи вилесем пирки те икӗ хут асӑрхаттарнӑ. Хӗвеле те икӗ хут асӑннӑ. Пурӗ сакӑр кӑшкӑру палли. Тӗрӗссипе, кашни йӗрке хыҫҫӑнах кӑшкӑрас килет. Поэт хӑйӗн чун ыратӑвне пӗтӗмпех ӑнлантарма пултарнӑ.

Кӑштах сӑвӑ виҫи ҫинчен. Кунта авторӑн сӑвӑ ҫырас ӗҫри тӗллевне каласа хӑвармалла. Вӑл яланах формӑпа содержани пӗрле ҫыхӑнмалла тенӗ. Революци ҫӗнтерӗвӗн хавхи ӑна маларах силлабо-тоникӑпа ҫырма хистенӗ. Халӗ вара — «вилӗм вӑхӑчӗ». Революцин патвар марш кӗввисем хыҫра юлнӑ. Революци ӗҫӗ хӑрушлӑхра. Поэт ҫакна никамран малтан сисет, чӗрипе туять. Ҫавӑнпа «Кӗпер хывӑр!» сӑвӑра вӑл силлабо-тоникӑн кӗвӗллӗ, урана йӑттаракан ритмӗнчен тарать. Кӗвӗллӗ сасӑ хуҫӑлать. Каласа пӗтерменнисем пур: нумай пӑнчӑ, паузӑсем. Ҫапла вӑл ҫак хайлавра

ирĕклĕ сăвă виçи патне таврăнать, ăшĕнчи кулянăвне çапла палăртать. Кулянмасан та май çук: пурнăç — общество идеалĕнчен инçе тăрать. Вĕсене çывăхлатма кĕрешĕве кĕмелле, «кĕпер хывмалла». Ку хайлав тарăн шухăшлă, вăйлă туйăмлă. Сăввăн икĕ йĕрки рифмăланаççĕ-ха – чи малтанхисем. Урăх рифма çук. Пĕр строкари сăмахсене пусăмĕ вăйлăрах пултăр тесе темиçе йĕркене вырнаçтарнă. Çакă паузăпа вулаттарать. Сăвва автор 4 строфана уйăрнă: пĕрремĕшĕнче – 33 йĕрке, иккĕмĕшĕнче – 4, виççĕмĕшĕнче — 6, тăваттăмĕшĕнче — 9. Ман шутпа, кунта поэтăн хуçăк кăмăлĕ палăрать. Тĕп вырăнта кунта – рифма та, йĕркесен шучĕ те, ритм та мар. Тĕп вырăнта — туйăм, сăнарлăх. Маларах асăннă мелсемпе усă курса автор çак тĕллев патне пырать.

«Кĕпер хывăр!» — Çеçпĕлĕн чи кайранхи сăввисенчен пĕри. Каларăмăр ĕнтĕ, автор пурнăçĕнчи йывăр тапхăрта çырнă произведени. Çавăнпа пафосĕ те пусăрăнчăк. Çав çул çырнă сăввисем – «Йывăр шухăшсем», «Выç псалом», «Паянтан», «Юлашки чĕл алра, юлашки чĕл», «Кун тĕпĕнче», «Çуркунне» — çакăн евĕрлĕрех.

# Çеçпĕл сăввисенчи сăнарлăх

Çеçпĕл Мишшин творчестви çине куçиччен кăштах хăй çинчен каласан та ытлашши пулмасть. Поэт хăрушă, шелсĕр саманара пурăннă. Хăрушлăх вара иккĕленӳлĕх кăларать, çынсем хушшинчи йĕркеллĕ çыхăнусене татать, çынсене икĕ пая пайлать: хăравçăсем тата паттăрсем. Çеçпĕл чун хевтипе паттăр пулнă, хăрушлăхсене хирĕç тăнă. Çакă унăн творчествинче уççăн палăрса тăрать. Арсентий Тарковский поэт: «Вилĕмрен вунçиччĕре те, çитмĕлте те хăрамалла мар», — тенĕ. Çеçпĕл çак принциппа пурăннă. Ман шутпа, вăл çак çула ăс-тăнĕпе çеç мар, чĕрипе суйласа илнĕ. Хăрушлăха хирĕç Прометей евĕр тăнă. Çеçпĕл чăн-чăн шухăшлавçă пулнă — çамрăк çынла мар. Поэт, паллах, шухăшламасăр йĕри-таврари пулăмсене тишкерейместь, шухăшсене чунĕ витĕр кăлармасăр сăнарлă сăвăсем çыраймасть. Çеçпĕлĕн ку ытлашшипех пулнă, ун пек сăнарлă çыракан поэтсем нумаях мар.

Сăвва вăхăт çуратать тенĕ Çеçпĕл Мишши. Çакă унăн творчествинчи тĕп шухăш. Кашни вăхăтăн хăйĕн сăнарĕ. Çакна чăваш сăвăхывăмне йĕркелекенĕ питĕ лайăх чухланă, сăнарсене ăста калăпланă. Унăн сăввисем малалла чĕнеççĕ, марш евĕр илтĕнеççĕ, урана йăттараççĕ. Тата çакна та палăртмалла: вăл пурнăç таппине туйса сăввисене тĕрлĕ кӳлепепе хайланă. Ку хăй те сăнарлăх, вуланă чух кирлĕ ĕнерӳ парать. Çеçпĕл сăввисенче пĕр ытлашши сăмах та çук. Кашни сăмахĕ ахах пек çутă, чан сасси пек янравлă, кире пуканĕ пек йывăр. Паллах, сăвăç хăй пурăннă вăхăтран малта пынă. Юрий Сементерĕн сăмахĕсем Çеçпĕл çинчен каланă пекех туйăнаççĕ: «Чăн-чăн талант яланах хăй вăхăчĕпе саманинчен çӳлерех тăрать, шăнăçаймасть».

Тĕслĕхшĕн Çеçпĕлĕн пĕр сăввине илсе пăхар-ха.

*Уяр сенкерлĕх Илĕртмĕшне*
*Хастарлăх çилĕ мана чĕнет.*
*Анчах çунатсен ăвăсне*
*Хĕвеллĕ çӳллĕх*
*Ирĕлтерет.*

*Эп ӳкрĕм çăтлăха вара, —*
*Юхаççĕ калла кунти шывсем.*

*Тĕссĕр вăхăт çĕленĕ çумра*
*Шăхăрать «Тек тăраймăн» тесе.*
*Каясшăнчĕ те çурранах*
*Кăвак инçене курма,*
*Юратнă тус ячĕ мана*
*Кооператива сут тума.*

Тĕлĕнмелле сăнарлăх. Кашни вуламассерен шухăшсем тарăнланса пыраççĕ, çĕнĕ япаласем пĕлетĕн. Виçĕ куплет – мĕн чухлĕ шухăш, сăнарлăх, ăнтăлу, чунри вут-çулăм! Паллах, ку сăвă автобиографиллĕ. Сăвăç хăй çинчен çырать: тарăхса, ăмсанса, кăштах шӳтлесе те.

Уяр сенкерлĕх Илĕртмĕшĕ – халăхшăн лайăх, ытлă-çитлĕ, татуллă пурнăç. Сенкерлĕх Илĕртмĕшне Кăвак хуппипе те танлаштарма пулать. Унта вара, мĕн каласан та, çитсе курма çук. Поэт ăна ăнланмасть мар, çапах та чун хавалĕпе унталла туртăнать. Хăй тан мар кĕрешĕве кĕнине те пĕлет, пурпĕрех пĕр вырăнта ним тумасăр тăраймасть. Ун ĕçлемелле, ырă тумалла, шухăшпа çӳлте вĕçмелле. Унăн чунĕ вĕрет. Хастарлăх çилĕ – акă мĕн çĕклет ăна пĕлĕтелле, акă мĕн хистет вут-çулăма кĕме. Кунта хастарлăх çилĕ — сăвă характерĕ, шухăш-кăмăлĕ. Хăй суйласа илнĕ такăр мар çулпа унăн кăмăлĕ сыпăнсах тăраççĕ темелле. Ăшĕнчи туйăмĕсем ăна, вĕри сывлăш мамăка çĕкленĕ евĕр, тӳпенелле çĕклеççĕ. Хăй пурăннă саманана сăвăç хĕвеллĕ çӳллĕх тесе сăнарлать. Парадокс: эпир пурте хĕвел еннелле, çӳллĕхе туртăнатпăр, анчах хĕвел мĕн чухлĕ çывăхрах, çавăн чухлĕ пĕçерет, «çунатсен ăвăсне ирĕлтерет». Çӳлелле пĕр вĕçĕмсĕр вĕçме май çук. Унсăрăн сана Икар шăпи кĕтсе тăрать. Çын мĕнле вăйлă, пултаруллă пулсан та тĕнчене веçех улăштараймасть, япалан виçи, карти пур. Çакна Çеçпĕл пĕрремĕш куплетри вун виçĕ сăмахпах ăнлантарать. Чуна мĕнле-тĕр канăçсăрлăх кĕрет, автортан шикленме тытăнатăн.

Çăтлăх кунта — кивĕ самана лачаки, обществăри çынсен хутшăнăвĕсенчи тĕрĕсмарлăх, пурнăç саккунĕсен тытăмĕн йăнăшĕсем. Çăтлăхра хура вăйсем хуçаланаççĕ. Унта ӳкнĕ Икара тата пысăк хăрушлăхсем кĕтсе тăраççĕ. Пĕрремĕшĕ – шывсем каялла юхни, кивви çĕннине çĕнтерсе пыни, малалла кайма май çукки. «Шыв» сăмаха нумайлă хисепре калани те ахальтен мар. Йывăрлăхсем, хăрушлăхсем — енчен-енчен, лавĕпех.

*Тĕссĕр вăхăт* тесе сăвăç хура халăхăн ĕмĕчĕсем пурнăçа кĕреймен тапхăра сăнлать. Унта, паллах, çĕленсем хуçа, вĕсем

пытанса выртса вăрттăн сăхаççĕ. Ку сăнар – Çеçпĕле мĕн чухлĕ çын ура хума хăтланнине аса илсен — шăпах хăй çинчен. Юстици çуртне вут тĕртнĕ тесе айăплани, тĕрмене хупни кăна мĕне тăрать!

Хайхи çĕлен пирĕн автора шăхăрса «тек тăраймăн» тет. Апла пулсан Çеçпĕл ӳкмеллипех ӳкнĕ. Вăл хăйне йывăрлăхсем пусĕпех пусса çитернине питĕ аван ăнланать, чĕрипе туять. Чĕртме май çук чир, ăнман юрату, ĕненӳ пĕтни, çутă çул курăнманни — çаксем пурте ăна ура çине тăма памаççĕ. Кунта поэтăн вилĕмĕ çывхарса килнине сисме пулать. Çирĕп кăмăллă, чун хевтиллĕ, парăнма хăнăхман çамрăк çын çак сăмахсене ахальтен çăварĕнчен кăлармасть. Вилĕм сăвăç пусĕ çине çавине йăтса хунă ĕнтĕ. «Каясшăнччĕ çурранах» сăмах çаврăнăшĕ шăпах çакна çирĕплетет. Глагола мĕнле вăхăтра çырнине курăр-ха. Иртнĕ вăхăтра. Апла Çеçпĕл хăрушă шухăшне пытарсах та каймасть. Унччен вăл ăна пĕрре мар каланă.

«Çурранах» сăмах та ахаль кĕрсе ларман. Паллах, автора ури чирĕ вăйлă кулянтарнă, вăл хăйне çынран катăк туйнă. Уксахламасăр утасси – чи пысăк ĕмĕчĕсенчен пĕри пулнă.

Çеçпĕлĕн ĕмĕчĕсем татах та пулман мар. Ăна ку сăвăра та туйса илме пулать. Уяр сенкерлĕхе кайнипе кооперативра сут туни поэтшăн пĕр мар. Кунта ирони те палăрать пек, ӳкĕнни те, хăйне критиклени те пур пек.

Сăвăра пурĕ 42 сăмах кăна, анчах вĕсемпе сăвăç тĕлĕнмелле вырăнлă усă курнă. Шедевр – урăх нимĕн те калаймăн! Авторăн кун-çулĕ, ĕмĕчĕсем — çак 42 сăмахра. Унта авторăн биографийĕ кĕнĕ. Тĕрĕсрех — туса пĕтереймен ĕçсен пĕтĕмлетĕвĕ. Урăхларах та калама пулать: ку сăвă – сӳннĕ ĕмĕтсем çине лартнă пысăк хĕрес. Чăнах та, çак йĕркесене çырнă хыççăн Çеçпĕл темиçе эрне çеç пурăннă...

Çеçпĕл сăввисем, Брюсов калашле, туйăмсен чĕрĕ сасси. Сăвăç кашни сăнара символсем урлă кăтартнă, чунĕ çуннине тĕрлĕ сăрăсемпе ӳкернĕ. Сăвăсенче тĕссем питĕ нумай. Валентин Абрамов критик тата литературовед Çеçпĕл Мишшин чăвашла çырнă 29 сăввинче 17 «хĕрлĕ», 15 «сарă», 10 «кăвак», 6 «шурă», 6 «хура», 5 «симĕс» сăмах шутласа тухнă. Поэтăн пурнăçа тĕслĕ кăтартакан асамлă куçлăх пулнă пек туйăнать. Кашни япалана тĕс витĕр курать. Çак тĕссем тĕрлĕ сăнарсем тăваççĕ.

Акă тата эпитетсем, танлаштарусем. Хăйĕн ĕçне тăсса В.Абрамов Çеçпĕл сăввисенче 27 «хĕвел», 26 «кăвар», 16 «кун» сăмахсем тупнă.

«Çутă» сăмах вара чи нумаййи иккен. Эпĕ ун пеккисене 32 шутласа кăлартăм.

Кунта акă мĕнле пĕтĕмлетӳ тума пулать: поэт чи нумай усă куракан сăмахсем — çутă, хĕвел, кăвар, хĕрлĕ, кун. Вĕсем пурте автор шухăшĕнче ырă малашлăха, лайăх пурнăça пĕлтереççĕ.

Çеçпĕл Мишшин пурнăçĕ те творчестви пекех сăнарлă. Вăл çурта пек çунса таврана çутатать. Анчах çав вăхăтрах унăн кун-çулĕ кĕскелсе пырать. Уйрăмлăхсем те пур. Çуртана хăш вăхăтра та сӳнтерме пулать. Çеçпĕле вара никам та, нимĕнле майпа та сӳнтереймен. Хăйсĕр пуçне.

Сăлтавĕ çакăнта пытанать: поэт хăйĕн телейне çынсен телейĕ урлă курнă. Çавăнпа вăл хура халăх нуши çинчен, хура халăх ятĕнчен, унăн çутă пуласлăхĕ çинчен çырнă. Çавăнпа Çеçпĕл ячĕ те, творчестви те вилĕмсĕр. Ахальтен мар ăна «мĕльюн чăвашсен юрăçи» тенĕ.

Çеçпĕл хăйĕн ĕçне тивĕçлипе турĕ. Унăн чăн паттăр ĕçĕ — пурнăça хăй куçĕпе курса, чăваш халăх нушине чĕри витĕр кăларса, шалти çулăмпа шăратса сăнарлă сăмах урлă чĕлхепе çыхăнтарни, ытти çынсенче патриотизм туйăмĕ вăратни.

Çеçпĕл пулман пулсан — ăна шухăшласа кăлармаллаччĕ!

## К.В.Ивановăн «Шуйттан чури» трагедийĕнчи пирĕштипе шуйттан сăнарĕсем

К.В.Иванов патша саманинче çуралса ӳснĕ, аслă шкулта пĕлӳ илмен, ытларах хăй тĕллĕн вĕреннĕ. Çав вăхăтрах пысăк культурăллă, чи малта пыракан çынсен шайне çити хăпарма пултарнă. Ырăссен пĕрремĕш революцийĕ вăратнине пула ирĕклĕхшĕн кĕрешĕве çĕкленнĕ чăваш халăхĕн чаплă ывăлĕн сасси-хăвачĕ урлă вăл хăйĕн вĕçĕ-хĕррисĕр хевтипе пултарулăхне хăюллăн палăртнă.

Поэт тӳрĕ кăмăллă, тĕрĕслĕхе юратакан çын пулнă. Анчах çынсем пурте тĕрĕслĕхпе пурăнма тăрăшаççĕ-и-ха? Паллах, çук. Çакă çамрăк çынна питĕ пăшăрхантарнă, шухăшлаттăрнă. Нумай çын укçана, мула малти вырăна хурса пурăннă, пурнăç тĕллевĕ тесе шутланă. Ку çынсене нимĕн те тăваймăн, тӳрлетеймĕн. Анчах пурнăç малалла каять вĕт-ха, ăрусем улшăнаççĕ. Шăпах каярах килекен ăрусем валли çырнă ăна, вĕсене ăс панă: непĕс те çăткăн ан пулăр, ку ырри патне илсе çитермест. Çын укçашăн кăна пурăнмалла маррине кăтартса парать автор. Çакă — произведенин тĕп теми. Тĕллевне каларăмăр ĕнтĕ: çынсем пурнăçа укçа-мул, кĕмĕл-ылтăн витĕр çеç ан курччăр, вĕсен чунĕсем хура шухăшсенчен тасалччăр.

«Шуйттан чури» трагедире автор халăхра сăмах вĕççĕн çӳрекен калава никĕсе хунă, анчах ăна хăй пĕлнĕ пек улăштарнă.

Унăн кĕске содержанийĕ çакăн пек. Икĕ пĕртăван, пиччĕшĕпе шăллĕ, вăрçă хирĕнче çӳрет. Анчах кунта вĕсем алла хĕç-пăшал тытса тăван çĕршыва хӳтĕлеме килмен. Вилнĕ е аманнă çынсен кĕсйи-хутаçне ухтарса, вĕсен пурлăхĕсене çаратса пуйма шухăш тытнă иккен çаксем. «Çынна йĕртсе-çаратса пуçтартăмăр пурлăх», — тет кĕçĕнни. Ывăлĕсем вăрçăра вилнисене çаратма шухăш тытнине пĕлсен вĕсен амăшĕ йĕре-йĕре урайĕнче йăваланать. Кĕçĕннин арăмĕ те ӳлесе йĕме тытăнать: «Ан кай, ан кай, пĕтетĕн. Чуну ӳкĕ тамăка...». Анчах çăткăнлăхăн чикки те, виçи те çук. Икĕ пĕртăван, пуйма шутланăскерсем, ухмаха тухнăнах туйăнать. Вĕсем никама итлемеççĕ. Амăшĕ, паллах, ылханса юлать, арăмĕсем макăраççĕ. Пуçтарса-çаратса çӳресе пуйсан хайхискерсен пурлăха пайламалла. Анчах мĕнле? Иккĕшĕ те хутаçне хăй валли илесшĕн. Кĕçĕнни хутаçне ярса тытнă та пиччĕшне çапла калать:

*Апла пулсан кай кунтан.*
*Эпĕ санăн тăван мар!*
*Тăшман çынна нихçан та*
*Памăп тура панине.*

Лешӗ вара ӑна:

*Вӗлеретӗп! Парсан, пар! –*

тесе хӑратать.

Мулшӑн ухмаха тухнӑ пиччӗшӗ шуйттан сассине илтет:

*Ил укҫине, ил туртса!*
*Ылтӑн-кӗмӗл ҫап-ҫутӑ,*
*Хутаҫ тулли ялтӑрать.*

Укҫа-мул хутаҫӗсӗр пуҫне нимӗн те курма пултарайманскер, ӑсне-пуҫне ҫухатнӑскер шӑллӗне сӑнӑпа чиксе вӗлерет, хирти чул ҫумӗнче пӑрахса хӑварать.

Мӗн калама пулать-ха хайлав тата унти геройсем пирки. Тӗп конфликчӗ – куҫ умӗнчех.

*Укҫапала эрехех*
*Ҫынна ӑсран кӑларать, —*

тенӗччӗ К.В.Иванов хӑйӗн «Нарспи» поэминче. Ҫак шухӑша вӑл «Шуйттан чури» трагедире тарӑнлатса, анлатса ҫырса кӑтартать. Ҫак икӗ йӗрке пирӗн хайлав умӗнче эпиграф вырӑнӗнче тӑрсан та питӗ вырӑнлӑ пулӗччӗ. Шӑпах ҫав пӗлтерӗшлӗ шухӑша уҫса парас тӗллевпе ҫырнӑ та сӑвӑлла трагедие. Автор ҫыннӑн ирсӗрлӗхне, ҫӑткӑнлӑхне шалтан кӑтартса, уҫса парать. Тӗллевӗ шӑллӗн монологӗнче палӑрать:

*Анне ячӗ ӳлесе*
*Пирӗн шухӑша сиссе,*
*Урайӗнче йӑваланчӗ*
*Мӗскӗн анне ман умра:*
*«Ан кай, ачам, ан кайсам,*
*Хӑвӑн пуҫна пӗтерен,*
*Ан ухмахлан укҫашӑн,*
*Мӗн пурри те ҫитӗ-ҫке...».*
*Анчах пирӗн чӗресем*
*Хускалмарӗҫ ҫапах та.*

Малалла вӑл ҫапла калать:

*Ман шухӑшра укҫа ҫеҫ*
*Йӑлтӑртатса тӑратчӗ.*

Йăнăш тунине кĕçĕнни хăйне сăнăпа чикнĕ хыççăн çеç ăнланать. Асли вара, хутаçне туртса илнĕскер, укçасăр пуçне урăх нимĕн те курмасть, ташша ярать. Ку чăннипех трагедилле лару-тăру. Этем укçапа пуянлăха çăткăнла юратнине пула чунне шуйттана сутнине, çынлăха çухатса ухмаха тухнине пиччĕшĕн шăпи урлă курма пулать.

Хайлавра тăватă сăнар: пиччĕшĕпе шăллĕ, шуйттан, пирĕшти. Мĕнле хаклама пулать-ха вĕсене? Шăллĕ пирки çапла шутлама май пур. Унăн кăмăл-туйăмне хайлавăн пĕрремĕш сăмахĕ уçса парать — чул.

*Чул çумĕнче пĕр этем*
*Ларать хытă йынăшса, —*

тет автор.

Чул пек хытă чĕреллĕ пулнăшăнах унăн чул çумне ларса йынăшма тӳрĕ килет. Кунта параллельĕх мелĕпе усă курнă.

Хытă чунне, çăткăнлăхне унăн малалли сăмахĕсем уçса параççĕ. Вăл пиччĕшне эсĕ манăн тăван мар, тăшман тет, хутаçне пăчăртаса тытса ларать:

*Вилсен вилеп, чĕрĕлле*
*Памăп турă панине.*

Тĕлĕнмелле! Укçа хутаçне вăл хăйĕн пурнăçĕнчен те хаклăрах тесе шутлать. Хăй вилсен — хутаççи мĕне кирлĕ-ши вара? Ун пирки пĕр сăмах та çук. Акă мĕнле «суккăрланма», ухмаха тухма пултарать çын пуянлăх курсан. Çав вăхăтрах вăл пиччĕшĕ хăйне вĕлерме вăй çитерессе ĕненсе каймасть.

*Вĕлер, чуну çитейсен, —*

тет вăл, иккĕленет.

Манăн çăткăнлăх пысăкрах, манра усал вăй нумайрах тенĕн туйăнаççĕ ку сăмахсем. Анчах пиччĕшĕн ирсĕрлĕхĕ тата пысăкрах: вăл пĕр вартан тухнă çынна кăкăрĕнчен сăнăпа чиксе шăтарать. Инкек-асап çитсе тухсан вара шăллĕ урăхла шутлама пуçлать. Хăй çынсене инкек кӳни нимĕн те марччĕ, хăйне нуша лексен, вилĕм çывхарса килсен — аван мар иккен. Ак хайхи, ӳкĕнĕç сăмахĕсем, ăслă сăмахсем тухма пуçлаççĕ унăн çăварĕнчен.

*Мана хамăн айăпшăн*
*Турă асап ячĕ пуль, —*

тесе калать вăл.

Ӳкӗнет, анчах кая юлнӑ. Пурнӑҫра ҫапларах пулса тухать часчасах. Хамӑра аван чухне эпир ытла шутласах каймастпӑр, ыттисене ним вырӑнне те хумастпӑр. Хамӑр вара ыттисенчен ялан ыррине кӗтетпӗр. Эгоистсем мар-и-ха эпир?

Ҫапах та вилес умӗн шӑллӗне ӑс кӗрет, вӑл Турӑран пиччӗшӗн чунне тасатма ыйтать, «шуйттан чури пулминччӗ» тет.

Хӑйӗн пурнӑҫӗн пӗтӗмлетӗвне вӑл ҫапла тӑвать:

*Пиччем, пиччем! Эсӗ те*
*Суккӑр ан юл ман пекех.*
*Кусна уҫса пӑх, пиччем.*
*Мӗнле эпир ҫынсемччӗ?!*
*Укҫашӑнах ҫунтӑмӑр,*
*Ылтӑн-кӗмӗлшӗн ҫунса,*
*Ҫынна тӗрлӗ хӗстерсе,*
*Ҫынна тӗрлӗ макӑртса*
*Пуҫтартӑмӑр пуянлӑх*
*Хамӑр ырӑ курасшӑн,*
*Анчах пухнӑ мулпала*
*Эпир тӑранмарӑмӑр.*

Акӑ ӑҫта вӑл тӗшши — пухнӑ мулпа та тӑранман! Ҫакӑх трагеди патне илсе ҫитерчӗ те.

Халӗ ӗнтӗ вӑл ҫӑлӑнӑҫ ыйтма ӑс ҫитерет. Чунне ҫӑласшӑн.

*Эй, турӑ! Айӑпӑмшӑн*
*Чунтан-вартан ӳкӗнсе,*
*Чунтан-вартан йӑлӑнса,*
*Санран ҫӑлӑнӑҫ ыйтатӑп, —*

тет вӑл.

Пӗлместӗп, унӑн чунне ҫӑмӑллӑх пулӗ-и, ҫук-и, анчах тӳнтер герой хайлав вӗҫӗнче лайӑх енне туртӑнни вулаканшӑн питӗ паха. Ку тӗслӗх пурнӑҫ философине ӑнланма пулӑшать, ырӑпа усала уйӑрса илме май парать.

Пиччӗшӗ пӗртӑванне вӗлерме те вӑй ҫитерчӗ терӗмӗр. Малтанах паллӑччӗ ӗҫ-пуҫ мӗнпе вӗҫленесси. Пӗртӑвансем амӑшӗн сӑмахӗ урлӑ каҫса, ӑна йӗртсе-макӑртса хӑйсен ырӑ мар тӗллевне пурнӑҫлама тухса кайрӗҫ. Аннене йӗртнинчен пысӑкрах ҫылӑх мӗн пур? Ку ӗҫӗн вӗҫӗ – пысӑк инкек. Ҫак хайлавра ҫеҫ мар — авантарах шутласан.

Пиччӗшӗн пӗрремӗш сӑмахӗ – «вӗлеретӗп!» Акӑ мӗнле ҫын вӑл (ҫын теме юрасан).

*Мана мӗн пит кирлӗччӗ?*
*Укҫа, укҫа — акӑ вӑл!*

*Укҫа пулсан, мул та пур,*
*Унтан урӑх мӗн кирлӗ? —*

унӑн сӑмахӗсем.

Акӑ пиччӗшӗн тӗллевӗ — укҫа! Мӗн тума кирлӗ-ши вӑл ӑна?

*Ирттерӗп ҫав пурнӑҫа*
*Савӑнса ҫеҫ, кулса ҫеҫ, —*

тет вӑл ун пирки.

Ҫӑмӑллӑнах, савӑнса, кулса пурӑнасшӑн вӑл. Ӗҫлемесӗр, нуша курмасӑр. Ӑна кам тӑрантармалла-ши вара? Ҫын юнӗпе, тарӗпе ылтӑн-кӗмӗл ҫурт лартасшӑн. Вӑл чи ӑсли пуласшӑн, ыттисем пурте – айван, ухмах... Ҫакӑн пек айван шухӑшшӑн ӑна тавӑру ҫитет, вӑл ӑнне ҫухатса йӑванса каять. Кунта вӑл вилнинех каламан, «вилнӗ пек» тенӗ. Ӑс-тӑнне ҫухатни вара чи пысӑк инкек, мӗншӗн тесен вӑл текех ҪЫН мар ӗнтӗ! «Турӑ ҫынна асаплантарас, айӑплас тесен – ун ӑсне туртса илет», — теҫҫӗ. Кунта шӑп ҫавӑн пекех. Кирек мӗнле ирсӗр ӗҫ те ырӑпа вӗҫленмест – айӑплав пулатех.

Ман шутпа, хайлаври шуйттанпа пирӗшти — ҫын ӑшӗнче ларакан икӗ хире-хирӗҫлӗ шухӑш-туйӑм. Шуйттан каланӑ шухӑш ҫӑмӑлтарах та кӗске ҫулпа илсе каять, анчах вӗҫӗ хӑрушӑ. Такӑнасси, ҫамкапа тӑрӑнасси – умрах. Шуйттан ыррине хушмасть, ҫынна ухмаха кӑларакан ҫул ҫине тӑрататъ. Унтан – хӑйех унран кулать. Аса илер-ха:

*Шуйттан юман хыҫӗнчен*
*Сиксе тухрӗ ахӑрса:*
*Этем хыҫҫӑн шуйттан та*
*Ташша ячӗ савӑнса.*
*Ухмах ҫынна курӑнми*
*Е ыталать аллипе,*
*Е чуптӑвать тутипе.*

Апла пулсан этем шуйттана итлесе унӑн кулли пулчӗ. Мӗншӗн? Мӗншӗн тесен ҫӑмӑл пурнӑҫ шырарӗ, ӗҫлемесӗрех пуясшӑн пулчӗ. Пӗлсе тӑрсах шуйттан кулли пулас килет-и вара? Килмест, анчах ӗҫне ҫав енне сулӑнсах тӑватпӑр.

Пирӗшти пурӗ те виҫӗ йӗрке ҫеҫ калать:

*Мӗскӗн этем, мӗн турӑн?*
*Куҫна уҫса пӑх, мӗскӗн,*
*Ухмах ӗҫӳ ҫинелле.*

Пиччӗшне тин ӑс-тӑн кӗчӗ пек, анчах вӑл хӑйӗн хура ӗҫӗнчен хӑранипе тӳрех ҫак ӑс-тӑна ҫухатрӗ. Ҫапларах пулса тухать

пурнăçра. Эпир ĕçне тунă хыççăн çеç шухăшлама тытăнатпăр. Пирĕшти маларах хушнине итлеместпĕр. Ăна шуйттан сасси хупласа тăрать. Шуйттан çăмăл çул сĕнет-çке. Çăмăллăха вара пурте юрататпăр. Çав шутра — пирĕн хайлаври пиччĕшĕпе шăллĕ те. Вĕçĕ синкерлĕ пулса тухрĕ: пĕри вилсе выртрĕ, тепри ăс-тăнне çухатрĕ. Вĕсен ӳчĕсем çинче шуйттан ташлать.

Сăнар-ха, геройсен ячĕсем те çук. Ку, ман шутпа, ахальтен мар. Çак меслетпе автор вĕсене сăнсăрлатнă, мĕскĕнлетнĕ. Çаксем çын ятне йăтса çӳреме те тивĕçлĕ мар тенĕ автор.

Ю.М.Артемьев тĕпчевçĕ çак хайлава тишкерсе çапла çырать: «Трагедие поэт вĕçлеймен, çавăнпа та вăл малалла мĕнле йĕрпе аталанма пултарнине татсах калама хĕн. Произведенире тĕп конфликта уçса пама, унти характерсене малалла мĕнле майсемпе усă курнă пулĕччĕ-ши поэт?»

Ман шутпа, логика енчен трагеди вĕçленнĕ. Трагедилле вĕçлени шăпах автор шутланă пек пулса тухать. Ахальтен мар ĕнтĕ вăл хайлав сюжетне хăйне кирлĕ пек улăштарнă. Тĕп пĕтĕмлетӳ: пирĕн геройсем усал ĕç турĕç, çакăншăн хăйсем те усал курчĕç. Пурнăç вĕсене тавăрчĕ. Çакă трагедийĕн вĕçленĕвĕ. Малалла аталанма е аталантарма кирлĕ-и вара кунта сюжета?

К.В.Иванов произведенийĕсен конфликчĕ яланах çивĕч. Ют çынсем мар, тăванĕсем те пĕр-пĕрне ăнланмаççĕ. Тата хăрушăрах: пĕр-пĕрне вĕлереççĕ. Пирĕн хайлавра та çаплах. Çакна автор пусăмласа кăтартать. Пĕр-пĕрне хисеплемесен, чун тасалăхĕпе çынлăха упрамасан этемлĕх аталанма пултараймасть, çынсен хутшăнăвĕсенче килĕшӳлĕх тĕппипех çухалать. Поэт шухăшĕпе, гуманизм – этемлĕхе, общество аталанăвне тĕрĕс çулпа илсе пыма пулăшакан сиплĕхлĕ эмел. Пурнăçа йĕркеллĕ çулпа илсе пыма çыннăн мораль тĕлĕшĕнчен çĕнелсе , аталанса пымалла. Çакă ĕнтĕ вăл çутăлăх литературин тĕп принципĕ. Ăнсăртран мар К.В.Иванов хăй хайлавĕсенче моральпе çыхăннă хирĕçӳсене кăтартать. Этем ăс-тăнĕ, унăн чун-чĕрин пуянлăхĕ — чи пысăк тӳре, этемлĕхе малалла туртакан вăйсенчен пĕри. Автор литература тивĕçне – этеме гуманизм принципĕсене ăша хывса вĕсемпе кашни утăма виçсе пурăнма вĕрентессине лайăх кăтартать. Çак тĕллеве пăхăнса этеме ун чун-чĕри яр уççăн курăнакан лару-тăрура ӳкерсе парать.

Поэт романтизм поэтикипе те анлăн усă курать. «Шуйттан чури» трагедире те çавах. Вăл калăпăшĕпе пысăках мар пулин те классика шайне хăпарнă. Ăна шкулта вĕренмелли программăна кĕртнĕ. Вăл ăс вĕрентӳллĕ произведени. Çавăнпа хальхи пĕлтерĕшĕ те чакмасть. Мĕншĕн тесен унта ĕмĕр кивелмен тема хускатнă: мулпа чыс пĕр-пĕрне хирĕç тăни. Хальхи пăтрануллă саманара ку хайлавăн пĕлтерĕшĕ чакма мар, çĕнĕрен вăй илме пуçларĕ.

# Петĕр Хусанкайăн вăрçă лирики

Петр Петрович Хусанкай 1907 çулхи кăрлачăн 22-мĕшĕнче Тутар Республикинчи Элкел районне кĕрекен Сиктĕрме ялĕнче çуралнă. Ашшĕ-амăшĕ чухăн хресченсем пулнă.

Аллă çул тăван литература лаççинче тар кăларса поэт сăвăсемпе поэмăсен, юмахсемпе статьясен кĕнекисене чăвашла та, вырăсла та чылай кăларнă. Вуникĕ çултах çырма пуçланă вăл. Чи малтанхи сăвви – «Ирĕк тимĕрçĕ» ятлăскер – 1924 çулта «Сунтал» (халĕ «Ялав») журналта пичетленнĕ. Пĕрремĕш кĕнеки вара 1928 çулта «Уяртсан» ятпа çапăнса тухнă. Пурĕ поэт çырнă хайлавсем 60 яхăн чĕлхепе пичетленсе тухнă. Вăл хăй те вырăс поэзийĕпе тĕнче классикин чи лайăх хайлавĕсене чăвашла нумай куçарнă.

Поэт пĕрмай сĕтел хушшинче ларса паха сăвăсем, поэмăсем çырма пултараймасть. Лайăх хайлавсем калăпламашкăн халăх пурнăçĕпе тĕплĕн паллашмалла, хăй куçĕпе курмалла, чĕри витĕр шăрантарса кăлармалла. П.Хусанкай çакна питĕ лайăх чухланă, çĕршыв тăрăх нумай çӳренĕ, халăх пурнăçне, нушине курма тăрăшнă. Вăтам Азие, Кавказа, Украинăна, Латвие çитсе курнă вăл. Ют çĕршывсенче те пулнă: Польша, Болгари, Румыни, Чехословаки, Куба. Паллах, ку çулçӳревсем ахаль иртмен, поэтăн пуçĕнче çĕнĕ темăсем çуралнă вĕсем хыççăн.

1942 çулта 35 çулхи Хусанкай фронта каять, Тăван çĕршывăн Аслă вăрçине хутшăнать. Малтан рядовой пулса хĕç-пăшалпа, каярах перопа та тăшмана ăшалама тытăнать. 1944 çулта Польша çĕрĕ çинчи хаяр çапăçусенчен пĕринче поэт хытă аманать, нумайччен госпитальте выртать. Тăван киле вăл кăкăрĕ çине Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕ тата темиçе медаль çакса 1945 çулхи çĕртме уйăхĕнче таврăнать. П.Хусанкайăн фашистла Германие хирĕç кĕрешнĕ çулсенчи поэзийĕ фронтри лирикăллă дневник пек вуланать. Вăрçă пуçлансанах вăл татăклăн çапла калать:

*Ăçта пулсан та эп —*
*Çĕршыв манпа пĕрле.*
*Пĕлетĕп, ĕненетĕп:*
*Эпир çĕнтермелле.*

Куратпăр, хăрушă самантра ун поэзийĕ уйрăмах хăватлă янăраса каять. Патриотла туйăм, героикăлла пафос тĕп вырăн йышăнаççĕ

халĕ ун поэзийĕнче. Çав вăхăтрах тарăхупа хаяр курайманлăх вĕресе тăраççĕ ун кăкăрĕнче. Унччен каламан витĕмлĕ сăмах илтĕнет. Халăха вилĕме хирĕç кĕрешĕве чĕнни, тĕрĕслĕх пурпĕрех çĕнтерессе шанни малти вырăна тухса тăрать.

П.Хусанкай вăрçă çулĕсенче çырнă хайлавсенчен чи палли – «Таня» поэма. Ăна вăл 1942 çулхи ака уйăхĕнче, фронта кайиччен, çырса пĕтернĕ. Кайран хăйех вырăсла куçарнă. Поэмăра вырăс хĕрĕ Зоя Космодемьянская фашистсене хирĕç паттăр кĕрешнине, тăван çĕршывшăн пурнăçне панине пысăк ăсталăхпа кăтартнă. Ку хайлав автор пултарулăхĕнче кăна мар, вăрçă çулĕсенчи пĕтĕм чăваш литературишĕн те пысăк çитĕнӳ пулса тăчĕ.

Хусанкай ку поэмăра партизансем хушшинче Таня ятпа çӳренĕ Зоя Космодемьянская комсомолкăн паттăр ĕçне нумай нациллĕ Совет халăхĕн массăллă паттăрлăхĕн уйрăлми пайĕ пек сăнласа кăтартать. Герой сăнарне калăпланă чухне поэт ку хĕр ăс-тăнĕпе кăна мар, чунĕпе те вăйлă, çирĕп пулнине палăртать. Таня монологĕнче ун ăс-хакăлĕ, шалти сисĕм-туртăмĕ, туйăмĕ, Тăван çĕршыва мĕншĕн юратни лайăх курăнать. Таня — тăван халăхшăн, çĕршывшăн çирĕп тăракан çыннăн ытарайми илемлĕ сăнарĕ. Таня совет çыннисене хăйĕн вилĕмсĕр ĕçĕпе фашистсене хирĕç пурнăçа шеллемесĕр кĕрешме хавхалантарать. Акă ун сăмахĕсем:

*Эсир мана халех çакатăр,*
*Анчах та эп пĕччен çĕ мар.*
*Пурне те пурĕпĕр çакаймăр.*
*Час килĕç маншăн тавăрма...*
*Эпир халь икçĕр миллионăн.*
*Эпир, эпир çĕнтермелле!*

Форма тĕлĕшĕнчен те паха ку поэма. Тăшмана хирĕç кĕрешекен нумай нациллĕ халăхăн шухăш-кăмăлне, пурнăçне, ун нумай енлĕхне туллин кăтартса парас ĕмĕтпе поэт кунта тĕрлĕрен ритм виçипе усă курать. Поэмăн 14-мĕш пайĕ çак сăмахсемпе пуçланать:

*Тулта шатăртатать декабрь...*

Мĕнле хăватлă каланă! Тӳрех асра юлать. Ман шутпа, пĕтĕм поэмине çакăн пек хăватлăн «шатăртаттарса» тухнă автор.

Вăрçă çулĕсенче Хусанкай пултарулăхĕ çирĕпленсе, пиçĕхсе пырать. Ун сăввисем формипе техники енчен çеç мар, содержанипе

те пуян. Тӳлек, анчах ҫивӗч. Илемлӗ сӑмах ҫаврӑнӑшӗсем, танлаштару, тӗрлӗ виҫе, лиризм вӑйлӑ палӑраҫҫӗ. Ҫаксем вулавҫа ҫывӑх. Халӑх йӑли-йӗрки, наци уйрӑмлӑхӗн паллисем те нумай. Манӑҫа кӑларнӑ чӑваш сӑмахӗсене те кӗртме тӑрӑшать вӑл калаҫӑва. Ҫеҫпӗл традицийӗсене аталантарма тӑрӑшни те куҫкӗретех.

Ытти сӑввисене илес пулсан унта халӑх шухӑш-кӑмӑлӗ, тӑшман аркатнӑ хуласемпе ялсемшӗн, асаплантарса вӗлернӗ ҫынсемшӗн чӗререн хурланни, тӑван ҫӗршыва чунтан юратни витӗр курӑнса тӑрать.

Вӑрҫӑ ҫулӗсенче ҫырнӑ сӑвӑсен ячӗсенчех вӗсен содержанийӗ, шалти кӗвви-ҫемми палӑрать. Ак хӑш-пӗри: «Салтак фляги пуш-пушах», «Шинель», «Харсӑр ӑмӑрткайӑк», «Хӑюллӑн малалла», «Памастпӑр ирӗк хупана!», «Фронтпа тыл пӗр пулсан — ҫӗнтереймӗ тӑшман», «Тӑван Мускавшӑн», «Тӑван ҫӗршывшӑн, ирӗклӗхшӗн, чысшӑн», «Епле чӑтать-ши ҫӗр сире?!», «Сӳтӗк Гитлер ухмаххин сӳтӗлен суя ҫӑмхи»... Ятне вуласанах темипе стильне, идейине куҫ умне кӑларса тӑратма пулать.

«Тупа» кӗнекене кӗнӗ (1942 ҫулта тухнӑ) хӑш-пӗр сӑввине пӑхса тухар-ха.

«Памастпӑр ирӗк хулана!» сӑвва 1941 ҫулта утӑ уйӑхӗнче Ленинградра ҫырнӑ. Пӗрремӗш куплетрах пафос палӑрать – патриотизм:

*Нева хаяррӑн хумханать...*
*Ан ур, тӑшман, ан антӑх:*
*Памастпӑр ирӗк хулана*
*Нихҫан та! Никама та!*

Сӑвӑ-лозунг ку!

«Фронтпа тыл пӗр пулсан — ҫӗнтереймӗ тӑшман» (1941 ҫулта ҫырнӑ) сӑвва икшер йӗркен ҫырнӑ. Кунта малтанхи тата кайранхи йӗркесене ҫеҫ илсе кӑтартатӑп:

*Вӑрҫӑра та ӗҫре*
*Сыхлӑпӑр ирӗк ҫӗре.*
*Хӑй тӗпрен кӑкланса*
*Пуҫне ҫийӗ часах.*

Пӗрле пулсан тӑшмана ҫӗнетпӗрех — акӑ тӗп шухӑшӗ кунта.

«Виҫӗ ывӑл» сӑвӑра ашшӗпе амӑшӗ пехиллесе, кучченеҫ парса виҫӗ ывӑлне вӑрҫа ӑсатаҫҫӗ, тӑшмана ҫӗнсе каялла таврӑнма сунаҫҫӗ.

«Ытараймисестра» сăвăри лирика геройĕ – салтаксене сыватакан, вĕсене çапăçу хирĕнчен сĕтĕрсе тухакан сестра. Вăл салтаксене хавхалантарать, çĕнтерӳ çывхарнине шанма пулăшать. Мĕнле ăшшăн калать ун пирки автор:

*Ачалăх вăхăтне*
*Маннисене, пире,*
*Анне ачашлăхне*
*Асилтерен тепре.*

*Ялав пекех сана*
*Йăтса çитерĕпĕр,*
*Юрăпала ятне*
*Савса чĕнтĕрлĕпĕр.*

«Тăван Мускавшăн» сăвăра автор тĕп хуламăра чĕрепе танлаштарать:

*Пурне те хамăр кил пек çывăх эс,*
*Мускав, Мускав — çĕршывăмăр чĕри.*

«Тăван çĕршывшăн, ирĕклĕхшĕн, чысшăн» сăвăра (1941 çулхи чӳк уйăхĕн 7-мĕшĕнче çырнă) автор тăшмана тискер ĕçсемшĕн тавăрма чĕнет. Акă мĕнле чуна тивмелле калать вăл:

*Чыса сыхласшăн! Пирĕн хĕрсене*
*Пусмăрçăсем тискеррĕн мăшкăллаççĕ,*
*Ачаллă, йывăрлă арăмсене*
*Кăкрисене касса чиксе çураççĕ...*
*Хисепсĕр юн, куççуль пире чĕнет:*
*Часрах ним хĕрхенмесĕр тавăрасчĕ!*

Кун хыççăн нимле çын та чăтса тăраймĕ, кĕрешĕве кĕрсе кайĕ. Ку йĕркесене вуланă хыççăн чăмăр хăй тĕллĕн чăмăртанма пуçлать. Акă вăл çивĕч сăмах вăйĕ!

«Аслă туслăх» сăвăра вара нуша, инкек çын кăмăлне тĕрĕсленине кăтартнă, унта нацисем çине уйăрни пачах çуккине палăртнă. Аманнă грузина вырăс йăтса тухать, чăваш каччине карел хĕрĕ хăйĕн юнне парать, казах самолетпа анса ларса белоруса çĕклесе хăпарать...

«Ширшов комсомолецăн паттăрлăхĕ» сăвăра виçĕ аманнă салтак шыв леш енне юлни, вĕсене хăтарма кимĕ çукки çинчен сăмах пырать. Çав вăхăтра Ширшов комсомолец кĕрхи шыва кĕме

хăрамасăр леш енне ишсе каçать. Пĕрерĕн - пĕрерĕн пурне те ку енне каçарать, вилĕмрен хăтарать. Хăйне пуля амантсан та фронтри тусĕсене пулăшу пама пăрахмасть.

Автор çапла пĕтĕмлетӳ тăвать:

*Хăтарать Ширшов виç паттăра та,*
*Анчах хăйшĕн кăна çавнашкал*
*Ишме тивнĕ пулсан – шантаратăп:*
*Çитереймĕччĕ вăл тек вăй-хал.*

«Тӳсĕм» — моряк чăтăмлăхĕ çинчен, тыткăна лекнĕскер тăшмана нимĕн те каласа памасть. Аптранипе палачсем ун куçне чакаласа кăлараççĕ, чиксе, касса пĕтереççĕ.

*Эпĕ ун ятне пĕлместĕп,*
*Анчах ак мĕн çинчен эп:*
*Çакăн пек чăтăм тĕртет те*
*Малалла вĕт тĕнчене.*

«Епле чăтать-ши çĕр сире?!» — нимĕçсем Киевра еврейсене (арçынсене, хĕрарăмсене, ачасене — 52 пин çынна) асаплантарса вĕлернĕ хыççăн çырнăскер.

*Юнпа тулса вĕрет чĕре,*
*Шăнăçаймасть капланнă çиллĕм...*
*Тĕнче ылханĕсем!*
*Çын çиенсем! Çын кĕлеткиллĕ*
*Шакал – гиенăсем!*
*Епле чăтать-ши çĕр сире?! –*

кăшкăрать автор.

«Ахмет Делиевăн маттурлăхĕ» — узбек ачи çинчен. Вăл юланутпа разведкăна кайса «чĕлхе» тытса килет.

*«Маттур, Делиев! – терĕç*
*Штабра та Ахмета, —*
*Джигитчĕ эс, ку тĕрĕс,*
*Хаљ эс — герой тата», —*

тесе вĕçлет П.Хусанкай çав хайлава.

«Арăсланпа кушак аçи» сăвăра вара Гитлера Наполеонпа танлаштарнă. Гитлер – кушак аçи...

*Чăн арăслан аран*
*Хăтăлсан*
*Мĕн юлĕ каппаян*
*Кушакран? —*

тесе тăрăхлать автор.

«Сÿтĕк Гитлер ухмаххин сÿтĕлен суя çăмхи» те çак темăна малалла тăсать.

*Пант! Пант! Пант! – пуш параппан*
*Панлататчĕ Берлинран, —*

пуçланать вăл. Çак сăмахсемпе вĕçленет:

*Халь пуçламăшĕ кăна,*
*Малалла-ха ăш-пăшши!*

«Аннене» сăвăра лирика туйăмĕ, поэтика вăйлă. Унта Тăван çĕршыва юратнине тĕпе хунă:

*Çав аннешĕн кĕрешмешкĕн*
*Пăшала, туппа*
*Чуптуса эпир пиншерĕн*
*Турăмăр тупа.*

Ку сăвва йывăр вăхăтра – 1942 çулта – Сталинград фронтĕнче çырнă. Калăн, поэт паянхи Волгоградри «Тăван çĕршыв – анне» палăка курса тăнă, ун сăнарне чĕрере усранă.

1943 çулта Брянск вăрманĕсемпе пынă вăхăтра «Мунча шăрши» шăрçалать вăл.

*Хурăнлăхран мунча шăрши —*
*Чăваш мунчи шăрши.*
*Ай-хайччĕ, çапăнасчĕ те*
*пĕрре!*
*Хăçан кĕрĕпĕр-ши? —*

тунсăхлать автор Чăваш Енсĕр.

«Пӳртне-и? Вучахне те хăварман» сăвăра хăрушă та хурлăхлă ӳкерчĕк. Килсĕр-çуртсăр юлнă çынсем калай листи çинче ыраш типĕтеççĕ, ăна ал арманĕпе авăртса çăнăх тăваççĕ. Пурăнмалла вĕт-ха малалла. Ку ĕç 1943 çулта Орел облаçĕнче пулса иртет.

1944 çулта вара Польшăра «Элкере — вăрçă хирĕнчен» çырать П.Хусанкай. Кунта та — тунсăх, тăван çĕре юратни, Атăла мухтани.

*Паян сан уявна эп, тусăм,*
*Чыслатăп вăрçă хирĕнче, –*

тет автор.

«Салампи» сăввине вара вăл пĕчĕк хĕрне халаллать. Ячĕ кăна мĕне тăрать. Тен, А.Артемьева та çав ятлă сăнар тума Хусанкай хавхалантарнă. Халĕ ку – хитрелĕх символĕ. Сăвви питĕ хитре янăрать, кашни йĕрки шăранса пырать, чуна çĕклентерет. Кунта П.Хусанкай хăйĕн хĕрне вăрçă мĕн иккенне каласа кăтартать. Кĕрешĕве сăнарсем урлă кăтартса парать. Сăмахран, çăлтăр хĕресе çĕнет. Ку пирĕннисем нимĕçсене парăнтарни пулать. Çавăнтах тахçан пурăннă Салампи ятлă хăюллă хĕрĕн синкерлĕ шăпи çинчен каласа парать. Кун пеккине ачасем каçса кайсах итлеççĕ. Апла пулсан автор ачапа мĕнле чĕлхепе калаçмаллине, ăна мĕн кăсăклантарнине лайăх чухлать. Сăвă ритмикине улăштарса пырать, мĕншĕн тесен ача шавах пĕр япала çинчен каласан час ывăнать-çке, интересĕ пĕтет.

Кунта эпир П.Хусанкайăн вăрçă вăхăтĕнчи хăш-пĕр сăввине çеç илтĕмĕр. Пурне те тишкерсе тухаяс çук. Пĕтĕмлетсе мĕн калама пулать-ха? Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи çулĕсенче Хусанкай пултарулăхĕ ӳссе, пиçĕхсе пырать. Хăрушă вăрçă обществăри тытăмсен вăйне тĕрĕслесе куç умне кăларнă. Çав вăхăтрах ку вăрçă этемлĕхĕн культурипе авалтан килекен этемлĕхне упраса хăварссишĕн пынă. Кĕрешĕве çакăн пек ăнланни Хусанкай сăввисенче чи малта тăрать. Автор вулаканăн чун хĕлĕхĕсене сĕртĕнет, вĕсене хускатма пултарать. Халăх хурлăхне, йывăр шухăшсене хăй чĕри витĕр кăларать. Çавăнпа ĕнентерӳллĕ те килĕшӳллĕ пулса тухать. Кунта чăваш халăх сăмахлăхĕпе вырăнлă, пĕлсе усă курнине те палăртмалла.

Пĕтĕмĕшле вара Хусанкай пултарулăхĕ пирки çапла калама пулать. Вăл чăваш литературинче чи паллă поэтсенчен пĕри, вăл чăн-чăн илемлĕ сăмах ăсти. «Чăваш халăх поэчĕ» ятне тивĕçлипех илнĕ вăл.

Хусанкай çинчен Митта Ваçлейĕ акă мĕн каланă: «Хусанкай умĕнче эпир çĕлĕк илесшĕн-и, мар-и – ун çине пăхсан пурпĕр çĕлĕк ӳкет. Акă мĕнлерех çӳллĕ вăл, Хусанкай».

## Ухсай сăввисем — вырăсла

Чăваш литературин тӳпинче виçĕ пысăк çăлтăр: Çеçпĕл, Иванов, Хусанкай – теме хăнăхнă эпир. Ман шутпа, кунта кăштах çитменлĕх пур пек: çак рете эпĕ Ухсая та тăратăттăм. Вăл маларах асăннă çăлтăрсенчен пĕр пусăм та, пĕр утăм та кая мар пек туйăнать.

Ухсай Яккăвĕн пултарулăхĕ пысăкки халăх пурнăçне анлăн кăтартса паракан «Халăхăн ылтăн кĕнеки», «Тутимĕр», «Кĕлпук мучи», «Ту урлă çул» тата ытти нумай хайлавра палăрчĕ. Поэт хăйĕн ĕçĕ-хĕлĕпе халăх пархатарне тивĕçлĕ пулчĕ.

Ухсай — чăн-чăн халăх поэчĕ. Вăл çапла пулсах çуралнă. Официаллă влаçрисем панă ят – Чăваш халăх поэчĕ - çакна çирĕплетет çеç. Поэт тăван халăх йăли-йĕркине, сăмахлăхне, кун-çулне лайăх пĕлнĕ, тавралăха сăнаса тăнă. Хăйĕн сăввисенче, поэмисенче вăл халăх, çĕр, ĕç, çăкăр çинчен çырать, халăх характерне кăтартать. Ахальтен мар ăна «хирсен поэчĕ» тенĕ. Ухсай хайлавĕсене вуласан çакна калама пулать: вăл япалана вырăнсăр илемлетмест, ытла хуйхăллă тумасть, çынсене шухăшлаттарма пĕлет.

Ухсай Яккăвĕн литературăри тепĕр сумĕ — çак пуянлăха вырăсла куçарса ытти халăхсем патне çитерме тăрăшни. Уншăн куçару пĕлтерĕшĕ пысăк пулнă. Маларах вăл К.Ивановăн «Нарспи» поэмине вырăсла куçарттарма нумай вăй хурать, ун пирки Мускавра тĕрлĕ çынсемпе тĕл пулса калаçать. Каярах вара хăйĕн хайлавĕсене те куçарма сĕнет, ытти халăх çыннисене чăваш пурнăçĕпе паллаштарасшăн тăрăшать.

Ухсай сăвви-поэмине вырăсла питĕ нумай куçарнă. Эпĕ ун вырăсла тухнă çак кĕнекисене пĕлетĕп:

«Перевал». Роман в стихах. Москва, 1952 г.
«Дед Кельбук». Поэма. Москва, 1956 г.
«Стихи». Москва. 1956 г.
«Стая белых лебедей». Москва, 1964 г.
«Новость». Стихи. Москва, 1963 г.
«Встреча с Чапаевым». Стихи и поэма. Москва, 1968 г.
«Дед Кельбук». Роман в стихах. Москва, 1968 г.
«Сельбийский родник». Москва, 1970 г.
«Звезда моего детства». Трилогия. Москва, 1970 г., 1974 г.
«Избранное». Москва, 1973 г.
«Коврига». Стихи и поэмы. Москва, 1975 г.
«Земля». Поэма. Москва, 1980 г.

«Стихи и поэмы». Москва, 1980 г.
«Сельские поэмы». Чебоксары, 1981 г.
«Избранные произведения в 2-х томах». Москва, 1983 г.
«Дед Кельбук». Поэма. Москва, 1984 г.

Куратпăр ĕнтĕ, «Кĕлпук мучи» поэмăна çеç вирçĕ хутчен пичетлесе кăларнă. Чăнах та, ку кĕнекесене халăх кăсăкланса вуланă.

Çапла вара, пирĕн халăхăмăрăн поэчĕ Раççейри чи лайăххисен ретне тăрать. Акă мĕн калаççĕ вырăс çыравçисем Ухсай Яккăвĕн пултарулăхĕ пирки:

*«Поэзири пысăк калăпăшлă произведенисенчен эпĕ чăваш поэчĕн Ухсай Яккăвĕн «Кĕлпук мучи» ятлă сăвăллă повеçне хамăр литературăри юлашки çулсенчи чи интереслĕ те пысăк пĕлтерĕшлĕ произведени тесе палăртма тивĕçлĕ».*

***Александр Фадеев.***

*«Ухсай Яккăвĕ – чăваш поэзийĕшĕн çеç мар, пĕтĕм çĕршыв поэзийĕшĕн тĕлĕнмелле пулăм».*

***Егор Исаев.***

*«Ухсай Яккăвĕн «Кĕлпук мучи» поэми унăн авторĕ калама çук пысăк та çутă, халăхран вăй илсе тăракан талант пулнине уççăн кăтартать».*

***Александр Макаров.***

*«Мана Ухсай поэзийĕ питĕ çывăх, уйрăмах унăн чапа тухнă «Кĕлпук мучи» поэми килĕшет, ун урлă эпĕ чăваш халăхĕн чунне, пурнăçне, йăли-йĕркине ăнланса илтĕм».*

***Алексей Марков.***

*«Чăваш поэчĕн Ухсай Яккăвĕн пултарулăхĕ чаплă метафорăсемпе пуян. Мана унăн «Ту урлă çул» ятлă сăвăлла романне вулаттарчĕç те - тĕлĕнсех кайрăм. Хĕвел, тет вăл, анса ларас чухне çĕре халь-халь перĕнес пек тăрать, сиксен ăна мулкач та çитме пултарĕ! Ĕнене вăл сарлака кимĕпе танлаштарать, унăн ямшăкĕ хăй лашине юхса выртакан шывăн курать, çĕрулми уншăн така çамкипе пĕр,*

*путек майраки - çурта евĕрлĕ, така майраки – урапа майлă... Япшар каччă пушмакĕ уншăн сап-сарă кăвакал чĕппи пек туйăнать».*

***Юрий Олеша.***

«Ку метафорăсем манăн мар, эпĕ вĕсене халăх сăмахлăхĕнче тупрăм: ваттисен сăмахсенче, тупмалли юмахсенче, каларăшсенче», — тенĕ Ухсай çакна хирĕç. Ку каллех ĕнтĕ чăваш литературине ытти халăх сыннисем патне çитерес, хамăр халăх пурнăçĕпе паллаштарас тĕллев тĕпĕ-йĕрĕпех пурнăçланнине пĕлтерет. Çакă кирлĕччĕ те автора!

Çыравçăсем çакна палăртаççĕ: Ухсая куçарма йывăр. Мĕнрен килет-ши ку? Поэт сăмахĕсен пĕлтерĕшне шыранă чух хăйĕнчен питĕ çирĕп ыйтнă, хĕрхенмен. Çавăнпа та, йĕс пыр апата тиркесе çинĕ пек, сăмахсене суйла-суйла çырнă. Çакă автор чăваш чĕлхине сума сунинчен, ун пуласлăхĕ çинчен нумай шухăшланинчен килет. Çапах та Ухсая пĕр чарăнми куçараççĕ. Сăлтавĕ паллă: «хирсен поэчĕн» хайлавĕсенче тĕшши пур, вулама интереслĕ. Пĕр сăмахпа каласан, чăннипех паха вĕсем. Çак пуянлăха хамăрта çеç усрани çухату пулнă пулĕччĕ. Ахальтен мар çапла калаççĕ халăхра: «Хăвăнти никамăн та мар, çынна пани — санăн».

Поэтăн хĕрĕ, Елена Ухсай, ашшĕ пирки çапла çырать «Ялав» журналта (1991 ç., чӳк, № 11):

«Вăл халăхри чи çӳллĕ шайри аслă пĕрлешĕве, нацин тĕшшине курса тăнă ахăр. Çав вăхăтрах чăваш шăпи вырăс халăхĕпе уйрăлми тачă çыхăннине лайăх пĕлнĕ. А.Твардовский, Я.Смеляков, Н.Рыленков, Е.Исаев, Н.Старшинов вырăс поэчĕсемпе туслă пулнă, вĕсем унăн сăввисене хăйсен чĕлхине куçарнă».

Ухсая куçарма йывăр терĕмĕр. Çакна пулах ĕнтĕ чылай япали ун тĕкĕнмесĕрех выртать. Авторшăн «куçарассишĕн çеç куçарни» тĕллев пулман. Çитменнине, куçарнă чух хăш-пĕр поэт хайлавăн тĕшшине çухатни те пулнă. Сăмахран, «Радуга над Сельбийским лугом» поэмăра çитменлĕхсем пур: куçаруçăсем пулăмсене каласа кайни, сӳрĕккĕн, хавхаланусăр çырса кăтартни. Çакă сюжета аталанма чăрмантарать. Çавăнпа та Ухсай хăй сăввисене проза чĕлхине куçарма юратман, итлекенĕн чун-чĕри туйăмлă-сисĕмлĕ пулсан поэзи асамлăхĕ ахалех çитессе шаннă, сисĕм-туйăм пулмасан куçару та пулăшас çуккине ĕненнĕ.

Акă пушкăртсен аслă поэчĕ Мустай Карим аса илет:

«Тутар писатĕлĕсен съездĕнче тухса калаçнă чух вăл (Ухсай. – Н.Л.) вăтам поэтсем хăйсене тăлмачсем япăх куçараççĕ, çавăнпа

кĕнекисем вырăсла лайăх тухаймаççĕ тесе кӳреннине палăртрĕ. Унтан кĕсйинчен пысăках мар кĕнеке кăларса зала кăтартрĕ:

— Акă манăн вырăсла тухнă çĕнĕ кĕнеке. Вăл шăпах оригинал шайĕнче. Эппин, лайăх куçару валли лайăх оригинал кирлĕ.

Урăхла калаймăн».

Ухсай хăй сăмах ăсти пулнă та – ыттисенчен те çавнах ыйтнă.

Кунта Ухсай Яккăвĕн кун кĕнекинчен илнĕ йĕркесем те ытлашши пулмĕç. Ырра ырă, усала усал теекен кунта та хăйĕн шухăшне уççăн, пытармасăр çырнă. Акă хăш-пĕр йĕрке:

*«Март, пуш уйăхĕ.*

*1. Ку уйăха чĕкре уйăхĕ теççĕ. Путексем чĕкрене ерсе вилеççĕ тенĕ. Литературăра чĕкрене ернĕ путексем пеккисем нумай. Кутне мар, пуçне варвитти ернĕ пек, чарак пулман пирки сонетсем, романсем, вăрăм сăвăсем çыраççĕ».*

*«Сентябрь, 82 ç.*

*3. ... Чăвашсем вырăса тухасшăн, çыравçăсем чăвашла лапăр-лапăр çыраççĕ, çак лапăр-лапăра вырăсла куçарттарса Мускавра чапа тухасшăн. Халăх каларăшле, ялта кукша пулнă чăваш Мускавра та кукшах».*

*«16.10. ... Чăвашсем хăйсен чĕлхинчен йĕрĕнеççĕ».*

Хамăр халăх пуласлăхĕ пирки пăшăрханни кунта питĕ лайăх палăрать.

Ухсай сăввисене А.Твардовский та куçарма хăтланнă иккен. Акă мĕн çырать вăл хăйĕн чăваш поэчĕ патне янă çырăвĕнче: «Сан сăввусене куçарма пуçларăм та, шăпах ман евĕр пулса тухать. Пĕр юлташăма патăм, эсĕ ăна пĕлместĕн. Вăл кăмăлтан куçарать». Ку япаларан тĕлĕнмеллиех çук: Ухсай Твардовскирен аваннине сахал мар илнĕ, вĕсем юлташлă пулнă. Сăмахран, Ухсайăн «Ту урлă çул» романĕ Твардовскин «Страна Муравия» поэмине çывăх. Анчах та — темипе тата кăштах сюжечĕпе. Композицине вара чăваш поэчĕ урăхла йĕркеленĕ. пурнăçăн çĕнĕ сийĕсене, халăх характерне ĕненмелле кăтартнă. Ку романа чăваш ялĕн энциклопедийĕ теме пулать. Ăна вырăсла кăштах кĕскетсе куçарнă. Ун пирки А.Власенко критик çапла калать: «Шел пулин те, талантлă романа 1952 çулта куçарнă вăхăтра тăсса кайнă, композицине çемçетнĕ, кăпăшкалатнă. Вырăнĕ-вырăнĕпе колхоз пурнăçне ытла та кăтартуллă туса хунă. Автор вара урăхларах çырса кăтартнă, чи малта — пурнăçпа хавхаланни, çĕршыва юратни».

Ухсай Яккăвĕн кун-çулĕ Чĕмпĕр хулипе те çыхăннă. Вăл кунта 1938-1939 çулсенче И.Я.Яковлев ячĕллĕ педтехникумра

преподаватель пулнӑ. Ҫак вӑхӑтрах поэт хула тӑрӑх ҫӳресе ҫынсемпе нумай калаҫнӑ: «Чӗмпӗр» поэма валли материалсем пуҫтарнӑ. Шел пулин те, ҫак поэмӑна вӑл вӗҫлеймен. Ухсайпа пӗрле ӗҫлесе пурӑннӑ Андрей Иванович Ирбахтин аса илет: «Вӑхӑчӗ-вӑхӑчӗпе пусма ларнӑ чӑх пекех ӗҫлетчӗ вара». Пӗтӗмлетӳ тума пулать: Ухсай хӑйӗн хайлавӗсен пӗр пайне Чӗмпӗрте ҫырнӑ. Каярах та пулнӑ вӑл пирӗн тӑрӑхра.

1983 ҫулта Чӑнлӑ районӗнчи Чӑвашкассинче «Чӑваш чӗлхи кунӗ» уявӗнче пулнӑ. Аслӑ Нагаткин ялӗнче пурӑнакан А.Юман поэт Ухсайпа ҫыхӑну тытнӑ, вӗсем пӗр-пӗрин патне ҫыру ҫырнӑ. А.Юмана паллӑ поэт хӑйӗн темиҫе кӗнекине алӑ пусса панӑ. Юман ун кун-ҫулне, пултарулӑхне лайӑх пӗлет, ӑна «чӑваш поэзийӗн улӑпӗ» тет. Ку эпитет Ухсая тӗрӗссипе хаклать, унӑн чӑн пӗлтерӗшне палӑртать.

Ухсай Яккӑвӗн лирикӑлла сӑввисене, сӑвӑлла юмахӗсене, эпикӑлла поэмисене чӑваш халӑхӗ ҫеҫ мар, пирӗн ҫӗршыври ытти халӑхсем те аван пӗлеҫҫӗ, поэмисене урӑх ҫӗршывсенче те киленсе вулаҫҫӗ. Ҫапла пулма шӑпах вырӑсла куҫарни май пачӗ. Урӑхларах та калама пулать: вырӑсла куҫарман пулсан Ухсай чӑвашсен поэчӗ ҫеҫ пулса юлатчӗ, халӗ вӑл пӗтӗм Раҫҫей поэчӗ. Ҫӗршывri чи лайӑх поэтсен хушшине тӑрса тӑван халӑх ятне-чысне те ҫӗклерӗ, ун кӑмӑл-туйӑмне, ӗмӗт-шухӑшне те ытти халӑхсем патне ҫитерчӗ. Маларах ҫырнӑччӗ вӗт А.Марков сӑмахӗсене: «... Ун урлӑ эпӗ чӑваш халӑхӗн чунне, пурнӑҫне, йӑли-йӗркине ӑнланса илтӗм». Апла пулсан Ухсая литература элчи теме те пулать.

Ухсай Яккӑвӗн пултарулӑхӗ – чӑвашсен кӑна мар , пӗтӗм Раҫҫей халӑхӗсен культурин пуянлӑхӗ, ун ҫутӑ страницисенчен пӗри.

# Раиса Сарпи поэзийӗнчи сӑнарлӑх

Раиса Сарпи пултарулӑхӗ — чӑваш литературинче кӑна мар, вырӑс тата тӗнче поэзийӗнче те паллӑ пулӑм. Поэзие туйма пӗлнипе, ҫак туйӑма вулакан патне ҫитерес тӗлӗшпе, тематика анлӑшӗпе, шухӑш уҫӑмлӑхӗпе, стилистика илемлӗхӗпе Сарпие тӗнчери чи чаплӑ хӗрарӑм поэтсен ретне тӑратма пулать. Ячӗсем вара кунта пӗринчен-пӗри чаплӑ: Сафо (Греци), Бригита Кристиана Хюнтфелл (Норвеги), Эльжбета Дружбацкая (Польша), Анна Мария Ленгрен (Швеци), Соломея Нерис (Литва), Сильва Капутикян (Армени), Фазу Алиева (Дагестан), Евдокия Растопчина, Зинаида Гиппиус, Анна Ахматова, Марина Цветаева, Белла Ахмадулина, Леся Украинка... Вӗсем мӗнле расна пулсан та пӗр ӑнлав тума пулӑшаҫҫӗ – «хӗрарӑм поэзийӗ». Вӑл тӗнче культурине пуянлатакан пысӑк пай. Ҫакӑнта чӑваш пикин – Сарпин – сасси те ҫухалса каймасть.

Вулакана ун сӑввисем тӳрех чӗререн ярса илеҫҫӗ, тӳрех урӑх тӗнчене илсе каяҫҫӗ. Пӗлӗт ҫинчи пурнӑҫ пирки ҫырмасть вӑл — ҫӗр ҫинче утса ҫӳрекенсем пиркиех ҫырать. Вӗсен ӑшӗнче пытаннӑ шухӑш-туйӑма, ӗмӗтсене кӑтартать. Чӑннипех те — кӑтартать. Каласа панипе ҫеҫ ҫырлахмасть. Вулакан умӗнче действи пулса иртет, вӑл сӑвӑри геройпа пӗрле савӑнать, кулянать, шухӑшлать. Мӗнлерех сӑнарсем тума пӗлет-ха Сарпи! Акӑ мӗнле анлӑн шухӑшлать вӑл:

*Манӑн пин алӑ пулсассӑн*
*Пинӗшпе те*
*Ыталанӑ пулӑттӑм*
*Сана.*
*Манӑн пин чӗре пулнӑ пулсассӑн*
*Пинӗшне те*
*Парнеленӗ пулӑттӑм сана.*

Кашни сӑвви пӗр-пӗринчен уйрӑлса тӑрать Сарпин. Халь кӑна вӑл тӑван килшӗн тунсӑхлатчӗ:

*Савнӑ килшӗн пурпӗр тунсӑхлатӑн –*
*Пурнӑҫу пырсассӑн та ӑнса.*
*Тӗлӗкре килех эс таврӑнатӑн,*
*Уйӑх пек, хӗвел пек ҫаврӑнса.*

Пӑхатпӑр та — кӗрешӗве ыткӑнать:

*Эй, пурнӑҫ!*
*Лартах танатуна:*
*Кӗрешӗве чӗнетӗп эп сана!*

Каллех анлă шухăшлав: пурнăçпа кĕрешĕве тухни. Асра юлакан сăнар.

Çакăнтах чĕрене ирĕлтерекен, йăвашлатакан йĕркесем:

*Ыр сăмах калама ан ÿркенĕр –*
*Пулмасан та хăш чух ун усси –*
*Пулас çуккă сиен. Ан хĕрхенĕр!*
*Ыр сăмах чылай чух – чун уççи.*

Ку йĕркесем вара ирĕксĕрех пуçа каçăрттараççĕ, хулпуççине сартараççĕ, кăкăра уçă сывлăшпа тултараççĕ:

*Поэтсем вилсессĕн те — вилмеççĕ.*
*Ма тесессĕн хĕвелпе пĕрлех*
*Сывă пулĕ ĕмĕрех поэзи,*
*Чĕрĕ сывлăш кÿрĕ ĕмĕрех.*

Çав вăхăтрах поэт халăхран уйрăлма шутламасть, унпа пĕрле пуласшăн, хăйĕн шăпине ыттисемпе пĕрле пайласшăн:

*Халăхăмран çÿлте*
*Пьедестал çинчи пек*
*Тăрассăм килмест.*
*Халăхăмпа пĕрле*
*Çĕкленессĕм килет*
*Тасалăх тÿпине,*
*Хĕвеллĕх тĕнчине.*

Кунта вара идилли:

*Ярăм-ярăм сапрĕ*
*Çут хĕвел хĕмне.*
*Пирĕн кÿлĕ çакрĕ*
*Кĕмĕл теветне.*

*Лăпкă çил хускатрĕ*
*Вĕтĕ хумсене.*
*Тевет çинчен татрĕ*
*Çутă тенкине.*

Паллах, кашни сăввине пăхса-тишкерсе тухма çук ĕнтĕ. Çакна калама пулать: кашни сăвăра Сарпин хăйĕн сăнарĕ курăнать. Автор сăвă шухăшĕсен аваргне пуçĕпех путнă, пире çĕнĕ сăнарсемпе пуянлатать. Сăвăç чĕри пурнăçри çитменлĕхсемпе килĕшмест, ăна кашни çыннăн инкек-синкекĕ пăшăрхантарать. Вăл хăйĕн ятарлă

миссине пěр самант та манмасть. Вăл хěрарăм, çěр çине АННЕ пулма килнě. Апла пулсан ун яланах кама-тăр пулăшмалла, хăйěн ăшă ытамне илсе ачашламалла.

Поэт ним умěнче те чěнмесěр иртсе каймасть, ун кашни япала, пулăм пирки хăйěн шухăшě пур. Чăнах та, вăл кашнинчех пурнăçпа тӳр килмест. Пурнăçри çитменлěхсене пěтерес тесе поэт хăйěнчен ытла та хытă ыйтать, çав вăхăтрах ыттисене те çавăн пек пулма хистет. Ку, паллах, ху çине нуша-терт тиени пулать ěнтě. Анчах поэт унран хăрамасть. Ун пирки Çеçпěл Мишши те асăннă вěт: «Нуша - ман пурнăçăн саккунě». Çак хăмăта Сарпи те тăхăнать.

Сарпи поэзийě куçа уçать, малашлăха илсе каять. Уйрăмах ун «Верую» кěнеки кăмăла кайрě мана. Мěн кăна çук кунта: туйăмсен вылявě, иксěлми шанчăк, иртнě пурнăç кěрлевě, малашлăхăн янăравлă сасси. Тěрлě халăхсен мифологийěсем пěр шăранчăка юхса кěреççě. Чăваш тата ытти чěлхесенчи сăмах çаврăнăшěсемпе те вырăнлă усă курать автор. Çав вăхăтрах вăл паллă писательсен, поэтсен – А.Пушкин, М.Лермонтов, С.Есенин, А.Ахматова тата ыттисем – чылай йěркисене е сăнарěсене те илме хăрамасть. Сарпи поэзийěн арман чулě çаврăнать та çаврăнать, пурне те шěкěлчесе вěтетет. Çапла майпа классикăна çěнě сывлăш вěрсе кěртет, паянхи пурнăçпа танлаштарса кăтартать. Вара ыйтăвě те çивěч курăнать.

Мěнле нумай енлě шухăшлама пултарать-ха Сарпи! Вăл вăрçăра пулман, анчах «Тивěç» сăввинче ун çинчен çырать:

*Эс вăрçăра пулман,*
*Ал-урасăр юлман,*
*Курман ун çулăмне,*
*Çунман ун вутěнче.*
*Сан тивěç çук çырма,*
*Вăрçă-харçă çинчен... —*
*Тейěç хăш-пěрисем.*
*Тивěç пур ман çырма,*
*Тивěç çук – чěнмесěр тăма.*
*Эп пулман вăрçăра...*
*Эппин , мěншěн чунра*
*Канăç çук?*
*Çăп-çăра*
*Хура тěтěм памасть*
*Сывлама –*
*Тěлěксем чыхăнаççě унпа,*
*Çăвăнаççě чěп-чěрě юнпа.*

Куратпăр ĕнтĕ, ку сăвва тикĕс ритмпа çырман, шăнкăр-шăнкăр юхса пымасть вăл. Сăвă йĕркисем тĕлĕ-тĕлĕпе хуçăлаççĕ. Кăмăл-туйăмĕ вĕри кунта поэтăн, çавăнпа хуçăлать ритм. Ку мелпе Р.Сарпи час-часах усă курать. Сăввине вара пурпĕрех пĕр такăнмасăр, сывлăш çавăрмасăр вуласа тухатăн. Пысăк шухăш, тулли кăмăл — çаксем Сарпи пултарулăхĕнче тачă çыхăнса тăраççĕ.

Сарпие тĕрлĕ паллă поэтсемпе танлаштарма пулать. Сăмахран, пăлхар поэчĕ Красин Химирски çапла каланă: «Раиса Сарпи – Цветаевапа Ахматована пĕрлештернĕ чăваш поэчĕ». Чăнах та, ун сăввисенче Ахматован лирикипе Цветаеван философиллĕ шухăшĕсем пĕр-пĕрне сĕртĕнеççĕ. Анчах Сарпи – Сарпиех ĕнтĕ вăл. Чăн-чăн чăваш поэчĕ, тĕнче поэзине пуянлатакан сăвăç.

Чăн-чăн поэзие — ăста купаланă капанпа танлаштарма пулать. Унтан пĕр кĕлтине тапăлтарса кăларсан илемĕ те , çирĕплĕхĕ те пĕтет. Сарпи пултарулăхĕ те çавах. Рифмăшăн çеç çырнă пушă япаласем мар вĕсем, ун сăввисем.

Поэт çитĕннисем валли те, ачасем валли те çырать. Куна «Маршак традицине» тăснипе танлаштарма пулать. Ачасем валли çырнă сăвăсем янăравлă та нумай тĕслĕ. Автор сассин сĕмĕ мĕнле улшăнать тата! Ачапа ăшшăн калаçать, лешĕ ăна шанать.

Ак, сăмахран, «Анна» сăвă:

*— Мĕн пулнă, анне, сана,*
*Кунсерен пĕчĕкленен? —*
*Ыйтрĕ хĕрпĕрчи Анна*
*Амăшĕпе виçĕнсен.*

*— Çук, пĕчĕкленместĕп-иç, —*
*Терĕ амăшĕ Натиç, —*
*Эсĕ, хĕрĕм, кунсерен*
*Хăвăртрах иккен ӳсен.*

Мĕнле ăшă та ĕнентерӳллĕ ӳкерчĕк. Нимĕн хушма та кирлĕ мар, кăларма та çук. Ачасем валли çапла ăнлантаруллă çырмалла та. Сарпи сăввисем ырă туйăм сараççĕ. Кунта сад пахчи ешерни, чечеке ларни те пур. Тулли пучах сăнарне те калăпланă.

Халăхра çапла калаççĕ: «Ача чухне поэзи пулмасан — кайран пулмасть». Мĕншĕн тесен поэзие никам та урăх çынна вĕрентеймест. Вăл кашни çыннах лекмест, пуррин вара амăш сĕчĕпех пулать.

Сарпи 12-13 çултах çырма тытăннă. Малалла хăйĕн ăсталăхне туптаса пырса тĕнче шайĕллĕ поэт пулса тăчĕ. Ун сăввисем вулакана савăнтараççĕ, чуна ăшă туйăмсем кĕртеççĕ.

## Туркай сăввисенчи илемлĕх мелĕсем

Туркай — çĕнĕ ăрури пултаруллă поэтсенчен пĕри. Ун сасси хăюллă, стилĕ хăйне евĕрлĕ. Хăйĕн çул-йĕрне, сассине тупнăскер вăл поэзире, литературăра. Ун сăввисене никамăннипе те арпаштармастăн. Чĕлхи витĕмлĕ, çивĕч. Сăмахсене ытла суйласа тăмасть вăл, пуçрине хут çине çырса хурать.

Акă мĕн çырать поэт стилĕ çинчен В.Абрамов критик: «Турă кайăкĕ пулма çăмăлах мар пулас. Çамрăк поэтăн тапса тăракан туйăмĕпе Маяковскилле ал-ура хусканăвĕн хĕрӳлĕхĕ пĕрисене илĕртет (уйрăмах сисĕнчĕклĕ чăваш пикисене), теприсене тарăхтарать... Урăхла каласан, лăпкă идиллин картине лармасть Туркай поэзийĕ, ансат сăмахсемлĕ пулин те». Çавăнпа вăл Туркай çинчен çапла пĕтĕмлетӳ тăвать: «Хăй сисмесĕрех Туркай сюрреалистла сулăнчăка туртăнать (хальлĕхе туйăм шайĕнче). Хушăран Сальвадор Дали сюрреалист-художникран та вăйлăрах (паллах, хальлĕхе форма шайĕнче мар-ха)». Çапларах калама сăлтавĕ çук мар-тăр, мĕншĕн тесен Туркай лăпкă пурнăçпа килĕшсе тăмасть, ялан кĕрешет, ялан хирĕç тăма хатĕр. Поэт кăмăла кайман пурнăçа улăштарассишĕн тăрмăшать, ирĕклĕхе ăнтăлать. Ахальтен мар ĕнтĕ вăл çапла çырать: «Кăмăлăм-тĕллевĕм: утăм хыççăн утăм ирĕклĕх енне». Манăн Туркая ирĕклĕх кайăкĕ тесе калас килет. Ирĕклĕх теми пысăк вырăн йышăнать ун творчествинче. Нумай сăвви ун йыхравлă, чĕнӳллĕ, кĕрешӳре çĕнтерме майсем кăтартса параççĕ. Ун пек çул кăтартма мал ĕмĕтлĕ, уçă шухăшлă пулмалла, чун хевтиллĕ çуралмалла. Çав вăхăтрах ырă пуласлăхшăн кĕрешнĕ чухне паян асап тӳсме, хĕсĕрленине сирсе яма чăтăм пухмалла.

Ирĕклĕх теми Туркай пултарулăхĕнче чи тĕпре терĕмĕр. Çавна пулах вăл хăнăхнă сăвă форминчен тухать, йышăннă калăпа пăсать. Çакăнпа вăл, ман шутпа, читлĕхе çĕмĕрнине, ватнине кăтартса парасшăн.

Акă илер-ха поэтăн «Чăваш тупи» сăввине. Чи малтанах хамран çакна каласа хăварам. Тĕрĕссипе, эпĕ кунта тупа тунине курмастăп. Автор мĕн те пулин шантарса калани çук. Кунта чи малтан пĕрлĕх, тăванлăх, чăвашлăх теми куçа тăрăнать. Тен, патриотла марш теме пулать ăна е сăвă-марш, сăвă-чĕнӳ. Мĕнле каласан та — сăвви вара вăйлă! Ман шутпа, кунта Çеçпĕл витĕмĕ пур. Вуланă чух ура çине тăрса шаплаттарса утса каяс килет. Тăван халăх пуласлăхĕшĕн пăшăрханнине, çуннине витерсе каланă. Кашни чăваш чĕрине вăл акă мĕн çитересшĕн: чи малтан пирĕн чăваш пулмалла, хамăр ăçтан тухнине, несĕлĕмĕрсене манмалла мар. Кайран вара эсĕ - академик, генерал, пысăк пуçлăх пул. Тăван тăвалла туртать тесшĕн автор. Ку сăвă – сапаланма пуçланă халăхăмăра пуçтаракан ЧАН, халăха пĕр çыхха çыхăнма хистекен чĕнӳ, ăнтăлу сасси. «Пĕрлĕхре вăй!» — тет автор сăвă тăршшĕпе темиçе хут.

*Чăвашшăн чăваш – чи хаклă юлташ,*
*Чăвашшăн чăваш – тăван-хурăнташ, –*

тени мăлатук сасси евĕрлех илтĕнет, ăс-тăна тӳрех кĕрсе юлать.

Çак сăвва вуланă чух ху сисмесĕрех янах каçăрлать, хулпуççи сарăлать. Ӳпке усă сывлăшпа тулнăн туйăнать. Çак самантрах тăван халăх валли мĕн те пулин ыррине тăвас килет.

Поэт кашни чăвашпа уйрăммăн калаçать, ун чĕри патне çитет. Ман шутпа, ку сăвăра Çеçпĕл Мишшин çак шухăшĕ пытарăннă пек туйăнать:

*Тăван чăваш хăюллине,*
*Вăл вăйлине курасчĕ ман.*
*Чăваш!..*
*Çĕклен те çунатлан!*
*Куçна тĕлле хĕвел çине.*

Туркай çак сăвăра пĕрлĕхе чĕнет, мĕнле вăйлă пулмаллине кăтартать. Вăйлă пулма ăнлану кирлĕ. Хальлĕхе ку ĕç йывăр пыратьха. Çакă пăшăрхантарать те ĕнтĕ поэт чунне.

Сăвă форми пирки те кăштах чарăнса илес килет. Хăш-пĕр çĕрте виçине пăхăнсах кайман пулин те – ямб палăрать. Йĕрке вĕçĕсем аça рифмăпа пĕтеççĕ – ударени юлашки сыпăк çинче. Хăйĕн шухăшне витĕмлĕрех тăвас тесе анафора мелĕпе анлăн усă курнă. Ку йĕркесене илсе кăтартма пулать:

а) *Эс пул академик,*
*Эс пул генерал,*
*Эс пул çĕр ĕçченĕ;*

ă) *Чăвашшăн чăваш – чи хаклă юлташ!*
*Чăвашшăн чăваш – тăван-хурăнташ!*

б) *Çакна ăнлансассăн,*
*Çакна ĕненсен;*

в) *Пиртен чĕрĕ халăх,*
*Пиртен вăйлă халăх,*
*Пиртен аслă халăх.*

Аллитераци тĕслĕхĕсем те пур. Пĕрне çеç илсе кăтартатăп:

*Нихçан Сӳнми Çутă*
*Çутаттăр Çулна.*

Кунта «ç» хупă сасă вылявĕ палăрать. Пĕр йышши уçă сасăсем янăрани те пур:

*Эс пул академик,*
*Эс пул генерал,*
*Эс пул çĕр ĕçченĕ.*

Тӳрех «Э», «Е», «Ĕ» уçă сасăсен вылявне асăрхатăн. Ку – ассонанс. Ман шутпа, сăвăра вăйлату (градаци) мелĕпе те усă курнă:

*Пиртен чĕрĕ халăх,*
*Пиртен вăйлă халăх,*
*Пиртен аслă халăх*
*Пулмасть Çĕр çинче.*

Инверси тĕслĕхĕ:

*Эс пул пысăк пуçлăх,*
*Пулсам эс кĕтӳç...*

Вăрăм йĕркесен варринчи тире тата кĕске йĕркесемпе калăплани интонаци енчен паха, сăвва витĕмлĕх кӳрет, автор кăмăл-туйăмне палăртма вăйлă пулăшать. Лирика геройĕ – автор, ун калавĕ чи тĕпре. Риторикăлла кăшкăру тата риторикăлла чĕнӳ куçа тӳрех курăнаççĕ.

Паянхи марш тенĕ Туркай хăйĕн «Утăм хыççăн утăм» сăввине. Стилĕ те, содержанийĕ те – чăн-чăн Туркайла. Автор каллех пире «ирĕклĕх енне» чĕнет. Кунти ирĕклĕх – халăх хăйĕн тăван чĕлхине вĕренме, унпа ирĕккĕн калаçма пултарни. Чăваш чĕлхи пуçĕпех пĕтесрен шикленет поэт, пире асăрхаттарать, чĕлхемĕре пĕтерсе хурас мар тесе тăрăшма йыхăрать.

Акă сăввăн тĕп шухăшĕ, шăнăрĕ:

*Санăн ывăл-хĕрӳ*
*Чăвашла пĕлет-и?*
*Ашшĕ-амăш чĕлхинчен*
*Татăлса ӳсмест-и?*

Автор «çăлăнăç патне» ăнтăлать. Çăлăнăç мĕн иккенĕ паллă: чĕлхемĕре сыхласа, халăхăмăра упраса хăварасси. Çак тĕллеве пурнăçа кĕртме поэт хĕрарăма, пуçлăхсене, яш-кĕрĕме чĕнсе калать:

ачасене чăвашла вĕрентĕр, халăха ан сутăр, ирĕкшĕн кĕрешĕр... Автор тĕрĕсех калать, мĕншĕн тесен çаксенчен пуласлăх мĕнле килесси курăнать. Хĕрарăм хăйĕн пепкине кăкăр сĕчĕпе пĕрле тăван чĕлхе сĕткенлĕхне парсан, хăй чĕлхине юратма вĕрентсен, пуçлăхсем халăх пурнăçĕ, ун пуласлăхĕ çинчен хăйсем ларакан пуканран ытларах шутласан, яш-кĕрĕм хăюллăрах пулсан, амăш чĕлхинчен вăтанмасан — чăваш чĕлхин малашлăхĕ çутă пулĕ. Шăпах çак тĕллев патне йыхăрать поэт. Çавăнпа ку хайлава риторикăлла чĕнӳ теме пулать. Е – сăвă-чĕнӳ. Пуçламăшĕнчи икĕ куплета кашни 12 йĕркеллĕ çаврăм хыççăн калани сăвва вăйлатать. Танлаштару пур:

*Пуçлăхран кăларсанах*
*Хăмпă пек шăтатăр.*

Темиçе хут калакан куплетра анафора тата ассонанс мелĕсем палăраççĕ. Çакăнтах эпифора та пур – йĕркесен вĕçĕсем пĕр пек вĕçленеççĕ.

*Эй, чăваш пуçлăхĕсем,*
*Халăха ан сутăр! –*

тет автор. Ку метафора.

Мăнлату (гипербола) вара çак йĕркесенче палăрать:

*Тимлесем: Чăваш Тĕнчи*
*Çывхарса килет!*

Кунта рифмăсем тĕрлĕрен - аçи те, ами те пур.

Аллитераци тĕслĕхĕ:

*Пуласси пăхать паян*
*Пулăшу ыйтса.*

Тире нумай лартни, кĕске йăркесемпе çырни интонаципе вулама май парать. Кунта цезурăпа усă курнă.

«Ниме» сăвăра, ман шутпа, ытарлă шухăш пытаннă. Мĕнле ЧĂВАШЛА каланă-ха поэт:

*Ялта — ниме.*
*Хĕрӳ ĕç шавĕ.*
*Йăтаççĕ кирпĕч. Тăм çăраççĕ.*

*Пĕр хушă шăп ĕçленĕ хыççăн*
*Ахăлтатса кулса яраççĕ.*

Ниме – чăн чăваш йăли, ялта вăл паян та тарăн тымар янă. Пирĕн халăх ĕмĕрне нимене çӳренĕ, çынсем пĕр-пĕрин патне пулăшăва васканă. Тен, çакă та пире ку тарана çитиччен сыхланса юлма пулăшнă. Тăм, кирпĕч — пӳрт тумалли япаласем. Пӳрт вара — пурнăç, малашлăх. Апла пулсан кирпĕч йăтса, тăм çăрса чăваш малалла пурăнма ĕмĕтленет. Тата акă мĕн. Тимлĕрех вулар-ха сăвва. Малтан «йăтаççĕ» кирпĕч. Тăм çăраççĕ». Вĕçĕнче вара — «йăтатпăр кирпĕч. Тăм çăратпăр». Акă вăл нимен çырман саккунĕ, йăла-йĕрке вăйĕ. Поэт авалхи йăла çухалманнишĕн савăнать. Вăл ан пĕттĕр тесе хăй те ниме тăвакансем хушшине кĕрсе каять – вăл та чăваш-çке. Вара вулакан авторпа пĕрле (тĕрĕсрех, лирика геройĕпе пĕрле) хăйне тăм çăрнă пек туять. Апла пулсан поэт вулакана шухăшпа тыткăна илет, ĕç-хĕл юхăмне илсе кĕрет.

Кашни сăвă çаврăмĕ «ялта – ниме» сăмах çаврăнăшĕпе пуçланать. Çапла повторпа автор шухăша вăйлатать. Цезура каллех курăнать – тире лартнă, сăвă çаврăмĕн пуçламăшне уйрăм йĕркесене пайланă.

Инверси тĕслĕхĕсем:

а) *Йăтаççĕ кирпĕч.*
а) *пурăнать ман халăх.*

Сăвва ямбпа, ама рифмăсемпе калăпланă.

«Истори Сучĕ умĕнче» вара «чăваш чĕлхин палачĕсем» тăраççĕ. Поэт вĕсене «Истори Сучĕн Куçĕнчен» пăхтарать. Сăвва ирĕклĕ майпа çырнă, сăвă техникипе теорине вырăна хурсах кайман. Тĕпре — шухăшĕ. Кунта та чăваш чĕлхи шăпи çинчен калаçу пырать. Автор тăван чĕлхене юратманскерсене, ăна пĕтерсе пыракансене сивлет, суд пуçлать. Çак ĕçе вăл никама кĕтмесĕрех хăй çине илет, приговор вулать. Поэт сучĕ шелсĕр, хĕрхенӳсĕр.

Право сучĕ, халăх сучĕ хăйĕн приговорне «Раççей Федераци ячĕпе...» сăмахсемпе пуçласан – Истори Сучĕ, поэт сучĕ, «Атилла, Кубрат, Алмуш, Иван Якăльч, Çеçпĕл, Кĕçтенттин, Элкер, Митта, Хусанкай ячĕсемпе» намăслантарать, явап тыттарать чăваш чĕлхине хирĕç пыракансене. Каçару çук вĕсене.

Илемлĕх енĕсемпе усă курнă кунта поэт. Метафорăсем:

а) Чăваш чĕлхин палачĕсем;
ă) Истори Сучĕ;

б) Ишĕлекен импери;
в) Халăхсен тĕрми;
г) Чĕлхене сутса пурăнакан;
д) Çунтар, питле йĕксĕксене;
е) Кăвар Чĕреллĕ Çеçпĕл.

Танлаштару:

*Патша пек.*

Аллитераци:

а) Чăваш чĕлхин палачĕсем;
(«ч» хупă сасă янăравĕ)

ă) Кăвар чĕреллĕ Çеçпĕл!
Калах, кала хăв сăмахна;
(«ка», «кă» тата «ел», «ĕл» вылявĕсем).

Лирика геройĕ – автор.

Çак тăвату сăвă çинчен юлашкинчен мĕн калама пулать-ха? Пурте гражданлă лирикăна кĕреççĕ. Сăвă форми тĕп вырăнта мар. Тĕпре — шухăшĕ, тăван халăхăн чĕлхи пек чĕрене витерет поэт, эпитетсем сахал. Шухăшне вулакан чĕри патне çитерес тесе цезурăпа нумай усă курать. Аллитерацие тата ассонанспа илемлетнĕ вырăнсем те çук мар.

Чи пахи — поэт çын чунне лайăх ăнланать, халăх нушине, обществăри татса паман ыйтусене лайăх пĕлет. Пурнăçа ырă енне улăштарасшăн. Вăл вулакан чĕрине хускатма пĕлет, çынсене шухăшлаттарма пултарать.

# «Ах, аннеҫĕм, анне» юррăн авторĕ – Анна Никонорова

Шупашкарта Сергей Кувшиновăн аудиокассети тухрĕ. Хурлама ҫук: юрăҫ чуна витермелле юрлать. Ячĕ те чăвашсем хушшинче сарăлса ҫитрĕ темелле.

Эпĕ ҫак аудиокассетăри пĕр юрă пирки сăмах пуҫарасшăн. Вăл – «Ах, аннеҫĕм, анне». Авторĕсем ҫинчен ҫапла ҫырнă: «Сăвви Г.Коноваловăн, кĕвви халăхăн». Тӳрех каламалла: ку пысăк йăнăш. Ку юррăн авторĕ – Ульяновск районĕнчи Вышкă ялĕнче пурăнакан Анна Никонорова. Сăмахĕсене те, кĕввине те вăлах ҫырнă. 1994 ҫулта ку сăвă «Канаш» хаҫатра пичетленнĕ. Анна Степановнан килĕнче ҫак юрра хăй юрланине ӳкерсе илнĕ видеокассета та упранать.

Чăнах та, аудикассета ҫинчи вариантран оригиналĕ виҫ-тăват сăмахне улăштарнипе уйрăлса тăрать. Тĕслĕхрен, «улт ача» вырăнне «тăват ача» тенĕ. Ҫакăншăн вара юррăн авторĕ улшăнать-и? Паллах, «Г.Коновалов» текен ҫын чапа тухасшăн пулнă, анчах ултавăн ури уксах – унпа инҫе каяймăн. «Юрă авторĕ» пуласшăн ҫын «Канаш» хаҫат вуламанни куҫкĕретех...

Чăнлăха ҫиеле кăлармa С.Кувшинов хăй те пулăшрĕ. Ака уйăхĕн 30-мĕшĕнче Ульяновскри Ҫамрăксен кĕрменĕнче иртнĕ концертра вăл Чĕмпĕр Ен ҫыннисем умĕнче ҫапла каларĕ:

- Ку юрра эпĕ Аслă Нагаткина аппасем патне хăнана килсен илтнĕччĕ. Аппаран унăн авторĕ кам тесе ыйтрăм. Вăл пĕлмерĕ. Юррине вара Шупашкара илсе кайса студире ҫыртартăмăр.

Ҫак концертра Сергей Кувшинов куншăн кăштах хăй ҫине те айăпне илчĕ, сцена ҫине Анна Никонорована чĕнчĕ, лайăх юрă ҫырнăшăн ҫынсен умĕнче тав турĕ.

# А.Ашкеровӑн «Ҫумрахчӗ эс» сӑвви
## (Лирика тишкерӗвӗ)

Алексей Ашкеров — Тӑхӑрьял чӑвашӗ, Элшелӗнче ҫуралса ӳснӗ, халӗ Чӗмпӗрте пурӑнать. Ҫулӗпе тивӗҫлӗ канура, чунӗпе тата шалти вӑй-хӑвачӗпе нумай ҫамрӑкран ирттерет: Алексей Антипович — сӑвӑҫ, сӑмах ӑсти. Хӑй творчествӑра тепӗр хут ҫуралнине (ҫамрӑк чухнех хаҫат-журналта пичетленнӗ ун сӑввисем) Ульяновскра «Канаш» хаҫат тухма пуҫланипе ҫыхӑнтарать. Ун хыҫҫӑн авторӑн илемлӗ сӑмахӗ нумай вулакан патне ҫитрӗ. Таланчӗ сайра тӗл пулакан жанрта — юптарура — палӑрчӗ.

Лирика та ют мар авторшӑн. «Ҫумрахчӗ эс» сӑвӑ «Канашра» 1993 ҫулта (№38) тухнӑ. Хайлавӑн теми ҫынна ӗмӗртен канӑҫ паман, тӗплӗн шухӑшлаттаракан тата вӑйлӑ кулянтаракан ыйту — юрату. Тӳрех автор сӑнарне уйӑрса илме пулать. Вӑл автора ҫывӑх иккенне туятӑн.

*Ҫумрахчӗ эс, туяттӑм ӑшшуна,*
*Туяттӑм хӑмӑр пысӑк куҫсене.*
*Сарса вӗҫес пек мӑшӑр ҫунатне,*
*Асамлӑ вӑй ҫӗкленӗччӗ чуна, —*

тытӑнать поэт.

Лирика геройӗ чи пӗлтерӗшлӗ, ыттисене пӑхӑнтаракан, йӗркелекен сӑнар пуласси малтанхи сӑмахсенченех палӑрать. Унӑн туйӑмӗ урлӑ эпир тепӗр сӑнара куратпӑр. Автор ӑна «эс» тенӗ. Лирика тӗнчине автор лирика маскине тӑхӑнса кӗрет, хӑй ҫинчен тӳрремӗн нимӗн те каламасть, туйӑмсене тепӗр сӑнар урлӑ уҫса парать. Унӑн туйӑмӗсем пурнӑҫран, халӑхран уйрӑм тӑмаҫҫӗ. Поэт хӑйӗн чун пӑлханӑвне ытти ҫынсен чун пӑлханӑвӗ шайне ҫитерет, ҫӳллӗ шая ҫӗклесе пӗтӗмлетет. Ҫавӑнпа вӑл кашнин чунне пырса перӗнет, ӑшӑ та ҫав вӑхӑтрах тунсӑхлӑ туйӑмсем вӑратать. Пӗрремӗш куплета вуланӑ хыҫҫӑн тема сӑнарӗ те ҫуралать. «Унӑн» ӑшшине туйнине, «хӑмӑр пысӑк куҫсене» курса тыткӑна лекнине, чунра асамлӑ та ҫунатлӑ вӑй ҫӗкленнине лирика зачинӗ теме пулать. Ҫакӑ вулакана кирлӗ ӗнерӳ (мелодика) парать, глаголсене иртнӗ вӑхӑтра ҫырни тунсӑха ҫитерет.

Мотивне вара ҫапла ӑнланмалла. Вӑхӑтӗнче лирика геройӗ кирлӗ сӑмахсем тупайманнине пула савнӑ ҫыннине хӑйӗн туйӑмӗсене

ӑнлантарайман, савнине ҫухатнӑ. Анчах ун чӗринче шанчӑк пӗтменха. Вӑл чун кӑмӑлланӑ ҫынна курасса шанать.

*Паян сана кӑшлать пуль кӗвӗҫӳ.*
*Сӑлтавсӑр ма ҫӳрес-ха кулянса?*
*Кӗтмен ҫӗртен эс ҫитӗн ҫаврӑнса,*
*Калаҫура парнелӗн пыл та ҫу, —*

тесе йӑпатать хайне лирика геройӗ.

«Сӗлкӗш юратӑвӑн» асамлӑ хӗлхемӗсем ӑҫта ҫиҫеҫҫӗ-ши тесе тунсӑхлать. Ҫак эпитетсемпе сӑнарлӑ шухӑшсем туса хурать. «Мана кӑшлать кӗвӗҫӳ», «сарса вӗҫес пек мӑшӑр ҫунатне», «калаҫура парнелӗн пыл та ҫу» сӑмах ҫаврӑнӑшӗсем сӑнар ретне йӗркелеме пулӑшаҫҫӗ. Нумай пӗлтерӗшлӗ сӑмахсемпе те усӑ курнӑ. «Пулмарӗ пирӗн хӑтлӑ калаҫу» тесе ӳкӗнет тӗп сӑнар. «Хӑтлӑ» тенине унта «чунтан» тесе ӑнланмалла. «Асамлӑ хӗлхемсем» савни куҫӗ пулни те никама та иккӗлентермест. Ҫак сӑнарсем эмоци ретне йӗркелесе лирика геройӗн кулянӑвне палӑртаҫҫӗ, вулакана пӑлхантараҫҫӗ.

*Анчах мана пӳрмен-ши ӑнӑҫу,*
*Пуҫра пӑтранчӗҫ тӗрлӗ шухӑшсем, —*

йӗркесем уҫӑмсӑрлӑх ҫуратаҫҫӗ. Мӗншӗн ӑнӑҫу пулманнине пӗлме май ҫук: те тӗп сӑнар хӑй айӑплӑ уншӑн, те кам-тӑр «пӳрмен»? Савниӗ килессе шанни вара уҫӑмсӑрлӑх условийӗсенче кӗтни пулать. Ҫакна туйни эстетика реакцине вӑратма пулӑшать. Вулавҫӑ лирика геройӗшӗн шутлама пуҫлать, мӗнпе те пулин пулӑшма тӑрӑшать, кулянӑвне хӑй ҫине илет. Анчах та паллӑ: тӗп сӑнар кӗтни пурнӑҫра пӗтӗмпех пурнӑҫланаймасть.

Пӗрремӗшпе пиллӗкмӗш куплетсем пӗр евӗрлӗ пуҫланаҫҫӗ: «Ҫумрахчӗ эс...» Ку повтор та уҫӑмсӑрлӑхӑн палли. Эмоци речӗ сӑнарлӑ шухӑша тарӑнрах илсе кӗрет, сӑнар урлӑ хӑйне лӑплантарать.

Сӑвӑ вӗҫӗнче лирика геройӗ ҫапла калать:

*Мӗскершӗн-ши хӑюлӑх тенине*
*Кайса илме ҫук ҫывӑх пасартан?*

Апла пулсан вӑл ӑнман юратӑвӑн сӑлтавне ӑнланать, хӑй айӑплине кӑтартасшӑн.

Виççĕмĕш куплет çапла пуçланать:

*Ăçта-ши халĕ сĕлкĕш юрату,*
*Ăçта çиçеç асамлă хĕлхемсем?*

Кунта анафора сĕмĕ палăрать. Тĕп сăнар чун ыратăвне пĕр сăмаха çине-çине каласа палăртать. Çакăн хыççăн унăн туйăмĕсем лăпланма тытăнаççĕ. Сăвă вĕçне çитес умĕн эмоци пусăрăнать, пĕтсе каять тесен те юрать. Тен, унăн ĕçĕ те çавă пулĕ: чунра капланнă «пăса» кăларса ярса кăмăл-туйăм хĕрӳлĕхне пусарма, пĕршайлăха лартма. «Хуйхăра çынпа калаçсан чун пусăрăнать», - теççĕ халăхра. Кунта та çавăн евĕрлĕ пулса тухать. Тĕп герой хăйне лăплантарас тесе пирĕнпе калаçать. Эпир пулăшаймасса пĕлсех пиртен юратăвĕ ăçтине ыйтать.

Интонаципе çемĕ речĕ çинчен çакна калама пулать. Сăвва пилĕк стопаллă ямбпа çырнă, аçа сикчĕпе. Метр тĕсĕ – силлабо-тоника.

Рифмăсене çаврăм меслечĕпе (абба) йĕркеленĕ. Глаголсемпе пурĕ те пĕр хут çеç рифмăланă, ытти чухне тĕрлĕ падежри япала ячĕсем тата пĕр местоимени. Рифмăсене чухăн теме çук, çăмăллăн вуланаççĕ.

Сăвă тытăмĕ пирки çакна каламалла. Лирика геройĕн характерĕ урлă композицие курма пулать. Куляну, тунсăх, шанчăклăх туйăмĕсем витĕр лирика геройĕн кăмăл-туйăмне сисетпĕр, ăна ăшра йĕркелесе пырса композици тăватпăр. Пĕр вăхăт хушши çак кăмăл-туйăм пире хамăрăнни пекех туйăнать, пире лирика тĕнчине куçарать. Ку поэтăн ăсталăхĕ çӳллĕ шайра пулнине пĕлтерет. Ун пек пулма вара хайлава ăспа çеç мар, чун-чĕрепе çырса кĕвĕлемелле. Çапла тусан çеç хайлав вулакан чĕри патне çитме пултарать, унта кĕрсе вырнаçать.

Авторăн сăвви çавсен шутĕнче.

# Чун хушнипе пурӑнсан...

Кирилл Кирилловӑн «Чун кирлӗ, чун!..» кӗнеки чӑваш чӗлхине, литературине, театрне юратакансемшӗн – чӑн-чӑн парне. Хальлӗхе кун пек тарӑн шухӑша путаракан, чуна пӑлхатса яракан кӗнекесем сахал.

Шел, авторӗ ку тӗнчере ҫук ӗнтӗ. Кӗнекене хатӗрлекенсем (В.П.Станьял, Н.Кириллова) унта талантлӑ авторӑн статйисене, калавӗсене, повесть сыпӑкне, драмине, сӑввисене, ҫырӑвӗсене, ҫар дневникӗнче ҫырса пынисене тата автора пӗлекен ҫынсен асаилӗвӗсене кӗртнӗ.

К.Кириллов — кам-ха вӑл? Чӑваш литературипе драматургийӗн ӑста тӗпчевҫи, театр критикӗ, тележурналист, ҫыравҫӑ. 1962 ҫулхи кӑрлач (январь) уйӑхӗн 2-мӗшӗнче ҫуралнӑ, 1996 ҫулхи авӑн (сентябрь) уйӑхӗн 9-мӗшӗнче вилнӗ. Пушкӑртстанри Авӑркас хутлӑхӗнчи Кӑтаймас чӑвашӗ вӑл. 1979 ҫулта Чӑваш патшалӑх университечӗн историпе филологи факультетне, чӑваш уйрӑмне, вӗренме кӗрет.

Ҫамрӑкла ҫӗре кӗнӗ пулин те Кирилл Демьянович ыррине те нумай тунӑ, шар та чылай тӳснӗ. Пӑлхавлӑ пурнӑҫ ирттернӗ вӑл. Ҫакӑ ун «ҫӑварлӑхлама» ҫук характерӗнчен килнӗ. Ун чунӗ пӑлхавлӑ пулнӑ: тӗрӗсмарлӑха йышӑнман, хуть кама та хирӗҫлеме, хӑйӗн шухӑшне ҫирӗплетес тесе тавлашма пултарнӑ. Ҫынсенче ЧӐНЛӐХ тата ЧУНЛӐХ шыранӑ. Унӑн чӑнлӑхӗпе пурнӑҫ чӑнлӑхӗ пӗр килмен...

Умсӑмахра вӑл ҫапла калать: «Чӑн искусство мӗн ӗмӗрсем Чӑнлӑхпа Чунлӑх пирки асамлать. Паян вара, кӑткӑс та тӳрккес, хаяр та сивӗ кунӑмӑрсенче, Чунпа Чӑнлӑха упрамасан, йӑлтах суту-илӳ пирки (Чуна нимӗнле хакпа та сутӑн илме ҫук!) калаҫсан, ун еккипе пурӑнсан Ҫынлӑх тени ҫухалсах пырӗ».

Ҫак шухӑша малалла тӑсса автор тепӗр статьяра ҫапларах ҫырать: «Хирӗҫӳлӗхсемпе, пӑтрашулӑхпа тӗвӗленнӗ тӗнчере чун ыратӑвӗн сӑлтавӗсем тӗрлӗ, нумай... Чун ӑшши, хутшӑну ӑшши, этем ырӑпа усала уйӑрми пулса ҫитсен сивӗнме пуҫлать, чунра вара халиччен пулман вӑй хуҫаланма тытӑнать. Вӑлах ҫынна пӗчӗк усал ӗҫ тунинчен ирсӗрлӗх патне илсе пырать...

Пӗр саккунӗ – кулленхи пурнӑҫа тытса пыраканни, тепри, Толстой калашле, - «шалти чун саккунӗ – пирӗн ӑс-хакӑлӑмӑр, совесть, юрату, ырлӑх, Турӑ». Чун саккунӗпе, чун хушнипе пурӑнма нумай вӑй кирлӗ. Кулленхи пурнӑҫ саккунӗ вара ҫынна темӗн те тума хистет. Ку йӗркепе пурӑнма ҫӑмӑлрах та, меллӗрех те. Анчах ҫак саккуна ытларах пӑхӑнни этемре тискерлӗх ҫуратать, чуна «тӗттӗмлӗх тытӑмӗ» карса илет».

Кирилл Кириллов театра питӗ юратнӑ. «Театр – ман юратӑвӑм", — тенӗ вӑл. Ҫак ятпах Чӑваш телевиденийӗнчи кӑларӑма ертсе пынӑ. Чӑваш театрӗ, унти артистсем пирки хӑватлӑ рецензисем, статьясем чылай калӑпланӑ.

Ҫав вӑхӑталла, 1980-мӗш ҫулсенче, театр критикипе интересленсе каякан ҫамрӑксем ҫукпа пӗрех пулнӑ. Ун пирки 1984 ҫулта «Театр» журналта Ф.А.Романова театровед ҫырать. Ку вӑхӑт тӗлне факультетри чи лайӑх вӗренекенсенчен пӗрне, ушкӑн старостине – К.Кириллова «чӑнлӑх шыранӑшӑн» партирен те, университетран та кӑларса яма ӗлкӗрнӗ ӗнтӗ. Салтакран курма килнӗ Кирилл диплом ӗҫӗ ҫырса хӳтӗлесшӗн чупса ҫӳрет. Фаина Романова ҫакна питӗ ырлать, наука ертӳҫи пулма килӗшет... «Ведь нет театроведов, и я именно хотела, чтобы им был мужчина, притом энергичный», — тет вӑл.

Анчах хӳтӗленме университет килӗшмест. «Чылай япалашӑн каҫарма пултараймарӗ пулмалла ӑна унти хӑш-пӗр преподаватель. Диплом ӗҫне театр енӗпе ҫырма та ирӗк илеймерӗмӗр», — ҫырать хӑйӗн асаилӗвӗсенче ҫак кӗнекене пухса хатӗрлекенӗ, Кирилӑн юратнӑ мӑшӑрӗ, Чӑваш патшалӑх академи драма театрӗн пултаруллӑ артистки Надежда Кириллова (Степанова).

Тӑвӑлса ҫитнӗ, чунӗ кӳтнӗ салтак «Молодой коммунист» хаҫата тавлашуллӑ статья – «Жажду литературы!» ҫырса хӑварать.

Авторӑн ку ӗҫне чӑваш публицистикинче бомба ҫурӑлнӑ евӗр йышӑнма пулать. Чӑваш литератури пушӑлӑха кӗрсе ӳкнӗ, нумай нациллӗ совет литературинчен уйрӑлса тӑрать тет К.Кириллов . Идейӑсӑр, илемсӗр хайлавсем – пуҫ тӳпинченех. Ҫамрӑк критик «Талантов у нас много» статьяна (В.Кондратьев , «Молодой коммунист», 1985 ҫулхи ҫӗртме уйӑхӗн 13-мӗшӗ) хирӗҫлет. «Пирӗн талантсем нумай пулнине шанмастӑп эпӗ. Вӗсем хуть хӑҫан та сахал пулнӑ. Вӑл поэтсене мар, ҫырма юратакансене хӳтӗлет. Чӑн-чӑн ҫамрӑк поэтсене В.Кондратьев хӳтти мар, пичетлени кирлӗ. Хальлӗхе пирӗн интереслӗ, ыттисенчен уйрӑлса тӑракан алҫырусене пичетлемеҫҫӗ, хисепре – вӑтам, тӗссӗр сӑвӑсем», — тет вӑл.

Тӗрӗснех калать К.Кириллов. Чӑн-чӑн талантсем кулипе йӑваланса выртмаҫҫӗ – ылтӑн пӗрчисем те ҫавах. Кунта автор хӑй пеккисене шырани сисӗнет: хӑнӑхнӑ ҫул-йӗртен, яланхи калӑпран тухма пултаракансене, хӑюллисене. Ун пеккисене курманни пӑшӑрхантарать ӑна.

Энтип Ваҫҫине те «лекнӗ» ку статьяра. Лешӗ ҫамрӑк ҫыравҫӑсен вӑйсӑрлӑхне профессионала ытла ир тухма пуҫланинче курать. К.Кирилловӑн шухӑшӗпе, ху курнине ҫеҫ ҫырса кӑтартни ҫителӗксӗр. Пурнӑҫ опычӗ – тӗллев пулмалла мар. Пурнӑҫ опычӗ ӑс-тӑн, чун

опытне çаврăнмасан нумай пурăнса курни усăсăр. Стройкăра, станок умĕнче ĕçлени япăх мар, çапах та чи кирли — шалти туйăмсемпе, чунпа ĕçлени. Автор Г.Янин журналистпа килĕшет: çыравçă ăс-тăн ертÿçи пулмалла, обществăра çынсем хăйсене мĕнле тыткаламалли саккунсем тумалла. Çыравçă ĕçĕ професси мар вăл — чун туртни, тивĕç, шăпа пÿрни. А.Хусанкай шухăшĕсемпе килĕшсе К.Кириллов çапла ыйтать: çамрăк литераторсене – шырама ирĕк парăр-ха! Тавлашусенчен, хире-хирĕçлĕхрен ан шикленĕр: пичетлĕр! Тавлашусем пулсан эпĕ савăннă çеç пулăттăм. Çамрăксем пурнăç çине хăйсен куçĕпе пăхса тĕрĕс çырса кăтартнине редакцире тÿрлетме кирлĕ мар. Чăнлăхсăр – искусство çук!

«Жажду литературы» статьяна «Лик» журналта 21 çул иртнĕ хыççăн тепре пичетлеççĕ (2006 çул, 3 №, утă-авăн). Çапла, ун пĕлтерĕшĕ халĕ те çухалман. Тен, ÿссе те пырать...

Çартан таврăннă хыççăн К.Кириллов 1986 çулта университетран ăнăçлă вĕренсе тухать. Чăваш наука тĕпчев институтне ĕçе вырнаçать. Мускава А.М.Горький ячĕллĕ Тĕнче литературин институтне аспирантурăна каять. Ăна 1991 çулта вĕçлет. Тепĕр çултан филологи ăслăлăхĕсен кандидачĕ пулса тăрать. Ф.А.Романова ĕмĕтленнĕ пек, чăваш театрĕпе драматургийĕн ыйтăвĕсене хаçат-журналта çивĕччĕн те анлăн çутатса тăрать.

Кирилл Демьянович хăйĕн çăмăл мар характерне пула кĕрсе ÿкнĕ йывăр лару-тăруран çанă тавăрса ĕçленипе, пысăк тĕллев курнипе йĕркеллĕ тухать. Килĕнче те чиперех! Хăйне ăнланакан, пулăшакан мăшăрĕ, ывăлпа хĕр. Анчах... Кĕтмен çĕртен – инкек! Кирилл кĕсйинче хăйсен хваттерĕн уççи пулманнипе шала чÿречерен кĕме хăтланать те çÿллĕ çуртăн карлăкĕнчен вĕçерĕнсе кайса çĕре ÿкет, йывăр суранланать. Вунă уйăх ытла вырăнпа выртать, анчах сывалаймасть...

Çапларах çын пулнă вăл Кирилл Кириллов: тĕрĕслĕхе куçран калама та, çĕнĕ çул-йĕр хывма та, çÿллĕ çуртăн чÿречинчен кĕме те хăраман... Вăл малта пыма, йывăрлăхсене, яваплăха хăй çине илме хăнăхнă.

Çавна пулах ĕнтĕ вăл чăваш литературинче, уйрăмах театр критикинче, драматурги тĕпчевĕнче, паллă йĕр хăварнă.

Театр – наци пурнăçĕн тĕкĕрĕ. Вăл ăçталла сулăнни халăха пысăк витĕм кÿрет. Театр тĕрĕс çулпа кайтăр тесен ун ĕçне курса-илтсе тăмалла, спектакльсене тĕрĕс хак памалла. Çак роле хăй çине К.Кириллов тĕпчевçĕ-критик илнĕччĕ, хăйĕн рецензийĕсемпе чăваш театрне пысăк пулăшу панă. Анчах, Çеçпĕлпе Иванов евĕр, ир вилнĕ.

Çапах та чун саккунĕпе, чун хушнипе пурăннă вăл...

Халь ун вырăнĕ пушă...Кам килĕ ун вырăнне? Хăçан?

# Мул тĕнчин тыткăнĕнчен хăтăлайман самана
(Н.Ефремов çырнă “Пуян Карук” драма)

Николай Сидорович Ефремов 1895 çулта хальхи вăхăтра Тутарстан Республикинчи Çĕпрел районне кĕрекен Кивĕ Йĕлмел ялĕнче, чухăн хресчен кил-йышĕнче, çуралнă. Ялти пуçламăш шкулта, унтан Хурăнварти учительсем хатĕрлекен икĕ класлă шкулта вĕреннĕ. 1912 çулта ĕç шыраса Донбаса кайнă, виçĕ çул Макеевкăри шахтăсен управленийĕнче вăй хунă. 1915-1918 çулсенче çар службинче Балтика флотĕнче пулнă.

1918 çулта Н. Ефремов Чĕмпĕрте чăвашла спектакльсем лартас ĕçе хутшăннă. “Пуян Карук” пьесăна вăл 1919 çулта çырнă.

Н.С.Ефремов – манăн ентеш, пирĕн ялпа вĕсен ялĕ хушши 4 çухрăм çеç. Ача чухне астăватăп-ха: “Кив Йĕлмелĕнче писатель пурăнать”, – тенине. Анчах та питех кăсăкланса кайман çав. Ун патне çитсе калаçса ларма май пулнă пулсан та. Каласа памалли пулнă ĕнтĕ ун. Н.С.Ефремов 1988 çулта вилнĕ.

“Пуян Карук” драма 1920 çулта Чĕмпĕрте уйрăм кĕнекен пичетленсе тухнă. Унăн хуплашки çине çапла çырнă: “Пуйан Карук”, 4 пайлă драма. Издание Симбирской Чувашской Секции Губернского Отдела Народного Образования. Типография № 1 Губсовнархоза”.

Пьеса тытăниччен “Умĕн калани” пур. Унта автор акă мĕн çырать: “Юратнă юлташсем. Хăш-хăш çын пĕр асап курмасăр çăварне пыл хыпасшăн. Тутлине хыпиччен – кăштă кăна йӳççине тутанма ан йывăрланăрсам.

Этем хăйĕн начар, йĕркесĕр пурнăçĕ çине пăхса йĕркеллĕ пурăнма вĕренет. Чăвашăн хăйĕн пурнăçне ырри-усаллипех кăтартакан кĕнекесем çукпа пĕрех. Чăваш пурнăçĕ, хăш майĕнчен пăхнă унтан, сухаламан хир пек курăнать. Çак шурутланса хытса кайнă хире малашне хытта хăварас марччĕ, мĕншĕн тесен вăл пит кĕрнеклĕ тăпра, унта мĕн акнă вăл шăтать...

Чăвашсем! Çав хирте, мăянпа куршанкă шăтиччен, сирĕн ырă, тĕрĕслĕх вăрлăхĕ акас пулать.

Акă эсир “Карука” айăплăр... Çынсем е пĕлсе, е пĕлмесĕр айăпла пуçласан хамăр çие часрах çаврăнса пăхатпăр, унсăрăн эпир хамăр айăпсене, çылăхсене пĕтĕмĕшпе мансах каятпăр... Çавăнпа ĕнтĕ, “Карукпа” эпир çав хăрушă шкула кĕрсе, хамăра хамăр куçкĕски витĕр курнă пек курас терĕмĕр... Юлташсем! Япалана суд тума пикениччен

тĕнчере мĕн ыррипе мĕн усалне хамăрăн пит аван пĕлес пулать; малтан ăна та, кăна та хисеплесе виçес пулать – мĕн ырă, мĕн усал. Çавна пĕлмесен ырра усал вырăнне, усала ырă выранне шутласа мухтама пултаратпăр...

Кăшт кăна йăнăшсан тĕнче (халăх) мĕнпур ырă ĕçрен те кулма пултарать, мĕншĕн тесен ăсларахххи пĕр енчен кулсан ухмаххи пур енчен те кулать".

Драмăн ячĕ ансат, анчах хайлавăн содержанине тӳрех уçса парать. "Пуян" тесе вуласанах куç умне тачка кĕлеткеллĕ, васкамасăр çӳрекен çын мĕлки тухса тăрать. "Карук" тени (хытă янăракан уçă сасăсемпе усă курни) çакна çирĕплетсе парать. Илюк, Çеркей, Элекçей тенĕ пулсан ун пекех сулмаклăн та хыттăн илтĕнмен пулĕччĕ.

Сăнланнă тапхăр – империализм вăрçи вăхăчĕ. Калаçу Австри çĕрне туртса илни çинчен пырать.

Драмăри конфликт – мулпа чухăнлăх хире-хирĕç тăни, çын укçа-тенкĕшĕн, пуянлăхшăн чысне, чунне сутни.

Ĕç-пуç чиркӳллĕ ялта, вăрçă пуçланнă çул, Карукăн пысăк та тирпейлĕ пӳртĕнче пулса иртет.

Карук, 55 çулхи хытă пуян, мул пухмашкăн тĕллев лартнă. Икĕ ывăлĕ, икĕ кинĕ выльăх пăхса пурăнаççĕ, сутса укçа тăваççĕ, ашшĕ сăмахĕсенчен иртеймеççĕ. Арăмĕ Крахвине те упăшкинчен темĕн те курнă. Мул пухнă çĕрте Карук нимĕн умĕнче те чарăнса тăмасть. Ывăлне Микулая салтака ярасшăн мар, килте ĕçлеттерсе пурăнтарасшăн. Ăна вăл: "Ирхине кучан çи, кăнтăрла шыв ĕç, шур чул çи, каçпа куçна тапак шывĕ сĕрсе вырт", – тет. Ывăлĕн сывлăхĕ уншăн нимĕн те мар.

Карукăн чунне лайăххрах пĕлес, шухăш-туйăмне сисес тесен хăйĕн сăмахĕсене вуламалла. Акă мĕн шухăшлать вăл: "Эпĕ çăпатаран пуçне нимĕн те тăва пĕлместĕп, çапах çакăн чухлĕ мул тытатăп... Улталама пĕлмесен мул пухма çук: улталама чеелĕх кирлĕ... Çавăнпа пуян сахал та... этем тени усламлă япала пама вĕрентĕр... Вара мулĕ çавăнтах хуллен ӳсме пуçлать. Акă эпĕ пĕр ĕçлемесĕр çурта хулари пек хăма виттерсе тутартăм; çук çул кивĕ тырă сутса çил арманĕ илсе лартрăм... Халĕ ĕнтĕ вăл мана нумай çул усă кӳрет... Эпĕ акă çемьене ывăç тупанĕ çинче кăна ташлатса тытатăп... Вилсе пĕтсен те ку чухăнсене пĕртте шел мар... Ылтăн курсан чунăм сарă çу сĕрнĕ пек çемçелсе каять, ирĕксĕр йăл кулас килет вара... Шухăшăм шав укçа çинче кăна... Укçа çинчен калаçнине илтсенех чĕрем лаштах çурăлать, çӳç-пуç вирелле тăрать, сивĕ тытнă пек чĕтретет... Мул пирки чун канăçне çухатрăм ĕнтĕ. Ăнман мул пирки вăхăтсăр çӳç шуралать". Арăмĕн сăмахĕсем çак сăнара тата туллинрех курăнма май параççĕ: "Ку

Карукра пĕр ăшă та çук... Çавăнпа, ĕмĕр иртсе те, чун хутшăнмарĕ те çав... Мĕн сутсан та çын укçине ĕçсе карланкине тултарать. Тахçан та пĕтес çук-ха... Сасси часах йăмас çук... Ылтăн-кĕмĕл пек ачамсем, чĕкеç пек маттур кинĕмсем выльăх ĕçне ĕçлесе, кашкăр пек тискер Карукран ялан хаяр ят илтеççĕ". 25 çулхи кĕçĕн ывăлĕ Микулай ашшĕне çапла хаклать: "Пирĕн атте ĕмĕтсĕр кăмăлĕпе тĕнчене пĕтĕмĕшпех хăй аллине çавăрса илесшĕн... Укçа тесессĕн таçта кайса кĕрет... Çулталăка икĕ пуслăх расхут кăлармасть те, мур тума укçа пуçтарать. Те çылăхĕсемшĕн шуйттансене тӳлеме леш тĕнчене илсе каясшăн... Аякри ачисем валли пуçтарса хăварасшăн темелле... Анчах мулĕ пире юлать тесе пире кураймасăр çилленсе тăрать... Унăн чунне мул чирĕ çакăннă... Ĕмĕтсĕр кăмăлĕ хушнине туса пурăнать... Хăйне ĕнтĕ кӳршĕ-аршăсем те юратми пулчĕç... Эй, пуян пурте çапла пулать-ши?"

Çакăнтан конфликт тухать: мула пула пĕр çемьери çынсем хирĕçсе пурăнаççĕ, пĕр чĕлхе тупаймаççĕ. Чухăнсемпе пуянсен хутшăнăвĕнче те хирĕçӳ курăнать. Ку тепĕр енлĕ конфликт. Карук патне кивçене пыракансем – Çара Куçма, Катячук – унăн условийĕсемпе килĕшеççĕ. Карук вĕсемпе кăнттам калаçать, хăйне пысăка хурать. Çапла вара кунтан темиçе конфликт тухать: пĕрремĕшĕ – килти хирĕçӳ, иккĕмĕшĕ – ашшĕпе ачисен хирĕçĕвĕ, виççĕмĕшĕ – Карукпа ял халăхĕн хирĕçĕвĕ, тăваттăмĕшĕ – Карук чунĕнчи хирĕçӳ. Карук халăх умĕнче ырă та курăнасшăн, анчах мул чирĕ ăна пĕтерет, вăл мул чури пулса тăрать. Вăл хăйне хăй хуçа мар.

Карукăн монологне итлер-ха: "Чухăнсенчен тĕлĕнетĕп эпĕ. Пĕлĕтпе витнĕ çуртĕнче çемйипе савăнса пурăнаççĕ... Ак Такмак Иванĕ ĕмĕрĕнче ашшĕпе иккĕшĕ те лаша чĕрни курман, йĕркеллĕ ĕне чĕччи те тытса пăхайман! Пăх-ха эсĕ ăна. Ĕнер-и, виçĕм кун-и – çапла таçтан арăмĕпе янăратса юрласа таврăнать... Эсĕ пур çакăн чухлĕ пурнăçпа ĕмĕр тăршшĕнче те арăмпа савăнса ĕçкĕ ĕçмен. Ытла мул пуçтарма тăрăшнă пирки ял кăна мар, хам çемьем те курайми пулчĕ". Ку – çыннăн трагедийĕ. Чи тĕлĕнмелли – вăл çакна ăнланать, анчах мула юратас туртăма ăшĕнчен кăларса пăрахаймасть. Унăн чунĕ çĕрсе пырать, шăтса пĕтет. Юлашкинчен ĕмĕр тăршшĕ пуçтарнă мулĕ çунса каять. Халĕ мĕн тумалла? Чун, ăс-тăн пуянлăхĕ пулман, халĕ укçи-тенки, пурлăхĕ, япали те çук. Çын мĕншĕн пурăнчĕ? Малалла мĕн шутласа, мĕн туса пурăнмалла? Çынсем ăна шанма пăрахнă, курайми пулнă. Пуян чухне ун патне ирĕксĕр пулин те (кивçен ыйтма) ял çынни пыратчĕ. Халĕ вăл кам? Никама та кирлĕ мар çын. Тĕрĕссипе вара, мĕн курма тăрăшрĕ – çавна курчĕ. Мĕншĕн тесен халăхран уйрăлса,

çынсенчен кулса, вĕсене хĕсĕрлесе вĕçĕмсĕр пурăнма çук. Пĕр енчен — вĕренĕн вĕçĕ пур, тепĕр енчен – кĕтӳрен уйрăлакан путек кашкăр кулли пулать.

Хайлава çĕнĕ саманара мĕнле хаклама пулать-ха? Ку тема нихăçан та кивелмест. Хальхи вăхăтра ку уйрăмах уççăн палăрма тытăнчĕ. Паян каруксем нумайланса кайрĕç. Вĕсем пуян пуласшăн. Пуян Карукăн мул пухас меслечĕ канăç памасть вĕсене. Укçашăн çунакансем, укça тăвас тесе çеç пурăнакансем йышланчĕç. Паллах, вĕсем тар юхтарса ĕçлесшĕнех çунса каймаççĕ, ултав çулĕ илĕртет вĕсене. Капла çăмăлрах-çке! Кăмăл-туйăмĕ хытнă вĕсен, нимĕнле мораль те юлман. Хĕрхенӳ мĕн иккенне пĕлмеççĕ. Ачисем çинчен маннă, тĕрĕс воспитани пама ăсĕ те, вăхăчĕ те çук. Чунсăр вĕсем, ачисем те вĕсене курса çапларах ӳсеççĕ. Паянхи каруксем – мăн кăмăллă çынсем. Пурнăçĕнче пĕр кĕнеке вуласа тухман пулсан та хăйсене шутсăр ăслă, пурăнма пĕлекен çынсем теççĕ. Вĕсен принципĕ – укça нумайрах пултăр. Унпа вара йăлтах туянма пулать. Тĕрĕсех-ши? Çынлăха, чыса туянма пулать-ши? Пĕр шутласан, каруксене ку пахалăхсем кирлех те мар. Вĕсем "пурăнма" васкаççĕ. Хальхи Карук, пĕр "çĕнĕ чăваш", çапла калани тĕлĕнтерчĕ мана: "Укçа çапатпăр эпир. Мĕн илес тенĕ çавна илме пултаратăп эпĕ. Çавăнпа хăрушă. Укçаллă çынсем пĕр-пĕрне персе вĕлерсе пыраççĕ. Паян вăл пĕрне перет, ыран хăйне "тытаççĕ". Çапах та ку пурнăçа пăрахас килмест. Хăçан та пулсан мана та пересçĕ, хăть пилĕк çул çакăн пек ырлăхра пурăнса юласчĕ. Ун чух вара ӳкĕнĕçлĕ пулмĕ".

Чăнах та, тĕлĕнмелле. Паянхи Карук хăйĕн шăпи синкерлĕ пулассине лайăх чухлать, анчах ултав, хĕсĕрлев меслечĕсемпе укçа тăвас çултан ПĂРĂНАСШĂН МАР. "Вилетĕп, анчах хамла тăватăп" майлах ĕнтĕ ку. Калăн, Н.Ефремов драминчи Карук шухăшне çак "çĕнĕ чăваш" ăшне шуйттан мăлатукпа çапса кĕртнĕ. Укçа-тенкĕ, мул шухăшĕ пурне те парăнтарать пулмалла.

Çавна пула 20-30 çултах паянхи каруксен шалчи тулать, йăхĕ пĕтет. Каллех ыйтусем: мĕн туса пурăнчĕç, кам валли тăрăшрĕç?.. Укçипе хăть чапла тупăк, сумлă палăк илме пулать-ха, пытарса килсен хаклă йышши эрех-сăра ĕçме пулать. Çавăн валли тăрăшрĕç-ши вĕсем çын куççульне, тарне, юнне юхтарса?..

# Валентина Тарават сăввисенчи тĕссен тăтăшлăхĕ

Хăй вăхăтĕнче Çеçпĕл Мишши сăввисене вуланă чухне эпĕ çак автор тĕсе пĕлтерекен сăмахсемпе усă курса питĕ вăйлă эпитетсем тума пĕлнине асăрханăччĕ. Каярах тĕпчев ĕçĕсен кĕнекисене вуласа çакна пĕлтĕм: литературăра, тĕрĕсрех каласан — поэзире, тĕссен тăтăшлăхне тĕпчени — хăйне евĕр сулăну иккен. Эпĕ унпа интересленсе кайрăм: хăш поэт тĕсе пĕлтерекен сăмахсемпе ытларах усă курать, мĕнле тĕссем нумайрах курăнаççĕ, сăвăсенче тĕс мĕнле вырăн йышăнать?.. Çак ыйтусем илĕртрĕç те ĕнтĕ мана В.Тарават хайлавĕсенчи тĕссен тăтăшлăхне тишкерсе тухма. Чĕмпĕр хутлăхĕнче çак темăна тĕпчемен тесен те юрать. Çавăнпа литература анин çак пайĕнче пĕрремĕш суха касси тăвас терĕм. Малашне çĕнĕ тĕпчевçĕсем ăна тарăнлатас тата анлатас енĕпе тăрăшса ĕçлессе шанатăп.

Валентина Николаевна Игнатьева-Тарават — Раççей писателĕсен союзĕн членĕ. Унăн кĕнекисем Мускавра, Саратовра, Шупашкарта, Чĕмпĕрте чăвашла тата вырăсла пичетленсе тухнă. Икĕ чĕлхепе çырать. Куçару ĕçĕнче те вăй хурать.

Валентина Тарават çамрăкла Инçет Хĕвелтухăçне тухса кайнă. Шăпах çакăнта вăл литература ĕçĕпе интересленме пуçлать, вырăсла хайлавсем çырать, Мускаври хаçат-журналта пичетленет. Каярах Чĕмпĕр Ене куçса килет, Аслă Нагаткинта тĕпленет. Шăпах çакăнта вăл 1990-мĕш çулсенче тăван чĕлхепе çырма тытăнать: сăвăсем шăрçалать, кĕске калавсем хайлать. Тĕпрен илсен, В.Таравата ачапăча çыравçи темелле. Ун хайлавĕсен пысăк пайĕ — пĕчĕккисем валли. Сăмах май, ун сахал мар сăввине юрра хывнă.

Манăн В.Тарават сăввисенчи тĕссен тăтăшлăхне тĕпчес килчĕ. Çав шутпа эпĕ авторăн тăватă кĕнекине тишкерсе тухрăм: "Уяв парни", "Хаклă сасă", "Чун тараси" тата "Çӳл тӳпере çич çăлтăр" коллектив сборникĕ (унта Тараватӑн сăввисем 255-280-мĕш страницăсенче пичетленнĕ). Çакă паллă пулчĕ: коллектив сборникĕнче пичетленнĕ сăввисем пурте эпир асăннă ытти кĕнекесене кĕнĕ. Пĕри "Хаклă сасă" кĕнекере, ыттисем — "Чун тарасинче". Çавăнпа та малалла виçĕ кĕнеке çинчен çеç каласма сăлтав пур.

Тишкерĕве пуçличчен тĕс çинчен аса илер-ха. Мĕн вăл тĕс, физика ун çинчен мĕн калать? Чи малтан çапла каламалла: тĕс çутă çинче çеç палăрать, тĕттĕмре пурте пĕрпек — хура. Çутăсăр пурнăç çук — тĕссене уйăрса илме те вăлах пулăшать. Тĕс пирĕн пурнăçра пысăк вырăн йышăнать. Çутçанталăкра эпир тĕсе куçпа куратпăр. Тĕс — йĕри-

тавралăха ăнланма пулăшакан япала. Çын куç урлă 80-90 процент информаци илнине шута илсен — тĕс пĕлтерĕшĕ пысăк.

Çынсем тĕссемпе авалтанах кăсăкланнă, ун çинчен нумайрах пĕлесшĕн тăрăшнă. Авалхи Грецирех çутăпа тĕс хушшинче çыхăну пуррине пĕлнĕ. Ăслăраххисем тĕссен шкалине тума хăтланнă, хурапа шурра — тĕссен полюсĕсем тесе палăртнă. Каярах та историре нумай çын тĕссемпе кăсăкланнă, çĕнĕ япаласем çинчен çырса кăтартнă. Аристотель, сăмахран, тĕссем хушшинче çыхăну пуррине ăнланса илнĕ. Ньютон çичĕ тĕсе пĕлтерĕшĕсене кура çаврăм ăшне вырнаçтарнă. Гёте вара тĕссем çын ӳт-пуçне тата психологине витĕм кӳнине пĕлнĕ. Вăл тĕсе "çутă продукчĕ, кăмăл-сипете улăштаракан продукт" тенĕ. Ломоносов тĕссене пĕрлештерсе пăхнă, пурĕ виçĕ тĕп тĕс тесе каланă. Рунге тĕссене талккăшра çынсем усă курнă тăрăх вырнаçтарнă.

Çĕр çинчи кашни япалан хăйĕн тĕсĕ пур. Çакă япала çутта хăйĕнчен сирсе янинчен килет. Çутă хумĕсем тĕрлĕ частотапа выляни вара тĕссем кăларать. Апла пулсан кашни тĕсĕн хăйĕн частоти пур. Çутă составĕ тĕсе улăштарать. Тĕслĕхрен, василёк лайăх çутăра чакăр тĕслĕ курăнать, анчах краççын лампи çутинче хĕр-хĕлтĕм (фиолетовый) пулать. Çын тĕс çаврăмĕнче 180 сĕме уйăрма пултарать. Çак сĕмсем темиçе тĕс пĕрлешнипе пулаççĕ. Çаврăмра вара тăвату тĕп тĕс: сарă, симĕс, хĕрлĕ, кăвак. Тĕссем тĕрлĕ категорисене пайланаççĕ: сивĕ тата ăшă, çăмăл тата йывăр, типĕ тата нӳрĕ, çывăх тата инçе, лăпкă тата кăшкăрullă... Каларăмăр ĕнтĕ, тĕссем этем кăмăл-сипетне улăштарма пултараççĕ. Хĕрлĕ тĕс, сăмахран, канăççăрлантарать, çын час-час сывлама пуçлать, мускулсем хускалаççĕ, ĕçлеме тытăнаççĕ. Çавăнпа та канмалли е çывăрмалли пӳлĕмсенче хĕрлĕ тĕспе усă курмаççĕ. Кăвак тĕс вара урăхла — лăпкă. Вăл нерв тытăмне пусăрăнтарать, ыратнă туйăма чакарать. Çавăнпа та пурнăçра тĕс шайлашуллă пулмалла. Сăмахран, "Хурçă" ятлă кĕнеке хуплашкине илемлетнĕ чухне кĕрен е сарă тĕссемпе усă курма кирлĕ мар — сенкер е хура пулмалла. Хĕвеле те эпир хурапа е симĕспе ӳкерместпĕр — е сарăпа, е хĕрлĕпе. Пăр тесен куç умне е кăвак, е шурă тĕс тухать. Çапла вара çын ăнлавĕнче тĕссем япаласемпе çыхăннă.

Ӳкерӳçĕ хăйĕн картининче тĕссене палăртма сăрăсемпе усă курать, çыравçă вара — сăмахсемпе. Апла пулсан тĕсе пĕлтерекен сăмах — поэтăн мел-меслечĕ. Тĕрлĕ тĕслĕ сăрăсемпе сăрласа поэтсем пире тавралăхри илеме кăтартма тăрăшаççĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ Гёте: "Сăвăсем — тĕрлĕ тĕслĕ чӳречесем", — тенĕ. Çакна та палăртмалла: кашни халăхăн хăйĕн юратнă тĕсĕсем пур. Ун тупсăмĕ — авалхи ĕненӳре, мифологире, философире.

Халӗ В.Тараватӑн сӑввисенчи тӗссен тӑтӑшлӑхӗ ҫине куҫӑпӑр. Каларӑмӑр ӗнтӗ, авторӑн чӑвашла ҫырнӑ виҫӗ кӗнекине тишкерӗпӗр. Ҫакна та палӑртас: тишкӗрӗве кӗртмен "Ҫӳл тӳпере ҫич ҫӑлтӑр" сборникри "Чечек тӗртесшӗн эп чечексенчен" сӑвӑра тӗсе пӗлтерекен пилӗк сӑмах (кӗнеке 1996 ҫулта тухнӑ). Анчах автор ӑна "Чун тараси" кӗнекене ҫӗнетсе, урӑхлатса кӗртнӗ (ку кӗнеке 2001 ҫулта пичетленнӗ). Халӗ унта тӗсе палӑртакан виҫӗ сӑмах ҫеҫ юлнӑ. Эпӗ тишкерӳре кайранхи варианчӗпе усӑ куртӑм.

Мӗн паллӑ пулчӗ-ха Тарават сӑввисенче? Виҫӗ кӗнекере пурӗ 162 сӑвӑ, вӗсенче 7341 сӑмах. Тӗсе пӗлтерекеннисен шучӗ — 39. Вӑтамран 188 сӑмах пуҫне пӗрре — тӗсе пӗлтерекенни. Чи нумай тӗл пулакан тӗс — шурӑ, унпа 19 хут усӑ курнӑ. Иккӗмӗш вырӑнта — тӗксӗм (ку сӑмаха тӗсе пӗлтерекенни теме сӑлтав сахалтарах пулин те 6 хут ҫырнӑ). Хура тӗсе 4, сарра 3, хӗрле 2 хут кӗртнӗ. Ҫаплах пӗрер хут ҫырнисем те пур: кӗрен, кӑвак, сенкер, симӗс, ылтӑн (тӗс).

Чӑваш литературинче тӗсе палӑртакан сӑмахсен тӑтӑшлӑхне тӗпченӗ ӗҫ пур. Унта ултӑ автора кӗртнӗ: Ухсай, Хусанкай, Иванов, Ҫеҫпӗл, Яккусен, Теветкел. Ҫак авторсен тишкерӗве кӗртнӗ кӗнекисенче пурӗ сӑмахсен шучӗ 210 пинрен иртет. Вӗсенче тӗсе палӑртаканнисем — 1198. Апла пулсан вӑтамран 175 сӑмах пуҫне пӗрре тӗсе палӑртаканни тивет.

Поэтсем ҫинче кӑштах уйрӑммӑн чарӑнса илер-ха.

Ухсай Яккӑвӗн пурӗ 32 пине яхӑн сӑмахне тӗпченӗ (сӑввисем пурте кӗмен). Тӗсе палӑртаканнисен шучӗ — 277. Вӑтамран 115 сӑмах пуҫне тӗсе пӗлтерекенни — пӗрре. Шурӑ 90 хут тӗл пулать, сарӑ — 48, хура — 43.

Петӗр Хусанкайӑн 33 пине яхӑн сӑмахне тӗпченӗ. Тӗсе палӑртаканнисем — 150. Вӑтамран 220 сӑмах пуҫне пӗрре тӗсе палӑртаканни тивет. Шурӑ чи нумайӑи — 43.

Константин Ивановӑн "Ҫырнисен пуххинче" 45 пине яхӑн сӑмах. Тӗсе палӑртаканнисем 99. Чи нумайӑи — сарӑ (35 хут). Ҫеҫпӗл Мишшин "Ҫырнисен пуххинче" 12 пин ытларах сӑмах. Тӗсе палӑртаканнисем — 68. Кашни 176 сӑмах пуҫне тӗсе пӗлтерекен пӗр сӑмах лекет. Хӗрлӗ — чи нумайӑи. Петӗр Яккусен кӗнекисенчи тишкерӗве кӗртнӗ сӑвӑсенче сӑмахсен шучӗ 17 пин ҫурӑран иртет. Тӗсе палӑртаканнисем — 178. Вӑтамран 95 сӑмах пуҫне пӗри — тӗсе пӗлтерекенни. Сарӑ 37 хут тӗл пулать, шурӑ — 31.

Николай Теветкел кӗнекесенчи 71 пин ҫурра яхӑн сӑмахра тӗсе пӗлтерекеннисем — 426. Кашни 166 сӑмах пуҫне тӗсе пӗлтерекенни пӗрре. Ҫак ултӑ авторӑн тӗсе палӑртакан сӑмахсенче чи нумай тӗл

пулаканнисем: шурă — 306 хут, сарă — 231 хут, хура — 228, кăвак — 142, хĕрлĕ — 103.

Тĕсе палăртакан сăмахсен тăтăшлăхне тĕпчени çапла пĕтĕмлетӳсем тума май парать: чăваш çыравçисем ытларах шурă тĕспе усă кураççĕ; пирĕн халăхăн тăтăшах усă куракан тĕссем пиллĕк — шурă, сарă, хура, кăвак, хĕрлĕ.

Асăннă авторсенчен тĕсе пĕлтерекен сăмахсемпе пуринчен ытларах Петĕр Яккусен усă курать (96:1), К.Ивановăн цифрисен пропорцийĕ вара — 454:1. Ку автор тĕссемпе сахал усă курнине пĕлтерет. Вăтам кăтартăва (175:1) чи çывăххи — Çеçпĕл Мишши, унăн пропорцийĕ — 176:1. Çаксемпе танлаштарсан, В.Тарават сăввисенче те тĕс вылявĕ пысăк вырăн йышăннине палăртмалла. Тарават цифрисен пропорцийĕ — 188:1 — вăтам цифрăна питĕ çывăх, вĕсене 13 сăмах çеç уйăрса тăрать. В.Тарават чăваш çыравçисен йăлине пăсман — шурă тĕс чи нумайăи. Çав вăхăтрах автор "çутă" сăмахпа та анлăн усă курнă, ун пеккисем — 24. Чăнах та, ку тĕсе пĕлтерекен сăмах тесех калаймăпăр ун çинчен, çапах та шурă сĕм пур унта.

Тарават усă куракан тĕссем мĕне пĕлтереççĕ-ха? Шурă — çăмăл, йăвă мар, чакса пыракан тĕс. Ман шутпа, унпа поэтсем ырă малашлăха, ырă туйăма палăртма, талккăша анлатма усă кураççĕ. Тĕксĕм паллăмарлăха пĕлтерет, хура вара шуррине хирĕçлеме кирлĕ (хурапа шурă — полюссем теменччĕ-и-ха эпир?). Сарă илеме пĕлтерет, ăшă, типĕ, çăмăл, çывăх тĕс. Тĕссене палăртакан сăмахсем тĕрлĕ пĕлтерĕшпе çӳреççĕ: тӳрĕ, куçăмлă тата символ.

Сăмахран. "Асаннеçĕм Варвари" сăвăра çакăн пек йĕркесем пур:

*Хуран кукли тăвар-и?*
*Сар çупала çиер-и?*

Кунта "сар" сăмах куçăмлă пĕлтерĕшпе çӳрет, тĕсе çеç пĕлтермест. Сар çу тесе чăвашсем шăратнă услам çăва калаççĕ. Вăл питĕ тутлă.

Тепĕр тĕслĕх:

*Чиесем ним шавламасăр*
*Шурă пир тĕртеççĕ.*

Кунта та "шурă пир" тени — куçăмлă пĕлтерĕшпе.

Мĕнле пулсан та поэт тĕсе пĕлтерекен сăмаха вырăнлă лартни кирлĕ. Умлă-хыçлă тĕссем çырса кайни ниме те пĕлтермест-ха. Акă

К.Иванов тĕссемпе сайра усă курнă, анчах та ку япăх çырнине кăтартмасть-çке. Иванова эпир пурте юратса, киленсе вулатпăр.

Мĕн калама пулать-ха юлашкинчен? Кунта эпĕ литературăра тĕссем мĕнле вырăн йышăннине тишкерме пикентĕм. Тĕссем пурнăçа пуянлатаççĕ. Сăмахран, тĕссене уйăрайман çынсем пур (вĕсене “дальтониксем” теççĕ). Çутçанталăк, йĕри-тавралăх илемĕ вĕсемшĕн чылай чухăнрах, мĕншĕн тесен тĕнче вĕсемшĕн икĕ тĕсрен çеç тăрать: хура тата шурă. Литературăра та çавах. Вырăнлă усă курнă тĕсе пĕлтерекен сăмах хайлава илем, сĕткенлĕх кĕртет. Чĕмпĕр Ен çыравçин В.Тараватăн чăвашла çырнă сăввисене пăхса тухсан çакна калама май пур: автор тĕссемпе усă курассипе чăваш литературинчи вăтам цифрăна çывăх тăрать. Чăваш поэчĕсен чи анлă усă куракан тĕсĕ — шурă, В.Тараватăн та çавах. Вăл авалтан килекен традицие пăсман. Унăн сăввисенче тĕс вылявĕ пысăк вырăн йышăнать, тĕссем вырăнлă тăраççĕ, хайлавсене пуянлатаççĕ. Тӳрĕ тата куçăмлă пĕлтерĕшсемпе те ăнăçлă усă курма пĕлнĕ автор хăйĕн сăввисенче.

# Хăвна ху вăйлă пулма пулăш!

Çын хуйха ӳкнĕ: вăл лутра пӳллĕ...

Ыттисенчен начар пулас, кая юлас килмест-çке. Ӳт-пĕве хушу парса та ӳстерейместĕн. Пурнăçра вара çынсемпе тан пымалла... Мĕн тумалла?

Çакăн пек йывăрлăхпа тĕл пулать «Помоги себе стать сильным» кĕнеке авторĕ Николай Тимряков. Кунта вăл хăй мĕнле нушаланнине, мĕн-мĕн тӳссе ирттернине çырса кăтартать.

Кĕнекери тĕп сăнара саккăрмĕш класра вĕреннĕ чух пĕр хĕрача кăмăлне каять. Каччă ăна чунне уçса парать. Хуравĕ: «Эсĕ пĕчĕккĕ!». Пуçран мăлатукпа çапнă пекех ку... Пĕтĕм шанчăк çухалать.

Кашни çынра тивĕçли те, çитменни те пур. Халĕ унăн ăшĕнчи вăйхăвачĕпе усă курса мĕн пуррине шыраса тупмалла, çавсемпе пысăк пурнăçа сукмак хывмалла.

Пурнăçра нумай вĕренмелле, кĕнекесем шĕкĕлчемелле. Чаплă çынсем çинчен нумай вулать йĕкĕт, спорт литературипе интересленет. Каçсерен çынсенчен вăрттăн (ялта вĕт, кунта ун пек хăтланаканран кулма пултараççĕ!) гимнастика снарячĕсем çинче хусканусем тума хăнăхать. Ял хĕррине тухса чупкалама тытăнать.

Ак хайхи – пĕрремĕш çитĕнӳ: районта 15 çулхи Коля хăйĕн тантăшĕсем хушшинче виçĕ енлĕ ăмăртура чи мала тухать! Çапла вара вăл икĕ кайăка харăс тытать: хăйĕн ăшĕнчи шанчăксăрлăха сирсе ярать, хăйне хăй ĕненме пуçлать, çав вăхăтрах ăна тантăшĕсем хисеплеме тытăнаççĕ. Вăл чемпион вĕт!

Пуçламăшĕ пур. Николай ăнланать: сан хуйху-суйху сансăр пуçне никам чĕрине те ыраттармасть. Хăвна ху тĕпчемелле, Турă панă вăйхăватпа усă курмалла. Эп ыттисенчен пĕчĕккĕ тесе хурланса, нăйкăшса ларни – нимĕн те памасть. Пуçĕпех спорт çине куçать вăл. Чупать, чупать, чупать...

Хăйне ытларах пĕлес тесе кун кĕнеки çырса пыма тытăнать. Сăмахран, 1974 çулхи кăрлач уйăхĕн 18-мĕшĕнче çапла çырать: «Çын начар условисене хăй тăвать. Хăйĕн хăтланчăкĕсемпе». Кăрлачăн 25-мĕшĕ: «Çынна мĕн те пулин çирĕплетсе парас тесен ăсна ытла кăтартма кирлĕ мар, çакă ыттисене хурлантарать, мĕскĕнлетет».

Николай пуçĕнче пĕр тĕллев – çынсем ун лутра пĕвне ан асăрхаччăр. Ун пек пулма вара çыннăн пысăк çитĕнӳсем тумалла, ыттисенчен кая мар пулмалла. Пысăк тĕллев патне пыма вăл хăй ăшĕнче çирĕп йĕрке тăвать: чирлеме юрамасть; никама та ăмăртура выляса ямалла мар;

тренировкăсене мĕнле çанталăкра та ирттермелле; сакăр сехетрен кая çывăрмалла мар; хăвна тирпейлĕ, сăпайлă тытмалла; вăхăта усăллă кăна ирттермелле, пуш калаçусенчен пăрăнмалла; чун туртман çынсемпе тĕл пулма тăрăшмалла мар; тавлашу ыррине кӳмест; çынсен лайăх енĕсене шырамалла; музейсене, классика концерчĕсене çӳремелле; хăвна ху воспитани памалла; çынсене хисеплемелле, итле пĕлмелле, анчах хăвăн шухăшу пулмалла; çынсене ырă тума тăрăшмалла; пур çĕрте те йĕркеллĕ пулмалла…

Пурте пĕлекен япаласемех, анчах вĕсене çирĕп тытса пырасси – пачах урăхла. Хăшне-пĕрне шăл çыртса тумалла. Унсăрăн – пысăк тĕллев патне пыраймăн.

Тăршшĕпе çырса каяс пулсан ку  Николай Тимряковăн пурнăç тытăмĕ, методика пособийĕ, философи кĕнеки.

Чи кирли – çын хăйĕн тĕллевне пурнăçлани. Ун патне – спорт урлă. Салтакран Николай мĕнпур нормативсене «отлично» паллăпа тултарса таврăнать. Пединститута кĕрет. Чупассипе СССР чемпионĕ пулса тăрать, бокспа – маçтăр кандидачĕ, кĕрешсе – маçтăр кандидачĕ, йĕлтĕрпе чупассипе – 1 разряд, гимнастикăпа – 2 разряд… Унтан тепĕр аслă вĕренӳ заведенийĕ – çар институчĕ. 29 çулта офицер пулса тăрать. Çар службине ăна тата хытăрах пиçĕхтерет. Эсĕ интереслĕ çын пулмасан звани те, эс миçере пулни те никама та кирлĕ мар. Çынсене усă кӳр эс – вара кирлĕ пулăн. Çакна лайăх ăнкарать вăл.

Спорта пула кĕнеке авторĕ тĕнче курса çӳренĕ (Куба таранах), Раççейри 400 ытла хулара пулнă. Чапа тухнă. Подполковник звани илнĕ. Тĕнче класлă спорт маçтăрĕ пулса тăнă.

Ку кĕнеке паянхи çамрăксене питĕ усăллă, ÇЫННА тухмалли методика пособийĕ. Çакăн пек жанрпа (ăна автобиографилле очерк темелле пуль) пирĕн облаçри чăвашсенчен никам та кĕнеке çырманччĕ-ха. Тимряков – пĕрремĕш! Ман шутпа, кунта Дейл Карнеги кĕнеки витĕмĕ те пур пек. Мĕн тесен те ку кĕнекене вуласа тухнă хыççăн çакна питĕ лайăх ăнланатăн: ку пурнăçра эсĕ хăвна ху çеç пулăшма пултаратăн, пысăк çитĕнӳсем патне çитме, паллă çын пулма шут тытрăн пулсан сана никам та чăрмантараймасть.

Çавăнпа та хăвна ху ВĂЙЛĂ пулма пулăш! Вăйлă çынсем пурнăçра пысăк картлашка çине хăпарма пултараççĕ.

Пĕвĕпе лутра пулсан та…

# Савруков çиле хирĕç, хĕвел еннелле пырать

Н.Т.Савруков — ăслăлăх тĕнчинче паллă çын. Вăл обществăлла деятель тата меценат пулса та палăрчĕ. Халăх валли усăллă ĕçсем нумай турĕ. Халĕ те çав çулпах пырать. Çакăн çинчен авторăн «Ветер в лицо» кĕнекин 3-мĕш тата 4-мĕш пайĕсене вуласа тухсан пĕлетĕн. Кĕнеке ячĕ çак çыннăн кăмăл-туйăмне уçса парать: пысăк тĕллевлĕ, пултаруллă, парăнма юратмасть, пĕрре тăнă çул çинчен пăрăнмасть.

Кĕнекере авторăн выступленийĕсемпе пĕрлех ун çинчен паллă çынсем каланисем пур. Ваттисем калашле, ĕçне кура хисепĕ. Ĕçĕсем вара унăн пысăк: наука монографийĕсем, наукăри çĕнĕлĕхсем тĕлĕнтереççĕ.

Николай Тарасович пурнăçĕн пĕр пайĕ Чĕмпĕр çĕрĕпе те çыхăннă. И.Я.Яковлев шкулĕнче вăл Шупашкарти экономикăпа менеджмент институчĕн филиалне уçрĕ. Çакна пула мĕн чухлĕ чăваш яш-кĕрĕмĕ аслă пĕлӳ илме пултарчĕ! Шăпах Н.Т.Савруков пуçарнипе Чĕмпĕр чăваш шкул территорине вун-вун çул пуçтарăнса пынă çӳп-çапран тасатас ĕç пуçланчĕ. Çаплах Н.Т.Савруков ун территорине тимĕр картапа тытса тухрĕ. Шкул сăн-сăпатне палăрмаллах улăштарчĕ. Хăйĕн ятне ырăпа асăнмалăх туса хăварчĕ. Ахаль каламаççĕ çав: генисем хăй саманинче çеç мар, ĕмĕрех пурăнаççĕ.

Автор тăван ялĕ, ашшĕ-амăшĕ, тăванĕсем çинчен аса илнине киленсе вулатăн. Вăл ашшĕ-амăшĕпе мăнаçланать. Çапла пулсан кăна вĕсенчен лайăххине илме пулать. Атте-аннене хисеплесен кăна чăн-чăн ÇЫН пулатăн. Йĕркесенче мĕн чухлĕ ăшă туйăм! Автор вулакансене чунне уçса парать. Ку кĕнеке пурнăç çулне суйласа илме хатĕрленекен çамрăксемшĕн питĕ усăллă.

Инçетри ялта çуралса ӳснĕ чăваш ачи нимле йывăрлăхсене пăхмасăр пурнăçра картлашка çинчен картлашка çине улăхса пынă, çĕнĕрен çĕнĕ çитĕнӳсем тунă. Çапла вара хăй çуралнă çĕршывĕнне те, чăваш халăхĕнне те сумне ӳстернĕ. Вăл çиле хирĕç, хĕвел еннелле утнă. Хĕвел вара ун валли тухнă!

Халăхра çакăн пек сăмах çӳрет: вăйлă шухăшпа пурăннă чухне — çын вăйлă! Николай Тарасович Савруков яланах вăйлă шухăшсемпе пурăннă: çамрăк ăрăва тивĕçлĕ пĕлӳ парасси, çынсене ырă кӳресси, пулăшу кирлĕ пулсан алă тăсса пама хатĕрри.

Ку вара этемлĕх аталанăвĕн çулĕ.

# ЧĔМПĔР ТĂРĂХĔНЧИ ЧĂВАШ НАЦИ ЮХĂМĔН АТАЛАНĂВĔ

## Милли — «Атăл юрри» журнала пуçараканĕ



*А.Милли*
*(И.Н.Еграшкина ӳкерчĕкĕ)*

И.Я.Яковлев шкулĕнче вĕренекенсен пĕр ушкăнĕ 1920 çулхи ака уйăхĕн 29-мĕшĕнче Чĕмпĕрте йĕркелӳ пухăвĕ пуçтарать. Тĕллевĕ – «Чăвашла çыракансен ушкăнĕ» туса хурасси. Пухăва пурĕ 40-50 çын килет. Вĕсем Алексей Милли (чăн хушамачĕ Прокопьев) докладне итлеççĕ, устав йышăнаççĕ, ертсе пыма Канаш уйăраççĕ. Канашра: Милли (председателĕ), Ваçанкка (секретарĕ), Элкер, Шелепи, Аверкиев (членĕсем).

Çав çулхи çу уйăхĕн 31-мĕшĕнче А.Милли Чĕмпĕрте «Чăвашла çыракансен ушкăнĕ» йĕркелесе ярать.

Çак организаци тăрăшнипе Чĕмпĕрте 1920 тата 1921 çулсенче «Атăл юрри» журналăн икĕ номерĕ тухать.

Каярах çак «Ушкăн» тата «Канаш» союзĕн никĕсĕсем çинче чăваш писателĕсен союзĕ йĕркеленет.

«Чĕмпĕрти чăвашла çыракансен ушкăнĕн» шăпи тикĕс килмест. Ун ертӳçине – А.Миллие пĕр вĕçĕмсĕр сăлтавсем тупа-тупа айăпласçĕ: е «чăваш литературине вырăс литературинчен уйăрасшăн», е «ун программинче революци лозунгĕсем палăрмаççĕ», е «авалăха идеализацилени курăнать».

Устава лайăх вуласан паллă: чăваш литературине хупăнчăк çулĕпе ярасси пирки сăмах пымасть. Çав хушăрах Милли литературăмăрăн хăйевĕрлĕхĕшĕн, ăна пин-пин çул упраннă сăмахлăх сĕткенĕпе вăй парса аталантарма тăрăшни куç умĕнчех. Уставра халăхăмăрăн авалхи пурнăçне сăнлакан текстсене кăна мар, унăн çав 20-мĕш çулсенчи улшăнăвĕсене кăтартаканнисене те пухма кирли çинчен каланă. Эппин, общество тĕллевĕ авалăха идеализациленинче пулни тени тĕрĕс мар. Анчах критиклекеннисем ытла тарăна кайса шухăшласшăнах пулман, айăплама çеç пултарнă.

Кӗскен каласан, А.Милли йӗркеленӗ «Чӑваш ҫырӑвӗн ушкӑнне» айӑплакансен пӗр аргуменчӗ те тӳрре тухмасть паян.

Тапӑнакансем Миллин псевдонимӗ ҫумне те ҫыпӑҫма пӑхаҫҫӗ. «Вӑл националист пулни унӑн вӑрттӑн ятӗнче те аван палӑрать, тутар чӗлхинче «милли» тени ҫав ӑнлава пӗлтерет», — теҫҫӗ вӗсем. Кунта кӑштах ӑнлантарни кирлӗ. Тутарла «националист» сӑмаха «миллетче» теҫҫӗ, «милли» тени вара «нациллӗ» пӗлтерӗшпе ҫӳрет.

Ҫапах та Милли хӑйӗн псевдонимне нацилӗхе палӑртасшӑн ҫеҫ илмен. «Милли» тесе вӗсен пӗтӗм таврашне каланӑ иккен. Алексей Прокопьевичӑн ашшӗне те ялта Милли Пракки тенӗ.

«Ушкӑна» ҫапса аркатасшӑн ҫынсем «ырми-канми» тӑрӑшаҫҫӗ (сӑмахран, Н.В.Шупуҫҫынни, Д.С.Элмен, Н.Я.Золотов). Вӗсем хӑйсен таса мар шухӑшне парти интересӗпе витӗнсе пурнӑҫа кӗртеҫҫӗ: Милли литературӑна парти ертсе пырассине йышӑнмасть имӗш. Юлашкинчен вара 1923 ҫулта конференцие Троян учӗсем пек кӗрсе ӑна аркатса тӑкаҫҫӗ.

Акӑ «Милли обществинчен – «Канаш союзне» ӗҫӗнче С.Элкер писатель мӗн ҫырать: «Ҫав вӑхӑтрах Милли хӑй обществи ҫине Элменпе Золотов енчен сиввӗн пӑхнине, унӑн программине тиркенине те аванах пӗлсе тӑрать. Акӑ пӗлетпӗр: эпир конференци пухма хатӗрленнӗ тӗлеллех, июнь уйӑхӗнче, Элменпе Николай Золотов та хӑйсем уйрӑм чӑваш писателӗсен ушкӑнӗ тума хатӗрленеҫҫӗ иккен».

Конференци уҫӑлнӑ кунсенче Элменпе Н.Золотов — А.Милли «Ушкӑнне» хирӗҫле «Канаш» союзӗ туса хураҫҫӗ, ҫапла майпа организацие кӗрсе каяҫҫӗ. Мӗнле майпа ҫӗнтереҫҫӗ-ха вӗсем? Конференцие саламлатпӑр тесе Милли хыҫҫӑнах сӑмах илеҫҫӗ. Салам сӑмахне пӗтерсенех сасартӑк тиркеме, обществине тустарма тытӑнаҫҫӗ. Милли аптраса ӳкет, хӑйӗн программине хӳтӗлесшӗн пулать, анчах ӑна лайӑххӑн калама ирӗк памаҫҫӗ.

Милли «Ушкӑнӗпе» «Канаш» союзӗн программинче ҫакӑн пек уйрӑмлӑх пулнӑ. «Канаш» союзӗ «Канаш» хаҫат платформи ҫине тӑрса чӑваш илемлӗ литературинчи класлӑ ҫул-йӗршӗн, малашне социализмла пурнӑҫ тӑвассишӗн кӗрешес тесе задача лартнӑ. Милли вара нимӗнле класлӑха асӑрхамасӑр чӑваш илемлӗ литературишӗн пурте пӗрле (националистсем те, кулакла писательсем те) тӑрӑшса ӗҫлеме палӑртнӑ. Халӑхӑмӑрӑн ырӑ йӑлисемпе фольклорӗн хакне эпир паян пӗлсе ҫитрӗмӗр ӗнтӗ. Ҫавӑнпа та ун чухне Н.Золотов мар, А.Миллиех тӗрӗс пулни паллӑ. Вӑл халӑх сӑмахлӑхне, тумне, археологи палӑкӗсене ялсем тӑрӑх пӗччен пуҫтарса ҫӳренӗ. 1922 ҫулта 8 уйӑх экспедицире ҫӳресе Шупашкара 400 кӗпе, 3 пин ҫавра

юрă пухса таврăннă. Нумай япалине Чĕмпĕрти педтехникум музейне панă. 1923 çулта Пĕтĕм Союзри ял хуçалăх выставкине хутшăннă, унта пĕрремĕш степеньлĕ диплом илме тивĕç пулнă. Шăп çак командировка хыççăн вăл «Чăваш çырăвĕн ушкăнне» чăмăртама конференци хатĕрлет. Вăл мĕнпе вĕçленнине пĕлетпĕр ĕнтĕ.

Алексей Прокопьевич çавăн пекех 1923 çулта Шупашкарта Чăваш çĕршывне сăнакансен ушкăнне йĕркеленĕ. Ку ушкăн питĕ пысăк ĕçсем тунă: Чăваш наци музейне, Кĕнеке палатине, тĕпчев институтне тата ытти учрежденисене никĕслесе хăварнă.

Ку çын çинчен аванрах пĕлер-ха. Алексей Прокопьевич Прокопьев (Милли) 1894 çулта Каçал тăрăхĕнчи (хальхи Комсомольски районĕ) Шурут Нурăс ялĕнче çуралнă.

1917 çулта А.Милли Чăваш наци обществин «Хыпар» ятлă хаçатĕнче ĕçлет. «Хыпар» хупăннă хыççăн вăл «Канаш» сотрудникĕ пулать. 1918 çулта «Ана» журналта та ĕçлесе пăхать. Çав вăхăтра вăл коммунистсен партине кĕрет. Çулталăка яхăн (1919 çулхи çурлаччен) «Чухăнсен сасси» хаçата редакцилесе кăларать, нумай çамрăка (çав шутра Н.Золотов та) пичет ĕçне явăçтарать.

А.Милли Хĕвелтухăç фрончĕн 5-мĕш çарĕпе Хусантан Çĕпĕре çитиччен çӳренĕ, «Чухăнсен сассине» кăларса сивĕ окопри хĕрлĕармеецсен чунĕсене ăшăтма пулăшнă.

1919 çулхи çурла уйăхĕнчен 1920 çулхи ака уйăхĕччен поэт тăван ялĕнче пурăнма пултарнă. Унта парти ячейки пулман-ха ун чух. Çавăнпа та парти учетне тăрайман. Виçĕ уйăхчен тăмасан коммунистран тухнă тесе шутланă вăл вăхăтра. Миллин те çапла пулса тухать.

1920 çулхи çу уйăхĕнче А.Милли Чĕмпĕрте пулни паллă. Кунта вăл 1922 çулхи пуш уйăхĕччен пурăнать. Кĕпĕрнери халăх вĕрентĕвĕн пайĕн чăваш секцине ертсе пырать, чăваш институтĕнче вăй хурать, музей йĕркелесе ярать. Çак çулах Шупашкара куçать, архив бюровĕн заведующийĕнче ĕçлет.

Чăваш литературинче авторитарлă шухăшлав çирĕпленсе çитнĕ пирки А.Миллин Шупашкартан пуçĕпех тухса кайма тивет (ун шăпине С.Коричев, Д.Петров-Юман пайлаççĕ). Çаксем виççĕн Мускаври культура обществи йĕркелеççĕ. Анчах ушкăнлăх, авторитарлăх татах та вăйланать 1920-мĕш çулсен вĕçнелле. Çавăнпа культура обществине те салатаççĕ.

Куратпăр ĕнтĕ: Алексей Милли — творчество çынни, йĕркелӳçĕ, этнограф, публицист, поэт пулнă (1919 çулта ун «Ирĕклĕх юррисем» ятлă кĕнеки тухать). Ĕмĕр тăршшĕпе вăл халăхшăн усăллă ĕçсем тума тăрăшнă. Сахал мар тунă-ха. Нумайрах усă кӳме çывхарса килекен синкер самани чăрмантарнă. Ăна «халăх тăшманĕ» тесе айăпланă, вăл 1942 çулта вилнĕ.

## Литкружоксенчен – писательсен союзне

1930-мӗш çулсен пуçламӑшӗнче чӑваш çыравçисем тӗрлӗ вырӑнсенче ушкӑнсене пӗрлешеççӗ. Сапаланнӑ çыравçӑсем хушшинче йӗркелӳ ӗçне тытса пыма ансат пулман. Чӑваш çыравçисен ассоциацине кӑна шутласан та унӑн уйрӑмӗсем Шупашкарта, Мускавра, Хусанта, Ӗпхӳре, Самарта,Саратовра тата ытти çӗрте пулнӑ. Кашни харпӑр хай альманахне кӑларса тӑнӑ: «Пирӗн çул» (Мускав,1930), «Утӑм» (Хусан, 1928-1931), «Вӑтам Атӑл» (Самар,1931-1935), «Хӗрлӗ Урал» (Ӗпхӳ, 1934-1936) тата ыттисем те.

1930 çул тӗлне чӑваш çыравçисен «Канаш» союзӗпе çыхӑнса тӑракан литература кружокӗсем 22, секцисем 8 пулнӑ. Вӗсенче 300 çын ытла тӑнӑ. Кунсӑр пуçне аслӑ шкулсенче литкружоксем те ӗçленӗ.

Çак вӑхӑтри журналсенче çыравçӑсем пичетленсе вӑй илнӗ, чапа тухнӑ. Шупашкарти педтехникум литкружокӗн членӗсен шутӗнче Уйӑп Мишши, Митта Ваçлейӗ пулнӑ. «Утӑм» альманахра Н.Шелепи, Г.Комиссаров-Вантер, П.Хусанкай, Ухсай Яккӑвӗ çырнисем тухса тӑнӑ. «Вӑтам Атӑлта» — В.Паймен, Тихӑн Петӗркки, В.Бараев-Сӗркке, Хветӗр Уяр, С.Шавлы тата ыттисем те.

1932 çулта Мускавра «Литература организацийӗсене урӑхлатасси çинчен» постановлени тухать. Ун тӗллевӗ – вак ушкӑнсене пӗтерсе пӗр пӗтӗм организаци – Совет писателӗсен союзне йӗркелесси. Çак хум Чӑваш çӗршывне те килсе çапать. Чӑваш писателӗсен союзне йӗркелес тӗлӗшпе ӗçлекен оргкомитет туса хураççӗ. Унта 15 çыравçа суйлаççӗ. Комитет президиумне пилӗк çын кӗрет (П.Иванов—«Канаш» хаçатран, А.Петокки – оргкомитет председателӗн çумӗ, Н.Патман – секретарь, Н.Ваçанкка, Л.Лашман). Каярахпа комитета ертсе пыма Н.Шупуççыннине, унтан Н.Данилова суйлаççӗ.

Çӗршывра пӗтӗм совет писателӗсен пӗрлешӳллӗ съездне хатӗрленес ӗç пуçланса каять.

1934 çулхи çӗртме (июнь) уйӑхӗн 11—13-мӗшӗсенче çӗнӗ союза пӗрлешнӗ чӑваш çыравçисен 1-мӗш съезчӗ пулса иртет. Союз правленине çаксем кӗреççӗ: М.Данилов-Чалтун, Н.Данилов, А.Золотов, И.Максимов-Кошкинский, М.Трубина, С.Элкер. Ревкомисси членӗсем: И.Мучи, П.Осипов, Н.Ваçанкка.

Писательсен союзӗн аллине «Сунтал», «Капкӑн» журналсем, «Трактор» (1936 çултанпа – «Илемлӗ литература») альманах куçаççӗ.

Мускавра 1934 çулхи утӑ (июль) уйӑхӗнче Пӗтӗм Союзри писательсен 1-мӗш съезчӗ пухӑнать. Унта чӑваш çыравçисен ячӗпе А.Золотов сӑмах тухса калать. Унпа пӗрле съездра Н.Шупуççынни, М.Данилов-Чалтун, М.Трубина, И.Максимов-Кошкинский, Г.Молостовкин, П.Хусанкай пулнӑ.

# Пӗрремӗш пухӑва кайнӑ Чӗмпӗр Ен ҫыравҫисем

1934 ҫулхи ҫӗртме (июнь) уйӑхӗн 11—13-мӗшӗсенче Шупашкарта Чӑваш писателӗсен союзне йӗркеленӗ.Унта 70 ҫынна яхӑн пухӑннӑ. Историе кӗрсе юлнӑ ҫак съезда Чӗмпӗр Ен ҫыравҫисем те тӑваттӑн хутшӑннӑ. Акӑ вӗсем:

Степан Митрофанович Авксентьев-Лашман, 1895 ҫулта Шӑмӑршӑ тӑрӑхӗнчи Патирек ялӗнче ҫуралнӑ. Чӗмпӗр чӑваш шкулӗнче вӗреннӗ. Кӗпӗрнери ҫутӗҫ пайӗнчи чӑваш уйрӑмӗн инструкторӗ пулнӑ. Чӗмпӗрте тухса тӑнӑ «Ҫӗнӗ пурнӑҫ» хаҫатӑн (1918-1920 ҫулсем) пӗрремӗш редакторӗ. 12 кӗнеке авторӗ. Репресси тип-шарне тӳссе ирттернӗ. 1986 ҫулта вилнӗ.

Николай Фёдорович Данилов, 1901 ҫулта Чӗмпӗрте ҫуралнӑ. Чӗмпӗр чӑваш шкулӗнче тата институтӗнче вӗреннӗ. «Канаш» хаҫат редакцийӗнче,ӑслӑлӑх тӗпчев институтӗнче, Писательсен союзӗнче ӗҫленӗ. Халӑх сӑмахлӑхне тата чӑваш ҫыравҫисен произведенийӗсене тӗпчесе чылай ӗҫ ҫырнӑ.1969 ҫулта вилнӗ.

Гаврил Александрович Молостовкин,1900 ҫулта хальхи Чӑнлӑ районӗнчи Кунтикав ялӗнче ҫуралнӑ. Чӗмпӗр чӑваш шкулӗнче тата пединститутра вӗреннӗ. Мускавра чӑвашла тухса тӑракан “Коммунар» хаҫат редакторӗ пулнӑ. Чӑваш кӗнеке издательствин редакторӗнче ӗҫленӗ. Вырӑсларан куҫарса 10 роман ытла пичетленӗ. 1958 ҫулта вилнӗ.

Иван Игнатьевич Кураков (Курак Иванӗ), 1889 ҫулта Чӑваш Кӑлаткӑ ялӗнче ҫуралнӑ. Ялти шкул хыҫҫӑн Аҫтӑрханти художество шкулӗнче вӗреннӗ. Граждан вӑрҫине хутшӑннӑ. 1926 ҫулта «Сӑвӑсем» ятлӑ кӗнеке кӑларнӑ. 1942 ҫулта вилнӗ.

Съездра Чӗмпӗр Ен делегаци ҫыравҫине Николай Фёдорович Данилова Чӑваш писателӗсен союзӗн пӗрремӗш председательне суйланӑ.

Ку пухура Чӗмпӗр чӑваш шкулӗнче тӗрлӗ вӑхӑтра вӗреннӗ ҫыравҫӑсем те пулнӑ: Николай Васильевич Васильев-Шупуҫҫынни, Аркадий Иванович Золотов, Марфа Дмитриевна Трубина (Трубина Мархви), Иоаким Степанович Максимов-Кошкинский, Николай Кириллович Кириллов- Патман, Емельян Захарович Захаров, Василий Егорович Митта (Митта Ваҫлейӗ).

## «Атӑл юрри» журнал историйӗ

Октябрьти революци хыҫҫӑн Атӑлпа Урал хушшинче пурӑнакан чӑваш, тутар, пушкӑрт, мари, мордва халӑхӗсем хӑйсен кулленхи пурнӑҫне, хуҫалӑхри ӗҫ-хӗлне, культурине, вӗрентӗвне ҫӗнӗлле йӗркелеме тытӑннӑ. Хусан, Ӗпхӳ, Чӗмпӗр, Саратов кӗпӗрнисенче тӗпленсе пурӑнакан чӑвашсен хушшинче хуҫалӑх, политика, вӗрентӳ, культура ыйтӑвӗсене тишкерсе чылай съезд, конференци ирттернӗ.

1868 ҫулта И.Я.Яковлев йӗркеленӗ Чӗмпӗр чӑваш шкулӗ тӑван халӑхӑн чи малтанхи вӗренӳ заведенийӗ пулнӑ.

Наци комиссариачӗн Чӑваш уйрӑмӗ тӑрӑшнипе 1920 ҫулта учительсем хатӗрлекен Чӗмпӗр чӑваш семинарине халӑха вӗрентес ӗҫ институчӗн статусне панӑ. Ҫакӑ унта ӗҫлекен преподавательсемпе профессорсене хавхалантарнӑ, вӗренӳ тата культура шайне ӳстерме пулӑшнӑ. Кунта И.Я.Яковлевӑн аслӑ ывӑлӗ А.И.Яковлев профессор истори вӗрентнӗ, чӑваш чӗлхине тӗпчесе чапа тухнӑ Н.И.Ашмарин виҫӗ ҫул ӗҫленӗ.

Чӑваш студенчӗсен хастар ушкӑнӗ 1920 ҫулхи ҫу уйӑхӗн 31-мӗшӗнче «Чӗмпӗрте чӑвашла ҫыракансен ушкӑнӗ» ятлӑ пӗрлешӳ йӗркелет. Тӗрӗссипе, ку тӑван чӗлхепе литературӑна юратакан, уншӑн хастар ӗҫлеме ӗмӗтленекен студентсен литература кружокӗ пулнӑ.

1920 ҫулхи юпа уйӑхӗн 4-мӗшӗнче кружок членӗсен анлӑ пухӑвне ирттернӗ. Унта хӑйсем ҫырнӑ хайлавсене тата чӑваш ялӗсенче пухнӑ фольклор материалӗсене – юрӑсене, юмахсене, халӑх йӑли-йӗрки тӗслӗхӗсене пухса «Юмах» ятлӑ журнал кӑларма палӑртса хунӑ. Юпан 9-мӗшӗнче ирттернӗ ларура ун ятне «Атӑл юрри» ятпа улӑштарма йышӑннӑ, редколлеги ушкӑнне суйланӑ. Ӑна Чӗмпӗрте тухса тӑнӑ чӑвашла хаҫатсенче ӗҫленӗ А.П.Прокопьев-Милли ертсе пынӑ.

Редколлеги йышӑннӑ тӑрӑх, «Атӑл юрри» журналӑн 1-мӗш номерӗ 1920 ҫулхине тухать. Номерте тӑватӑ хӑйне уйрӑм пай пур: «Юрӑсемпе халапсем», «Илемлӗ литература», «Пӗлӗмлӗ литература», «Тишкерӳ». Кунта халӑх сӑмахлӑхӗн паха тӗслӗхӗсем чылай пичетленнӗ. Чӑваш халӑхӗн ҫӗр ӗҫ уявӗ ҫинчен «Акатуй» очерк, К.В.Ивановӑн «Нарспи» поэмине тишкернӗ самаях пысӑк статья пур. Журнал ӗҫне Н.И.Ашмарин та хутшӑннӑ. Унӑн чӑваш чӗлхинчи сӑмахсен историйӗ ҫинчен ҫырнӑ «Ҫӗнӗ сӑмахсем» ятлӑ статья пичетленнӗ.




*«Атăл юрри» журналăн 1-мĕш номерĕн хуплашки.*

Тĕп редактор та хăйĕн хайлавĕсене çын умне кăларнă. Акă илер-ха унăн «Вăранăр!» сăввине. Ăна, ман шутпа, чăваш чанĕ теме пулать. Темиçе куплетне вуласа пăхар-ха:

*Атя, атя, часрах васка,*
*Утах эс те пирĕн хыçран:*
*Эпир пурте асапланса*
*Пурăнтăмăр мĕн авалтан.*

*Атăл çинчи культурлăха*
*Тапратмашкăн тĕмсĕлетпĕр,*
*Вĕреннĕ халăхсен хушшинче*
*Паллă вырăн йышăнасшăн.*

*Атьăр çав пытарнă таланта*
*Пурте пĕрле харăс тăрса*
*Тытăнар-ха чавалама,*
*Çутçанталăка кăтартма...*

Сăвă техники, теорийĕ енчен кунта çитменлĕхсем, кăлтăксем çук мар ĕнтĕ. Шухăшĕ вăйлă: çынсене хавхалантарать, çунатлантарать. Чи пахи вара — ку ыйту паян та çивĕч тăрать, обществăшăн кирлĕ.

Çаплах А.Миллин «Чăвашла çыракансен ушкăнĕ мĕншĕн кирлĕ» статья та пур. Кунта вăл каллех питĕ çивĕч ыйту хускатать. Унăн тĕп шухăшĕ: чăвашсем мĕнле çулпа кайĕç — халăх хуйхи-суйхине ăнланса, шухăшне витĕр пĕлсе хăйсем çул тăвĕç-и е янтă ют культурăна хисеплесе пурăнĕç-и?

Акă мĕн çырать автор: «... Эпир те, чăвашсем, хамăр камне пĕлнинчен пуçласан тин культура йышăннипе çеç культурлă пулĕç тени — çавă тĕнчери халăхсен историне, çутçанталăк йĕркисене хирĕç пырать. Çапла калани вăл: чăвашсем ним тума та пултармаççĕ, вĕсем пĕтмелли халăх тени пулать. Çак юлашки шухăшпа ним тума пултарайман, çын янтипе пурăнма юратакан паразитлĕ, упăтеленекен чăваш анчах килĕшме пултарĕ. Ĕçлесшĕн çунакан, харсăр чăваш ниепле те çав кахалсен шухăшĕпе килĕшме пултараймасть. Вăл мĕн те пулсан хăйĕнчен тăвасшăнах çунса тăрать, унсăрăн çутçанталăка çурални те ахалех пек туйăнса тăрать... Чăвашăн культурлă малашлăхĕ çавăн пек пултаруллă, шухăшласа ĕçлекен чăвашсен аллинче.

Чĕмпĕрти Чăвашла Çыракансен Ушкăнĕ çавăн пек шухăшласа ĕçлекен Чăваш Ен ялавне çĕклесшĕн шухăшлать, вĕсене «Атăл юрри» тавра пĕрлештересшĕн вăл».

Ку журнӑлӑн 2-мӗш номерӗ 1921 çулта тухнӑ. Çак издание кун çути курма Чӗмпӗр кӗпӗрнин халӑха вӗрентес ӗç пайӗн чӑваш уйрӑмӗ пулӑшнӑ, укçа панӑ.

Журнал авторӗсен хушшинче А.Иванов, М.Ют, М.Егоров, А.Етливан хушаматсем тӗл пулаççӗ. Материалсен ытларах пайӗ – юмахсем, салтак юррисем, хӗр хӳхлев юррисем, легендӑсем. Журнал хуплашкинчи ӳкерчӗкне манӑн тӑван ялта — Çӗнӗ Йӗлмелӗнче — çуралса ӳснӗ Д.С.Архипов ӳкерӳçӗ ӳкернӗ.

«Атӑл юррин» виççӗмӗш номерне те хатӗрленӗ пулнӑ, унӑн алçырӑвӗсем Чӑваш Республикин патшалӑх архивӗнче упранаççӗ. Эпӗ унта пултӑм, журнала, тӗрӗсрех каласан – алçырӑвне, пӑхса тухрӑм. Унта калаçу хурт-хӑмӑр ӗрчетесси пирки пырать. Мӗнле-тӗр сӑлтава пула журнал кун çути курайман. Каярах ун тӗп редаторне А.Миллие тапӑнма, хӗсӗрлеме пуçлаççӗ. Вӑл 1922 çулхи пуш уйӑхӗнче Чӗмпӗртен тухса каять. Çапла вара «Атӑл юрри» журнал икӗ номер тухнипех çырлахать.

Çак журналӑн 3-мӗш номерӗ 2000 çулта тухрӗ. Ку пӗтӗмпех ман куç умӗнче пулса иртрӗ, ку ӗçе эпӗ те хутшӑнтӑм.

Йӗркипе пырӑпӑр. 1989 çулхи раштавӑн 30-мӗшӗнчен вара Чӗмпӗрте «Канаш» ятлӑ чӑвашла хаçат тухса тӑрать. Çак хаçат редакцийӗнче ӗçлекенсем тӑрӑшнипе ӗнтӗ «Атӑл юрри» чӗрӗлсе тӑма пултарчӗ. Кунта чи малтан «Канаш» хаçатӑн тӗп редакторне В.Ромашкина асӑнмалла. Çак ӗçӗн пуçаруçи, йӗркелӳçи вӑл пулчӗ. Паллах, пӗтӗм редакци ӗçченӗсем хутшӑннӑ унта, çавӑнпа та «обществӑлла редколлеги» тенӗ журналӑн 1-мӗш страницинче. Мӗншӗн тесен ӑна кӑларма ятарлӑ çынсем уйӑрса паман. Хамӑр пуçарулӑхпа çеç ӗçленӗ. Çапла вара «Канаш» хаçат çумӗнче Чӗмпӗр Ен çыравçисен илемлӗ литература тата публицистика журналӗ 80 çул хыççӑн чӗрӗлсе тӑчӗ. Тиражӗ – 999 экземпляр, калӑпӑшӗ — 8,38 пичет листи.

Журналта пӗтӗмпех çӗнӗ хайлавсем — халиччен ниçта та пичетленменнисем.

Умсӑмахне обществӑлла редколлеги ертӳçи А.Дмитриев çырнӑ.

«Шевле çути евӗр ялкӑшать Чӗмпӗр Ен тӳпинче вырӑнти чӑвашсен ӑру еткерлӗхӗ, этеплӗхӗ, мӑнаçлӑхӗ. Хаçатӑн пӗрремӗш спутникӗ – «Шевле çути» альманах — пурнӑç океанӗнче 1921 çулта путнӑ «Атӑл юрри» журнала çӗнӗрен чӗрӗлме çул уçрӗ. Ара, облаçра профессионал çыравçӑсен шучӗ ӳссех пырать мар-и? Вӗсен ретне паян-ыран тӑма тивӗçлӗскерсем тата мӗн чухлӗ! Апла пулсан ятарлӑ журнал пулмаллах. «Канаш» хаçатӑн иккӗмӗш спутникӗ – «Атӑл юрри» журнал – 21-мӗш ӗмӗрте чӑвашлӑх тӗнчинче

çĕнĕрен чĕрĕлсе тăмаллах. Çапла пулма мехел çитнĕ. Çапла пулма вăхăт хистет», — текен сăмахсем пур унта.

Критика тата публицистика пайĕнче Н.Ларионовăн «Мул тĕнчин тыткăнĕнчен хăтăлайман самана» ятпа (Н.Ефремов çырнă «Пуян Карук» драма тăрăх) тишкерӳ пичетленнĕ. Çакăнтах А.Юман поэтăн «Ваççа Аниççи поэзийĕ пирки пĕр-ик сăмах» статйи пур. Юхма Мишши «Каша хĕрĕ пусăнни» пайăт пичетлет. Каша – Чăнлă районĕнчи чăваш ялĕ. Çакăнта XX ĕмĕр пуçламăшĕнче пулса иртнĕ ĕç-пуçа çырса кам-тăр Шупашкара çитернĕ. Юхма Мишши ăна область çыннисен умне кăларчĕ.

Вырăнти лоэт — Л. Данилов вара çĕнĕ пайăт çырнă , ун ячĕ-- «Тарăн çырма пуçĕ».

А.Ырьят вулакансем умне «Юрататăп. Эппин, пурăнатăп-ха» повеçне кăларать. А.Чебановăн прологлă, пĕр пайлă «Каçарăр мана» мелодрамине те халиччен вулакансем курманччĕ-ха.

Поэзи пайĕнче В.Тарават Чĕмпĕрти вырăс поэчĕсемпе çыравçисен хайлавĕсене чăвашла куçарса вулакансен умне кăларать. А.Юман сăввисен ярăмне те вулама пулать кунта.

Чĕмпĕр Енри чи ăста юптаруçăн А.Ашкеровăн хайлавĕсемпе, А.Григорьев, В.Ромашкин (Сырлан), Н.Дворов-Шемексем, Н.Зимин сăввисемпе те паллашма пулать.

Тĕне ĕненекенсем «Пысăк асапсем тӳссе вилнĕ, чирсенчен сыватакан Пантелеймона тăвакан кĕлĕсене» вулама пултараççĕ.

«Кулинари вăрттăнлăхĕ» рубрикăра чăвашсем хатĕрлекен апат-çимĕç рецепчĕсене пĕлме пулать.

«Кулăш кушелĕ», «Юрă-кĕвĕ хумĕ çинче» рубрикăсемпе вĕçленет журнал. Чи юлашкинчен «Канаш» хаçат редакцийĕнче ĕçлекенсен вăйĕпе кăларнă кĕнекесен списокне пичетленĕ. Номере Н.Еграшкина ӳкерӳçĕ илемлетнĕ. Хуплашкан 1-мĕш тата 4-мĕш страницисенче — О.Мустаевпа А.Еграшкин фотоэтючĕсем. 2-мĕш страницинче — 1920 çулта тухнă «Атăл юррин» (1-мĕш номерĕ) хуплашкин репродукцийĕ.

Мĕн калама пулать-ха юлашкинчен? 20-мĕш ĕмĕр пуçламăшĕнчи пăтрашуллă самана аваăрне путнă журнала чĕртсе тăратни — ырă пулăм. Вăл çыравçăсем чăмăртанма пуçланнине пĕлтерет, мал ĕмĕтпе пурăннине палăртать. Чăвашсен çĕнĕ çырулăхĕ пуçланса кайнă Чĕмпĕр хулинчи чăвашсем малашне те тăван чĕлхепе хаçат-журнал кăларса тăма пултарччăр. Çапла майпа ку тăрăхри халăхăн сăмахлăхĕ, чĕлхин хăйне евĕрлĕхĕ сыхланса юлать. Пирĕн «Атăл юррине» несĕмĕлĕрсем уçса хăварнă, эпир вĕсен сăмахне илтме пултартăмăр. Пирĕн сасса та çак журнал урлă темиçе ĕмĕр иртсен тăхăмсем илтме пултарччăр.

# Малалла утас тесен – патшалăх пулăшăвĕ кирлех

Мускаври Н.Н.Миклухо-Маклай ячĕллĕ этнологипе антропологи институчĕ «Чувашское население России. Консолидация. Диаспоризация. Интеграция» ятлă сери кăларма тытăннă. Хальлĕхе икĕ том кун çути курнă. Кĕнекесене хатĕрлекенĕ — П.М.Алексеев, çак институт сотрудникĕ (Пушкăртра çуралса ӳснĕ чăваш). Петр Михайлович çĕршыв тăрăх çӳресе документсем (протоколсем, плансем, йышăнусем тата ытти те) пуçтарать, вĕсен никĕсĕ çинче кĕнеке çырать.

Эпĕ вулакансене иккĕмĕш томпа паллаштарасшăн (кĕнекен тиражĕ 250 экземпляр çеç, çавăнпа та ăна кашни çын вулаймасть). Вăл «Стратегия возрождения и этническая мобилизация» ятлă. Унта 1980-мĕш çулсен вĕçĕнчен тытăнса 1990-мĕш çулсен варри таранхи тапхăра илсе кăтартнă.

Ку ĕç Раççейри чăваш диаспора ушкăнĕсен этнологи ыйтăвĕсене хускатса çырнă пĕрремĕш ĕçсенчен пĕри. Унта нацие культура пĕрлешĕвĕсем пуçланса кайнине çутатса панă. Пĕрлешӳсем, пĕрлĕхсем, çутĕç обществисем халăха кулянтаракан ыйтусемпе вĕсене патшалăх татса парасса кĕтсе тăмасăрах ĕçлеме тытăннă. Çапах та малалла çак лава патшалăх хăй çине илмелле. Халăхри хастарсем мĕнле ăслă, пуçаруллă пулсан та хальхи тапхăрта власть пулăшăвĕсĕр пысăк ыйтусене татса пама май çук.

Чăвашсен 85 проценчĕ – 1 миллион та 500 пине яхăн çын — Атăлпа Урал тăрăхĕнче пурăнать. Çакнашкал туртăм 16 ĕмĕртенех килет. 1925 çулхи ака уйăхĕнче Чăваш Автономи Республикине туса хурсан унта 60 процент чăваш кĕрсе юлать. Ыттисем тулай чăвашĕсем пулса тăраççĕ. Чăнах та, маларах вĕсен наци районĕсем, наци ял совечĕсем пулнă-ха. Тăван чĕлхепе вĕренме, хаçат-журнал кăларма, фольклор ушкăнĕсем, театрсем йĕркелеме май пулнă. Анчах та 1930-мĕш çулсен иккĕмĕш çурринче ку ĕçсем пăчланса параççĕ. Администрацие хирĕç тăракансене судсăр, тĕпчемесĕр репрессилеççĕ. Паллах, аякра пурăнакансем Чăваш АССРĕнчен пулăшу пулĕ тесе шаннă. Анчах та унăн политика тата экономика прависем çителĕклĕ пулман. Вĕсене КПСС идеологийĕ хĕссе хунă.

Паллă пулăмсем хыççăн 1980-мĕш çулсен варринче СССРта пурăнакан халăхсен наци юхăмĕ çĕкленет. Ăна тĕпчевçĕсем «халăх мобилизацийĕ» теççĕ. Чăвашсем те ахăрсамана айккинче тăрса

юлмаççĕ. Наци символĕ вырăнне И.Я.Яковлев просветителе тата вăл йĕркеленĕ Чĕмпĕр чăваш шкулне хурса пĕрлешме пуçлаççĕ, пĕтĕм чăвашсен организацийĕсене йĕркелеççĕ – ЧОКЦ (Чăвашсен обществăлла культура центрĕ), ЧНК (Чăваш наци конгресĕ). Çакна та палăртмалла: хăш-пĕр чухне диаспорăри чăвашсен ăс-тăнĕ Чăвашра пурăнаканнисенчен маларах та вăраннă. Тĕслĕхе Пушкăрта тата Ульяновск облаçне илме пулать. Вĕсем Шупашкартан хушасса, пулăшасса кĕтсе тăмасăрах хăйсен пĕрлешĕвĕсене йĕркеленĕ, вĕсен тĕллевĕсене палăртнă. Ку регионсенчи чăвашсем паян та наци юхăмĕнче малта пыраççĕ.

Ун хыççăн çĕнĕ тапхăр пуçланать. Чăваш Республикинче пурăнакансемпе диаспора ушкăнĕсем çывăхланаççĕ. Кунта иккĕшин те интерес пур. Тулайрисемшĕн чи кирли: тăван чĕлхене, культурăна лайăх пĕлекен çынсем вĕрентсе хатĕрлесси. Малтанласа «Шупашкар пулăшĕ» текен шухăшпа пурăнаççĕ вĕсем. Анчах часах ку айван шухăш пуçран тухса пĕтет. Мĕншĕн тесен вырăнта пурăнакан халăх ыйтăвĕсене çак регион администрацийĕ çеç татса пама пултарать. Çынсем çакăнта ĕçлеççĕ, бюджета налук тӳлеççĕ. Вĕсен ыйтăвĕсене те çакăнтах тивĕçтермелле.

Ку енĕпе каллех Пушкăрт тата Чĕмпĕр Ен чăвашĕсем палăрнă. Вĕсем çĕршывра чи малтан хаçатсем уçнă – «Урал сасси» тата «Канаш». Çаплах телекăларăмсем те тухма тытăннă, techинститутсенче чăваш уйрăмĕсем уçăлнă. Ытти регионсенче çак ĕçсене чылай каярах йĕркелесе янă.

Сăмахран, Удмуртире 3,5 пин чăваш пурăнать. Грахов районĕнчи Благодатное — республикăри икĕ чăваш ялĕнчен пĕри. Анчах унта ачасене тăван чĕлхе вĕрентмен. Юлашки тапхăрта вĕсем вара А.Л.Иголкин усламçă тата хастар чĕреллĕ çын пулăшнипе çак ĕçе вырăнтан тапратнă. Халĕ патшалăх пулăшăвĕ те пур.

Тĕрĕсне каламалла: совет саманинче Чăваш Ен ертӳçисем, çав шутра обществăлла организацисем те, тулай чăвашĕсем çине сӳрĕккĕн, тимсĕррĕн пăхнă. Интеллигенцишĕн те диаспора наци историйĕпе культурин пайĕ шутланман. Халĕ лару-тăру улшăнать. Кунта диаспорăри наци юхăмĕсен хастарлăхĕн витĕмĕ палăрать. Çавăнпа Шупашкар та вĕсем çине урăхларах пăхать. Диаспора паян «Чăваш Республикин патшалăх суверенитечĕ çинчен деклараци», «Чăваш Республикин чĕлхисем çинчен», «Вĕрентӳ çинчен», «Культура çинчен» текен документсене те кĕрсе юлнă. Декларацин 6-мĕш статйинче çакăн пек йĕркесем пур: республика тулай чăвашĕсене нацие, ун культурине аталантарма пулăшмалла. Чăнах та, республикăпа

диаспорăра пурăнакан регионсем тĕрлĕ Килĕшӳсем тунă. Çак документсен никĕсĕ çинче Мускавра, Санкт-Петербургра, Тюменьре, Ĕпхӳре (Уфа) Чăваш Республикин представительствисем уçăлнă. Тен, хăçан та пулин вăл Ульяновск облаçĕнче те уçăлĕ. Килĕшӳри мĕнпур пункт пурнăçланаймасть паллах. Çапах та аякра пурăнакансемшĕн вăл пысăк пĕлтерĕшлĕ.

Çав вăхăтрах кашни хăйĕн çулне шырать. Сăмахран, Анат Камăра (Тутарстан) муниципалитет влаçĕсем тата хула вĕрентӳ пайĕ пулăшнипе ачасене воспитани памалли тытăм йĕркеленĕ: яслисенче, садиксенче ятарлă ушкăнсем уçнă. Шкулта çак ĕç малалла тăсăлать. Çак тытăма вырсарни шкулĕ, «Шăнкăрав» ятлă халăх ансамблĕ тата халăх театрĕ кĕреççĕ.

Чăваш халăхĕн çурри ытла хулара пурăнать, çавăнпа та хула чăвашĕсен хастарлăхĕ те шанчăк парать. Хальлĕхе хуласенче вĕрентӳ тата культура ыйтăвĕсене туллин тивĕçтерекен тытăм йĕркеленсе çитеймен-ха. Кунта та вырăнта пурăнакансенчен нумай килет. Уйрăмах наци юхăмĕн ертӳçисенчен.

Çапах та патшалăх пулăшăвĕсĕр инçех каяймăн.

# «Канаш» хаҫат: пуҫламӑшӗ, малалли ҫул-йӗр

Чӗмпӗр ҫӗрӗ ҫинче чӑвашла хаҫатсем маларах та тухнӑ-ха. Сӑмахран,1918 ҫултах кунта шуррисемпе ҫапӑҫакан хӗрлӗ армеецсем валли «Ҫӗнӗ пурнӑҫ» ятлӑ хаҫат темиҫе уйӑх пичетленсе тӑнӑ. Ун сӑпки умӗнче чӑвашсен малтанхи писателӗсем — Иван Юркинпа Степан Лашман (Авксентьев) тӑрӑшнӑ. Чӑнах та, тӗлӗнмелле: ҫӗршывра Граждан вӑрҫи хӗрсе пынӑ, ҫуклӑх, чухӑнлӑх хуҫаланнӑ. Ҫав вӑхӑтрах «вак» халӑхсем валли тӑван чӗлхепе хаҫат кӑларса тӑрассине чи кирлӗ ӗҫсенчен пӗрин выранне хунӑ.

Анчах Совет влаҫӗ пуҫӗпех ҫӗнтерсен наци хаҫачӗсем тухма чарӑннӑ. Ирӗксӗрех ыйту сиксе тухать: вӗсем кама кирлӗрех пулнӑ-ха вӑл вӑхӑтра? Паллах, большевиксене. Ҫӗнтерме, халӑха пӗр шухӑшлӑ туса шуррисене хирӗҫ кӗрешме кӑна кирлӗ пулнӑ. Ун пек мар пулсан «Ҫӗнӗ пурнӑҫӑн» ӗмӗрӗ вӑрӑм пулнӑ пулӗччӗ.

Чӗмпӗр хутлӑхӗнче чӑвашла хаҫат иккӗмӗш хут чӗрӗлсе тӑни 1990-мӗш ҫулсен умне килет.

Ку ӗҫ ҫапларах пуҫланнӑ. Ҫӗршывра Уҫӑнлӑх, Ирӗклӗх самани вӑй илсе пырать. Пирӗн облаҫри районсенчен пӗринче – Чӑнлӑ районӗнче — хаҫата чӑвашла куҫарса кӑлараҫҫӗ. «Заря коммунизма» (Коммунизм ҫути) ятлӑ ҫав хаҫат. Ун чухнехи редакторӗ В.Ф.Ромашкин ҫапла аса илет:

— Ку хаҫатӑн тӗп редакторне мана 1986 ҫулта лартрӗҫ. Дубляж редакторӗн ӗҫӗсене А.Ф.Ермилов (Юман) туса пыратчӗ. Литература страницисем хатӗрленӗ чухне ялан ыйту сиксе тухатчӗ: мӗнле куҫармалла? Пирӗн чӑвашла тухакан хаҫат — дубляж-ҫке. Пӗрпек пулмалла. Ҫав вӑхӑтра уйрӑм чӑваш хаҫачӗ кирлӗ пирки калаҫкалаттӑмӑр. Анчах ӑна район шайӗнче йӗркелеме ҫук. Шӑпах ҫак тапхӑрта КПСС Тӗп комитечӗн Пленумӗнче наци культурисене аталантармалли ҫинчен йышӑну кӑларчӗҫ. Ку пулӑмӑн хумӗ пирӗн облаҫа та килсе сӗртӗнчӗ. Ульяновск облаҫӗнчи халӑх депутачӗсен Канашӗн ӗҫ тӑвакан комитечӗ ҫумӗнче нацисен хушшинчи ҫыхӑнусен ыйтӑвӗсемпе ӗҫлекен комисси туса хучӗҫ. Унӑн членӗ пулма А.Юман поэта та суйларӗҫ.

Ку 1988 ҫулта пулнӑ.

1989 ҫулхи пуш уйӑхӗн 3-мӗшӗнче вара Чӑнлӑ районӗнчи «Заря коммунизма» хаҫатӑн тӗп редакторӗ В.Ф.Ромашкин тата дубляж

енĕпе ĕçлекен редактор çумĕ А.Ф.Ермилов облаçăн парти комитетне çыру яраççĕ. Вăл самаях вăрăм. Унти шухăшсем çакăн пек.

Юлашки 25 çулта чылай шкулта чăвашла вĕрентме пăрахнă. Çӳлти пуçлăхсем чăвашсене пĕр-пĕринпе вырăсла калаçма хушаççĕ. Ку лайăх енне илсе пымасть. Облаçра 100 пин ытла чăваш пурăнать, вĕсем валли эрнере виçĕ хут тухакан хаçат кирлĕ. Ăна Аслă Нагаткинта кăларса тăма материаллă никĕс çук, Ульяновскра пичетлемелле. Çапла тусан область организацийĕсемпе тачă çыхăну тытма, область центрне тĕрлĕ енчен килекенсене йышăнма, тĕрлĕ мероприятисем хатĕрлесе ирттерме май пулать.

Çакăнтах пулас кадрсем пирки çырса кăтартнă.

Кăштах вăхăт иртсен чăвашла хаçат кăларма ирĕк параççĕ. Халĕ ăна епле майпа тата ăçта кăларасси пирки калаçу тапранать.

Акă «И.Я.Яковлев ячĕллĕ» кĕнекере А.Юман çапла аса илсе çырать:

«И.Я.Яковлев обществин правленийĕн черетлĕ ларăвĕсенчен пĕринче унăн (пулас хаçатăн. – **Н.Л.**) редакторĕ пирки сăмах тапранчĕ. Чи малтан манăн ята асăнчĕç. Эпĕ ку сĕнӳпе килĕшмерĕм. Хаçатне çырса хатĕрлеме пулать-ха ăна. Анчах редактор чи малтан ĕçе йĕркелесе пыма пултармалла: кадрсем пухса вĕсемпе ĕçлесси, хуçалăх ĕçĕсене ертсе пырасси, укçа-тенкĕпе çыхăннă операцисене пурнăçласа-тĕрĕслесе тăрасси тата ытти те. Çапла вара чылай чух унăн хаçатра тӳрремĕн ĕçлеме вăхăчĕ те юлмасть. Эртеле ертсе пырас ĕçе эпĕ халиччен хăнăхман, чун туртмасть ун патне, маншăн пулсан хаçатри алпа тытса тумалли «хура ĕç» çывăхрах. Çавăнпа манăн «самоотвода» шута илчĕç правлени членĕсем. Çаплах эпĕ редактор ĕçне Чăнлă районĕнчи вырăс хаçатĕнче вăй хуракан Валериан Федорович Ромашкин çамрăк журналист ăнăçлă пурнăçласа пыма пултарни çинчен пĕлтернине те ырларĕç. Эпĕ унăн çумĕ пулма килĕшрĕм».

Хаçатăн ячĕ вара ытларах калаçтарнă. Тĕрлĕ ятсем сĕннĕ пухăннисем. И.Я.Яковлев ячĕллĕ общество пуçлăхĕ И.С.Кирюшкин сĕннĕ «Канаш» çинче чарăннă.

Çак ĕçсемпе пĕрлех пулас хаçатăн 1-мĕш номерĕ валли материалсем пухаççĕ. Çапла вара 1989 çулхи раштав уйăхĕн

30-мӗшӗнче «Канаш» хаҫат тухма пуҫлать. Хаҫат матрицисене Чӑнлӑ район типографийӗнче хатӗрленӗ, область типографийӗнче пичетленӗ.

Акӑ ман умра «Канаш» хаҫатӑн 1-мӗш номерӗ выртать. Чи ҫӳлте пысӑк саспаллисемпе: «Ҫӗнӗ ҫул ячӗпе сире, юлташсем», — тесе ҫырнӑ. «Чӑваш чӗлхи ячӗпе пӗр пулар!» — тенӗ аяларах. Шапкинче ҫакӑн пек ҫырни пур: «КПСС Ульяновск обкомӗн, халӑх депутачӗсен область Совечӗн тата чӑвашсен облаҫри И.Я.Яковлев ячӗпе хисепленекен ҫутӗҫ обществин хаҫачӗ». 4 полосаллӑ (1 пичет листи), икӗ тӗслӗ (хура, кӑвак). Тиражӗ 2000 экземпляр. Адресӗ: Ульяновск облаҫӗ, Аслӑ Нагаткин ялӗ, Советская урамӗ, 18-мӗш ҫурт. Ҫавӑнпа ӗнтӗ редактор хушаматне те ҫырман-ха, «обществӑлла редколлеги» тенӗ. Хаҫат «Аван-и, вулакан» статьяпа уҫӑлать. Авторне кӑтартман, анчах ӑна А.Юман ҫырни паллӑ. Унта хаҫат тӗллевӗпе пуласлӑхӗ пирки сӑмах хускатнӑ. Акӑ 1-мӗш номерте пичетленнӗ авторсем: Д.Белоусов (ӳкерӳҫӗ), А.Юман, П.Ялкир, А.Алексеев, Я.Рогачев, А.Вражкин, Н.Васильев, Е.Миллер, В.Енӗш, А.Чебанов тата С.Игнатьевпа В.Дедушкин фотографсем.

Ҫапла вара «Канаш» эрнере пӗрре — шӑматкун – тухса тӑрать. Киосксенче сутма тесе ун тиражне малалла татах та ӳстернӗ, кайран ҫав шут каллех икӗ пине анса ларнӑ.

1992 ҫултанпа «Канаш» эрнере пӗр хутчен сакӑр полосаллӑ тухса тӑма пуҫлать.

Редакцие 2002 ҫулхи сентябрӗн 30-мӗшӗччен В.Ф.Ромашкин ертсе пычӗ. Хаҫат редакцийӗ Чӗмпӗр Ен чӑвашӗсемшӗн чӑннипех те культура, пичет тата обществӑлла центр пулса тӑчӗ. Вӑл мӗн чухлӗ пултаруллӑ ҫынна ҫул уҫса пачӗ!

Хаҫат кӑна кӑларса тӑнипе ҫырлахмарӗҫ канашҫӑсем. Тӗп редактор пуҫарнипе кунта вырӑнти авторсен кӗнекисене кӑларма тытӑнчӗҫ. Апла пулсан ӑна Чӗмпӗрти чӑвашсен кӗнеке издательстви теме те пулать. Ҫаплах стена ҫумне ҫапмалли тата кӗсье календарӗсем те кӑларнӑ.

Тепӗр самант. Чӗмпӗрте 1920-1921 ҫулсенче А.Милли тӑрӑшнипе «Атӑл юрри» журнал икӗ хутчен кун ҫути курнӑ. 2000 ҫулта вара «Канаш» хаҫатра ӗҫлекенсем тӑрӑшнипе ҫак издани чӗрӗлсе тӑчӗ. Халӗ ӗнтӗ 4-мӗш номерӗ те хатӗр — ӗҫӗ укҫа-тенкӗре ҫеҫ. «Истина» приложени те — «Канаш» «ачи». Ӑна вырӑсла (калӑпӑшӗ – 2 пичет листи) 2001 ҫулхи ҫурла уйӑхӗнче кӑларнӑ. Унӑн та тепӗр номерӗ хатӗрччӗ. Тухса каяйман сӑлтавӗ — малтанхиех. Ку хаҫатӑн сулӑмӗ – наука еннелле.

Чӗмпӗр Ен чӑваш ҫыравҫисен «Шевле» литература пӗрлешӗвӗ те «Канаш» хаҫат тӗпелӗнче тӗвӗленчӗ. Вӑл 1997 ҫулхи утӑ




уйăхĕнчен вара ĕçлесе пырать. Çак вăхăтра унта 30 çыравçă ытла пырса курнă. Ларусем маларах редакцирех иртетчĕç, пĕр вăхăтра Ульяновскри 17-мĕш библиотекăра пуçтарăнкаларăмăр.

«Шевле» литпĕрлешĕве Н.Ларионов ертсе пырать. Çак вăхăтра литпĕрлешӳ членĕсем «Шевле çути» альманах кăларма пултарчĕç (2000 çул). Унта 60 авторăн хайлавĕсене кĕртнĕ. Чи юлашкинчен «Пирвайхи сăвă» пайра 19 шкул ачин сăввисене пичетленĕ. Ачасем аслисен ĕçне малалла тăсмалла, çавăнпа вĕсене хавхалану саманчĕ кирлĕ.

Халĕ «Канашра» ултă çын ĕçлет. Чи нумай ĕçлекенсем çаксем: А.Дмитриев-Ырьят – 1990 çулта килнĕ, Л.Ныйкина тата А.Степанова — 1992 çулта (вĕсем иккĕшĕ халĕ ĕçлемеççĕ), Е.Мустаева — 1991, А.Алексеева — 1995, Н.Ларионов тата Н.Еграшкина — 1996. Çаплах Н.Казаков фотокорреспондент та 10 çула яхăн вăй хучĕ кунта. Халĕ вăл урăх çĕрте, хаçат ĕçĕнчен кайнă.

Пĕтĕмлетсе каласан, «Канаш» хаçат çурални тăкăскă та нӳрлĕ сывлăшпа тулнă пӳлĕм чӳречине яри уçса янă пекех пулчĕ. Вырăнти чăваш çыравçисем тулли кăкăрпа, тарăннăн сывласа ячĕç. Çак самант Чĕмпĕр тăрăхĕнчи чăвашсен çĕнĕ тапхăрĕ уçăлнине пĕлтерет. Унăн ĕмĕрĕ вăрăм пултăрччĕ.

2009 çулхи мартăн 26-мĕшĕнче «Канашăн» 1000-мĕш номерĕ тухрĕ.

Чăвашсен çĕнĕ çырулăхĕ пуçланнă хулара чăваш чĕлхи нихçан та ан сӳнтĕрччĕ!

# Пирĕн «Шевле» литпĕрлешӳ

Кăçал «Канаш» хаçат çумĕнче йĕркеленнĕ «Шевле» литпĕрлешӳ пилĕк çул тултарать. «Шевле» мĕнле япала-ха, мĕн тума кирлĕ? Мĕнле ĕçсем турăмăр çак хушăра, малалла мĕнле ĕмĕт-тĕллевпе пурăнатпăр?

Пирĕн хаçат тухма пуçласан ун йĕри-тавра пултаруллă çыравçăсем чăмăртанма тытăнчĕç. Каласа хăвармалла: вĕсенчен нумайăшĕ хамăр тăрăхра чăвашла хаçат çуккипе, пичетленме май çуккипе çырма та чăрăннă пулнă ĕнтĕ, пултарулăх çăлкуçĕ типме те пуçланă. «Канаш» вара вĕсен çырас туртăмне тепĕр хут вăратрĕ, вăй-хал пачĕ.

Çыравçăсен шучĕ çулсерен ӳссе пычĕ, пĕр-пĕрне хаçат урлă çеç пĕлни çителĕксĕрри сисĕнчĕ. Вырăнти çыравçăсен пĕрлешĕвне туса хурас пирки калаçусем тапранчĕç.

1997 çулхи ака уйăхĕн 24-мĕшĕнче Ульяновскри 17-мĕш библиотекăра И.Я.Яковлев çуралнăранпа 149 çул çитнине халалласа литература касĕ ирттернĕччĕ. Унта А.Ашкеров литпĕрлешӳ йĕркелес шухăша пĕрремĕш хут çын умĕнче каларĕ. Унпа пурте килĕшрĕç. Виçĕ уйăхран, утă уйăхĕн 24-мĕшĕнче, çак библиотекăрах литпĕрлешĕвĕн пĕрремĕш ларăвĕ иртрĕ. Ун ячĕ пирки тавлашу пулмарĕ. Хаçатра «Шевле» ятпа тăтăшах литература страници тухса тăратчĕ. Ăна литпĕрлешӳ ятне пама йышăнтăмăр.

Кунта кăштах 82 çул каялла Чĕмпĕрте пулса иртнĕ ĕçсене аса илни вырăнлă пулĕ. 1920 çулта кĕпĕрнери халăх вĕрентĕвĕн пайĕнче чăваш секцине ертсе пыракан Алексей Прокопьевич Прокопьев-Милли хăйĕн хастарлăхĕпе Чĕмпĕрти чăваш çыравçисене вăратать, «Чăвашла çыракансен ушкăнĕ» йĕркелет. Ака уйăхĕн 29-мĕшĕнче йĕркелӳ пухăвĕ пуçтарăнать — 40-50 çын. Вĕсем А.Милли докладне итлеççĕ, «Ушкăн» уставне йышăнаççĕ. Ертсе пыма Канаш уйăраççĕ: Милли (председатель), Ваçанкка (секретарь), Элкер, Шелепи, Аверкиев (членĕсем).

Çакăн хыççăн «Ушкăн» Канашĕ Чăваш çыравçисен пĕрремĕш конференцине хатĕрленме пуçлать. Вăл 1920 çулхи çу уйăхĕн 31-мĕшĕнче иртет. «Ушкăн» хăйĕн тĕп шухăшĕсем, тĕллевĕсем тесе çаксене палăртать:

1. Чăваш халăхĕн ĕçлĕ çыннисене Европăри вĕреннĕ халăхсен ушкăнне кĕртес тесен вĕсене хăйсен чĕлхипе илемлĕ, ăнланмалла сăмахсемпе тĕнчери этемлĕхĕн пурте йышăнмалли шухăшĕсене

йышăнтармалла. Ăна чăваш халăхĕн пултарса çыраканĕсем пĕрлешсе тусан анчах тума пулать;

2. Чăваш халăхĕн юррисемпе халапĕсене пуçтармалла;

3. Чăвашсен илемлĕ литературине (пултарулăх çырулăхне) араслантарасшăн çине тăрса ĕçлемелле;

4. Чăвашла пултарса çыракансем чăваш ялĕсене тăтăшах кайса чăвашăн илемлĕ литератури çинчен калаçмалла;

5. Ют халăхсен чаплă çыраканĕсен пултарăвĕсене чăвашла куçармалла. Пуринчен малтан чухăн халăхăн асапĕсене кăтартса çырнисене куçарарах парас пулать;

6. Чăвашла эрешлесе (илемлетсе) çырмаллин йĕркисене чăваш халăхĕн юрри-халапĕсене вĕреннинчен кăларса майлаштармалла.

«Ушкăнăн» тĕллевĕсенчен вăл мĕн тума шутланине куратпăр ĕнтĕ. Чи пахи кунта — пĕр пек шухăшлă çынсем пĕр çĕре чăмăртанни, халăх сăмахлăхне никĕсе хурса илемлĕ сăмахăмăра аталантарма тăрăшни. П.Хусанкай ахальтен мар ĕнтĕ çапла каланă: «Халăх сăмахлăх çăлкуçĕ нихăçан та типмест, унпа вырăнлă усă кура пĕлмелле. Тĕнче çине халăх куçĕпе пăхмалла, ун чух çеç хайлав вулакан чунне хускатма пултарать. Çыравçăпа халăх, амăшĕпе ачи пек, пĕр кăвапа тĕввипе çыхăннă. Çак çыхăнăва татмалла мар».

А.Милли «Ушкăнĕ» 1920-1921 çулсенче Чĕмпĕрте икĕ номер «Атăл юрри» журнал кăларать. Ун пĕрремĕш номерĕнче А.Миллин «Чăвашла çыракансен ушкăнĕ мĕншĕн кирлĕ» статйи пичетленнĕ. Манăн вулакансене ун тĕп шухăшĕпе паллаштарас килет (сăмахĕсем, стилĕ авторăнах, хăш-пĕр предложенине эпĕ кĕскетнĕ).

Акă мĕнлерех çырать А.Милли: «Унччен чăваш çыравçисем ушкăнласа ĕçлени пулман. Чăваш çырулăхĕ чĕлхе чухăнран мар аталанайман, çине тăрса ĕçлеменнипе. Хастарлăх чăваш çырулăхĕшĕн пултăр. К.Иванов та пĕрлешӳ пулманнипе сапаланса кайнă. Ун пек çырулăх малалла каймасть. Чăваш хуйхине, ăсхакăлне, чĕринчи шухăшне лайăх кăтартса паракан хайлавсем, кĕнекесем кирлĕ. Пĕр-пĕр халăхăн çырулăхĕ пур тени вăл унăн хăйĕн пурнăçне куçкĕскири пек кăтартакан çырулăх пур тени пулать. Чăваш çырулăхне хăватлантарас тесен паха хайлавсем çырмалла. Ютран куçарнисемпе чăваш çырулăхне хăпартса ярас çук. Чăваш çырулăхĕ çинчен тишкерсе çырнă материалсем кирлĕ. Хаçат темле аван пулсан та çырулăха хăватлантарма пултараймасть. Куна ытти халăхсен çырулăхĕ аталанни кăтартса парать. Пире кĕнекесем, журналсем кирлĕ. Халăх илемлетсе, халапласа, юптарса çырнине

питĕ юрататъ. Ăнланмалла мар сăмахсем кĕртсе йывăрлатас мар. Çырулăхпа халăх чĕлхи пĕр тан, пĕр-пĕрне ыталаса пыччăр. Чĕлхе тасалăхĕшĕн тăрăшмалла. Çырнă сăмахсем пĕр-пĕринпе килĕшсе пĕр йăрăмри шăрçа пек пыччăр. Малашне те халичченхи пек хăвăртлăхпах пырсан чăваш çырулăхĕ майĕпе сисмелле мар пĕтсе пынине пĕлтерĕ. Çĕнĕ сăмахсем хутшăнни палăрмасть, ун вырăнне ют чĕлхен сăмахĕсем кунсерен тула пуçларĕç. Вăл чăваш чĕлхин тымарне хăртса пыни, унăн пур хăватне те çук тени пулать. Тулашĕ – куçа улталаканни. Ăшне пăхсан унта чăваш çырулăхĕн тымарне çисе хăртакан хуртсем йăшăлтатни курăнать. Чăвашла таса çырманни, çĕнĕ сăмахсене пуçтарма тăрăшманни, тепĕр енчен чăваш пурнăçне кăтартса парас тĕлĕшпе араслантарманни. Ушкăнласа, пĕр-пĕрне тишкерсе ĕçлесен çеç çак çитменлĕхсене пĕтерме пулать. Çырулăх халăх варĕнчен шăтса ӳснĕ чечек пек пулмалла. Çырулăхăмăр кăкăртан ахлатса тухнă сывлăш, савăнса кулнă кулă, чăваш юрланă юрă пултăр. Харпăр халăхĕн хастарĕсем хăй халăхĕ хушшинче унăн сывлăшне ĕçсен çеç хăватланма пултараççĕ. А.С.Пушкин пасарсенче халăх калаçнине итлесе çӳренĕ, халăх юрри-халапĕсене çырса илнĕ. Халăх шухăшне витĕр пĕлсен çеç усăллă пулать пирĕн ĕç, çыравçăсем чапа тухаççĕ. Хамăр камне пĕлнинчен пуçласан тин культурăллă халăх пулатпăр. Хатĕр культурăна йышăннипе культурăллă пулас çук. Çакă тĕнчери халăхсен историне, çутçанталăк йĕркине хирĕç пырать. Çапла калани чăвашсем ним тума та пултарайманççĕ, вĕсем пĕтмелли халăх тени пулать. Çак шухăшпа ним тума пултарайман, çын янтипе пурăнма юратакан паразитлĕ, упăтеленекен чăваш анчах килĕшме пултарĕ. Ĕçлесшĕн çунакан, хастар та харсăр чăваш ниепле те çав кахалсен шухăшĕпе килĕшме пултараймасть. Чăвашăн культурăллă малашлăхĕ çавăн пек пултарулла шухăшласа ĕçлекен чăвашсен аллинче. Чĕмпĕрте чăвашла çыракансен ушкăнĕ Чăваш Ен ялавне çĕклесшĕн шухăшлать, «Атăл юрри» тавра пĕрлештересшĕн вăл хастар чăвашсене».

Пилĕк çул хушшинче «Шевле» литпĕрлешӳ мĕн тума ĕлкĕрчĕ-ха? Чи пахи — пĕрлешрĕмĕр! Вăхăтран вăхăта пĕр-пĕринпе курнăçса тăратпăр, тухтăр хăй патне пынă çын аллине тытса юн тымарĕ тапнине тĕрĕсленĕ евĕр, пĕр-пĕрин хайлавĕсене пăхса-тишкерсе хак паратпăр. 17-мĕш библиотека заведующине О.Г.Юрловăна тата чăваш уйрăмĕн пуçлăхне Ю.Н.Мустаевăна тав тăвас килет. Вĕсем пире яланах ырă кăмăлпа кĕтсе илеççĕ, вырăн тупса параççĕ.

Çак пилĕк çул хушшинче литпĕрлешӳ членĕсем хатĕрленипе, пулăшнипе «Канаш» хаçат редакцинче «Шевле çути» альманах пичетленсе тухрĕ. Çаплах «Атăл юрри» журналăн 3-мĕш номерне кăларса яма пултартăмăр. Çак кăларăмсен çĕнĕ пуххисене те хатĕрлесе хунă ĕнтĕ, ĕçĕ укçа-тенкĕ çуккинче çеç. Çакă вырăнти чăваш çыравçисене хавхалантарса, çӳллĕрех шая çĕкленме пулăшса пыни мар-и-ха? Çапла вара Чĕмпĕр çĕрĕ çинче чăвашсен илемлĕ сăмахĕ çĕнĕрен чĕрĕлчĕ, тымар яма тытăнчĕ.

И.Я.Яковлев 19-мĕш ĕмĕрте Чĕмпĕрте чăвашсем валли çĕнĕ çырулăх хатĕрленĕ, пирĕн хулана чапа кăларнă. А.Милли 20-мĕш ĕмĕр пуçламăшĕнче чăваш çыравçисене пĕрлештернĕ, илемлĕ сăмахăн журналне йĕркеленĕ. Пирĕн вара çĕнĕ саманара çак пархатарлă ĕçсене малалла тăсмалла. Апла тăвас тесен çанă тавăрсах ĕçлемелле.

Чăннипе пирĕн нимĕнех те шутласа кăлармалли çук. 1920 çулхи «Ушкăн» тĕллевĕ — пирĕн паянхи тĕллевех. Калăн, вĕсем пире валли ятарласа программа çырнă. Пирĕн ăна пурнăçа кĕртесси çеç юлать.

Чи малтан — паха хайлавсем çырса вулакансем патне çитермелле. Ун пек тума ĕç халăхĕн пурнăçне, хуйхи-суйхине тĕпрен пĕлмелле. Ăна пĕлме халăх хушшинче нумай пулмалла, тăтăшах ялсене тухса çӳремелле, çынсен пурнăçĕпе паллашмалла, паянхи çивĕч ыйтусене сӳтсе явмалла. Çав вăхăтрах халăх сăмахлăхне пухмалла, ялти ватăсемпе калаçмалла. Пĕр-пĕрин е паллă çыравçăсен хайлавĕсене тишкерсе, хак парса çырнисем те çукпа пĕрех-ха пирĕн. Критика жанрне аталантармалла, ун вĕтĕ али витĕр тухмасăр çыравçă пиçĕхеймест. Çитменлĕхсене курма, палăртма вĕренмелле — хамăрăнне те, çыннăнне те. Çапла туни хамăртан çирĕпрех ыйтма пуçлани пулать. Унсăрăн пултарулăх тӳпине çĕкленеймĕн.

Паллах, хамăр йĕри-тавра çамрăк талантсене явăçтармалла. Чĕмпĕр чăвашĕсен литературин пуласлăхĕ — çамрăк ăрура. Вĕсене тăван чĕлхене юратма, хисеплеме вĕрентмелле. Çакна кашнин ăнланмалла: анне чĕлхине хисеплеменни хамăр ӳснĕ йăвана тустарниех пулать. Каçарăр та, ырă, сăпайлă çын ун пек тумасть.

Хальлĕхе ку енĕпе тăрăшмалли чылай-ха. «Шевле» литпĕрлешĕве çӳрекенсенчен чи çамрăкки те 35 çулта. Нумайăшĕ вара — аслă ăрури çынсем. Çамрăксемпе ĕçлесси тĕп вырăнта пулмалла пирĕн. Çак тĕллевпех ĕнтĕ «Канаш» хаçатра кăçал литература конкурсĕ йĕркелерĕмĕр. Шел пулин те, материалсем çукпа пĕрех. Вулакансенчен хастарлăх кĕтетпĕр.



*«Шевле» ларàвĕ. 2000 çул.*

Редакцире халăх сăмахлăхне пухма тытăнтămăр. Хальлĕхе Н.Ратаева (Ульяновск), Н.Васильева (Каша), Е.Парамонова (Кунтикав) хастар хутшăнни палăрать. Çак пархатарлă ĕçре кашни вулакан хутшăнсан тата лайăхрах пулĕччĕ. Сăмахран, пĕр юррах тĕрлĕ ялта тĕрлĕ юрлаççĕ. Кашни тĕсĕ пулсан та пăсмасть. Мĕншĕн тесен вăл — халăх пуянлăхĕ.

Çыравçа тĕнче тата вырăс литературине кĕме унăн хайлавĕсене вырăсла куçарни кирлĕ. Пирĕн куçару ĕçĕ çителĕклĕ шайра марха. Чăнах та, юлашки вăхăтра П.Ишутов «Шевле» литпĕрлешӳ членĕсен сăввисене вырăсла ăста куçарма тытăнни питĕ савăнтарать. Çак çулпах ĕçлеме пире вырăс çыравçисемпе паллашни те ытлашши пулмасть.

Тен, малашне Чăваш Енре пурăнакан çыравçăсене, критиксене йыхравласа семинар ирттерме май пулĕ.

Пултарулăх тӳпин чикки çук, вĕçĕмсĕр ӳсме, хăпарма пулать. Пурте хамăр пултăкран, кăмăлтан килет. «Шевле» вара хăйĕн çутипе пире çул кăтартса тăрĕ, çамрăк талантсене шыраса тупма пулăшĕ.

*2002 çул*

## «Канаш» редакцийӗ –
## Чӗмпӗр Ен чӑвашӗсен культура вучахӗ

УОЧНКАн III суйлавпа отчёт конференцийӗнче
Николай Ларионов делегат тухса каланӑ сӑмах

«Канаш» хаҫат тухма тытӑннӑранпа 17 ҫул ытла иртрӗ. Пирӗн редакци ҫак вӑхӑтра чӑннипех Чӗмпӗр Ен чӑвашӗсен культура центрӗ пулса тӑчӗ. Кунсерен вун-вун ҫын кӗрсе тухать, ҫулталӑкне 1 пин ытла ҫыру илетпӗр.

Регион пуҫлӑхӗсем пулӑшнипе Раҫҫейра пурӗ те виҫӗ чӑваш хаҫачӗ кӑна тухать (Чӑваш Республикине шутламасӑр) – Тутарстанра, Пушкӑртстанра тата Ульяновск облаҫӗнче. Ҫавӑнпа та хамӑр область влаҫӗсене пирӗн тав тумалла. Вӗсем укҫа-тенкӗ ыйтӑвӗ мӗнле йывӑр пулсан та наци хаҫачӗсем кӑларма мелсем тупаҫҫех.

Хаҫатӑн тӗллевӗ – наципе культура автономин тӗллевӗпе пӗр килет: сапаланса пурӑнакан чӑвашсене пӗр чӑмӑра пуҫтарасси, вӗсенче наци туйӑмне вӑратасси, тӑван чӗлхене, йӑла-йӗркене сыхласа хӑварасси. Урӑхла каласан, чӑваша ЧӐВАШ пулма пулӑшасси.

Ку ӗҫ ҫӑмӑл мар. 1956 ҫулта Чӗмпӗр чӑваш шкулне хупса хунӑ, чӑваш ялӗсенче ачасене тӑван чӗлхепе вӗрентме пӑрахнӑ хыҫҫӑн халӑхӑн пысӑк пайӗ вырӑсланнӑ, тӑван тымарсене маннӑ. Халӗ вара ачасене тӑван чӗлхене ют чӗлхе вӗрентнӗ пек вӗрентмелле. Ку япалана пӗр кунра та, пӗр ҫулта та тума ҫук. Ку ыйтупа ҫанӑ тавӑрса, пӗр чарӑнми ӗҫлемелле, нумай вӑй хумалла.

Редакции ӗҫӗ – нумайрах чӑваша хамӑр культурӑпа паллаштарасси, хаҫат тиражне ӳстерессии. Ҫакна каламалла: маларах асӑннӑ сӑлтава пула хаҫата ҫырӑнакансен шучӗ питӗ йывӑрпа ӳсет. Хамӑра хамӑр хисеплени, тӑван халӑха юратни, шел пулин те, сахалтарах-ха хальлӗхе.

Икӗ ҫул каялла хаҫат тухма тытӑнни 15 ҫул ҫитнине уявларӑмӑр. Уяв ирттерме «Эртел» ушкӑн арӗсем пулӑшрӗҫ, укҫа-тенкӗ уйӑрчӗҫ. Хӑнасем облаҫран, Раҫҫейӗн тӗрлӗ хулисенчен килнӗччӗ. Ҫаплах кулленхи пурнӑҫра пулӑшу аллине тӑсакансем те самаях. Чи малтан Чӑнлӑ район пуҫлӑхне Х.В.Рамазанова палӑртмалла. Вӑл уяв ирттерме те укҫа-тенкӗ панӑччӗ, пӗлтӗр редакцие компьютер парнелерӗ, календарьсем кӑларма укҫа уйӑрчӗ. Хаҫат тиражӗ те Ханяфи Валиевич ку ыйтӑва тимлӗх уйӑрма пуҫласан ҫак районта палӑрмалла ӳсрӗ. Мӗнле ыйтупа пырсан та Ханяфи Валиевич пире пулӑшма тӑрӑшать. Ҫаплах ҫак районта хаҫат тиражне ӳстерме пулӑшакансене – ял хуҫалӑх

ертӳҫисене палăртмалла: Наиль Зарифович Гайниев, Александр Герасимович Медков, Николай Васильевич Афанасьев, Николай Петрович Сайгушев, Сергей Анатольевич Клопков, Геннадий Макарович Мулянов тата ыттисем. Ҫаплах Мелекесс районĕнчи пĕртăван Беспаловсем те яланах пулăшма хатĕр. Хаҫата тĕрлĕ енĕпе пулăшакансене тав тăватăп.

Хаҫат редакцийĕ вырăнти чăваш ҫыравҫисен кĕнекисене кăларас ĕҫе илсе пырать. Тăватă ҫул хушшинче редакци пулăшнипе 30 кĕнеке ытла кăларнă, ҫав шутра пĕлтĕр кăна – 13. Кăҫал «Шевле» литпĕрлешĕве йĕркелесе янăранпа 10 ҫул ҫитет.

Ачасене, ҫамрăксене хаҫат ĕҫне явăҫтарас тесе тĕрлĕ рубрикăсем, ятарлă страницăсем уҫатпăр, ҫулсерен конкурссем йĕркелетпĕр. Сăмахран, халĕултă конкурс пырать. Унта кашни ҫын хутшăнма пултарать. Ҫĕнтерӳҫĕсене парнесемпе чыслатпăр.

Область пуҫлăхĕсем наци хаҫачĕсене кăларма пулăшаҫҫĕ терĕмĕр-ха. Анчах хамăра хамăр та пулăшмалла. Чи лайăх пулăшу – кашни чăваш ҫемйи «Канаша» ҫырăнса илни. Тĕрлĕ сăлтавсем тупса ăна ҫырăнас теменни чăвашсене чыс кӳмест. «Канаш» хаҫата ҫырăнса илмен чăвашсене ҫакăн пек тĕслĕх илсе кăтартас килет. Ҫĕнĕ Ульяновскра пурăнакан вырăс ҫынни Сергей Чуркин (арăмĕ чăваш) пирĕн хаҫата хăй ҫырăнса илнипе ҫеҫ ҫырлахмасть, кашни ҫурҫуллăхра тата 10 ҫынна тупса ҫырăнтарать. Сергей Николаевич – хаҫатăн чăн-чăн тусĕ, чăваш халăх патриочĕ. Ун пеккисен шутне Николай Дмитриевич Розова та кĕртме пулать. Вăл та хăй укҫипех темиҫе ҫынна ҫырăнтарать, хăйĕн материалĕсем тухнă хаҫатсене тӳлесе хушма заказ парать, редакцие пулăшма тăрăшать.

Чăваш тĕнчи аслă. Чĕмпĕр Ен – ун пĕр пайĕ. Ҫакăнта чăвашлăх аталанса пыни пĕтĕм чăваш тĕнчине витĕм кӳрет. Ҫак ĕҫре вара "Канаш" хаҫат чăвашсене пĕр-пĕринпе тата тĕрлĕ власть тытăмĕсемпе ҫыхăнтарса тăрать, федераци политикине тытса пырать. Наци хутшăнăвĕсен ҫĕнетӳ тапхăрĕнче ку ĕҫĕн пĕлтерĕшĕ ытла та пысăк, ҫав вăхăтрах – яваплăхĕ те.

Чăваш халăхне ҫутта кăларакан И.Я.Яковлев тăван халăхран ан вăтанăр, эсир вĕсен хушшинчен тухнă, ĕҫлессе те вĕсемшĕн ĕҫлемелле тенĕ. "Канаш" хаҫат ĕҫченĕсем шăпах тăван халăх пуласлăхĕшĕн вăй хураҫҫĕ. Вĕсем лайăх ăнланаҫҫĕ: пурнăҫри пулăмсене кашнинех укҫапа виҫме ҫук, наци хаҫатне кăларса услам тăваймăн. Эпир пулас ăрусем валли ĕҫлетпĕр, ҫак ҫĕр ҫинче илемлĕ чăваш чĕлхи ĕмĕр-ĕмĕр янратăр тесе тăрăшатпăр. Кашни чăваша ҫак ĕҫе хутшăнма чĕнетпĕр.

*2007 ҫул.*

## «Канаш» хаçатăн 1000-мĕш номерĕ тухрĕ!

Хаклă тăванăмăрсем!

Эсир аллăрта тытакан «Канаш» хаçат номерĕ – пинмĕш! Çапла, çак вăхăта та кĕтсе илтĕмĕр!

Пĕрремĕш номер вара 1989 çулхи раштав (декабрь) уйăхĕн 30-мĕшĕнче тухнăччĕ. Унтанпа 19 çул та виçĕ уйăх иртрĕ.

Чĕмпĕрте 1920-мĕш çулсенче чăвашла хаçатсем тухкаланă, анчах 2-3 çул хушши кăна. «Канаш» хаçат вара 1980-мĕш çулсен варринче çĕршыва Уççăнлăх, Ирĕклĕх самани çитнипе кун çути курма пултарчĕ.

Çак пархатарлă ĕçе пуçарса яракансен алли çăмăл пулчĕ – хаçатăмăр пĕр эрне те тухма чарăнман. Паллах, çак ĕç валли область влаçĕсем укçа-тенкĕ уйăрса пулăшмасан ырă ĕç путланса ларма та пултаратчĕ. Телее, ун пек пулмарĕ.

Хăй вăхăтенче «Канаш» хаçата уçассишĕн вăй хунă çак ентешсене аса илсе тав тăвас килет: И.Я.Яковлев ячĕллĕ общество пуçлăхĕ И.С.Кирюшкин, çаплах А.М.Цыганов, П.П.Ургалкин, А.К.Падиаров, В.М.Репин, В.Г.Елагин, А.М.Богатов, А.Н.Разубаев, А.Н.Каштанова, М.Н.Юхма, А.А.Алексеев, А.Ф.Ермилов-Юман, А.Г.Пешне тата ыттисем.

Редакци тилхепине чи малтанхи кунран пуçласа 13 çул тытса пынă В.Ф.Ромашкина та тав сăмахĕ калатпăр.

Паян редакци коллективĕ тĕрекленсе, çирĕпленсе çитрĕ. Кунта 14 çултан каярах ĕçлекен журналист çук.

«Канаш» хаçат редакцийĕ çумĕнче 1997 çулта вырăнти чăваш çыравçисен «Шевле» литпĕрлешĕвĕ йĕркеленсе кайрĕ. Ун хыççăн Чĕмпĕр Ен çыравçисем пĕр-пĕринпе амăртса кĕнеке кăларма пуçларĕç, пурĕ 60 кĕнеке ытла пулчĕ ĕнтĕ, 10 çын ытла Писательсен союзне кĕчĕ. Пирĕн редакци чăваш кĕнекисене пичете хатĕрлекен центр пулса тăчĕ. Чĕмпĕр Енри чăваш çыравçисен «Шевле çути» альманахне хатĕрлесе пичетлерĕмĕр. 80 çул хыççăн «Атăл юрри» журнала çĕнĕрен кăларса яма пултартăмăр.

Чи кирли вара –хаçат облаçри чăвашсене пĕр чăмăра пуçтарма, пĕр-пĕринпе паллашма, наци ăнланулăхне ӳстерме, чунра мăнаçлăх туйăмĕ çуратма пулăшрĕ.

Малашнехи тĕллев – хамăр йĕри-тавра çамрăксене ытларах явăçтармалла. Пирĕн кулленхи ĕçсем çакăнпа çыхăннă. В.Сухомлинский педагог: «Тăван чĕлхе кашни ача чунĕнче


Канаш

*Пирĕн юратнă хаçатăмăр тĕрлĕ-тĕрлĕ ял-хулара пурăнакан вулакансем патне «шурă кăвакарчăн пулса» пин хутчен вĕçсе саланчĕ...*

чечекленмелле», — тенĕ. Çакна пирĕн,аслисен, яланах асра тытасчĕ,çамрăк ăрăва тăван чĕлхе еннелле туртасчĕ.

Чăваш халăхне çутта кăларакан И.Я.Яковлев çапла çырнă: «Халăхăн ăс-тăнĕпе унăн пĕтĕм тĕнчекурăмне тăван чĕлхе чун парать. Тăван чĕлхесĕр чăн-чăн пĕлӳ çук».

Çамрăксем чăваш чĕлхине хисеплесе, юратса çитĕнсен ӳлĕмрен,тен, пирĕн хаçатăн тиражĕ ӳсме те пултарĕ. Çакна чунтан шанас килет.

Ун пек пулсан «Канашăн» 2000-мĕш, 3000-мĕш...10000-мĕш тата малашнехи номерĕсем те тухас шанчăк пур. Çапла пултăр!

Паян вара юратнă хаçатăмăрăн 1000-мĕш номерĕ кун çути курни — пирĕншĕн пысăк савнăç. Вăл Чĕмпĕр Ен чăвашĕсене сапаланса каясран сыхлать, малашлăха тĕрĕс çул кăтартса пырать. Пирĕн те ăна хӳтлĕх парасчĕ.

Пĕр çыхăнура пулса ĕçлесен пирĕн çитĕнӳсем те чылай пысăкрах пулĕç.

*2009 çул.*

## Литература ĕçне çамрăксене явăçтармалла

Кăçал пирĕн паллă тапхăр – «Шевле» литпĕрлешĕве йĕркеленĕренпе 10 çул çитрĕ. Малашне çĕнĕ тĕллевсене пурнăçа кĕртмелле.

Пĕрремĕшĕ – «Шевле çути» альманахăн иккĕмĕш кĕнекине кăларасси. Ун валли çĕнĕ хайлавсем пухмалла, укçа-тенкĕ шырамалла. Пулăшу ыйтса усламçăсем, власть çыннисем патне çырусем çырмалла. «Атăл юрри» журнала та пĕтме парас марччĕ. Çак изданисем вырăнти авторсене питĕ кирлĕ, унта пичетленме пултарни çыравçăсен ăсталăхне ÿстерме пулăшать.

Малашне «Канаш» хаçатра каллех сăвă-калав вырнаçтарма май пулĕ. Пĕр вăхăт пичет управленийĕ пире ун пек тума ирĕк памарĕ, илемлĕ литература жанрĕсемпе çырнă хайлавсене пичетлеме чаракан ятарлă приказ кăларчĕ. Хаçатра сăвă-калав пичетлеменни, ман шутпа, тĕрĕс мар. Çакă хаçат содержанине чухăнлатать. Вулакансем ыйтнине туллин тивĕçтерес, вĕсен ăс-хакăлне ÿстерес тесен тĕрлĕ енлĕ жанрпа, тĕрлĕ темăпа çырнă илемлĕ калавсемпе сăвăсем, шÿт-кулăш, поэмăсемпе тĕрленчĕксем, повесть-роман сыпăкĕсем пулмалла.

Çав вăхăтрах пирĕн ытти хаçат-журнала та хайлавсене ярса пама ÿркенмелле, вăтанмалла мар. Аслă Чăваш тĕнчине те хăюллăн тухмалла, вырăсла пичетленекен изданисене те хамăрăн хайлавсене сĕнмелле.

Иккĕмĕшĕ – çырулăх ĕçне çамрăксем хастар хутшăнманни пăшăрхантарать, хытă шухăшлаттарать. Малашне кампа ĕçлемелле, кама вĕрентмелле? Ку паянхи çивĕч ыйту. Пирĕн мĕнле пулсан та хамăр çума çамрăксене явăçтармалла, çĕнĕ хунавсене литература тĕнчине кĕме пулăшмалла.

Пирĕн шанчăк – çамрăксенче, уйрăмах Ульяновск пединститутĕнчи филологи факультетĕнче чăваш уйрăмĕнче вĕренекен студентсенче. Вĕсене малашне «Шевле» ларăвĕсене чĕнес пулать, хамăрăн та унта час-час кайса тĕлпулусем ирттермелле. Çамрăк ăру литература тĕнчине çĕнĕ шухăшсемпе пырса кĕрессе шанатпăр.

*2007*

## Чăваш энциклопедийĕ часах пичетленĕ

Ульяновск область чăвашĕсен энциклопедине кăларас ĕç вĕçленсе пырать. Ун валли икĕ пин ытла ят тупнă ĕнтĕ.

Пулас энциклопедин пуçаруçи, материал пухаканĕ, укçа тăкаклаканĕ Д. Кузьмин усламçă çак кунсенче Аслă Нагаткинта районти тĕп библиотекăра çак тăрăхри ялсенчи çыравçăсене, таврапĕлӳçĕсене пуçтарчĕ. Тĕлпулу тĕллевĕ – юлашки тапхăрта çанă тавăрса ĕçлеме хавхалантарасси.

– Чăваш халăхĕ хăйĕн наци туйăмне, ăнланулăхне çӳлтен çӳле çĕклемелле. Çак энциклопеди ытти халăхсене кирлĕ мар, пире çеç! Çавăнпа та хамăрăнах тăрăшас пулать. Кашни çыннăн тăван халăх валли пĕчĕк усă та пулин тăвасчĕ. Пирĕн пĕр тĕллев пулмалла – чăваш халăхне, чĕлхене сыхласа хăвармалла. Шутласа пăхăр-ха: тутарсен, армянсен чĕлхи пĕтсен – хушамачĕсем юлаççĕ. Сăмахран, Губайдуллов, Акопян. Пирĕн мĕн юлать?! Чăваш тĕнне, чăваш тумне, хамăрăн ĕлĕкхи ятсене, хушаматсене çухатнă ĕнтĕ эпир. Чĕлхене сыхласа хăварасчĕ! Хулара ку ĕçе пурнăçлама питĕ йывăр, майсем çук тесен те юрать.

Г.Н.Волков академик çапла çырать: «Чăваш ачи амăшĕнчен пурне те илет: юнне, кăкăр сĕтне, ачашлăхне, ăсне, ĕçченлĕхне... Тăван чĕлхине çеç илесшĕн мар».

Çапла ан пултăр тесен пирĕн çамрăксене хамăр халăхпа, чĕлхепе мăнаçланма вĕрентмелле. Энциклопеди кăларни çак ĕçе тума пулăшĕ. Ан тив, курччăр çамрăксем: пирĕн халăхăн мĕн чухлĕ пултаруллă, паттăр çын! Çавсем пек пулма хăнăхчăр ачасем, яшсемпе хĕрсем, тăван чĕлхерен ан вăтанччăр, тăван халăхран ан писчĕр, – терĕ Дмитрий Васильевич пухăннисен умĕнче.

Халĕ таврапĕлӳçĕсем вырăнта çĕнĕ ятсем шыраççĕ...

*2008*

*<u>Хушса сырни</u>. Ырă хыпар пĕлтерме кăмăллă! 2009 çулхи кĕркунне эпĕ маларах асăннă кăларăмăн пĕрремĕш кĕнеки «Краткая чувашская региональная энциклопедия. Пензенская, Саратовская, Ульяновская области» ятпа пичетлесе тухрĕ. Унта «А-Л» саспаллисенчен пуçланакан сăмахсем кĕнĕ, фотоӳкерчĕксемпе илемлетнĕ, 4000 экземпляр. Умсăмахне Чăваш халăх академийĕн тата Чăваш таврапĕлӳçисен пĕрлешĕвĕн хисеплĕ президенчĕ Виталий Станьял çырнă. Кăларăма паллă тĕпчевçĕ пысăк хак панă.*

# Юхма Мишши: *“Чăваш тĕнчи çĕкленессе шанатăп!”*

*Юхма Мишши – тĕнчипе паллă çын. Чăваш халăх писателĕ, Чăваш, Тутар, Марий Эл, Удмурт Республикисен тава тивĕçлĕ культура ĕçченĕ. Писатель, поэт, драматург, куçаруçă, чăваш халăх историйĕн тĕпчевçи.*

*СССР, РСФСР Писателĕсен союзĕсен премийĕсен лауреачĕ, Раççей литература премийĕн лауреачĕ.*

*А.Фадеев, К.Симонов, В.Пикуль ячĕллĕ тĕнче шайĕнчи премисен лауреачĕ.*

*Азербайджан, Германи, Армени çĕршывĕсен премийĕсене тивĕçнĕ.*

*Ăна Турци çĕршывĕн чи пысăк наградине панă – “Тĕрĕк тĕнчи умĕнчи тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн”.*

*Г.Х.Андерсен преми-дипломне панă.*

*ООНăн Халăхсен хушшинчи премине тата Ылтăн медальне тивĕçнĕ.*

*2006 çулта Чăваш Республикин Президенчĕн Указĕпе Юхма Мишшине “Чăваш Республики умĕнчи тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн” орден медалĕпе наградăланă. Вăл çак наградăна илекен пĕрремĕш çын.*

*2007 çулта ăна халăхсен хушшинчи чи аслă орден – “Информаци обществине аталантарнă çĕрте тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн” – панă.*

*Юхма Мишши 200 кĕнеке ытла кăларнă, ун хайлавĕсене тĕнчери 114 чĕлхене куçарнă, вĕсене Европăри, Азири, Америкăри нумай халăхăн учебникĕсене кĕртнĕ.*

*Юхма Мишши Чăваш Республикинчи Патăрьел районĕнчи Сăкăт ялĕнче 1936 çулта ака (апрель) уйăхĕн 10-мĕшĕнче çуралнă, халĕ Шупашкарта пурăнать. Пăлхар, туркă чĕлхисене пĕлет.*

**– Михаил Николаевич, эпир Сире паллă çыравçă тата обществăлла деятель пулнине пĕлетпĕр. Паян ытларах чăваш халăх пуласлăхĕ пирки калаçас килет. Эпир мĕнле çулпа пыратпăр?**

–Кашни халăх тĕнчи хăйне май. Тĕнчи мĕнле пуласси хамăртан килет. Халăх тĕнчи чылай чухне халăх йышĕнчен кăна мар, вăл хăйне мĕнле тытнинчен, ытти халăхсем хушшинче мĕнле туйнинчен килет. Чăвашсен йышĕ çулсерен чакса пырать. Акă эпир юлашки çыравччен (2002 ç.) Раççейри тĕп халăхсен хушшинче виççĕмĕш вырăн йышăнаттăмăр. Халĕ вара пиртен пушкăртсем йышпа иртсе кайрĕç.

Эпир аслă халăх пулнă-çке! Пирĕн несĕлсем хун ятпа çӳресе пĕтĕм Европăна хăратса тăма пултарнă. Аслă та чаплă Аттил патша никам çĕнтерейми çар пуçĕ пулнă. Купрат патша Аслă Пăлхар патшалăхĕ



*«Шевле» литпӗрлешӳрен – Юхма Мишшине парне.*
*Ульяновск, 2007 ҫул.*

йӗркеленӗ. Вӑл пӗтӗм Еврази таврашӗнче чи чаплӑ, чи вӑйлӑ патшалӑхсенчен пӗри пулнӑ. Хусан ханӗсене, Хаяр Иван ҫарӗсене, Мининпа Пожарский ополченинче пулса Раҫҫей тӑшманӗсене хирӗҫ кӗрешнӗ чухне те, Степан Разин пуҫарса янӑ вӑрҫӑра та, Емельян Пугачёв вӑрҫинче те, каярахпа та Чӑваш тӗнчи аслӑ пулнӑ.

Анчах кайран мӗн пулнӑ-ха пире? Мӗншӗн Аслӑ чӑваш тӗнчине ҫухатса пыратпӑр?

Е 1920 ҫулта автономи тунӑ чухне татӑк хӳреллӗ, хӗсӗк те тӑвӑр ҫӗрте ҫеҫ чӑвашлӑх тӗнчи тума тытӑнни пире ҫапла ҫапса хусрӗ-ши? Сӑваплӑ Чӗмпӗр чӑваш шкулне хупни, Кӑнтӑр Ен тата Тухӑҫ Ен (Мал Ен) ҫӗрсене тулайра хӑварни, пӗтӗм халӑхӑн ҫурри автономие кӗреймесӗр юлни, И.Я.Яковлев генийне пула ҫунат хушнӑ “Ҫӑлтӑр ушкӑнӗнчи” чаплӑ ҫыннӑмӑрсене “манни” ҫапла хуҫса хӑварнӑ-ши пирӗн халӑха? Хальхи чи пысӑк хӑрушлӑх – чӗлхене ҫухатса пыни.

Ҫапах та Чӑваш тӗнчи чакса, йӑшса, вӑйсӑрланса, пӗтсе пырать тенине ӗненме пултараймастӑп эпӗ. Ман шутпа, ку вӑхӑтлӑха чакни, канни. Тӗнче историйӗнче ун пек пулӑмсене нумай пӗлеҫҫӗ. Пӗр-пӗр халӑх ҫапла чакса-чакса пырать те кайран мӗнпур вӑйне пӗрле пухса тепре ҫӗкленсе каять. Ҫапла пултӑрахчӗ! Чӑваш тӗнчи ҫапла пуласса шанатӑп эпӗ.

**–Эсир чăваш наци юхăмĕ çĕнĕрен аталанса кайнă чух пĕтĕм ĕçе, йывăрлăхсене хăвăр çине илнĕ вĕт-ха.**

–Ку перестройка саманипе тӳр килчĕ. Çак яваплă ĕçе эпĕ ертсе пынипе 1986 çулта чăваш писателĕсен ушкăнĕ пуçарса ячĕ. Эпир аякри чăваш ялĕсене туха-туха çӳресе халăхăмăра вăратма, Термен çулĕ çине тăратма пуçларăмăр. Чăваш халăхĕ валли ĕçлекен наци ушкăнĕ туса хурас тĕллевпе 1989 çулта Шупашкарта çĕршыври чăвашсен 1-мĕш конференцийĕ иртрĕ. Çак пуху пĕтĕм чăвашсен II съездне irttерме йышăнчĕ. (I съезд 1917 çулта Чĕмпĕрте иртнĕ.) II съезд 1989 çулхи декабрь уйăхĕнче Шупашкарта иртрĕ. Унта Чăвашсен обществăлла культура центрне (ЧОКЦ) туса хутăмăр. Мана ун пуçлăхне суйларĕç. ЧОКЦ çĕршыври чăвашсем валли “Вучах” хаçат, “Пике”, “Путене” журналсем кăларма тытăнчĕ. Аякри чăвашсене пулăшма регионсенче ЧОКЦăн 53 уйрăмне уçрăмăр. Эпир тăрăшнипе аякри чăвашсем патĕнче 28 ансамбль тата хор йĕркеленнĕ, 43 хулара чăвашла вĕрентекен вырсарни шкулĕсем уçăлнă. Чăваш наци юхăмĕнче ĕçлекенсене хавхалантарма тĕрлĕ премисем, ятсем туса хатĕрлерĕмĕр. Çаплах эпир ертсе пынипе 1991 çулта Пĕтĕм тĕнчери чăваш хĕрарăмĕсен I курултайĕ (пухăвĕ) иртрĕ. ЧОКЦ тăрăшнипе Шупашкарта Тĕнчери информатизаци академийĕн Чăваш уйрăмне уçнă. Çапларах пуçланса кайрĕ чăваш аталанăвĕн, çутлăхĕн çулĕ – Термен çулĕ.

**–Эсир И.Я.Яковлев ĕç-хĕлне нумай тĕпченĕ, ун çинчен темиçе пысăк кĕнеке çырнă. Иван Яковлевич тăван халăхăмăршăн тунă ĕçĕн пĕлтерĕшĕ мĕнре?**

–Патша самани уçнă чиркӳ шкулĕсемпе удел училищисем çутлăх çурчĕ мар, вилĕм çурчĕ пулнă. Унта вăйпа вĕренме илнĕ чăваш ачисене ют чĕлхепе ют йăла-йĕркене вĕрентнĕ, чăваш йăли-йĕркине мантарма, чăвашлăха пĕтерме, вĕсенчен çурма чăваш, çурма вырăс тума тăрăшнă. Чăвашсене вăйпах хăйсен туррисене мантарнă. Вăйпа тĕне кĕртнĕ, чăн ятсене мантарнă. Çакна хирĕçлесе чăвашсем ялĕ-ялĕпе ислам тĕнне йышăннă. Анчах ку та çăлăнăç çулĕ пулман. Православие пăрахăçласа ислама куçакан “ют йăхсене” хырçă-марçă (налук) хушса панă. Ислам тĕнĕпе пурăнма ун чухне тутарсене çеç юранă. Вара ислама куçнă чăвашсем хырçă-марçăран хăтăлас тесе хăйсене тутар теме тытăнаççĕ. Ырă пурнăç шыраса Турцие кайнă чăвашсем те пулнă. Чăваш халăхĕ пĕтес çул çинех тăрать çак тапхăрта. Çапах та халăх юрăçисем халăх телейне тупма пулăшакан çын килессе шаннă.

Çак шанчăка çитерекенĕ, чăваш халăхне çăлаканĕ чăнах та тупăннă – И.Я.Яковлев. Вăл чăваш халăхĕн Вĕрентекенĕ, Чăваш Терменне

пуçласа яраканĕ. Çуралсан виççĕмĕш куннех амăшĕсĕр тăрса юлнăскер хăйĕн ăсĕпе, вăйĕпе, талпăнăвĕпе çын çине тухнă, чăвашсенчен аслă пĕлӳ илнĕ пĕрремĕш çын пулнă, хăй хыççăн çутталла пĕтĕм халăха туртнă. И.Я. Яковлев 1871 çулта чăвашсен çĕнĕ çырулăхне йĕркелет. Çакă вара вилме тытăннă халăха çĕнĕ пурнăç çулĕ çине илсе тухать. Унăн «Букварĕ» халăх ĕмĕтленнĕ Ылтăн кĕнеке пулса тăрать. Чăвашсем ăна çăлăнăç çăлтăрĕ тесе йышăнаççĕ.

1913 çул тĕлне Термен çутипе çĕкленсе, хăйсен пин-пин çулхи пуянлăхне Чĕмпĕр чăваш шкулĕн куçĕпе çĕнĕлле курса ăнланнă чăвашсем тĕнчери чи çутта тухнă халăхсемпе пĕр тан пулса тăраççĕ. Çакăншăн пирĕн И.Я.Яковлева çĕре çити пуç тайса тав тумалла.

**– Михаил Николаевич, Эсир тулайри чăвашсем патĕнче нумай çӳренĕ. Чĕмпĕр тăрăхĕнчи çулçӳревсем, пуçарнă ĕçсем пирки каласа парăр-ха.**

– Чĕмпĕре эпĕ чăвашсемшĕн сăваплăран та сăваплă вырăн тесе шутлатăп. Эпĕ унта темиçе хут та пырса кайнă, çитмен район çук тесен те йăнăш пулмасть. Мĕн чухлĕ çӳренĕ эпир ялсем тăрăх чăвашсен чунне вăратасшăн! КПСС Ульяновск обкомне миçе хут кĕнĕ! Пĕррехинче Чĕмпĕр чăваш шкулĕ уçăлнăранпа 120 çул çитнине уявлама хатĕрленетчĕç. Чăвашсем таçтан та килнĕ. Çак самантпа усă курса идеологи пайĕн пуçлăхĕн çумĕпе, туслă çыхăнусемпе ĕçлекен сектор пуçлăхĕпе Г.В.Обушинскийпе тĕл пултăмăр. Унта вырăс писателĕсем те пурччĕ. Эпир Чĕмпĕр Ен чăвашĕсен хаçат, телекăларăм пулмалли çинчен калаçрăмăр. Телее, пире ăнланчĕç. Чăрмавсем тума шутламарĕç. «Телепередача хатĕрлĕр, эфира кăларăр, вăхăт паратпăр, – теççĕ, – анчах гонорар тӳлейместпĕр.» «Пире нимле гонорар та кирлĕ мар, эпир тӳлевсĕрех ĕçе пуçăнма хатĕр, кирлĕ пулсан Шупашкартан Чĕмпĕре çуранах килетпĕр», – тетпĕр. Çапла вара 1989 çулхи çурла (август) уйăхĕн 17-мĕшĕнче Ульяновск область телевиденийĕнче пĕрремĕш хут чăвашла передача эфира кăлартăмăр, ăна «Еткер» тесе ят патăмăр. Унта манпа пĕрле Р.Сарпи, С.Асамат, В.Синичкин çыравçăсем хутшăнчĕç. Шупашкартан килсе çӳресе пурĕ тăватă передача ирттертĕмĕр. Кайран ун валли çамрăк редактор тупрăмăр. Утă (июнь) уйăхĕн 14-мĕшĕнче Ульяновскри Профсоюзсен керменĕнче И.Я.Яковлев ячĕллĕ обществăн аслă пухăвĕ иртрĕ, унта Тутарстан, Чăваш Ен, Оренбург, Самар, Пенза, Саратов чăвашĕсем килнĕччĕ. Авăн (сентябрь) уйăхĕнче Ульяновскра И.Я.Яковлев ячĕллĕ çутĕç обществин учредительнăй съездне хутшăнтăм, унта мана правлени членне суйларĕç. Эпĕ съездра тухса калаçрăм. Раштавăн 30-мĕшĕнче «Канаш» хаçат тухрĕ. Куратăр-и, 1989

çул Чӗмпӗр облаçӗнчи чӑваш наци юхӑмӗшӗн питӗ пысӑк пӗлтерӗшлӗ пулчӗ. Кӗске вӑхӑтрах – мӗн чухлӗ ӗç хускалчӗ!

**– Эсир пӗр вӗçӗмсӗр çыратӑр, кӗнекесем кӑларатӑр. Халӗ мӗнле темӑпа ӗçлетӗр?**

– Истори романӗсен сериалӗпе ӗçлетӗп. Унта 12 роман пулать. Çичӗ романне çырса пӗтертӗм ӗнтӗ. Унта пирӗн несӗлсен пурнӑçӗнчи йывӑр тапхӑрсене сӑнласа панӑ. Пӗрремӗш кӗнеке перссен тапхӑрӗнченех пуçланать. Иккӗмӗшӗ Александр Македонский вӑхӑчӗпе çыхӑннӑ. Юлашки роман пирӗн кунсене çывӑхрах пулӗ.

**– Михаил Николаевич, чӑваш халӑхӗ авалхи пекех Аслӑ пултӑр тесен мӗн тумалла?**

– Чи малтан хамӑра, тӑван чӗлхене хисеплемелле! Çакӑ – пуçламӑшӗ. Унсӑрӑн нимле çитӗнӳ те пулма пултараймасть. Халӑха Тӑван Истори тата Тӑван Чӗлхе кӑна çӑлса хӑварать. Халӑх патриочӗ пулма хӑрамалла мар, депутатсем, ертӳçӗсем хамӑр ентешсем пулччӑр. Историе, чаплӑ çыннӑмӑрсен пурнӑçне, ӗç-хӗлне тӗпчемелле. Вӗсен тӗслӗхӗпе çамрӑксене воспитани памалла. Ачасене килте тӑван чӗлхепе калаçтармалла. Унсӑрӑн акӑ мӗн пулса тухать: вырӑсла калаçакан чӑваш ачи асламӑшӗ е аслашшӗ чӑвашла хаçат вуласа ларнине курать те вӗсене «иккӗмӗш сортлӑ» çынсем вырӑнне шутлама тытӑнать. Атте-аннене хисеплемен çын кам пулса ӳснине каламалла-и?

Эпир, чӑвашсем, аслӑ вырӑс халӑхне хисеплетпӗр, юрататпӑр. Хамӑр хуласемпе ялсенче вырӑссен паллӑ çыннисен ячӗпе урамсене, шкулсене, керменсене, библиотекӑсене паратпӑр. Чӑваш Республикине кӗмен ялсемпе хуласенче те чӑвашсен чаплӑ çыннисене çапла мӗншӗн чысламаççӗ-ха? Е хамӑр айӑплӑ-и? Тен, хамӑр шухӑша, чун ыратӑвне кирлӗ таран ӑнлантарса параймастпӑр...

Пултарулӑх çыннисене хатӗрлемелле, унсӑр халӑх çутӑ малашлӑха утаймасть. Паянхи ватӑ писательсене, артистсене ыран кам улӑштарать? Çакӑн çинчен паян пуçа çӗмӗрмелле. Чылай чухне: «Эпир туслӑ пурӑнатпӑр, пирӗн интернационал», – тесе вырӑнти пуçлӑхсем вырӑс мар халӑхсен ачисене тӑван чӗлхене вӗренме майсем тупса парасшӑн мар. Пӗр-пӗр çыннӑн е халӑхӑн ирӗкне пӑсаççӗ пулсан мӗнле туслӑх пултӑр унта? Ульяновсем чӑвашсене пулӑшни, вырӑс офицерӗ С.Д.Раевский И.Я.Яковлева пулӑшни, аслӑ Ленин Чӗмпӗр чӑваш шкулне пӗтме паманни, вырӑс çынни Н.Ашмарин чӑваш чӗлхине тӗпчесе 17 томлӑ словарь туни, Мускав патшалӑхне йывӑр чухне Пӑрттас ертсе пыракан чӑваш çарӗсем вырӑссене пулӑшни, 1812 çулхи

вăрçа чăвашсем хăйсен ирĕкĕпе кайса Раççей ирĕклĕхĕшĕн кĕрешни, нимĕç фашисчĕсене хирĕç Совет çĕрĕнчи пĕтĕм халăх алла-аллăн тытăнса кĕрешни – акă вăл чăн-чăн интернационализм, халăхсен хушшинчи вилĕмсĕр туслăх!

Тăван чĕлхепе çырнă кĕнекесем нумайрах кăлармалла. Танлаштарăр: 1987 çулта 700 пинлĕ эстонецсем хăйсен чĕлхипе 1428 кĕнеке пичетленĕ, 1 миллион та 800 пинлĕ чăвашсем – 82. Сăмах май, ЧОКЦ пурĕ 1000 кĕнеке кăларнă.

Чăвашсен йышĕ халĕ 1 миллион та 700 пине яхăн çын. Тĕнче йĕрки тăрăх, аталану саккунĕсем тăрăх, йĕркеллĕ культура тытса пыма миллионлă халăха 10-12 наци театрĕ кирлĕ. Грузинсен шучĕ чăвашсеннинчен кăшт кăна ытларах – вĕсен вара 43 театр. Пирĕн, чăвашсен, – икĕ театр. Мускаврa 1 пин чикан пурăнать, вĕсен хăйсен театрĕ пур. Израильте палестинецсене хĕсĕрлеççĕ теççĕ. Палестинецсен вара ултă университет, 100 ытла хаçат.

Театрсем, фольклор ушкăнĕсем тĕрлĕ çĕрте йĕркелемелле, Шупашкарта кăна мар. Писательсем, композиторсем, артистсем, чăваш кĕпи-тумтирне, чăваш кĕнекине сутакансем тăтăшах ялсене тухса çӳремелле, халăхпа тĕл пулмалла. Тăван чĕлхене шкулта 1-11 классенче вĕрентмелле. Хамăр ирĕке пăссан, хĕсĕрленĕ самантсем пулсан уççăн калама вĕренмелле. Чĕнме пĕлмен халăх пулмалла мар. Хамăр тăрăшмасан пирĕншĕн никам та тăрăшмасть.

Юлашкинчен çакна калас килет: эпир никама та хирĕç мар. Эпир хамăр халăхăн пуласлăхĕшĕн тăрăшатпăр. Культурăна аталантарнă чухне халăхсем пĕр-пĕрне пулăшса пымалла. Кашни халăх – хăйне евĕрлĕ, ытарайми çеçкеллĕ ĕмĕр тăкăнми чечек. Çак чечек, чăваш чечекĕ, ĕмĕр-ĕмĕр ешерсе лартăр.

Чăваш чĕри тапать-ха. Шанчăк та упранать. Шанчăк пулсан пуласлăх та пурах. Пĕтĕмпех хамăртан килет: пуласлăх никĕсне кирлĕ пек хываятпăр-и, çав пуласлăха тивĕçлипе кĕтсе илеетпĕр-и?

***Николай Ларионов*** *калаçнă.*

*2007 çул.*

Кĕнекене кун çути
кăтартма укçа-тенкĕпе пулăшакансем –

Чăнлă район пуçлăхĕ
**Ханяфи Валиевич Рамазанов**

тата çак районти чăваш хастарĕсем:

«Родники» ял хуçалăх производство кооперативĕн пуçлăхĕ
**Николай Петрович Сайгушев,**

«Новая жизнь» тулли мар яваплă общество пуçлăхĕ
**Геннадий Макарович Мулянов,**

«Луч» ял хуçалăх производство кооперативĕн пуçлăхĕ
**Юрий Петрович Мерлушкин,**

«Ивандеев» фермерсен хуçалăхĕн пуçлăхĕ
**Николай Григорьевич Ивандеев.**

Ырă кăмăлăршăн сире пурне те
чун-чĕререн тав тăватăп,
пысăк çитĕнӳсем,
ырлăх-сывлăх, телей сунатăп!

*Хисеплесе –*
***Николай Ларионов.***



**Чĕмпĕр. Нумай ăслă та малĕмĕтлĕ чăваша сăвап кунĕ вырăнсем... Çакăнта, кĕпер урлă урамра — И.Я.Яковлев уçнă шкул вырнаçнă**



**Мухтавлă Чĕмпĕр чăваш шкулĕ...**



**«Канаш» хаçатăн обществăлла корреспонденчĕсен пĕрремĕш пухăвĕ. 1994 çул**



**«Шевле» литпĕрлĕшӳ — пĕр шухăшлă çынсен ушкăнĕ. 2005 çул**



«Шевле» литпӗрлешӳ ларӑвӗ хыҫҫӑн. 2006 ҫул



«Шевле» литпӗрлешӳ ларӑвӗ. П.И.Ишутова 75 ҫул тултарнӑ ятпа саламланӑ самант. 2006 ҫул



**«Канаш» хаҫатӑн «ҫавра сӗтелне» хутшӑннӑ ҫыравҫӑсем.**
**2007 ҫул**



**Чӗмпӗр чӑваш ҫыравҫисем Юхма Мишшипе тӗл пулни.**
**Ульяновск, 2007 ҫул**



**Чăвашкасси ялĕнче — тăван культура уявĕ. Ульяновск облаçĕн кĕпĕрнаттăрне С.И.Морозова, Чăнлă районĕн пуçлăхне Х.В.Рамазанова çăкăр-тăварпа кĕтсе илчĕç**



**Чăваш хастарĕсем И.Я.Яковлев палăкĕ умĕнче. 2009 çул, ака, 25**



«Канаш» хаçат редакцийĕн хисеплĕ хăнисем – паллă журналист, Шупашкарти «СВ-Пресс» издательство ушкăнĕн директорĕ А.Н.Вражкин (сулахайран иккĕмĕш), Раççей Федерацийĕн тава тивĕçлĕ художникĕ, Чăваш Республикин патшалăх премийĕн лауреачĕ В.П.Нагорнов



А.М.Богатов (сулахайра), Е.С.Нагорнова, А.Г.Дмитриев-Ырьят «Канаш» хаçат редакцийĕнче



«Канаш» хаҫат журналисчĕсем.
Лараççĕ (сулахайран сылтăмалла): Е.Н.Мустаева, В.А.Ефимова; тăраççĕ: А.Г.Дмитриев, Е.Г.Алексеева, Н.Н.Еграшкина, Н.Н.Ларионов. 2009 çул




«Канаш» хаçат журналисчĕсем тата УОЧНКА пуçлăхĕ В.И.Сваев, Саккунсем кăларакан Пуху депутачĕ А.Г.Еленкин, Ульяновск хули Думин депутачĕ П.К.Столяров. 2009 çул

# ТУПМАЛЛИ

ЧĔМПĔР ЕН ÇЫРАВÇИСЕМ ТАТА ВĔСЕН ПУЛТАРУЛĂХĔ
(20-мĕш ĕмĕр вĕçĕ – 21-мĕш ĕмĕр пуçламăшĕ)........................................5

УЙРĂМ ÇЫРАВÇĂСЕН ХАЙЛАВĔСЕНЕ ТИШКЕРНИ

Ашмарин — чĕлхеçĕ, тĕпчевçĕ, политик........................................34
Ашмарин: чăваш халăхĕ пулса кайни çинчен........................................35
Çеçпĕл Мишшин пурнăçĕпе пултарулăхĕн паллăрах тапхăрĕсем...........40
Çеçпĕлĕн «Кĕпер хывăр!» сăввинчи илемлĕх мелĕсем........................48
Çеçпĕл сăввисенчи сăнарлăх........................................53
К.В.Ивановăн «Шуйттан чури» трагедийĕнчи пирĕштипе шуйттан сăнарĕсем.......57
Петĕр Хусанкайăн вăрçă лирики........................................63
Ухсай сăввисем — вырăсла........................................70
Раиса Сарпи поэзийĕнчи сăнарлăх........................................75
Туркай сăввисенчи илемлĕх мелĕсем........................................79
«Ах, аннеçĕм, анне» юррăн авторĕ........................................85
А.Ашкеровăн «Çумрахчĕ эс» сăвви........................................86
Чун хушнипе пурăнсан... ........................................89
Мул тĕнчин тыткăнĕнчен хăтăлайман самана
(Н.Ефремов çырнă «Пуян Карук» драма)........................................92
Валентина Тарават сăввисенчи тĕссен тăтăшлăхĕ........................................96
Хăвна ху вăйлă пулма пулăш!........................................101
Савруков çиле хирĕç, хĕвел еннелле пырать........................................103

ЧĔМПĔР ТĂРĂХĔНЧИ НАЦИ ЮХĂМĔН АТАЛАНĂВĔ

Милли — «Атăл юрри» журнала пуçараканĕ ........................................104
Литкружоксенчен – писательсен союзне ........................................107
Пĕрремĕш пухăва кайнă Чĕмпĕр Ен çыравçисем ........................................108
«Атăл юрри» журнал историйĕ ........................................109
Малалла утас тесен – патшалăх пулăшăвĕ кирлех........................................114
«Канаш» хаçат: пуçламăшĕ, малалли çул-йĕр........................................117
Пирĕн «Шевле» литпĕрлешӳ........................................121
«Канаш» редакцийĕ — Чĕмпĕр Ен чăвашĕсен культура вучахĕ........................................126
«Канаш» хаçатăн 1000-мĕш номерĕ тухрĕ!........................................128
Литература ĕçне çамрăксене явăçтармалла........................................130
Чăваш энциклопедийĕ часах пичетленĕ........................................131
Юхма Мишши: «Чăваш тĕнчи çĕкленессе шанатăп!» ........................................132

Ларионов Николай Николаевич

**Жить по совести**

**Творчество чувашских писателей Симбирского края**

На чувашском языке

Редактор *П.К.Андреев*
Компьютерный набор *С.Г.Дубановой*
Компьютерная верстка *В.А.Ефимовой, Н.Ю.Ивановой*
Дизайн обложки *Н.Л.Лукиной*

Подписано в печать 10.12.2009. Формат $60x84^{1}/_{16}$. Бумага офсетная.
Гарнитура Тип Таймс. Печать оперативная. Физ.печ.л. 8,75. Тираж 300.
Заказ №196. Цена договорная.

Отпечатано в типографии ИП Сорокина А.В. «Новое Время».
428034, г.Чебоксары, ул.Мичмана Павлова, 50/1.
Тел.: (8352) 41-27-98, 46-43-46.



Кӗнеке авторӗ **Николай Ларионов** 1961 çулхи апрелӗн 25-мӗшӗнче Тутарстан Республикинчи Çӗпрел районне кӗрекен Çӗнӗ Йӗлмел ялӗнче çуралнӑ.

1988 çулта Ульяновскри çурт-йӗр ӑстисен шкулӗнчен хӗрлӗ свидетельствӑпа вӗренсе тухнӑ. 1993 çулта Чулхулари автотранспорт техникумне пӗтернӗ. 2003 çулта Чӑваш патшалӑх университечӗн (чӑваш филологийӗпе культура тата журналистика факультечӗ) хӗрлӗ дипломне илнӗ.

Журналист ӗçне 1995 çулта «Родина Ильича» (Ульяновск) хаçатра пуçланӑ. 1996 çулта Чӗмпӗрте тухса тӑракан «Канаш» хаçата ӗçлеме пынӑ, 2002 çултанпа – тӗп редактор. 1997 çулта редакци çумӗнче «Шевле» литпӗрлешӳ йӗркеленӗ, халӗ те ӑна ертсе пырать.

«Чӗре тапнӑ чух» (1998), «Чӗмпӗр тӑрӑхӗнчи «Канаш» хаçатӑн малтанхи тата хальхи утӑмӗсем» (2003), «Чун хушнипе пурӑнсан» (2009) кӗнекесен авторӗ. «Шевле çути» антологие (2000) пичете пухса хатӗрлекенӗ.

Раççей писателӗсен союзӗн членӗ (1995), Раççей журналисчӗсен союзӗн членӗ (1997). Чӑваш наци культурин тава тивӗçлӗ ӗçченӗ.